К63.3
К89
Ч-40392
Вурнар.

Владимир КУЗЬМИН



# ИЛЕМ ÇĂЛТĂРĔСЕМ

Национальная библиотека ЧР
4-040392

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

К63.3-
К89

**Владимир Кузьмин**

# ИЛЕМ ÇĂЛТĂРĔСЕМ

**Шупашкар**
**2006**

63.3(2Рос.Чув-5Вур)-7-8;024

УДК 908
ББК 63.3(2Рос.Чув)
В 19

К 63.3(-5Вур)-7-8;024

**Кузьмин В.**
В 19 **Илем çăлтăрĕсем.** — Шупашкар, 2006 – 184 с.

Сăнарлăх ытарлăхĕнче тата чунхаваллăх вĕçевĕнче хăйсен çăлтăрне пултарулăх тӳпинче çутнă, çав илем çăлтăрĕн асамлă çутипе çынсен чун-чĕрине хĕмлентерме, ăс-хакăлне çивĕчлетме, шухăшлавне анлăлатса вăйлатма пулăшакан ăслă та анлă тавракурăмлă, хăюллă та хастар, астармăш, чăтăмлă йĕркелӳçĕсем, ӳнерçĕсем, çыравçăсем, театр ăстисемпе юрăçсем, искусствăна чунтан юратакансем çинчен.

Хуплашкари ӳкерчĕке Николай Карачарсков 1980 çулта Вăрнар районĕнчи «Янгорчино» колхозра тунă «Çĕрпелте ӳнерçĕсен кунĕнче» ятпа вилĕмсĕрлетнĕ.

Ч-40392

ПРОВЕРЕНО
2010 02 МАЙ 201

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

© Кузьмин В., 2006

# ПУРНĂÇ СĔТКЕНĔ

Çĕр чăмăрĕ евĕр çавра
Çĕн çăкăр куратăп умра.

*Алексей Воробьев*

Çак хайлава мĕншĕн Мăн Явăш шăпчăкĕн юрринчи сăмахсенчен пуçлас килчĕ-ха манăн? Алексей Александрович тăван Вăрнар тăрăхĕнче çуралса ӳснĕрен-ши? Вăл пуян чăваш çĕрĕ çинче агрономра ĕçлесе тулли пучах ӳстернĕшĕн-ши? Унăн хресчен туйăмĕпе çырса кăларнă «Хиртех ман чун», «Йăмра», «Хĕрлĕ пучахсем», «Ывăçри тырă» кĕнекисем чĕрене тыткăнланăшăн-ши? Çук. Эп çырас тени пĕртте хамăрăн асран кайми сăвăç пурнăçĕ пирки мар. Вăл йăлтах урăх çын çинчен — Çĕрпелти Иван Константинович Иванов çинчен. Ан тив, вĕсем иккĕшĕ нихçан та пĕлĕшлĕ те, туслă та пулман — аякри икĕ ялтан. Анчах çĕр çăкăрĕпе те, ăс-хакăл çăкăрĕпе те вĕсен пĕртăванлăх палли пур. Уйрăлми тачă çыхăну иккĕшин хушшинче.

## *Çăкăртан асли çук*

Çĕрпелте литература каçĕ пыратчĕ. Библиотека хуçи Иван Иванов ку тĕлпулăва Алексей Воробьев поэта чĕннĕ. Мухтавлă ентеш ял çыннисене хăйĕн кунçулĕпе, чи лайăх сăввисемпе паллаштарчĕ. «Çăкăр» ятлă сăввине вуланă чухне лирикĕн кăмăллă та çивчĕ куçĕнчен вĕри шăрçасем пăчăртанса тухса сăмса çумĕнчи тарăн йĕрсем тăрăх йăрласа юхса анчĕç. Çав асаплă пурнăç йĕрĕсем çĕр çинчи тарăн суха касси-сем пек, куççуль тумламĕсем ăшă çумăр пĕрчисем пек туйăнчĕç.

— Тырă та тарăн касăсăр, ăшă çумăрсăр тулăх ӳсмест те, сăвă та чĕрери тарăн йĕрсĕр, чун куççулĕсĕр ăшран пăчăртанса тухмасть иккен, — пăшăлтатса илчĕ çавна курса ларакан Иван Константинович.

Çыравçăсен сăнарлăх çăкăрне халăха валеçсе çитерме ăста пĕлекен библиотекарĕн çак сăмахĕсем халĕ те асран тухма пĕлмеççĕ.

Вăрнар акатуйĕ... Тарăн çырма хĕрринчи ешĕл йывăççен сулхăнĕнче — «Янгорчино» колхоз «артисчĕсем». Иван Иванов «Çăкăр» сăвва хумханса, хăпартланса вулать. Унăн уçăмлă сасси пĕтĕм таврана хăватлăн янăрать;

Çĕн çăкăр — мĕльюнлă
ытамлăх:
Пуян кĕр тимлерĕ парне.
Савса хăналать манăн халăх:
— Тутанăр чăваш çăкăрне!

Тĕрленĕ кĕпе тăхăннă Иван Константинович çумĕнче сăвă авторĕ çукчĕ ĕнтĕ. Сцена çинчен ансассăн, Иванов куçне шăлса илчĕ те:

— Çак сăвва аса илсен, кашнинчех чун тăвăнса килет, Алексей Воробьев халь итлес пулсан, мĕнле хак парĕччĕ-ши, — терĕ.

— Сăвва-юрра пĕлнĕ-пĕлмен çын çырмасть, хăйĕн пултарулăхĕпе, ырă ячĕпе вăл халăхпа пĕрле, хăйĕн хĕрӳ сăмахĕпе, авă, мĕн чухлĕ çынна тыткăнлать, — терĕм эпĕ.

— Çĕр çинче тырă ӳстерсе курнă сăвăç-агроном çăкăр хакне лайăххăн туйса, халăха çăкăрпа пĕр тан пулма чĕнет, — манпа килĕшсе пуçне сĕлтрĕ ял «артисчĕ». — Хăш-пĕр пуш чунлă поэтсем пек ыттисене вĕрентсе пуш параппан çапакан çын пулман вăл.

Тулли пучах. Тутлă çăкăр. Çĕр çинче ӳсет, вĕри кăмакара пиçет вăл. Этем ăс-тăнĕн çăкăрĕ — ăс-хакăл апачĕ те — çĕр çинчех, вĕри ăшчикрех пиçет. Пĕр вăхăтрах. Унсăрăн, туршăн та, тĕнче те чухăн, хĕсĕр.

Çапла шухăшлакаласа иртнине аса илсе пынă май, хамăр ялта Шахалккă Хĕветĕрне хирĕç пултăм. Вăл кĕске кĕрĕкпе, мулахайпа, урине калушлă çăмат тăхăннă. Кулли ĕнтĕ яланхиех — чуна тыткăнлаканни. Куçĕсем çăлтăрла йăлкăшаççĕ. Хулпуççи урлă купăс çакнă. Тукмак пек аллине тăсса пачĕ:

— Киле килес терĕн-и? Салам.

— Салам пултăр. Аванах-и, Федор Николаевич?

— Каккуй аван анчах унта. Пин хут лайăх! — урама янраттарса кулса ячĕ вăл. — Çăкăр пур. Кăмăл пур. Хамăр та пур.

— Хăнаран мар пуль?

— Ан култар-ха, хăнаран кам урă таврăнать, — ытакласа илчĕ вăл мана. — Ăмăртуран килетĕп.

— Мĕнле ăмăртуран?

— Купăсçăсен «тытăçăвĕнчен». Иван Константиновичсем пухрĕç те пирĕн пек нăрт-нарт тутаракансене, «мунча кĕрсе» тухрăмăр вара клубран.

— Радик та пулчĕ-и?

— Кайăк ывлăм-и? Ара, пулмасăр. Пулчĕ. Юнашар ларсах туртрăмăр хуткупăссене.

— Хăшĕ çĕнтерчĕ-ха?

— Калама хĕнтерех. Ĕçре мар вĕт унта, вăйăра. Те вăл, те эпĕ. Уйра тесен вара...

— Эсир иксĕр ăмăртнине пĕлетĕп-ха.

— Кашни çулах тупăшатпăр-çке. Мана ум памасăр хăтланса пурăнчĕ-пурăнчĕ те... Кăçал парăнчĕ. Тинех çĕнтертĕм. Тăватă пин çурă центнер тырă выρса çапрăм. Чемпион пулса тăтăм. Колхоз та, район та мала тухрĕ. Пирĕнни пек никамăн та тырă сĕрĕшсе пулман.

— Ай, маттур-çке эсир, хамăрăн Карачăмкасси ятне ямастăр.

— Утмăла çитрĕм — утамана тухрăм.

— Ай, паттăр-тăк, паттăр. Яш чухнех сире ялта çĕнекенни çуккăччĕ те, халĕ те çĕнтерекенни тупăнман.

— Темлерех çав. Çапах та, çамрăксене хӳрене тăратса хăварнă хыççăн, вăйĕ те хущăннă пек туйăнчĕ, — хулĕсене выляткаласа илчĕ вăл. — Иван Константинчĕ тата мухтаса пĕтерчĕ. «Хурăнсур Çармăсри Федор Николаевич Анисимов комбайнер ячĕпе Шупашкар артисчĕсем «Алран кайми аки-сухи» юрра юрласа параççĕ», тенине илтсен куç шывланчĕ. Ачи вăл, Ванька, çын чунне çемçетме пĕлет-çке. Тавах тата пире хисеп тунăшăн. Вăт çапла пурăнатпăр: пĕр алăра — çĕр çăкăрĕ, тепринче — чун кантармăш çăкăрĕ. Пĕри тепринчен тутлăрах, — тесе вăл купăсне шаккаса кăтартрĕ.

Ĕçĕнче хастар та вăйлă, ташă-юрăра çепĕç кĕвĕллĕ кӳршĕме хамăр Карачăмкассинче кăна мар, ялта та, колхозра та, таврара та ваттивĕтти Шахалккă Хĕветĕрĕ тесе чĕнет. Уншăн вăл кӳренмест. Ашшĕ унăн Шахалов хушаматпа çӳренĕ. Анчах та Шахалккă хушма ятхушамат ăçтан тата мĕнле тухса кайнине пĕлекенĕ юлман та пуль. Уйра çĕр виçмелли икĕ метрлă-утаслă шагалкăран тухнă-ши, текенсем пур. Эпĕ те çаплах шухăшларăм.

— Хам виличчен чăнлăхне уçса парса хăварам-ха, — кĕлеткери мĕнпур пиçĕ мускулĕпе чĕтренсе илчĕ вăл. — Вăя çĕнĕрен тĕрĕслесе пăхатăп-çке. Мухтанмастăп, çапах та хама хам хавхалантарса паттăрланатăп. Вăй вăл — çирĕплĕх, çĕнтерӳ, этем илемĕ те. Вăт çапла ман атте те пĕринче Нурăс хыçĕнчи Малти Ишек çывăхне вăрмана кайнă. Иккĕн — çырма леш енчи Кавĕрле Еххĕмчпе. Вăрман хуçи, Шахалов хушаматлăскер, кĕрешме, тупăшма, аташма-ашкăнма юратнă. Ку чарусăр, вĕсен шучĕпе кăштах хăналаннă хыççăн, Хурăнсур Çармăс чăвашĕсене çапла сĕнет: «Кĕрешсе мана çĕнтерсен, тӳлевсĕрех тиеттерсе яратăп хыр каскисене». Кавĕрле пичче каласа панă тăрăх, икĕ пăхаттир тытăçса ӳкеççĕ, Çавал çыранĕнчи хăйăра пĕлĕте çити вĕçтереççĕ. Атте вăрман хуçине виççĕ çавăрса çапать. Çавăн хыççăн вăл йывăçлă та, çĕнĕ хушаматлă та — Шахалов пулса юлать.

Микула мучи вăрçăран таврăнаймарĕ. Мăшăрĕ, чул пек кĕлеткеллĕ Вера акка, пăхса çитĕнтерчĕ Хĕветĕрпе Маня ятлă йăмăкне. Ывăлне авлантарчĕ, хĕрне качча пачĕ. Хĕветĕрсен Кайăк-Радик ятлă ача ӳсрĕ. Ачаранах купăс калама, ашшĕ хыççăн тракторпа, комбайнпа ĕçлеме вĕренчĕ.

— Уй кĕвви те маншăн хăлхара ак çак купăс кĕвви пекех янăрать. Ĕçрен ĕшенсе таврăнсан та, ăшран тухмасть вăл. Пĕр кана чупса тухатăн та вара клавишсем тăрăх, пушшех чун уçăлса каять. Хайхи «Çăкăр» сăвă аса килет. Иван Константинович клубсенче, акатуйсенче вулаканни. Çав сăвăран юрă ĕнĕрлекелесе аппаланса ларап вара. Ак çапла:

Чӗлле эп тытатӑп
типтерлӗн.
Вӑл — ҫӑкӑр.
Ун ячӗ ҫӳлте.
Хӗвел пайӑрки пек
хӗлхемлӗн
Куҫать ун ӑшши ман ӳте.

Хайӗн утмӑл ҫулӗнче хура-шурне ытлашшипех курса тӳснӗскер, йывӑрлӑхра пурпӗрех нихҫан та каска айӗнче выртнӑ пек майланса выртман, пуҫа кулӑпа, юрӑ-кӗвӗпе ҫӗкленӗ тур лашапа та, хурҫӑ утпа та чупса пурнӑҫ ҫулне такӑрланӑ вӑйлӑ арҫын ӑшӗнче илемлӗх туйӑмӗ пӗтменшӗн чунтан савӑнтӑм.

— Иван Константинович клубра чуна уҫнӑ хыҫҫӑн тата нумайрах пурӑнас килсе кайрӗ. Кӑмӑл ҫӗкленсен, кӑмака та ташланӑ тет те. Эпӗр те маххӑ памӑпӑр-ха, — тесе вӑл хуткупӑсне вӑрӑммӑн туртса ячӗ.

Каярахпа кун пирки Иванова хӑйне каласа патӑм та, вӑл, пӗр кулмасӑрах:

— Кӑмӑла кӑмӑл уҫать ҫав, — терӗ. — Кӑмӑллӑ ҫын ӗҫне те кӑмӑлтан тӑвать. Эпӗ ӗнтӗ ӑна хам ӗмӗрте пит лайӑх ӑнланса ҫитрӗм: ҫын ҫӑкӑрпа ҫеҫ тутӑ пулманнине те, унӑн хырӑмӗ кӑна мар, чунчӗри те ялан выҫса, йӑшкаса тӑнине те.

Федор Николаевичран пӗр ҫул кӑна кӗҫӗнскерӗн, паллах, курнитӳсни сахал мар. Пенси ҫулӗ ҫине Иванов та хӑйӗн ҫавра ҫӑкӑрне курӑмлах кустарса тухнӑ ӗнтӗ.

Сӑмах кунта ҫыннӑн юратнӑ ӗҫӗ, унӑн пурнӑҫри вырӑнӗ ҫинчен пырать. Ҫак виҫӗ тӗслӗх, виҫӗ танлаштару вӑл ӑс-хакӑл ҫӑкӑрне алла ҫавӑрса тытса чӑн-чӑн ҫӗр ҫӑкӑрӗпе пӗрлех чи ҫӳле ҫӗкленине кӑтартса парать. Паллах, Алексей Воробьев пек ҫӗрӗҫ ӑсти пулса, Федор Анисимов пек техникӑпа маҫтӑрла ӗҫлесе хӑй аллипе ӳстереймен Иванов тулли пучах. Анчах унӑн та шӑпа сӗтелӗ ҫинче ҫав тулли пучахах ҫитӗннӗ. Вӑл та пурнӑҫ каҫалӑкне ял ҫыннисемпе пӗрлех хавхаланса тытнӑ. Нуши-терчӗ те умне пӗрешкелех таталса аннӑ. Инкек-синкекӗ никама та аякра тӑратса хӑварасшӑн мар иккен. Турри кашниех хӑйӗнне парать пулас: ыррине те, усаллине те.

Уксак ура Ванькӑна мӗн пӗчӗкрен тарӑхтарнӑ. Чупу-вӑйӑра ытти ачасенчен юлнишӗн вӑрттӑн мӗн чухлӗ йӗнӗ пуль. Ялти тулли мар вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ тантӑшӗсем кӳршӗри Уравӑша сумка йӑтса ҫӳреме тытӑнсан, пушшех чунӗ кӳтнӗ унӑн. Ванька вӗсемпе тан куллен каллӗ-маллӗ вунӑ ҫухрӑм ҫӳреймен. Унӑн та малалла вӗренес килнӗ. Ҫав ӑнтӑлу вара ӑна Ҫӗрпӗве илсе ҫитернӗ. Библиотека техникумӗ ачапа килӗшнӗ. Чӑвашсен ватӑ хулинче вӑл кӗнеке тӗнчин алӑ-

кне хăюсăрран уçса кĕнĕ. Кĕнеке уншăн ĕмĕрлĕхех пурнăç тупри пулса юлнине тӳрех ăнланайман-ха çамрăк. Чун туртăмĕ çеç иксĕлмен. Пулас интереслĕ ĕçе кунран-кун, çултан-çул юратас килсе пынă. Вĕрентекенсен ăслă сăмахĕ ăна татах та хавхалантарнă. Диплом илсе яла таврăнсан, ĕмĕтлĕ кăмăл хăрăк турат пекех шартлатса хуçăлнă.

Çĕрпелте библиотека уçма ирĕк панă хучĕ те пур ĕнтĕ, анчах ун валли çурчĕ çук. Ку вăл 1952 çулта пулнă. Çăмăл вăхăт мар. Вăрçăччен те ялта клуб таврашĕ пулманран, культура çурчĕ пирки шутлама та май килмен çĕрпелсен. Хăйсем те Хурăнсур Çармăса çӳренĕ. Çармăссен колхозĕ пуянрах пулнă-ши е хуçисем мал ĕмĕтлĕрех пулнă, вĕсем хĕрĕх пĕрремĕш çултах районта çук пысăк клуб лартнă, унăн тăррине те витнĕ, анчах пĕтерсе туса çеç кĕреймен. Фронтран таврăннă арçынсем вĕçленĕччĕ шалти ĕçсене. Пысăк залшăн, анлă сценăшăн Шупашкар артисчĕсем те ырлатчĕç. Çĕрпелсен ун вырăнне чиркӳпе шкул пулнă. Чиркӳне вăтăрмĕш çулсенче хупнă. Ял халăхĕ пĕрле пухăнса калаçма, кино е спектакль курма «Мăн шкул» текен вăрăм çурт коридорне те пухăнкаланă.

— Ун чухнехи чухăн пурнăçа аса илес килмест, — ассăн сывласа ярать те Иван Константинович, типтерлĕ хура çӳçне меллĕн каялла шăлать, çав хушăра унăн çырăрах куçĕ уççăн çиçсе илет, тăрăхларах питçăмартисем çинчи йĕрĕсем пушшех тарăнланса туртăнаççĕ. — Тепĕр тесен, асăнмасăр та чун чăтмасть. — Тăрса вăл алăкăн-тĕпелĕн утать, ыратакан ури çине йывăррăн пусать. — Темле хăюлăх çитернĕ-çке, тем хистенĕ мана ялта библиотека уçмашкăн.

— Çăмăлах килмен апла?

— Çăкăр çиме пĕлсессĕн, çĕçĕ тытса касма та пĕлес пулать, тетчĕçи-ха. Ирĕксĕрех, хама хисте-хистех, чупма пуçларăм. Вăрнартан килсе туса парасса кĕтмелле-им? Колхоз председателĕн, конюхсен хура «мунчисĕр» руçне, урăх пушă пӳлĕм çук. Кайрăм шкула. Директор патне. Аверкий Осипович килĕшнĕ пекех. Классене хĕссех вырăн тупма шантарать. Анчах... ирĕк кирлĕ. Шупашкара çул тытрăм. Çутĕç министерствинче хамăр ял çыннине Отачкина шыраса тупрăм. Анатолий Степанович министр заместителĕнче ĕçлетчĕ. Ыйтăва татса пама пулăшрĕ вăл. Çунат хушнă пек вĕçсе килтĕм вĕт яла. Çавăн хыççăн Осипов мăн хурăн çумĕнчи пĕр класс çуртне, Нягасен тахçанхи кивĕ пӳртне, библиотека валли уйăрчĕ. Ял Совет ĕçтăвкомĕ шкапсем тупса пачĕ. Авалхи чиркӳ лапамĕнче çапла эпĕ те хамăн ĕçлесе илнĕ çăкăра çиме пуçларăм, ял халăхне те ăс-тăн çăкăрне çитерме тытăнтăм.

— Мĕнлерех халь, тутă-и вара эсир?

— Иван Константинович, ăшшăн кулса илнĕ май, çапла каласа хучĕ:

— Хама илсен, тутă пекех. Ял халăхĕ... Вăл та тутах пулма кирлĕ. Таврари ялсемпе танлаштаратăп та... Туçи-çармăссемпе сăрьелсем те,

хирпуҫсемпе уравӑшсем те, элменсемпе пӑваяльсем те... ӑс-тӑн апачӗпе ытлашши тутах мар пек туйӑнать.

— Сирӗнтен юларах пыраҫҫӗ апла вӗсем?

— Ҫаплах. Илемлӗх тӗнчин алӑкне яриех уҫаймаҫҫӗ.

Аса килсех кайрӗ, хӑйне Суворов ячӗпе хисепленекен колхоз председательне суйласан, Георгий Ильич, «Янгорчино» ҫыннисене вунӑ ҫул ытла ырлӑхра усранӑ хуҫалӑх ҫынни, туҫи-ҫармӑссемпе витере пухӑнса калаҫрӑм, ун хыҫҫӑнах шкул тума пуҫларӑм, тенӗччӗ. Ҫирӗммӗш ӗмӗр вӗҫӗнче те культурӑпа ҫут ӗҫ керменӗсемсӗр ушкӑнла хуҫалӑх кама кирлӗ-ши, камшӑн тытӑнса тӑрать-ши? Андреевӑн халӗ унта, халӑх культурине Ҫӗрпел-Хурӑнсурти пек ҫӗклес пулсан, тепӗр пурнӑҫ ҫаврӑмӗ тумалла.

Кун пирки аса илтерсен, Иван Константинович ман ҫине чеен пӑхса илчӗ те:

— Улӑхра та талккишпех ҫырла ӳсмест, вӑрманта та анлӑшӗпех кӑмпа ҫук, — терӗ. — Тепӗр чухне тата пурри те типет е усал ҫын ури айне пулса таптанать.

Ку танлаштарӑва вӑл этемӗн пултарулӑхӗ пирки аса илтернине туйрӑм. Хуравне те хӑй ҫийӗнчех тупрӗ:

— Пӗлетӗп, асӑннӑ ялсенче те халӑх таланчӗсем нумайччӗ. Мӗншӗн пусӑрӑнчӗҫ, мӗне пула ҫӗкленеймерӗҫ вӗсем. Мӗн пирки хӑйсемпе пӗрле колхозӗсене те пурнӑҫ хӳрине хӑварчӗҫ пуҫлӑхӗсем. Мӗншӗн халӑхӑн ӑс-хакӑлне те пылчӑка таптарӗҫ ҫав хуҫасем...

— Художник чунӗ пулман пуль вӑл пуҫлӑхсен.

— Эпӗ те ҫаплах шутлатӑп. Ӑнӑҫсӑр хуҫасем лекнӗ пирӗн кӳршӗсене. Районта, республикӑра тата сахал пулнӑ-и унашкаллисем...

Кулянмалли тӗслӗх ӗнтӗ ку. Пӗрисем пурнӑҫ урхамахӗ ҫинче хӗвел куллиллӗн савӑнса кӗрлеттернӗ чухне теприсен паянхи кун та тимӗр шапа кӳлнӗ хӑлтӑр-халтӑр урапа ҫинче тунсӑх куҫҫульне шӑлса пымалла-ши?

— Халӗ пӗр чир пур обществӑра. Мӗн пур айӑпа Сталин саманипе Хрущев-Брежнев вӑхӑчӗ ҫине йӑвантарасси. Аялтан пуҫласа ҫӳле ҫитичченех пӗр юрӑ юхать. Анчах ҫакӑ, ман шутпа, ытлашши тӗрӗсех мар пек. Паллах, пур, питӗ пысӑк айӑп пур ҫӗршыв пуҫӗнче тӑнӑ ҫав ҫынсен. Аслӑ вырӑнта вӑрах ларсан та, ӑслах пулса ҫитеймен пуль. Тӗрӗссипе илсен, айӑпӗ ытларах — хамӑрта. Хамӑрӑн юлхавлӑхра, хамӑрӑн хуравсӑрлӑхра. Шутлӑр-ха, эпир, мӗн, урӑх тӗнчере, урӑхла системӑра пурӑннӑ-им? Е пире генсексем, премьерсем килсе туса панӑ-ши ҫак ырлӑха? Мускавран та, Шупашкартан та, Вӑрнартан та, — аллипе тӳпенелле кармашса кӑтартрӗ Иванов, — ҫӳл тӳперен те тур мучи пӑрахса паман. Хамӑр вӑйпа, хамӑр пуҫпа ҫӗкленӗ халӑх пурнӑҫне, халӑх культурине.

Иванов ял культуришĕн çанă таварса ĕçлеме пуçланă вăхăтсене аванах астăватăп та, çавăнпа унăн сăмахне витĕмлĕ лайăх тĕслĕхсемпе çирĕплетме çеç пултаратăп.

Хурăнсурти Петр Ковский патне мана хамăн йысна пулнăран çеç мар, урăххи ытларах туртатчĕ. Ун ăшĕнче темле ăнланса илмелле мар ытарайми илемлĕх вĕресе тăратчĕ. Фронтран аманса таврăннăскер, вăл орденпа медальсем çакнă кительпе çӳретчĕ. Ял Совет секретарĕнче, клубра ĕçлерĕ. Сăвă-калав çыратчĕ. Хаçатсемпе туслăччĕ. Граммофон яратчĕ, купăс ăста калатчĕ. Детекторлă приемникрен пуçласа батарейăсемпе ĕçлекен сасăллă пысăк приемник таранах пурччĕ ун. Фотопа хытă кăсăкланатчĕ. Кĕнеке нумайччĕ. Кăвакарчăн, кролик, йытă усратчĕ. Пахчинче, пӳртĕнче тем тĕрлĕ чечек ӳсетчĕ. Кăмăлĕ пит уçăччĕ. Кулли тата. Çавăнпах пуль пĕрмай вулакан, нумай пĕлекен, тем тĕрлĕ ĕçпе те кăсăкланакан çак ырă кăмăллă çын патне ял ачисем кăна мар, çĕрпелсем те тăтăшах çӳретчĕç. Ковскисен пӳрчĕ нихçан та çынран пушă тăман. Çав хавас ачасем, каччăсем хушшинче эпĕ Иван Константиновича (ун чухне вăл Ванькăччĕ) та час-часах кураттăм. Петр Ковскин «ялти университечĕ» хыççăн пирнешкел шĕвĕрккесенчен чылайăшĕ культура ĕçне, литературăна, музыкăна, радио-фото ĕçне юратма хăнăхрĕ. Иванов пурнăçĕн тĕп йĕрĕ те Хурăнсурти çав интереслĕ килпех çыхăннă. Ун пирки вăл хăй çапла ырăпа асăнать:

— Петр Ковский пире ăс-тăн çăкăрĕн чĕллине мĕнле касса, хăш алăпа тытса çимеллине чи малтан вĕрентрĕ.

Алăра ĕç пултăр, пуçра ăс пултăр тенĕ пекех, Иван Константинович та библиотека пуянлăхне ял çыннисен кулленхи пуянлăхĕ туса хурассишĕн вăхăтне те, вăй-халне те хĕрхенмерĕ. Нягасен кивĕ пӳртĕнче культура вучахĕ чĕрĕлчĕ. Пурăна-киле библиотекăна колхоз правленийĕ çумне куçарчĕç. Ку вăхăталла ĕнтĕ Иванов районта палăрма пуçланăччĕ. Коммунистсем ăна хăйсен ретне илчĕç.

Студентсем каникула килсен, вулав пӳлĕмĕ пушшех чĕрĕлетчĕ. Ял культурин штабĕ пекехчĕ. Хăйĕнчен икĕ çул кĕçĕнрех Ваçкă Романов пĕррехинче юлташне калать:

— Шутласан, тем те тума пулать, Ванька. Анчах пĕлӳ çитмест пирĕн яш-кĕрĕме. Унсăрăн нимле ырă малашлăх та курмастăп эпĕ. Вĕренекен нумай пирĕн ялтан, тулькăш специальнăçĕсем вĕсен хуларисем-çке. Эс правленире, партбюрора хускат-ха çак ыйтăва. Ямалла пирĕн çамрăксене институтсемпе техникумсене. Хамăрăн стипендиатсем туса. Халех.

— Ху вĕренсе килмесĕр пулмасть пуль, — тет Иванов. — Халлĕхе ку ыйту — манăçнă ыйту. Калаçнă эпĕ. Укçа çук, теççĕ.

— Мана хамăр колхоза ямасан?

— Илсе килетпĕр. Эс ют ялшăн çуралман. Хамăр колхоза çĕклемелле. Хамăр çынсене çăкăр çитермелле.

Чăн та, Романовăн малтан урăх районта агрономра ĕçлемелле пулса тухрĕ. Çавăн чухне Иванов, ялти ятлă çынсемпе, коммунистсемпе канашласа, тепĕр кĕрешĕве тухрĕ. Тăрăшни харама каймарĕ. Васкă тусĕ тинех тăван çĕр ытамне лекрĕ. Çамрăк агроном ĕçе çĕр карттинчен, пусă çаврăнăшĕнчен, çĕр пулăхлăхĕнчен тытăнчĕ. Курать халăх: ачи пултарать. Ун чухнехи председатель Матвей Кузьмич та калать: «Ватăлтăмăр пулас эпир, вăй-хал та, пĕлӳ те çитмест. Малашлăх сирĕнте». Çапла 1959 çулта колхоз тилхепине çирĕм пиллĕкри Василий Романова тыттарасçĕ. Иванов ун чухне парторганизаци секретарĕччĕ.

— Мана Иван Константиновичпа ĕçлеме çăмăлччĕ те, йывăрччĕ те, — аса илет халĕ Василий Игнатьевич, «Большеторханский» совхоза ертсе пыраканскер. — Тӳрре тухасшăнччĕ, ултава юратмастчĕ, канăçсăрччĕ. Ман куçран пăхса пурăнмастчĕ. Пĕрмаях мĕн те пулин шухăшласа кăларатчĕ. — Шап-шурă шăлĕсене кăтартса туллин кулса илет те вăл ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçать. — Аптăратсах çитерчĕ пĕринче.

— Клуб пирки мар пуль? — аса илтертĕм эпĕ.

— Манман-и эс те ăна.

— Ăçтан манăн ĕнтĕ çав хĕрӳ вăхăта.

— Ху та эс ман хыççăн колхозри комсомол организацине ертсе пытăн-çке. Хĕрӳ çулсемччĕ, — куçран тӳррĕн пăхрĕ Романов. — Иксĕр те пĕр урапа çинчехчĕ. Сирĕн чи малта культура урхамахĕ чупатчĕ.

— Сирĕн хăвăрăн та чи малта марччĕ-и çав урхамах?

— Тĕрĕс. Ял культури мана хама та нумай шухăшлаттарнă. Сирĕн ял клубне утма та намăсчĕ. Хамăрьялсем: «Çак ачана мĕншĕн колхоз çăкăрне çитеретпĕр-ши эпир», — тесе калассăнах туйăнатчĕ. Анчах... хуçалăхăн кĕсйи пушă, йывăçĕ, кирпĕчĕ, цеменчĕ çук. Витесем те йăхтăр-яхтăр. Патшалăхĕ тыррине, ашне-сĕтне ытларах та ытларах ыйтать. Ванька клуб тутарасшăн çунтарать, коммунистсен пуçлăхĕ те, вăл партбюро ларăвне клуб тăвас ыйтăва лартать. Вăрçса-çапăçса тенĕ пек йышăнса хăвартăмăр.

— Тĕрĕс турĕç вĕт коммунистсем?

— Хам та пĕрлех сасăланă вĕт. Йышăнтăмăр — турăмăр. Клуб çеç те мар — чăн-чăн Культура керменĕ. Укçине те тупрăмăр. Астăватăн-и махорка, кантăр, хăмла, тырă, сысна ашĕ колхоза пуйтарнине?

— Астăватăп. Иван Константиновича çав çулсенче Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ те пачĕç.

— Мĕншĕн, тетĕн пуль? Колхозниксене пуйтарма пулăшнăшăн, ял çыннисене ăс-хакăл апачĕпе тăрантарнăшăн. Парторгĕнче те пултаратчĕ, культура енĕпе те хăех ĕлкĕретчĕ. Вулакансен конференцийĕ, диспут, тĕлпулу, спектакль, концерт, лекци... Мĕн кăна йĕркелеместчĕ пуль. Хальхи партком секретарĕсем штатра тăраççĕ,

нумай укҫа илеҫҫӗ. Анчах вӗсем ӗҫне ун чухнехи чухлӗ тӑвайманҫҫӗ. Ивановсем ахалех ӗҫленӗ халӑхшӑн, библиотекарӗн сакӑрвунӑ тенкишӗнех. Халь тӳлевсӗр утӑм та тумаҫҫӗ. Штачӗ хушӑнать — ӗҫӗ хавшать. — Вӑл пуҫне пӑркаласа илет те малалла калать. — Аслисен, ваттисен йӑли-йӗркине пӑсмасӑр кивӗ юрра та ҫӗнӗ кӗвӗпе ҫӗнетсе пытӑмӑр-ши.

— Кашни ӗҫӗн хӑйӗн кӗвви мар-и? Ун чухнехи сирӗн дуэт янӑравӗ халӗ те тамалмасть, вӑйланса пырать.

Василий Игнатьевич пурне те асӑнасшӑн мар пулас, аллипе сулать:

— Ҫитӗ-ҫке. Мӗн тума май килнине туса хӑварнӑ. Пӗччен мар. Ушкӑнпа. Мирпе.

Каллех Романов сӑмахне илсе кӑтартас килет.

— Культура ҫуртӗнче икӗ оркестр йӗркелерӗмӗр, — аллисене дирижер пек сарса вылятать. — Пӗри — ҫамрӑксен. Юрӑ-ташӑ валли. Тепри — параднӑй. Уявсем валли. Масар ҫумӗнчи Палӑк патӗнче хамӑр ял ачисем йӗс инструментсемпе вӗрсе каланӑ хурлӑхлӑ кӗвӗ Аслӑ Ҫӗнтерӳ уявне пухӑннӑ ҫынсен куҫӗсенчен шӑпӑр-шӑпӑр куҫҫуль юхтарчӗ. Аванччӗ оркестрӗсем. Тепре ҫӗнетсе ямаллах.

— Кашни вӑхӑтӑн хӑйӗн илемӗ пур ҫав.

— Эх, иртнӗ куна хунарпа шырасан та тупаймӑн халь. Анчах та... — Аса илет Романов. — Иртнӗ кунсен ӑшши халӗ те ӑшӑтать мана, мана ҫеҫ-и, ял ҫыннисене те. Пӑнтӑх вӑхӑт тесе лӗпӗртетсе кӗрсе кайрӗҫ те карма ҫӑварсем, халӑха тӗппипе пӑтратса ячӗҫ. Ӗлӗкхи пек чун хавалӗпе ӗҫлеме чӑрмантаракан хунаса кайрӗ. Карма ҫӑвар вӑл — ҫынна вӗрентекен — нихҫан та халӑхшӑн, патшалӑхшӑн ҫунман, ытларах хӑйшӗн ӑшталаннӑ. Усси пулман унран. Ялан халӑх ӗнси ҫине хӑпарса ларса ун сӗткенне ӗмме, ырлӑхра ҫухӑрса чапланса юлма хӑтланнӑ. Ман ҫакна ҫеҫ палӑртас килет: яла пӗтермерӗмӗр, ҫамрӑксене хамӑр ҫумра сыхласа хӑвартӑмӑр. Ҫав пысӑк та кӑткӑс ӗҫре пире, хуҫалӑх пуҫӗнче тӑракансене, ял интеллигенцийӗ нумай пулӑшрӗ. Пӗррехинче пирӗн пата Мускав, Ленинград, Ярославль, Иваново, Шупашкар ҫыравҫисем килнӗччӗ.

— Мана та халӗ ун чухне Юрий Грибов калани аса килчӗ, — пӳлтӗм эпӗ хӗрсе кайнӑ Василий Игнатьевича. — Ҫӗрпелте имлӗ сӑмаха, кӗнекене, музыкӑна, юрра-ташша юратаҫҫӗ. Вӗсен — районти чи лайӑх библиотека, — терӗ паллӑ писатель-публицист тӗлпулу хыҫҫӑн.

— Ку тӗрӗсех. Иван Константиновичӑн библиотеки — ял ҫыннисен ӑс-тӑн вучахехчӗ ӗнтӗ. Мускавсем те, шупашкарсем те, вӑрнарсем те ҫулсерен ырӑ енчен ҫеҫ палӑртнӑ ун ӗҫне. Вунӑ ҫул республикӑри чи лайӑх библиотека ятне тытса тӑнӑ. Хӑйне ӑна Культура министерствипе Вӑрнар районӗн Мухтав кӗнекине кӗртнӗ. Грибова ял ҫынни-

сем литература ҫинчен пит хӗрӳ калаҫни уйрӑмах кӑмӑла кайнӑччӗ. «Акӑ ӑҫта вӑл чун ачашлӑхӗ, кӑмӑл ҫепӗҫлӗхӗ, сӑнар эрешӗ, пурнӑҫ сӗткенӗ», — тесе кӑна хӑпартланса ҫӳренӗ. Нина Дмитриева вуланӑ сӑвва епле тӑнларӗ? Хурӑнсур ачи, ялти учитель Калистрат Воробьев шӑрантарнӑ сӑвви ӗнтӗ, чӑнах та, янравлӑ-ҫке, кӑмакаран тин кӑларнӑ ҫӑкӑр пекех ӑшӑ та тутлӑ:

Сана эп пуҫ таятӑп, ҫӑкӑр.
Санран асли, чӑнах та ҫук.
Эс — халӑх вӑйӗ, халӑх тарӗ,
Эс — йывӑр, канӑҫсӑр ӗҫҫи,
Эс — ҫӗр-аннемӗр пархатарӗ,
Эс — кил ӑшши, сӗтел хуҫи.

## *Пурнӑҫ палӑкӗ*

Романовпа пӗрле ӗҫленӗ, ялта пӗрле пурӑннӑ вӑхӑтрах эпӗ пӗр уйрӑмлӑх асӑрханӑ. Унра хӑйӗнче хӗрӳлӗх туйӑмӗ иксӗлмиччӗ. Ӑшӗнче илемлӗх вут-хӗмӗ кӗрлесе тӑратчӗ. Ҫав хӑват, ҫиеле сиксе тухса, такама та ҫавӑрса илме пултаратчӗ. Хӗрӳ чунлӑ пуҫлӑх ял халӑхне те ҫавна пулах анлӑ уҫлӑха илсе тухрӗ пуль — пуянлӑхпа илемлӗх уҫлӑхне. Ял халӑхӗн тирпейлӗ йӑли ҫинче тымарланса никӗс ярса вӑл, Ивановсем пулӑшнипе, Культура керменне купалама пултарчӗ. Ӑна вӑл, паллах, пӗччен туман. Ҫав ырӑ ӗҫӗн пуҫаруҫи, ертӳҫи пулнӑ.

Вӗсен тӗп шухӑш-тӗллевӗ культура ыйтӑвӗччӗ. Мӗншӗн тесен ӑсхакӑл аталанӑвӗсӗр, ӑшри ырӑлӑх туйӑмӗсӗр, чун-чӗре илемӗн пуянлӑхӗсӗр ҫын — чухӑн чунлӑ ҫын. Ӗҫне те чун хавалӗпе тумасть вӑл, ҫемйине те тӑрантарса йӗркеллӗ усраймасть, хӑй эртелӗн чысӗшӗн те ҫунма пӗлмест, патшалӑх умӗнчи тивӗҫне те манать. Унашкал тӑрпалтайӑн йӗрке-тирпей, ят-сум, хисеп ҫук. Ҫавӑнпа ӗнтӗ ӗҫ ӑнӑҫлӑхӗ те пултӑр, воспитани шайӗ те ҫӗклентӗр, хамӑр чӑваш халӑхӗн ячӗ те янӑратӑр тесе ӗҫлесе пынӑ. Романов нумай ӑшталанчӗ, ҫамрӑклах кӑвакарчӗ те ял культурине ӳстерессишӗн. Хӑйне района куҫарсан та уйрӑлмарӗ ҫав ӗҫрен. Хӑй хыҫҫӑн пыракан ҫамрӑксене вӗрентсе хӑварчӗ. Георгий Ильич та колхоз урапине ҫав ҫулпах тытса пычӗ. Андреева пурпӗрех культура ыйтӑвӗсемпе ӗҫлеме ҫӑмӑлрах пулчӗ. Ҫирӗп никӗс ҫинче чаплӑ кермен купалама шанчӑклӑрах-ҫке.

Культура ыйтӑвӗсене патшалӑх ку таранччен мӗнле пӑхнине пӗлетпӗр ӗнтӗ. Ытти ҫӗре янӑ укҫа-тенкӗрен мӗн тӑрса юлнӑ — ҫавна пӑрахса параҫҫӗ халӑха. Ҫӗршыв енчӗкӗнчи укҫан пӗр проценчӗ чухлӗ те лекмест-ҫке культура валли. Сысна ҫури ӳстерме янӑ тӑкакран та сахалтарах уйӑраҫҫӗ этеме аталантарма. Чикӗ леш енчи вӑйлӑ ҫӗршывсем

ĕçлекен çыннăн ăс-хакăлне ӳстерме укçа хĕрхенсе тăмаççĕ. Пирĕн темшĕн-çке йăлтах тепĕр майлă пулса тухать. Çынни ĕçре кутĕрленет, патшалăха хушма продукт мĕн чухлĕ парать, налукне тӳлет. Хăйне çĕнетсе вăйлатмашкăн вара ăна каялла пуссем кăна лекеççĕ. Çаратса пушă чунлă тăратса хăварнă çын ыйткалакан выранне тăрса юлать. Тĕрлĕрен меценатсем, спонсорсем, шефсем шыраттарма тытăнаççĕ вара. Пулăшакансăр пирĕн культура пĕтме пултарать-çке.

Çавăнпах культура фрончĕн ĕçченĕсем — чи чухăн ĕçченсем. Çавнашкал йывăр тапхăрта та ĕçлекен çын çине чăн-чăн этемле пăхма пултарнă, колхозăн пур-çук укçинчен клуб, библиотека, шкул, ача сачĕ, музей-галерея валли те тивĕçлĕ пай касса илме хăюлăх çитернĕ пуçлăхсем паянхи пурнăç валли, çамрăксем валли, паттăрла ĕçех тунă тесе калас килет. Культура шăпи экономика шăпи пулнине туйса ăнланма пултарнă Романов, Андреев, Марков бухгалтер, Иванов. Ял культурине çĕклеме «Янгорчино» колхозра хуçалăха аталантарма уйăрнă укçан хĕрĕх процентне тăкакласçĕ. Çуллен — çĕр пин.

Кам çак пархатарлă ĕçсене туман е тăвайман, е тăвас темен, çавă хăйĕн халăхне сиен кӳнĕ. Халĕ те çавнашкал айванлăх чухăнлăхĕнче усраççĕ çынсене унашкал пуçлăхсем. культурăллă çынсем кунĕн-çĕрĕн хут çыраççĕ, пĕрне-пĕри вĕрентеççĕ, канашлаççĕ, ыйтусем сӳтсе яваççĕ. Çав вăхăтрах чылай ялта культура вучахĕ халăх куççулĕпе чăшлатса мăкăрланать. Клубсăр, концерт залĕсĕр, картина галерийĕсĕр яла пырса кĕрсен, тӳрех куç умне пуш сарай пек анлă пӳлĕмсенче культурăлланса вăхăт ирттерекен бюрократсен кулăллă сăнĕсем тухса тăраççĕ. Вĕсемшĕн хăйсене пур енлĕн аталантарма майĕсем ытлашшипех, чунчĕринче çеç ял туйăмĕ çукрах.

Çапла, халăхăн ăс-хакăл шайне çĕклеменни хамăрăн пурнăç утăмнех тăллать. Культура шайĕ чакнăçем çыннисен ĕç мехелĕ те хавшать, ĕмĕт хавхаланăвĕ те сӳнет. Çавăнпа ĕнтĕ романовсемпе ивановсем, культурăпа нравственность пĕлтерĕшне ăнланса, вĕсене ял çыннин чун-чĕринче, шухăш-ĕмĕтĕнче пĕр вĕрен пек явма тăрăшнă. Ăстăн апачĕ çынна тутлă çăкăр пĕçерме, сĕтел ури авăнмалăх сĕт-çу, ашпăш хатĕрлемс, капăр тумланма, кермен евĕр çурт-йĕр лартма, йĕркеллĕ пурăнса чыса çĕклеме пулăштăр, тенĕ вĕсем. Çав пуянлăх алăкне пĕтĕм вăйран уçнă та ĕнтĕ.

Çавна май вунă çул каяллахи аса килет. Аслă Çĕнтерӳ уявне ял халăхĕ кар пухăннă. Хăнасем те йышлă. Çĕрпелпе Хурăнсур Çармăс тата Тукай питĕ паллă куна чыслать. Колхоз председателĕ Георгий Ильич Андреев пурне те культура çуртĕнчи выставка залне чĕнчĕ, алăк урлă карнă хĕрлĕ хăйăва хачăпа касса татрĕ. Илемлĕх тĕнчи çынсене хăй патне чĕнсе кĕчĕ. Чи хумхантараканни тата тыткăнлаканни кунта халĕ — салтаксен сăнĕсем. Вăрçăран çĕнтерӳпе таврăннă тăхăрвун икĕ фронтовик сăнне стена анлăшĕпе тăвата рете стройри

пек вырнаҫтарса тухнӑ. Ытти стенисене ял пурнӑҫне сӑнласа паракан картинӑсем капӑрлатаҫҫӗ.

Ял ҫыннисемпе тата Шупашкар хӑнисемпе пӗрле художниксем те хӑйсен ӗҫӗсене пит тимлӗн, кӑсӑкланса пӑхаҫҫӗ. «Ял шуҫӑмӗ» ушкӑн пуҫлӑхӗ Николай Карачарсков, Виктор Немцев, Элли Юрьев, Павел Григорьев-Савушкин, Валерий Семенов ыйтусем ҫине хуравлама ӗлкӗреймеҫҫӗ. Ҫак художниксем ӳкернӗ-ҫке вӑрҫӑпа ӗҫ паттӑрӗсен сӑнӗсене, ял пурнӑҫӗн интереслӗ саманчӗсене.

Тепӗр икӗ ҫултан «Янгорчино» колхозра «Третьяковка» уҫӑлчӗ. Чӑвашра ялти пӗрремӗш галерея! Унӑн директорӗ пулма Иванова шанчӗҫ. СССР Художниксен союзӗ ҫӗрпелсене вӑтӑр картина парнелерӗ. Ҫавӑн саккунлӑ хутне Карачарсков савӑнӑҫлӑ самантра Иван Константиновича пачӗ. Чӑваш художникӗсем те колхозниксем умӗнче парӑма юлмарӗҫ.

Н. П. Карачарсков Ҫӗрпел йӗтемӗ ҫинче ӳкернӗ «Чӑваш уйхирӗнче» картина тӗнчипе сарӑлчӗ. «Янгорчино» колхоз ҫыннисен сӑнӗсемшӗн Николай Прокопьевича СССР Художество академийӗн кӗмӗл медальне панӑччӗ. «Ял шуҫӑмӗ» ушкӑнри тӑвата художник К. В. Иванов ячӗпе хисепленекен патшалӑх премине илчӗ. Вӗсем Н. П. Карачарсков, И. Г. Григорьев-Савушкин, В. Л. Немцев, В. С. Семенов — ҫӗрпелсен «хисеплӗ колхозникӗсем».

Колхозра тӑватӑ бригада та, шӳтлесе художниксен ушкӑнне «пиллӗкмӗш бригада», теҫҫӗ.

— Хисеплӗ колхозниксен бригади пирӗн патра «пиллӗк» паллӑлӑх ӗҫлерӗ, — тет Иванов. — Вӗсем пире илем тӗнчин алӑкне уҫса пачӗҫ, ҫӗр ҫыннипе киҫтӗк ӑстисен туслӑхне пӗр тӗвве тӗвӗлеме пулӑшрӗҫ. Картинӑсен галерейи илем пӳлӗмӗ ҫеҫ мар, ял тӗкӗрӗ пулса тӑчӗ. Пурнӑҫ тӗкӗрӗ.

Чӑннипех колхоз историйӗн тӗкӗрӗ иккен культура ҫуртӗнчи ҫак тыткӑнуллӑ вырӑн.

Иван Константинович темиҫе кун ӗнтӗ хумханулӑн чупкаласа ҫӳрет.

— Мӗн пулнӑ сана, Ванька? — урока хатӗрленме пӑрахсах кӑсӑкланса ыйтать арӑмӗ, Нина Георгиевна. — Купӑс каласа кӑмӑлна уҫ.

— Купӑс-баян шухӑшӗ мар-ха ман. Хӑнасем килмелле, терӗҫ.

— «Акӑлчансем» пирки мар пуль те эс?

— Ҫавсем пирки.

— Пирӗн директор та вӑл семинаршӑн шкула ура ҫине тӑратрӗ. Ытлах ан пӑлхан, семинарне эс мар, ронорисем ирттереҫҫӗ вӗт.

— Ман патра та пулаҫҫӗ ҫав. Экскурсине ют чӗлхепе йӗркелетпӗр. Каям-ха хамӑр ялти «акӑлчанкӑсем» патне.

Çапла вăл апат çинĕ-çимен тухса вашлаттарчĕ, шкула çитсе, учительсемпе, ачасемпе калаçрĕ, галерея çинчен кĕскен çырса хăварчĕ.

Акă, хайхи кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Районти шкулсенче акăлчан чĕлхи вĕрентекенсем Çĕрпеле килчĕç. Вĕсене Иван Константинович галерейăра кĕтсе илчĕ.

— Картинăсен галерейи тăххăрмĕш çул ĕçлет. «Третьяковкăра» чăваш художникĕсен çирĕм выставкине йĕркеленĕ. Галерейăра пионера, комсомола, колхоз членне илеççĕ. Çамрăк мăшăрсем туй кунне хăйсен шухăшне çырса хăвараççĕ. Эстетика урокĕсем, культура университечĕн занятийĕсем пулаççĕ...

Янăравлă ют чĕлхепеваскамасăр ăнлантарчĕç шкул ачисем. Директорăн хушăран ыйтусем çине вырăсла-чăвашла та хуравлама тиврĕ. Çапах та пит маттур ял илемпийĕсем, пурнăç илемĕ, этем хăвачĕ сăнарлă искусствăра мĕнле янăранине куракансем патне аванах çитерме пултарчĕç. Ют патшалăх çыннисем килес-тăвас пулсан та экскурсовод вырăнтах пур. Çакă мар-и вăл ял çыннисен культура шайĕ тата тепĕр утăм çӳлерех çĕкленни?

Çĕрпелсемшĕн чăннипех илем эрни пулчĕ пулас ку эрне. Тепĕр кунне Шупашкартан Карачарсковсем автобуспа ларса килчĕç. Николай Прокопьевичăн ӳкерсе пĕтермен ĕçсем пур. Мăшăрĕн, искусствоведени кандидачĕн Мария Андреевнан, хăйĕн тĕп ĕçĕ пур кунта. «Илемлĕх тĕнчи» клубра вăл уйăхсерен интереслĕ занятисем ирттерет. Хальхинче те тăватçĕр вырăнлă зал лăках тулчĕ. Карачарскова ял çыннисене чăваш художникĕсен республика юбилейне халаллană çĕнĕ ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ, вĕсене эпидиаскоппа кăтартса пычĕ.

Миçе çул ĕнтĕ Карачарсковсем «Янгорчино» колхозра илемлĕх тырри çитĕнтереççĕ. Упăшки ял çыннисене вилĕмсĕр сăнара куçарать, арăмĕ вĕсен чĕринче сăнарлăх туйăмĕ вăратать. Савăк мăшăр мĕнле чун-кăмăлпа халăх çумне туртăннине, ял çыннисем вĕсене хăйсен ытамне ĕмĕрлĕхех илнине курса савăнать Иванов. Çав хутшăнусене вăйлатса çирĕплетме хăй те мĕн чухлĕ те пулин усă кӳме пултарнăшăн ăшĕнче савăнать.

— Çак туслăха çирĕплетме Георгий Ильич хăй председательте чухне питĕ вăйлă пулăшрĕ, — çĕкленӳллĕн калаçать Иван Константинович. — Мастерской валли пӳлĕм уйăрчĕ, художниксене ĕçлеме кирлĕ майсем туса пачĕ. Пур енĕпе те пулăшрĕ. Çăкăр-тăвар хирехирĕç, теççĕ вĕт. Кăмăлне кура телейĕ те, авă. Пирĕнни пек мăшăрлану пӳлĕмĕ Шупашкарта çуккă пуль. Вăтам шкул интерьерĕ, обществăлла çуртсен илемĕ, Ленин площачĕ. Вĕсем пурте хĕвел куллиллĕ, кăмăл çĕкленмелĕх маçтăрланă вырăнсем. Йăлтах — «Ял шуçăмĕн» ĕçĕсем.

Эрне вĕçĕнче «Çĕр пики» спектакль пулчĕ. Литературăна юратакансен «Ентеш» клубĕ, Иван Константинович ертсе пынипе, хамăр

тăрăхри çыравçăсен пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе интересленсех тăрать. Мана та чĕнчĕç вĕсем. Спектакльне колхозăн çĕнĕ председателĕ Федор Григорьевич Кузьмин манăн повесть тăрăх хатĕрленĕ. Повеçне эпĕ шăпах Карачарсковпа унăн ĕçтешĕсем тата хамăр ялсем çинчен çырнăччĕ. Унта Костин ятпа Иванов сăнарне те тунăччĕ.

Спектакль умĕн калаçу пулчĕ. Залра ларма вырăн çитменнипе ура çинче тăракансем те нумайччĕ. Çавăнтанах ăнлантăм: Иван Константинович тĕлпулăва тĕплĕн хатĕрленĕ. Сăмах май каласан, вăл хуть те мĕнле мероприятишĕн те чунне парать. Чăн та, повеçе нумай çынсене тĕплĕн вулаттарнă, уйрăм сыпăксене радиопа та панă, чăваш чĕлхи вĕрентекен М. А. Плотниковапа И. И. Захарова, Иванов ыйтнипе, ачасене повеç тăрăх сочинени çыртарнă.

Яла таврăннă Микулай Караваев художник пултарулăх шыравĕнче хăйĕн пурнăç йĕрне, сăнарлă чĕлхине, мелне, тĕп темине тăван çĕр çинче, тăван халăх хушшинче тупать. Колхоз агрономĕ Венера Пашкова уншăн тĕнчере çук илемлĕ сăнар, вилĕмсĕр юрату, çĕр пики пулса тăрать. Ӳкерӳçĕпе ĕç халăхĕн пурнăçĕ пĕр вучахра шăраннине, ĕçри туслăх пĕр тымартан ӳссе çирĕпленнине, сăнарлă искусство ăстисем ял культурине çĕклессишĕн, çынсен тавракурăмне аталантарассишĕн çине тăнине кăтартса панăччĕ повеçре. Ĕçсем Çавра çăкăр йăхĕнчен тухнă ĕçчен те пултаруллă, хастар çынсем тавра пулса иртеççĕ.

Спектакльте Микулай Караваева колхоз председателĕ Хĕветĕр Кузьмин вылярĕ. Вăл, халăха куçа-куçăн пăхса, çапла каларĕ:

— Эсир пире хăвăр пата тăванла ăшшăн йышăнса хăвăрăн чĕрĕрсене уçса патăр, ырă кăмăлăрсене кăтартрăр, пире искусство тӳпине вĕçме хавхалантарса пытăр. Сирĕнпе пĕрле пулнипе эпир те çак пуян çĕр çинче çирĕп тăратпăр, çав çĕртен, çĕр çыннинчен сиплĕ вăй илетпĕр.

Çавра çăкăр Хĕветучĕн ролĕ те питĕ ăнăçлă тухрĕ. Иван Константинович чăн-чăн чăваш ватти пекех вылярĕ. Купăсне те туртать, шӳтлеме те манмасть, ăслă сăмахне те чĕлхинчен вĕçертмест.

— Илемлĕх хăвачĕ çĕр сĕткенĕпе ӳсет, — тет вăл ăшă куçĕпе пăхса. — Эсĕр, художниксем, çав сĕткене ĕмме, ун илемĕпе чапланма пултарнăшăн темрен те хытă савăнатпăр. Тарăн тымар ятăр эсĕр пирĕн çĕр çине. Унта тухăçлă çимĕç ӳстертĕр. Туслă пĕр кăшăлра пирĕн пурнăç илемĕ.

«Ентеш» клуб членĕсем Анатолий Емельяновăн « Ят» повеçне, Виталий Енĕшĕн кулăшĕсене, Николай Максимовăн «Синкер» романне «Тăван Атăл» журнала вулакансемпе пухăнса сӳтсе яврĕç. Журнала кунта юратаççĕ, ăна нумай çын çырăнса илет — пилĕкçĕр аллă кил валли — çĕр çирĕм экземпляр.

— Юлашки вăхăтра кĕнеке вулакансен йышĕ чакса пырать, тенине илткелетĕп библиотекарьсем хушшинче, — тет Иванов кăмăлсăртараххăн. — Пулма пултарать, хамăр патра та сисĕнст вăл.

Анчах та пирĕн лăпланса ларма юрамасть. Кĕнекене, журнала халăх хушшине сарма пĕлмелле. Литературăпа искусство пек çынна ӳссе аталанма пулăшакан урăхла хăватлă вăй халлĕхе курмастăп-ха. Классиксем — воспитани шкулĕсем. Çав шкулсен алăкĕсем ан хупăнччĕр тесен, хальхи саманара культура çыннисен уйрăммăнах çине тăма тивет. Суя, пуш хайлавсем, чăнлăхран аякра тăракан искусство япалисем çамрăксене ан пăсчăр тесен, пирĕн вĕсене лайăх произведенисем тĕлне çул кăтартмалла. Куншăн май килнĕ таран тăрăшатăп-ха. Çапах та библиотека ĕçĕнчен уйрăлса клуб ĕçне куçнă май, малтанхи хамăн тивĕçе çителĕклех пурнăçлаймастăп.

Ку сăмах тĕрĕсех пуль. Кунпа кун пĕр пек килмест, тенĕ евĕр унăн та пурнăçĕ тумхахсăр пулман. Усал çын ури айне те лекме тӳр килнĕ. Анчах та кăмăллă çыншăн яланах пур çĕрте те вырăн пур, çиллесшĕн çеç пур çĕрте те тăвăр. Халĕ, Хурăнсур клубĕн пуçлăхĕ пулнă хушăрах, Ивановăн картинăсен галерейинче те чылай тăрăшмалла пулать, иккĕмĕшпе тăваттăмĕш бригадăсенчи парторганизацие те ертсе пымалла, хаçата та çырса тăмалла, халăх университечĕн культурăпа йăла факультетне те чĕртсе тăмалла, çĕнĕ туй та йĕркелемелле, трактор паркне те, уя та çитмелле, стена хаçачĕ те кăлармалла...

— Унашкал çынсем районта та пĕрре-иккĕ, — ним ӳстермесĕрех каларĕ Иван Константинович пирки «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакторĕ М. А. Васильев. — Вĕсем культура лавне ывăнма пĕлмесĕр, хăйсене хĕрхенмесĕр тăвалла туртаççĕ.

Ĕçчене яланах вăхăт çитмест, теççĕ халăхра. Яланах тĕрĕс мар пуль ку. Çапах Иван Константинович хăйĕн кашни ĕçĕ валли вăхăт тупса перекетлеме пĕлет. Вăйне, вăхăтне кирлĕ-кирлĕ марпа сапаламасть. Усал йăла-йĕркепе çыхланмасть. Ашшĕ-амăшĕ пекех типтерлĕ, сумлă. Хисепĕ çителĕклех ĕнтĕ, Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ — ялти, районти тава тивĕçлĕ çын. Пĕлтĕрхи çĕртме уйăхĕнче вăл утмăл çул тултарчĕ.

Умра — кану, хыçра — хĕрӳ ĕç. Тепри пулсан, кануне ик алăпах ярса илмелле, ĕçлесе ахаль те ывăннă, йăлăхнă, виличчен канлĕ пурăнса юлас, темелле. Çук çав, канăçсăр чĕре урăхла тапать, мал ĕмĕтлĕ пуç ĕç çинченех шухăшлать.

— Пултаруллă, хастар çамрăксем пирĕн. Анчах вĕсен ăсталăхĕ çитсех каймасть-ха. Хăюлăхĕ те çукрах. Вĕрентсе хăварасчĕ вĕсене: халăхпа ĕçлеме, халăх вăйне ял культуришĕн яма хăнăхтарасчĕ. Ытти хăш-пĕр ялсенчи пек такам кулачă пăрахса парасса кĕтсе ларма ан вĕренччĕр. Колхоз хуçисем — культурăллă çынсем. Тавçăруллă, ăслăтăнлă. Вĕсемпе алла-аллăн тытăнса пурнăça татах пуянлатмалла, хитрелетмелле. Илемлĕх чуна савăнтартăр, ĕмĕте вĕçтертĕр. Пĕрлех пуласчĕ-ха вĕсемпе, — куçĕнчи шĕл-кăвара сапать те, çав хĕлхем ăçта ӳксе вырнаçнине тĕплĕн пĕлсе юлнăшăн кăмăлланса, куллине йăпа-

2L-40392
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

тать. — Манăн хамăн ялти кашни çын пит-куçĕнче кăмăл кулли ташланине курас килет, çав ташă çеммине татах та вăйлатас килет...

Ивановпа пурнăç хавалĕ, илемĕ, ĕмĕчĕ пирки калаçса тăранаймастăн. Ĕмĕтлĕ çын çунатлă çав.

Çу уйăхĕн ăшă кунĕ. Сад ем-ешĕл çеçкере. Пыл хурчĕсен ĕç вăййине ăмсануллăн сăнать Иван Константинович. Хăçантанпа ĕнтĕ вăл чунтан аппаланать вĕсемпе. Ахалех мар. Пылне те çителĕклех илет. Аякра пурăнакан пиччĕшне, йăмăкне, хăйĕн ачисене парса ярать. Çимелĕх те, сăра тумалăх та юлать. Сĕтел татăк тăмасть пылран. Сиплĕхне те туять. Пĕр вăхăтра вăл вар-хырăм ыратнипе аптăранăччĕ. Тухтăрсем касас тесе сехĕрлентерсе пăрахрĕç. Алла лекнĕ пĕр кĕнекене тĕплĕн вуласа тухнă хыççăн пылпах сывалчĕ. Ахальтен мар пыл утмăл чиртен сыватакан эмел тесе каланă пуль çав ваттисем.

Ашшĕ те унăн, Кăнстантин Иванч, пыл хурчĕсем юратнă, чаплă сад ӳстернĕ.

Ялтан кăшт тăварах, уçă вырăнта, тăвата çил арманĕччĕ. Çул хĕрринчинче Иван Константиновичăн ашшĕ çăнăх авăртатчĕ, Кăнстантин арманĕ, тетчĕç ăна.

— Пĕр йăнăш турăмăр эпир, — хурланса аса илчĕ вăл. — 1964 çулта, яла электричество кĕртсен, юхăнтарса ятăмăр та пăсса тăкрăмăр вĕсене. Пĕрин кӳлепине хăварнăччĕ. Çавна та пулин çĕнетмерĕç. Туршăн та, армансăр ялăн илемĕ çук.

Çав вăхăтра хапха алăкĕ хăйăлтатни илтĕнчĕ. Культура çурчĕн пуçлăхĕ Никитин шăхăркаласа кĕчĕ.

— Борис Николаевич, кунталла ирт? — чĕнчĕ кил хуçи.

Вĕсем садри çуллахи пӳрт умне ларчĕç. Сăмахланă май, Иванов баян йăтса тухрĕ.

— Хамăр ял юррине юрлар-и?

— Чаплантарар-ха Çĕрпел тавраршне. Герман Лебедевпа Петĕр Ялгир парнине халăх умне тепре кăларар, — терĕ Никитин. Баян çеммипе вара уçăмлăн юрласа ячĕ:

Эх, Янгорчино,
Эх, Янгорчино.
Кунсерен эс вăйланатăн,
Çунатна саран пĕрмай.
Эх, Янгорчино,
Эх, Янгорчино.
Ем-ешерччĕр, чечекленччĕр
Хурăнсур, Çĕрпел, Тукай.

Пӳртрен пуш витрепе тухнă Нина Георгиевна, вĕсене пĕр хушă итлесе тăчĕ те, чĕтаймарĕ:

— Тепĕр артистсенчен ирттеретĕр эсир, — терĕ. — Чăрмантарнăшăн каçарăр та, ĕç хушасшăн сире. Мана хăвăртрах шыв ăсса парăр та

çăkăр патне чуптарăр. Хальччен пĕçерсе кăларчĕç пуль. Пурте тутă пулар.

— Мăшăра итлесех пулать, — тесе Иван Константинович баянне сак çине лартрĕ. — Эс те, Борис Николаевич, арăмна нихçан та ан кӳрентер. Пирĕн, халăхпа ĕçлекенсен, хушăран тем те сиксе тухма пултарать.

— Мĕне те пулин пĕлтерет пуль-ха ку, — кулса ячĕ Никитин.

— Хăвăр умпа иртсе пынă чухне пĕррехинче кашăк-чашăк шакăртатнине илтнĕччĕ, — чеен кулчĕ Иван Константинович та.

— Тавтапуç. Нота тăрăх купăс калама вĕрентнĕшĕн те, ырă канаш панăшăн та, — терĕ лешĕ çăлран кăларнă витрери шыва тутанса пăхнă май. — Ырă çыннăн шывĕ те тутлă иккен. — Унтан, тем аса илсе, каласа хучĕ: — Мана хама та çăкăр хĕстерсе пыма хушнăччĕ-ха. Юрать ялта çав пекарня пур пирĕн.

— Уншăн Василий Игнатьевича тав тăвас пулать, — хушса хучĕ Нина Георгиевна. — Эпир кунта 62-мĕш çулта ĕçлеме килсенех çăкăршăн Вăрнара утаттăмăр. Вун çухрăм ытла.

Иван Константинович пăтаран сумка вĕçертсе илчĕ, вара тăнлавне шĕвĕр пӳрнипе сăтăрса кăтартрĕ:

— Культура çурчĕпе пекарньăна — икĕ çăкăр керменне — тунă вăхăтра пирĕн миçе çӳç пĕрчи кăвакарса тухнине арăмсемсĕр пуçне никам та пĕлмест.

Урама тухсан, Никитин ыйтрĕ:

— Эсир, Иван Константинович, час авланман, теççĕ. Суймаççĕ-и?

— Авланма вăхăчĕ те пулман пуль пирĕн. Кунĕн-çĕрĕн ĕçреччĕ. Романовсемпе ват хусаха тăрса юлтăмăр. Юрать-ха шкула çамрăк учительницăсем кĕшĕлтетсе килчĕç. Çĕрпелпе Хурăнсур хушшинчи кирпĕч çуртра пурăнатчĕç вĕсем. Шкул çуртĕнче. Çавăнта тупрăм пулас мăшăрăма. Хамăршăнах пуянлăх пулчĕ вĕреннĕ çынсене çаклатса юлни. Учитель вăл, Борис Николаевич, музыкант пекех питĕ сисĕмлĕ, ача чунне те, мăн çын чунне те ăшшăн ăнланать, ăна хăй майлă çавăрать, хăйне итлеттерет. Культура ĕçĕнче вĕсемпе питĕ пĕлсе усă курас пулать.

— Ăнлантăм сире. Тек шкултан тухмастăп. Хамăр пата, халăх патне, хăюллăнрах чĕнетĕп вĕсене.

Иван Константинович çак çамрăка хăй пек ĕçлеме вĕрентсе пыни аван. Вĕсене итлесе пынă май, аса килех кайрĕ. Пĕррехинче, яла таврăнсан, правление кĕтĕм. Анлă пӳлĕмре цех пуçлăхĕсем, ферма заведующийĕсемпе бригадирсем, специалистсем ларатчĕç.Калаçаканĕ Ивановчĕ. Иван Константинович сăмахĕсем хăлхана кĕрсе юлчĕç.

— Этем чунĕ черченкĕ, — терĕ вăл ăшран тухакан çемçе сасăпа. — Ун çумне пырса тĕкĕнмешкĕн питĕ асăрханулла пулмалла. Ăс-тăн,

сăпайлăх, ăнланулăх кирлĕ. Кашни хăй тĕрлĕ-çке çын, чунĕ те унăн уйрăм. Çавăнпа кашнин патне уйрăммăн çывхармалла. Этем ăшчикне усал сывлăш та, нимĕнле чунсăрлăх, суя, икĕпитлĕх чирĕ те кĕртмелле мар. Чун-кăмăл янкăр тӳпе пек уçă, çăл шывĕ пек таса, шерпет пек тутлă пултăр. Этем чунне нихçан та кĕрĕк арки пек тавăрса пăхма ан хăтланăр. Унран ыррине ан кĕтĕр вара...

— Хăш кĕнекерен илсе вуласа патăр кăна? — персе ячĕ пĕри.

— Пурнăç кĕнекинчен, — кулмасăрах хуравларĕ Иванов.

Çапла, пурнăç кĕнеки пуян та илемлĕ унăн.

*«Тăван Атăл», 1991 ç. 2 №.*



*Çĕрпелти библиотека заведующийĕ Иван Константинович Иванов вулакансене çĕнĕ кĕнекесемпе паллаштарать.*

## ТĂВАН УРА ТУПАНĔ ТĂВАН ÇĔР ÇИНЕ ПУССАН...

Шупашкар çывăхĕнче пурăнакан чăвашсем хăйсен район кунĕсене республика тĕп хулинче тунине эпир хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ. Кĕр уявĕсем культура çурчĕсенче, театрсенче кĕрлесе иртеççĕ. Юлашки вăхăтра çав чаплă тĕлпулусене илемлĕх тĕнчипе çыхăнтарма пуçларĕç. Кăрлачра вăрмарсем музыка театрне кашласа çитсе кунĕпе юрласа-ташласа ырă курчĕç. Савăк кунĕ Геннадий Терентьев çырнă «Çимĕк каçĕнче» вĕçленчĕ. Халăхăн кулленхи ĕç тарĕпе пиçĕхнĕ шăмшакĕ тăван Атăл шывĕпе чӳхенсе, юратнă хуламăр сывлăшĕпе тасалса, пĕрешкел пурнăç тыткăнĕнче пăчăхса çитнĕ чун-чĕрийĕ хавaслă кĕвĕ ытамĕнче йăпанса, уçă кăмăллă калаçура хăпартланса çĕнелнине мĕн çиттĕр ĕнтĕ. Район кунĕсене йĕркелекенсем çакăн çинчен чи малтан шутланă пуль. Унсăрăн вĕсем тĕллевсĕр, ячĕшĕн çеç иртмелле.

Вăрнарсем вара ку енĕпе тата тĕплĕнрех палăртнă ĕç пуçарнă, вĕсем халăха Шупашкара турттарас темен, Шупашкарта ĕçлесе пурăнакан район халăхĕн пĕр пайне Вăрнара илсе пыма шутланă. Çавăнпа литературăпа искусство ĕçченĕсене кун пирки чылай малтан пĕлтерсе хунă. Вырăнта та пĕлсе шанчăклăн хатĕрленмелле, çыннисен те хăйсен кулленхи ĕçне-хĕлне çав вăхăталла куçармалла пултăр тесе ĕнтĕ.

Нарăсăн вуниккĕмĕш-вунвиççĕмĕш кунĕсенчи тĕлпулусем пирки шухăшланă май чăннипех ыйхă çухалчĕ. Пушă пуçпа, çара алăпа каймастăн-çке çуралса ӳснĕ тăван çĕршыва. Май пур таран хатĕрлентĕм вара: çула тухас умĕнхи яланхи йăлапа çĕнĕ хайлавсем çыртăм. Çак ĕмĕт-туйăмпа пурăннă кашни янташăмах манашкал хумханса хăйĕн пултарулăхне çивĕчлетме тăрăшнах тетĕп. Филармонинче пуçланнă калаçуран та, Вăрнартан ярса панă автобуса кĕрсе ларнă хыççăн та сисĕнчĕ вăл. Хăшĕ-пĕри кĕсйинчен е сумккинчен хут кăларса çĕнĕ юрă сăмахĕсене тепĕр хут аса илет, тепри кĕвĕ кĕвелесе илет е хуллен юрласа ярать... Кам хăш театрта ĕçлени, кам хăш ансамбльте, пултарулăх ушкăнĕпе çывăх пулни ыйтмасăрах палăрать-ха, анчах... камсемччĕ-ши вĕсем? тесс кăсăкланмасăр никамăн та чунĕ чăтмасть. Ара, халăхра палăрнă юрăçсем, музыкантсем, художниксем, писательсем чăн та пĕр-пĕрне çывăх палламаççĕ, çитменнине тата пĕр районтах çуралса ӳснине пĕлмеççĕ. Чăн та, кам шутланă-ха мана хирĕç ларса пыракан улăп кĕлеткеллĕ, урине шăнтса сасăсăр юласран асăрханнипе тĕпленĕ кăçатă тăхăнса янă хулăн саслă çамрăк арçын кӳршĕ ялтан, Уравăшран, пулнине? Владимир Ермошкин музыка театрĕн солисчĕ иккен, çул тăршшипех кĕвĕ-юрă, опера-ари, классика-современнăç пирки калаçса пычĕ. Тĕллевĕ тĕлĕнмелле паянлăхлă

тата унӑн: Итали, Франци классикӗсемпе вырӑс классикӗсен ахах пек паха оперисен сӑмахӗсене чӑвашла куҫарса, чӑваш халӑхне чӑвашла юрласа, чӑвашла ӑнланма пулӑшасси.

«Нухрат» ансамбль ертӳҫи, ҫӗкленӳллӗ ҫамрӑк композитор Анатолий Никитин пирӗн Хурӑнсуртан виҫӗ ҫухрӑмри Хирпуҫ ялӗнчине те пуҫласа пӗлтӗм. Тӗнчипе палӑрнӑ чӑваш художникӗ Петров-Праски Витти ӑҫтаннине те чылайӑшӗ ҫак салонра туйса илчӗ. «Чӑваш Пятницкийӗ» Юрий Васильев Вӑрманкасран иккен, музыка театрӗн солистки Валентина Смирнова — Кӳлхӗрринчен, Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ артистки Людмила Семенова — Кивҫурт Енӗшрен... Туслӑ калаҫу, паллашу, ыталашу...

Кутсӑр-пуҫсӑр ҫил-тӑмана ҫӗнтерсе йӗркеллӗ илсе ҫитерчӗ пире культура пайӑн ырӑ ямщӑкӗ Вӑрнара. Тӑванлӑх алӑкӗ яри уҫӑлчӗ пирӗншӗн, тулли кӗрекери ҫӑкӑр-тӑварӗ маттур ҫынсен аллинче ырӑ шӑршӑпа тухса выртрӗ пирӗн ума. Унӑн техӗмлӗ тутийӗ хамӑр юратнӑ пин-пин ҫыннӑн хӗрӳлӗх ӑшшийӗ, ыр кӑмӑл пехилӗ пулчӗ пирӗншӗн. Ку тӑрӑхра ӗмӗтре пулман-курман Мӑн ҫӑкӑршӑн, республикӑри чи Мӑнӑ ҫавра ҫӑкӑршӑн чӗререн тав туса эпир хамӑрӑн тӑван район халӑхӗн ӑшӑ ытамне кӗрсе ӳкрӗмӗр. Шупашкарта кӑна мар, Вӑрнарта та, Вӑрманкасра та, Шӗнерте те, Айкӑшра та, кашни ялтах ҫынсем хӑйне евӗр тӗлӗнмелле илемлӗ те пултаруллӑ, юратуллӑ пулнине курса-туйса илтӗмӗр.

Район хулин культура керменӗнчи анлӑ сценӑна улӑхри чечексем пек ҫурӑлса чечеклентерекен хӗрупраҫсем, сӳнми аваллӑх йӑлине капӑр тумпа пуянлатса вӗҫсе тухнӑ сатур каччӑсем илӗртӳллӗн, хӗмленӳллӗн тыткӑнларӗҫ тӗлпулӑва пухӑннӑ ҫынсене. Ҫапла вырӑнти артистсем хӑнасене хӑйсем хыҫҫӑн пысӑк концерта туртса кӗртрӗҫ. Профессионал-юрӑҫӑ-ташӑҫӑ та, хӑй тӗллӗн вӗреннӗ композитор та, халӑхӑн пысӑк хакне тивӗҫнӗ артист-художник та, сӑмах ӑсти те, искусство ҫулӗ ҫине анчахрах тухнӑ ҫамрӑк та пӗркарталлӑн, пӗршухӑшлӑн, пӗртӗллевлӗн калаҫрӗ залри халӑхпа хӑйӗн пултарулӑх чӗлхи урлӑ. Куракан-итлекен умӗнче ҫав каҫ та, тепӗр кунне те кашниех хӑйне район халӑхӗн уйрӑлми пӗр пайӗ вырӑнне шутласа, пурнӑҫ экзаменне тытнӑ пекех хумханчӗ, пултарулӑхне туллин кӑтартас тесе пӗтӗм чунтан тӑрӑшрӗ. Владимир Ермошкина итленӗ май вӑрнарсем, уйрӑмах кульцавсем, тӗнчипе чапа тухнӑ Максим Дормидонтович Михайлова асӑна-асӑна ларчӗҫ. Авӑрҫырма йӗкӗчӗн Родион Петров композиторӑн «Шӑпчӑкӗсем» ҫурхи сад пахчине чӗнчӗҫ. Шуркасси купӑсҫине Михаил Михайлова Ҫавалкас Мӑрат хӗрӗ Елена Степанова мӗншӗн тӗлпулӑва пӗрле килеймерӗр-ши тенӗнех композиторӑн «Эс пӗлместӗн-ши вара» юррине Вӑрнартан Шупашкара ҫити илтмеллех чунхавallӑ шӑрантарчӗ. Чӑваш эстрадине йӳнелми хак паракан «Нухрат» ансамблӗн артисчӗсем, пултаруллӑ музыкҫипе,

юрăçипе Анатолий Никитинпа пĕр çемĕллĕн те пĕр саслăн çынсен чун-чĕрине ачашшăн, йăпануллăн, хĕмленӳллĕн тыткăнларĕç. Мăн Явăшран тухнă Маргарита Туринген пуян сассийĕ «Нарспи» ятне çӳле çĕклесе пурне те çепĕçлĕх туйăмĕпе тарăн шухăша ячĕ. Чăрăш Шĕнер ачи Олег Семенов арăмĕпе, Луизăпа, юнашар тăрса хăйĕн юратнă юррине уçăмлăн та хумхануллăн баян каласа юрларĕ. «Анне тунсăхĕ» хăй ĕçлекен «Новочебоксарский» совхоз клубĕнче те, Çĕнĕ Шупашкарти культура керменĕнче те маларах янăрана-ха, кăçал вара вăл Вăрнара пуçласа çитнĕ, халĕ çамрăк композиторшăн тăваньен премьери пулчĕ.

Вăрнара чи пуян килме пĕлни вара ман шутпа Ю. В. Васильев пулчĕ. Юрий Васильевич, юрăпа ташă ансамбльне çирĕм çула яхăн ăнăçлă та тухăçлă тытса пыракан маэстро, тĕнчери нумай-нумай çăршыв çыннине чăваш искусствипе ăстан паллаштарма пултарнă Вăрманкас каччи, çур автобус лартса килнĕ хăйĕн «ывăл-хĕрне», паллах, суйласа, — вăрнарсене çеç. Епле çĕкленӳллĕн те хĕвелкуллилĕн хăпартланса сăнарĕ тава тивĕçлĕ артист хăйĕн пурнăç илемĕпе çыхăннă коллектив çыннисен, янташĕсен Людмила Семенован, Ольга Фирсован, Людмила Кузнецован, Аркадий Тимофеевăн уçăмлăн курăнакан пултарулăхне, вăл пурин юрри-ташшипе те кăмăллă юлчĕ. Хăйсен тăван ялĕсене савăнтарса килнĕ хыççăн Васильевăн чунĕ пушшех канлĕхе путнăччĕ. «Ялта эпĕ час-часах пулатăп, анчах кунашкал ушкăнпа, хамăн кулленхи ĕç ушкăнĕпе, — сайра. Халăх хушшинче пĕрле юрласа-ташласа çĕнĕ, хăватлă вăй илсе тухрăм — тăван çĕр вăйĕ». Иксĕмĕр хушăри калаçура пуça çапса юлнă Юрий Васильевичăн çак сăмахĕсем хамăн чунăма та ăшăтса тăраççĕ, халĕ те.

Тăван çĕр вăйĕ, тăван кил илемлĕхĕ, тăван чăваш халăхĕн пуянлăхĕпе малашлăхĕ çинчен район Совечĕпе администрацийĕн пысăк çуртĕнчех пуçланнăччĕ-ха хĕрӳ калаçу. Чăваш халăх писателĕ Анатолий Емельянов (Мăньял Хапăс), Раççей искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Праски Витти (Малти Ишек), хамăр республикăн Иванов ячĕпе хисепленекен премии лауреачĕ Юрий Айдаш (Çавалкас Мăрат) тата ыттисем те пурне те канăç паман çав шухăш-туйăмпа районти культура керменне пухăннă вăрнарсене те, совхоз-техникумра вĕренекенсемпе вĕрентекенсене те, вăрманкассемпе катăшсене те, малти кăкшăмсемпе малти ишексене те, айкăшсене те тата ытти çынсене те калаçăва явăçтарса çав ыйтăва пушшех те çивĕчлетсе ячĕç. Анатолий Никитин ансамблĕ «Тăван яла таврăнсан» юрăпа ăна хурланулла самантах çитерчĕ. Анчах та «Тăпăртатса тăракан тур лашиллĕ» ташлама тытăнсан кĕвĕ, кăмăл-туйăм ирхи тĕтрене сирсе янă хĕвел пекех, урăхланса кайрĕ.

Кăмăл арчине уçма пĕлеççĕ çав тĕлпулăва йĕркелесе ертсе пыракансем. Район администрацийĕн культура пайĕн çыннисенчеччĕ кăмăл

арчийӗн уҫҫийӗ. Шӗнерте ҫуралнӑ Виталий Ильич Кольцов ӗнтӗ, ҫав пайӑн пуҫлӑхӗ, уҫӑпа ытларах усӑ курчӗ. Хусанти культура институтӗнче вӗреннӗ, районти культура керменӗнче ӗленӗ ӑстаҫӑн ку енӗпе ҫаврӑнӑҫулӑхӗ ҫитет. Ҫав вӑхӑтрах вӑл килнӗ хӑнасен пултарулӑхӗпе те тивӗҫлӗн усӑ курма пӗлет.

Акӑ, малтанхи тӗлпулӑва сцена ҫинче ертсе пыма Чӑвашстан культурин тава тивӗҫлӗ ӗҫченне П. А. Тихонов-Ялгире шанса пачӗҫ. Петр Алексеевич ку шанӑҫа кӑлармашкӑн ҫамрӑклах пуҫӑннӑ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенчех астӑватӑп вӑл Кӳстӳмӗрти суккӑр Самарин сӗрмекупӑсҫӑпа концерт кӑтартма Хурӑнсур Ҫармӑса пынине. Хам пурнӑҫра эпӗ ял сцени ҫинче пӗрремӗш конферансье, пӗрремӗш поэт, пӗрремӗш артист курнӑ. Вӑл — Петӗр Ялгир пулнӑ. Сакӑрвуннӑмӗш ҫулчченех район культурин керменӗнче халӑха илем кӳрессишӗн ырми-канми тӑрӑшрӗ. Райхаҫат редакторӗнче пире, ҫамрӑксене, журналист ҫулӗ ҫине кӑларчӗ, вӑл ертсе пыракан литпӗрлешӳре эпир Анатолий Емельянов, Алексей Воробьев, Григорий Илепер, Анатолий Хум, Серафим Ефимов, Михаил Васильев тата ытти ҫыравҫӑсем те литературӑпа искусство ыйтӑвӗсем ҫинчен хӗрсех тавлашаттӑмӑр. Вӑл тӑрӑшнипех Вӑрнарта ҫӗнӗ типографи, библиотека, культура ҫурчӗ лартнӑ, халӑх юрӑ-ташӑ ансамбльне, халӑх театрне йӗркеленӗ, культура паркӗ, ачасен илемлӗх шкулӗ уҫнӑ. «Пырса курӑр Вӑрнара», «Виҫ Ҫавал юхать», «Вурнары — Золотоноша», «Вӑрнар хӗрӗсем» тата ытти юрӑсен сӑмахӗсем те унӑннах. Концерт та «Вӑрнар енче пурнатпӑр» юрӑпа вӗҫленчӗ. Ӑна ертсе пыраканӗ хӑнасене хавхалантарсах юрлаттарчӗ. Юрра залри халӑх та пӗрле шӑрантарчӗ. Петӗр Ялгир Хӗрлӗ Чутай енчен пулин те, вӑрнарах пулса кайнӑ иккен. Искусство ӗҫченӗсенчен аякка тухса кайнӑ ку-тепӗр Вӑрнар ҫыннинчен те ытларах вӑрнар чунлӑ-мӗн. Ӑна ӗнтӗ район халӑхӗ аван пӗлет. Ку вӑл — пуриншӗн те ырӑ.

Вӑрнар ҫӗрӗ, пӗтӗм Чӑваш ҫӗрӗ пекех, пултаруллӑ ҫынсемпе пуян. Шупашкарта е аякри урӑх хулара пурӑнаканнисем те, вӑрнартисем те вӗсем пурте ялта, ҫав ҫӗр ҫинче ҫуралнӑ. Пурнӑҫ ҫулӗ вӗсене тӗрлӗ ҫӗре сапаласа янӑ пулин те, чун туртӑмӗн хӗлӗхӗ вӗсен тӑван вырӑнпах ҫыхӑнса тӑрать. Ҫавӑнпа ҫав хӗлӗх кӗвви пӗр саслӑн хаваслӑн янӑрать. Шупашкартан килнисемпе пӗрлех вырӑнти талантсем те хӑйсен пултарулӑхӗпе пысӑк симфоние кашни хӑй сассипе кӗчӗҫ. Районта пурӑнакан Кӗркури Илепер, Михаил Васильев, Калистрат Воробьев тата ытти ҫыравҫӑсем те район халӑхӗн сӑнарлӑх паллийӗсем.

Район центрӗнче те, ялсенче те, уйрӑм ҫынсем хушшинче те туслӑ тӗлпулусем сахал мар пулчӗҫ. Юрий Айдашӑн Вӑрнар поэчӗсемпе паянхи сӑвӑ проблемисем пирки уҫҫӑн калаҫмалли пухӑнса тулнӑ. Праски Витти район администрацийӗн пуҫлӑхӗпе Валерий

Петрович Наумовпа юнашар ларсах сăнарлă тата монументлă искусствăна мĕнле майпа ял-хула çынни ăнланмалларах та усă курмалларах анлăн сармалли çинчен каçса кайса калаçрĕ. Кашни тĕлпулурах унăн хĕрӳ сăмахне çынсем шăппăн, çăвар карнă пек итлеççĕ, юлташĕсем те ăна тимлесех тăнлаççĕ. Кану вăхăтĕнче юлташла тăрăхласа çырнă ман сăвăпа чăваш халăхĕн юрри майлă юрă та парнелерĕмĕр ăна: «Мĕн çитмест-ши Праски Виттине...»

Хĕрсе кайса каласа парать вăл хăйĕн йывăр та кăткăс пурнăçĕ çинчен, хăйĕн пултарулăх ӳсĕмĕсем çинчен. «Нумай çĕршывра пултăм эпĕ, сахал мар халăх çыннипе калаçрăм, тавлашрăм, ĕнентертĕм хам чăнах та чăвашне. Мĕншĕн тесен чылай çĕрте эпир камне те, ăçта пурăннине те пĕлмеççĕ. Хамăн ĕçшĕн «Гран-при» премине илсен, пушшех чун вĕреме тытăнчĕ: эпир никамран та катăк халăх мар иккен! Тĕллевĕм вара пушшех вăйланчĕ: манăн хамăн пултарулăхпа чăваш ятне тата çӳлерех çĕклемелле, чăваш тĕнчере пуррине пурне те ĕнентерсе — çĕнтермелле. Çĕршывра, тĕнчере хамăн выставкăсене кăтартнă хушăрах çуралнă тăван ял тĕнчинче те анне виличчен хамăн пурнăç выставкине кăтартмалла. Акă мăн çитмест мана пурнăçра», — тесе ыталаса илчĕ те вăл мана, çак шӳтлĕ сăвăшăн тав турĕ.

Илем кунĕсем пынă хушăра çанталăк те хĕвелленчĕ. Юр хӳсе лартнă çулсене хырса якатса пычĕç. Хуçалăхсем хăйсен кулленхи хĕрӳ ĕçне малалла тăсрĕç. Пушă вăхăт тупса Çĕрпел ялĕн администраци пуçлăхĕпе Василий Игнатьевич Романовпа, унăн ывăлĕпе «Янгорчино» колхоз председателĕпе Геннадий Васильевичпа, айкăшсемпе кăкшăмсен колхозĕн хуçипе Виссарион Афанасьевич Афанасьевпа тата район Советне ертсе пыракан Геннадий Петрович Ивановпа калаçрăм. Пурин те вĕсен пĕр хуйхă — кăçалхи çурхи ĕçсене мĕнлерех ирттерĕпĕр-ши? Хуравĕ пĕрешкел шăрçаланса пырать: ку таранччен шуса ӳкменнине халăхпа пĕрле çирĕпех утасчĕ-ха, хамăран пуян çĕр пуянлăхне халăх пуянлăхех туса хурасчĕ-ха.

Йывăрлăха çĕнтерме хăнăхнă Вăрнар халăхĕн тĕпелĕ усă кăмăллă, кĕреки пуян, чунĕ савăк. Пирĕнтен уйрăлми тенĕ пек çӳренĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Валерий Петрович Наумов литературăпа искусство, экономикăпа социаллă пурнăç ыйтăвĕсем çине епле тимлĕ пăхнине эпир хамăр куçпа курса ăнлантăмăр. Пуçлăхăн çивĕч куçлă та ăслă пуçлă çеç мар, сăнарлă чĕлхеллĕ те, юрă-ташă ăстиллĕ те пулмаллине вăл хитрен кăтартса пачĕ.

Мĕн чухлĕ ырă шухăш çуралчĕ пуль кашнийĕн район кунĕсен уявĕнче. Тавах пурне те пире сума суса йышăннăшăн тата тăванла юратса пăхнăшăн. Чăннипех чун юрлать иккен тăван ура тупанĕ тăван çĕр çине пуссан.

*«Вучах» хаçат, 10 №,*
*1993, пуш, 3.*

## САВĂНĂÇ, ТЕЛЕЙ

Кăçалхи юпа уйăхĕ чăваш халăхĕн культура уявĕ пулчĕ. Илемлĕх тĕнчин анлă уçлăхĕнче ялкăшса çунакан çăлтăрăн — Максимов-Кошкинский çăлтăрĕн çутиĕ пирĕн пит-куçа ăшăтса çупăрларĕ, ăша кĕрсе чун-чĕрене вутлантарчĕ. Чăваш театрне пуçарса яраканĕ, режиссер, актер, драматург, чăваш халăх артисчĕ Иоаким Степанович хăйĕн çĕр çулхи менелникне чăваш халăх ытамĕнче, тăван халăх кĕрекинче савăнăçлăн та мăнаçлăн, кăмăллăн кĕтсе илчĕ. Хăйĕн паллă кунне халалласа Чăваш патшалăх академи драма театрĕ тăрăшса хатĕрленĕ концерта хавасланса та пăлханса, хăпартланса пăхрĕ, хăй çырнă «Тăвăл хыççăн тăвăл» пьеси тăрăх лартнă спектакльте Иван Яковлевич Яковлевпа çĕнĕрен тĕл пулса калаçрĕ пуль. Ара, кивĕ ĕмĕр вĕçлениччен çичĕ çул маларах çуралнă чăваш ачи Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче 1907—1912 çулсенче чăваш искусствин, чăваш театрĕн тымарне çав мухтавлă çыннăн чĕрĕлĕх вăйĕпе яма пуçланă-çке. Çав тымартан шăтса тухнă тăван халăх театрĕ халĕ мĕнле ӳссе хунавланса пынине сцена çинчен уççăн та тиркевлĕн сăнанăн туйăнчĕ. Чăваш халăх писателĕ Николай Терентьев драматург ахальтен аса илмерĕ пуль унăн сăмахĕсене: «Эпир — тымарĕ, эсир — хунавĕ», — тетчĕ вăл пире.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлă, чăвашăн тепĕр сӳнми çăлтăрĕ Константин Иванов ячĕллĕ театра ертсе пыраканĕ, аслă кĕреке пуçĕ, СССР халăх артисчĕ Валерий Яковлев, Чăваш театрĕн пĕрремĕш чаршавне у çнă пултаруллă янташăмăра чысласа ирттерекен халăх уявĕн алăкне уçнă май каланă сăмахсем ун умĕнче вăл экзамен тытнă пекех пулчĕç: «Тĕнче кисреннĕ вăхăтра уçнă Максимов-Кошкинский чăваш театрĕн чаршавне. Паян та тĕнче кисренет, паян вăл хăйĕн мăн ĕмĕр çулне йывăр вăхăтра кĕтсе илет. Чунĕ лăпкă мар унăн, пирĕн те çавах. Тăван халăх культури аталантăр тесе тăрăшнă вăл. Унăн ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ-ши? Ырана мĕнле кĕретпĕр эпир? Шанăç пур-ха. Чăваш театрĕ сывă, пурăнать».

«Тăвăл хыççăн тăвăлра» Яковлев сăнарĕпе халăх умне тухнă Раççей тава тиçлĕ, Чăваш халăх артисчĕ Геннадий Терентьев писатель пăшăрханăвĕ мĕнпур халăх пăшăрханăвĕ пекех илтĕнчĕ. Максимов-Кошкинский çуралнă Кăнна Кушкинче пулнă чухнехине аса илчĕ вăл: «Йăмраллă чăваш ялĕ саланма пуçлани чуна кӳрентерет. Чăваш çăлтăрне çугатнă ял халăхĕн кăмăлĕ улшăнман, ялĕ çеç улшăннă. Ăна пĕтме, сӳнме памалла мар. Чăваш ялĕн шăпийĕ — наци шăпийĕ. Уншăн Иоаким Степанович пурнăçра кĕрешнĕ пекех кĕрешмелле».

Чăн та, Петр Осипов драматург каланă пек, мĕн-мĕн курман пуль çав «патриарх». Йывăрлăх та, каварлăх та пĕрин хыççăн тепри пыра-пыра тивнĕ унăн чĕрине. Тĕрмене те хупнă ăна, анчах çунатне çапса хуçайман. Пĕр чăнлăх кăна — пуласлăх телейне ĕненни, çутç-

анталăк илемĕ пурнăçне сĕткен парса тăнă. Çак пулăма ăнланнă вăйлă çынна пурнăçра усал-тĕселе çĕнтерме пулăшнă. Çавăнпа вăл чĕрĕ, çавăнпа вăл халăхра. Пирĕнпе пĕрле пурăнать.

Хăй ĕмĕрĕнче Максимов-Кошкинский сцена çинче 46, кинора 10 роль вылянине, театрта 64 спектакль, кинора 5 фильм лартнине, пьесăсем, оперăпа оперетта либреттисем, киносценарисем 30 ытла çырнине пĕлетпĕр театр архивĕпе паллашнă май. Чăвашкинора вăл лартнă «Атăл пăлхавçисене» (1925), «Хура юпана» (1927), «Атăл çинчи тăвăла» (1928), «Апайкана» (1929), «Киремет катине» (1930) астăвакансем сахал мар пуль чăваш хушшинче. « Романтики», «Алмаз», «Алитет уходит в горы» кинофильмсенче выляна унăн ролĕсене эпир те лайăх астăватпăр. Мускавран вăл ўкернĕ пилĕк фильм лентисене Шупашкара илсе килнĕ. Вĕсене кĕçех курма пултарăпăр.

И. С. Максимов-Кошкинский çулталăкĕ, уйăхĕ, эрни, кунĕ... Кăçал ăна халалласа чăваш культурин аталанăвĕнчи паллă ĕçсем сахал мар пулчĕç. Вĕсенчен паллăраххи вăл — пир тĕртекенсен кермесĕнчи искусство эрни. Ăна Максимов-Кошкинский ячĕллĕ халăх театрĕн режиссерĕ, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Нина Панина ертсе пычĕ. Çуралнă ялĕнче, Тутарстанри Кăнна-Кушкинче тĕлпулусем, тĕпчев институтĕнче конференци ирттернĕ, Шупашкарта вилтăприйĕ çинче палăк уçнă...

Çакна çеç маннă: ун ячĕпе Шупашкарта урам çук. Чăваш çыравçисен тусĕ Петр Градов поэт чăваш академи драма театрне Максимов-Кошкинский ятне парсан питĕ лайăх пулнă пулĕччĕ, терĕ.

Чăваш шăпчăкĕ ятне тивĕçлипе халăхра илтнĕ пултаруллă та чиперкке артисткăпа, Татьяна Степановнăпа юратса, пĕр-пĕрне пулăщса, туслă пурăннă Иоаким Степанович. Тани Юн сцена çинче те, кинора та тĕлĕнмелле вăйлă выляна, теççĕ. Вĕсен Изида ятлă пĕртен-пĕр юратнă хĕрĕ пулнă.

«Эпĕ Изидăна качча илнĕ хыççăн, унăн ашшĕ-амăшĕн ырă кăмăлне, вĕсен искусствăри пултарулăхне, çынлăхне чĕрепе ăнланса, чунпа туйрăм. Мана хунĕм Чăваш çĕршывне, чăваш халăхне хисеплеме юратуллă туйăм парнелерĕ. Ачасем те манăн чăваш ячĕпех çўреççĕ, унпа мухтанаççĕ», — терĕ уявра Петр Градов.

Тăван асаттемĕр, шурсухалăмăр, улăп евĕр çын... Çак сăмахсем — паллă артистсем, чăваш театрĕн хунавĕсем каланăскерсем.

Сцена çинчен вăл чăваш театрĕн пултарулăхне сăнать. Ухсай Яккăвĕн «Тутимĕрĕ», Достоевскин «Юрату мар ку — чир», Островскин «Хамăр çынсем — йўнеçтерĕпĕр», Айзманăн «Кай-кай Ивана» спектаклĕсем, Осиповăн «Айдарĕ» ытларах кăмăла кайрĕ-ши ăна, е Чебановпа Яковлев Праски инке хĕр мĕнле панине сăнарлани кăсăклантарчĕ, е хăйĕн «Эх, Иванĕ» култарчĕ, — калама хĕн. Анчах çакна çеç палăртмалла: вăл чăваш театрĕн аталанăвне актер, режис-

сер, драматург куҫӗпе курса ӗненчӗ пуль. Ҫавӑнпа кунта унӑн хӑйӗн сӑмахӗсене аса илни питӗ вырӑнлӑ:

«Актер, Режиссер. Драматург... Ҫак виҫӗ ӗҫрен хӑшне ытларах юрататӑр?» — тесе манран час-часах ыйтаҫҫӗ. Анчах нихӑҫан та татӑклӑ калаймастӑп, мӗншӗн тесен виҫҫӗшӗ те пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ, виҫҫӗшӗ те пурнӑҫра савӑнӑҫ, телей кӳчӗҫ».

Уявӗ те ҫавӑнпах савӑнӑҫлӑ иртрӗ пуль, унта хутшӑннисене телей кунӗ парнелерӗ пуль.

*«Илем», 1 №, 1993 ҫ., юпа, 27.*



*Владимир Кузьминшӑн кукашшӗн юманӗ яланах чӗррӗн туйӑнать.*

# ТĂВАНЛĂХ ВĔÇЕВĔ

Эпир, икĕ тăлăх Улатимĕр, çуралнă тăван çĕр çине пĕр вăхăтра та пĕр шухăш-туйăмлăн, пĕр тунсăх-савăк çеммиллĕн çитсе Вăрнарьенне чĕререн хавхаланса пуç тайнине Тĕнчери çирĕп туслăх вăйĕн сӳнми вут-çулăмĕ çеç хĕртсе çутатма пултарать. Тăлăх тенĕрен, эпир атте-аннесĕр тăрса юлнипе çеç тăлăх, тĕрĕссипе, — вĕсем пирĕн çумра, пирĕн умра ларса-тăманнипе, пире ачашласа, кутран çапса лăпкайманнипе, ăслă канаш-сĕнӳ парайманнипе, тутлă апат пĕçерсе çитерейменнипе çеç, анчах та вĕсем пурпĕрех пирĕнпе, тăван-пĕтенпе, ял-йышпа, халăхпа. Вĕсен сăнарĕ — чăннипех Чăвашьен çыннисенче. Çавăнпа та эпир хамăра-хамăр тăлăхах та мар пулĕ тесе шутларăмăр тăвата талăк алла-аллăн тытăнса, пĕр-пĕрин куçĕнчен уççăн та шанчăклăн пăхса, пĕр килти пек юнашар çывăрса, çухалнă ыйхăсăр калаçса Шухăш кĕввине шăпчăк сассиллĕн тăснă вăхăтра. Палланăпалламан, çывăх-хывăх, юратнă-юратман çынсемпе уççăн та куççăн та, уррăн та хуррăн та калаçса чунăмăрсене кантартăмăр та, вутлантартăмăр та. Хăть та мĕнле пулсан та, хамăрăн анне сĕчĕпе, атте сухапуçĕн вăйĕпе пулăхлатса ешернĕ пуян çĕр пире хăйĕн çăлкуçĕнчен имлĕ шывне ĕçтерчĕ, вăй кĕртрĕ, куçа-пуçа уçтарчĕ. Çĕрĕн çак илемлĕ те симлĕ тăрăхĕнче çуралса ӳснĕшĕн кама — Туррине е Çутçанталăк пулăмне — тав тумаллине те пĕлеймерĕмĕр пуль хавхалантарупа хуйхăру саманчĕсенче. Эпир те тăлăх мар, сирĕнпех тесе çеç алă патăмăр хамăрăн хастар та ĕçчен-паттăр ентешĕмĕрсене — Кăмашри Улатимĕр Яковлевпа Хурăнсур Çармăсри Улатимĕр Кузьмин.

## *Кукаçи юманĕ*

выртать халь макăрса вăл: Санарпуç ялĕн çумĕнче, Хурăнсуралла чупакан çулăн сылтăм еннелле çийĕнсе кайнă канавра — ури-аллипе тапаçланса, йĕрсе-хурланса, хытса-хутланса, тем шыраса, тем ĕмĕтленсе, чĕрĕлесшĕн, чĕрĕ чун аллине чĕрĕ йĕкел тыттарасшăн... Пурăнать çапах та юман...

Анне ман, çак ĕмĕре пуçлакан тĕнче этемĕсенчен пĕри, Надежда Матвеевна, калатчĕ: «Ывлăм, çирĕп пул, юман пек çирĕп пул...»

Çирĕп пултăм-ши, хăрăк пултăм-ши, — анчах та... халлĕхе юман пекех-ха, аптрамастпăр, Кукаçи юманĕ çумĕнче хамăрăн тăванлăх хăватне те, хамăрăн тăванлăх ăс-тăнне те, хамăрăн тăванлăх малашлăхне те малаллах талпăнлататпăр.

Пĕррехинче, хăçан-ши, лайăхах астумастăп та пуль, тен, вăл пирĕн тĕнчекурăм çаврăнăшĕн самантне килчĕ пуль, Кăмаш ачи Володя Яковлев, ялти пек каласан, Якку Волотийĕ, ман пурнăç уттине кĕрсе кайрĕ. Кĕрсе кайрĕ те...

Ун чухне ĕнтĕ эпĕ хĕвел ăçтан тухнине те «ăмсашывĕлле» кăна мар пĕлеттĕмччĕ, икĕ парттă хушшинче чуччу ярăнакан Тамариада «патшана» ачалла юратнă вăхăтри пек тĕнче хĕрне те юмахри пек çеç мар çитсе курнăччĕ. Инçеччĕ вăл — Тухăç. Хĕвел пайăркипе выляса, аташса çывхаракан шыв аçтахийĕ çырана пырса çапатчĕ те, ĕмĕрĕпе хуралта тăракан Чул-улăп ăна, питне çуса илнĕ май, каялла хўтерсе яратчĕ. Шыв аçтахийĕ, кăпăкланса, кĕрлесе, çине-çине вылятчĕ. Чул-улăпа урараи ўкерсе, çырана ишĕлтерсе, Çĕре хăй айне тăвасшăнччĕ. Çĕрĕ те парăнмасть иккен, хăйĕн Чул-улăп çарĕпе лăпкă укиянăн аçтахисене лăплантарсах тăрать, çут тĕнче йĕркине пăхăнтарать. Çавăн пек куçпа курнă эпĕ тĕнче хĕррине укиян аçтахисен тăварлă шывĕпе çăвăннă, вĕсен никам тытса чарайми вăйĕинче утьăкка сикнĕ вăхăтра. Хĕвел чăнах та Хурăнсуртинчен вунă сехет маларах тухатчĕ. Тухатчĕ те... Çўлĕ ту, сопка çумĕнчи вĕççĕр вăрмана çутатса ăшă ярапине анăçалла — Чăвашьеннелле — сапалатчĕ. Шыв аçтахисен хăлхаран талăкĕ-талăкĕпе кайма пĕлмен шавĕпе киленсе, алăри пăшала çирĕпрех тытаттăмччĕ те, Лăпкă укиян енчен вĕрекен лăпках мар çиле хирĕç вичкĕн пăхса, хĕвеле çурăм хыçнелле пытараттăмччĕ, тĕнче хĕрри тата ăçта çити тăсăлать-ши тесе шухăша путаттăмччĕ. Шухăшĕ вара çакăн патне илсе çитеретчĕ. Çĕре кăшлакан тинĕс хумĕ-аçтахи вăл — çут тĕнче вылявĕ, пирĕнтен килмен, эпир çĕнме пултарайман хăват: аташать те — лăпланать, лăпланать те — аташать. Шывпа çĕр вылявĕн туртăмлă çирĕплĕхĕнче йăшăлтатакан чĕлхеллĕ чĕрĕ чун та, этем, ăсне-пăсне мăкăрлантарса, хăйĕн куçĕ умĕнче тĕнче çуратать, ĕмĕт-туйăмĕпе çав тĕнчен хĕвелĕ патнелле туртăнать, пурнăç хумĕ çинче ярăнать: хăпарать — анать, анать —хăпарать, хăйĕн тĕнчин хĕррийĕ, инçет тухăçĕ ăçтине шырать, тухăçĕ вара малаллах тăсăлать, хĕвелĕ кашни кун тухать, анать, этем хăйĕн хĕвелĕ тавра телей шыраса çаврăнать. Телейĕ-çăлтăрĕ кашниннех пур, анчах ăна тытмашкăн кашниннех алă çитеймест: телей тĕнчин хĕрри ытла та туртăмлă, асаплă, чуллă-хумлă, аташуллă-лăплануллă, лăплануллă-аташуллă пулнине туйса-туймасăр, пĕлсе-пĕлмесĕр ĕмĕчĕпе малаллах туртăнать, тухăçаллах мекеçленет вăл.

Вăхăт вылявĕ, вăхăт шыравĕ, вăхăт хиствĕ пĕр йĕрти пĕр тапăпа аталанса пынине çеç чухласа илейместпĕр эпир тепĕр чухне. Çав çаврăну юххинче хамăр ума мĕншĕн çав хĕр е каччă, тус-юлташ ишсе тухнине, мĕншĕн вăл санпа çывăх, уйрăлми вăйпа çывăхланнине ăнланса та çитейместпĕр пулас хăш чухне. Лăпкă укиян хумĕсем çĕрпе калаçса пĕр-пĕринчен нихçан уйрăлма пĕлмен пекех ĕмĕрне уйрăлмасть иккен тĕнче çаврăмĕ çутнă Юратупа Туслăх Хĕвелĕ.

Хурăнсур енчен хăпарма пуçланă хĕвел Вăрнар чўречинчен вăрттăн кĕрсе куçа уçтарнăччĕ пирĕнне çамрăклăх вăхăтĕнчи пĕр ир. Урайĕнче юнашар çывраканскерсем эпир — Чăрăшкас Мăратри Кĕркури

Михайлов-Илепер, Кайри Тукайри Кеорки Игнатьев тата эпĕ — чалтах сиксе тăтăмăр: ĕçрен юлас марччĕ! Вăтăр çул каяллине пурте астумаççĕ те пуль. Канашалла тухса каякан çул хĕрринче, Трактор урамĕнчи МТС клубĕнчен (халĕ хуçалăх таварĕсен лавкки) инçех мар, Ялкирсенчен икĕ кил урлă, кăмăллă Поля инкесем патĕнче, хваттерте пурăнатпăр. Яшка ăшăтса сĕтел хушшине ларма та ĕлкĕрей-мерĕмĕр, алăкран хăна кĕрсе тăчĕ: Улатимĕр Яковлев! Мускавран. Консерваторире вĕренекен Кăмаш каччи каникула таврăнать. Ытала-шу-калаçу... Кĕркури, купăс-баян туртма юратаканскер, пире мал-танах радио итлеме хистетчĕ-ха. Пĕрремĕш программăпа «Илемлĕх тĕнчинче» ятлă ярăм янрамаллаччĕ. Чун туртнипех кĕтеттĕмĕр пере-дачăна. Турри тата музыка ăстине те пĕр вăхăтрах çумма килсе лартрĕ. Усламçупа пĕçернĕ ашсăр шĕв яшкана лĕрĕплеттерсе ларнă май, клас-сикăна хăлха тăратсах итлетпĕр.

— Улттăмĕш симфони, — кашăка çулласа алюмини чашăк хĕррине хучĕ Улатимĕр. — Чайковскин чĕрĕлĕхĕ, вилĕмсĕрлĕхĕ. Илтетĕр-и? Усал-тĕселе çĕнтернĕ этемĕн мухтавĕ янăрать, çав этемĕн çуттийĕ йăлкăшать. Сире, туссем, Мускава чĕнсе, çак асамлăх тĕнчине кĕртсе ярас килет ман, пĕтĕм тĕнче ăнланакан, юратакан музыкăпа куçа-куçăн паллаштарас, ăна алă тыттарас килет ман... Эх!.. Тавтапуç тутлă яшкашăн, тусăмсем. Тăранчĕ халь ман: хырăм та, чунăм та.

Ман редакцине мар, яла каймаллаччĕ, çавăнпа та Улатимĕре пĕрле çаклатса тухрăм. Икĕ кĕпер урлă каçса Çĕньял Хапăсран Санарпуçне çитнине те сисмерĕмĕр юмахласа пынă май. Çулран инçех мар сарка-ланса ларакан тăпăлкка юман тĕлне çитсен, эпĕ тусăма чартăм. «Ка-лаçса илер-ха çак пăхаттирпе», — терĕм. «Шавлă хулара хам та йăлăхсах çитрĕм, чун Кăмаш вăрманнеллех туртать, — пĕрре çывăхри Утар раши, тепре тăлăх йывăç енне пăхкаласа ассăн сывласа ячĕ юлташăм. — Вăрманĕ-йывăçĕ çывăх пулсан та, пĕрле илсе каяймастăн çав вĕсене.

— Пурпĕрех юлмаççĕ-ха вĕсем пирĕнтен, хамăртах, хамăр асрах, ак çак юман та... Вăрмантан юлнăскер... Раща ăна уй хураллама, ял сыхлама хăварнă пекех вĕт?

— Çавăн пекех туйăнать, — килĕшсе пуçне пĕкрĕ Улатимĕр. — Чăн-сăн улăп пекех.

Чăтлăхри пек пĕлĕтелле ытлашши кармашайман çак юман, уçлă-хра ирĕклĕн сарăлса такама та ытама, хӳтте илесле ешерет. Вăштăр çилпе чăшăлтатакан çăра çулçисем тырă тинĕсĕн хумĕсемпе пирĕн паталла вăй ярса панăнех туйăнчĕ. Çав хăват ывăннă шăмшака çĕнĕлле чĕрĕлтерсе ячĕ те, эпĕ вара тусăма хаваспах каларăм:

— Кукаçи юманĕ вăл.

— Чăнах-и? Сан кукаçу Санарпуçĕнчен-и вара?

Хамăр ял еннелле хĕвеле хирĕç çĕнĕ вăй-хăватпа уттартăмăр эпир Улатимĕр Яковлевпа. Çулпа мар. Çырмапа. Санарпуçĕнчен юхса туха-

кан Санар шывĕ шăнкăртатса кĕвве кĕвĕленет, анлăланса пыракан чечек кавирĕ илемĕпе илĕртет. Çак улăх тăрăх анне хăйĕн çуралнă тăван ялне Санарпуçне илсе кайнине аса илтĕм. Тăрăшшипех чечек тататтăм, яла çитсен çыхăри кашни чечекне куккисемпе инкесене, вĕсен ачисене валеçсе параттăм. Юман çумĕпе иртнĕ чух йĕкел, йĕкел калпакĕ пуçтармасăр пулман. Çав вăхăтра е каярахпа каланăччĕ-и, кунне-çулне маннă, анчах анне çакă вăл кукаçу юманĕ тесе калани-не илтсе лайăхах астуса юлнă.

Анне сакăрвунсаккăрмĕш çулхи çуркунне сакăрвунсаккăра кăштах çитеймесĕр çĕре кĕчĕ. «Эпĕ халĕ асаттерен те тăватă çул ирт-тертĕм, манашкал нумай пурăнни йăхра, хам астăвасса, пулман», — тетчĕ ялан.

Йăхĕ ĕнтĕ аннесен çур Санарпуç — çав юман тураттисем пекех. Пĕр шăматкун арăмпа, Римма Ильиничнапа, Шупашкартан Хурă-нсура таврăнсан, анне, виличчен икĕ уйăх маларах, питĕ тăнлăн аса илсе ларчĕ хăйĕн тăван-пĕтенне. Аслашшĕ таран пит йĕркеллĕ астăвать.

Аслашшĕ ун Çтаппан ятлă пулнă. Ялта ăна темшĕн Куçça тенĕ. Çавăнтан Косяев хушамат та тухса кайнă. Степановпа та çӳренĕ хăш-пĕр ачисем. Аннен асламăшĕ, Василиса, Çĕньял Хапăсран качча тухнă, каярахпа вăл, чире пула, суккăрланнă. Аслă ачи, аннен ашшĕ, Мат-ви Степанов, утмăл çиччĕре вилнĕ. Ун хыççăнхисем — Кĕркури, Еххĕм, Ултутти, Хветле. Матви ĕнтĕ — манăн кукаçи. Кукамай, Натĕли, Тюлюккасси Мăратри Тенис хĕрĕ, кукаçине Сахар, Элек-сантăр, Илья, Натеш ятлă ачасем çуратса панă. Натешĕ — ман анне.

Çак ĕмĕр пуçламăшĕнче Санар çырми таранах вăрман кашласа ларнă. Кукаçисем вăхăтĕнче ăна касса уй тунă, хăш-пĕр юмансемпе хырсене хăварнă. Çул хĕрринчи çак юман та сыхланса юлнă. Маншăн вăл вара кукаçи юманĕ пулса тăнă, тахçанах, хам астăвассах. Халĕ ĕнтĕ — çул вăйĕ, йăх сăнарĕ, пурнăç хăвачĕ.

Кукаçипе кукамая та курман эпĕ, аннен пиччĕшĕсене — кук-кисене те, çапах вĕсем манăн куç умне паянхи пекех тухса тăраççĕ. Акă Матви, пĕве çумĕнчи лаççине кăмрăкпа хутса ярать те, арçын ачисем черетпе вĕркĕч хашлаттарса сывлăш уçлаççĕ, мăлатук çапаççĕ. Хĕрнĕ тимĕртен кукаçи лаша таканĕ авать, сухапуç тĕренĕ тăвать, çатма аври кукăртать, пăхăртан чĕлĕм маçтăрлать... Хуçалăхра мĕн кирлĕ — çавна пурне те тума пултарнă хăйĕн тимĕрçĕ лаççинче ку-каçи. Кукамай та, анне те нумай пулăшнă ăна. Арçын ĕçне анне ашшĕнченех хăнăхса юлнă пулас çав, мĕн виличченех пăрахаймарĕ ăна, никама кĕтмесĕр-шанмасăр шарт тытса тăватчĕ хăть мĕнле йывăр ĕçе те. Вăрçă вăхăтĕнче кӳршĕре вăл арçын выранĕнчехчĕ ытти хĕра-рăмсемпе вăйсăр ача-пăчашăн, сухапуçпе çĕрулми те лартса панă,

тем те туса парса пулăшнă вĕсене. Вăрçă асапĕнчен сыхланса юлнисем халĕ те ăна хăйсен амăшĕ вырăнне хурса хисеплеççĕ.

Тимĕрçĕ йăхĕ хĕрнĕ тимĕр пекех пулнă çав. Сахар кукки касак çарĕнче çапăçнă. Курма килсен ун çумне уретник чăрсăрланса çыпăçнă, тет. Сахар-касак пĕррех туртса касать хĕççипе, уретникĕн хĕçси пат! татăлса каять çурмаран, хăй лаша айне йăваланса анать. Кукаçи сыпса çĕнетсе парать хĕçне. Сахар кукки Çĕньял Хапăс чиперккипе, Укçинепе, пĕрлешнĕ. Аслă ывăлĕ, Çеркийĕ, вăрçăра пуçне хунă, ун хыççăнхисем Марьяпа Йăван ӳснĕ. Элексантăр кукки Ишекри Укахвине качча илнĕ, вĕсем ачисене Луккана, Элекçие, Курие, Аннана пăхса ӳстернĕ. Илле куккин арăмĕ — Çĕньял Хапăсри Анна. Вĕсем Йĕпреçьенне, Костер поселокне куçса кайнă. Ачисем — Марья, Укахви, Елен, Кĕркури. Анне, Натеш, 1923 çулта, кукаçи вилнĕ çул, Хурăнсур Çармăсри Куçма Яккăльч ывăлне, Пракахвие, вăйлă туйпа качча тухнă. Анне çичĕ ача çуратнă. Манăн Микулайпа Анатули пиччесем, чылай пысăклансан, сасартăк чирлесе, вилнĕ. Уçтен, Маня, Евкен аккасем пурăнаççĕ, Раис йăмăк сарăмсăр пиртен уйрăлчĕ. Кукаçи шăллĕн, Кĕркурин, Вăрманкасран илнĕ арăмран, Йăван, Ухванеç, Петĕр, Павăл ятлă ывăлсем ӳснĕ. Еххĕм Çтаппанч Косяев хушаматпа çӳреме пуçланă, Кăмашран хĕр илнĕ. Павăл, Хресчен, Укашшă, Петĕр ятлă пулнă вĕсен ачисем. Павăлпа Петĕр куккисене лайăх астăватăп. Павăлĕ Пăртасри Матрӳне качча илсен, Йăван (Санарпуç шкулĕнче ĕçлерĕ), Кĕтерне (Чăрăшкас Мăратри Хветĕр Михалч ăстаçа качча тухнă). Лити (Чиркӳллĕ Хапăса качча кайнă), Коля (вăрçăра вилнĕ) ятлă ачасем ӳстернĕ. Ват куккисен, çамрăк куккисен ачипăчи, ачин ачи ăçта кăна саланмарĕ пуль. Теме вĕренсе тухни те, таçта ĕçлесе пурăнаканĕ те пур. Хăшне-пĕрне паллас та çук. Куçça йăхĕ — тимĕрç йăхĕ — пурăнать, аталанать. Ватăлаканĕ, кукаçи юманĕ пекех, хăрать, çĕре кĕрсе урăх материе куçать. Виличчен вара вăл çĕр çине çĕнĕ хунав хăварать, йăх çĕнĕ, çамрăк сыппа куçать, вилмест, пĕтмест, аталанать. Кузнецовсем пурăнаççĕ.

Вăрнара çурран утнă чухне, Вăрнартан çурран яла таврăннă чухне, юман тĕлĕнче канаттăм. Çурма çулччĕ вăл. Юман çумне пырса тăрсан, вулă тăрăх хăпаракан çĕр-аннен чĕрĕ вăйне илеттĕм, кукаçипе, куккисемпе кукамайпа, инкесемпе сасăсăр калаçаттăм. Лăпкă укиянран пуçласа Балтика, Байкалпа Балатон кӳллисем хушшинче, Шупашкар тинĕсĕпе Хура тинĕс ăшшинче вăй парса тăнă вăл мана çав паттăр юман. Унăн йĕкелне эпĕ Çармĕс вăрманне те, Йĕпреç вăрманне те, Пăлхар вăрманне те лартнă. Тĕнчипех ӳсет кукаçи юманĕн çамрăк хунавĕ. Хăйне Хĕл мучи хăртса лартнă пулин те, пурпĕрех пурăнать çутçанталăк çаврăмĕнче.

Акă эпир, вăтăр çул каялла ĕнтĕ, юманпа сывпуллашнă хыççăн Санар кавирĕнчен уйрăлса, йывăç кĕпер карлăкĕнчен уртăнса шыв

юххине сăнарăмăр, унтан пĕчĕк çырмапа Çармăс вăрманне кĕтĕмĕр. Улатимĕре хам салтакран таврăннă хыççăн кукаçи юманĕн йĕкелне кăпăшка тăпрана варăнтарнă вырăна ертсе тухрăм. Çулран инçех мар ешерет çамрăк йывăç. Ăна çăкасем вăйă карти пек çавăрса илнĕ. Пăхаттир тавра, тутлă шăршă кăларса, ăмсануллăн, килĕшӳллĕн чечекленеççĕ. Ял утарĕн ĕçченĕсем сахăрлă сĕткене васка-васка пуçтараççĕ, пĕрисем пушăлла вĕçсе çитеççĕ, теприсем — тулли хырăмпа карас тултарма йывăррăн ăсанаççĕ. Çăка чечекĕ çине кăна мар, юман çулçи çине те лараççĕ пыл хурчĕсем. Авалхи турăсем ĕçекен, вĕсене çамрăклатакан, илемлетекен ĕçме текен нектар юманăн та пур иккен. Çулçине татса чĕлхе çине хутăмăр та, кукаçи юманĕ патĕнчинчен те хастарланарах кайнăн туйса хамăра хамăр, çурхи ăйăр чуппипе карачăмкассинелле ĕрĕхрĕмĕр.

Пирĕн каса Карачăмкасси теççĕ-çке. Карачăм мучи ячĕпе халăх панă ăна. Хăй тахçанах çĕре кĕнĕ пулин те, ячĕ юлнă унăн.

Çырма хĕрринчи асатте килĕнче пире аннепе атте кĕтсе илчĕç. Анне тĕпсакайĕнчен йывăç тирĕкпе кăпăклă сăра ăсса тухрĕ, çунакан кăмакана чиксе турчка хĕртрĕ те, ăшши нихçан та пăсмасть тесе, чашлаттарса тĕлĕнмелле ырă шăршă кăларчĕ сăраран. Тимĕр шăрши салат шăршипе хутăшса пĕрлешсен пулать вăл çав имлĕх.

— Апай атине, кукаçуна, ялан çапла сиплетчĕ. Турчки те ку атиннех, пĕрлех турăмăр, эп вĕркĕчне вĕртереп, вăл тимĕрне туптать, туй парни парса ячĕ... — вĕçĕмсĕр калаçать анне. — Упранатьха, сире те, ачамсем, аваллăх имне парать. Сывлăхлă пулăр...

Анне пире апат çитерчĕ, çав хушăрах Улатимĕртен мĕн кăна ыйтса пĕлмерĕ пуль, кăмашсене аса илчĕ, Улатимĕрĕн аслашшĕсене те астăвать. Санарпуçне ĕçме пырсан купăспа ташлаттаратчĕ вăл, тет. Ĕçке-çике пĕрле хутшăннă-çке ашшĕ-амăшĕ. Тусăм киле васканине туйнă анне, манран мĕн сăлтавпа килни çинчен ыйтса пĕлнĕ хыççăн, пире чарса тăмарĕ.

Çав савăк вăхăтра эпĕ, паллах, кукаçи юманĕ, типсе-хăрса ларнă хыççăн, Санарпуç ялĕ пуçне выртса макăрасса та, хăй вăхăчĕпе аттеаннерен яланлăхах уйрăласса та кĕтмен, шутламан та.

## *Тӳркаç*

Хамăр ял çинчен çырмалли пурччĕ ман. Кирлĕ çынсемпе калаçнă хыççăн эпир тусăмпа Киремет çырми урлă сукмак çине тухрăмăр. Пăваяль, е урăхла каласан, Кĕмĕл Ямаш ялĕ çуммипе тӳрĕрен тухмалла Яковлевсен Кăмашне. Ĕлĕкрех пирĕн Хурăнсур çуммипе Кĕçĕн Кипек еннелле тăрантас çулĕ (почта çулĕ) якалсах тăнă тет. Санарпа Сунар урлă хывнă йывăç кĕперсене çирĕп тытнă. Патшалăх çулĕ

шутланнă-çке. Вулăссене çыхăнтарса тăнă. Эп астăвасса та кĕперĕсем çирĕпчĕ, вĕсене колхозсем юсасах тăратчĕç. Шоссесем якатма тытăнсан, ялпа яла тӳрĕрен çыхăнтаракан çулсене сухаласа тăкрĕç. Кĕперсенчен çĕрĕк сăвайсем кăна кăнтарса юлчĕç. Çак сукмак çеç, кашни çул суха касси айне пулсан та, ĕмĕрĕпех такăрланса тăрать. Пăваялĕн такăр çулне тахçанах маннă пулин те, сукмак яланах ура айĕнче. Камсем чи малтан такăрланă-ши ăна, пĕлме хĕн, анчах мăратсемпе пăваяльсем Ачча пасарне, çĕрпелсемпе çармăссем Нурăс пасарне çак сукмакпа, хăнана-мĕне, ярмăрккана çак тӳр çулпа танкканă. Мĕн кăна курман-ши ĕмĕрсен ура çулĕ...

Тавралăх ывăç тупанĕ çинчи пек куç умне тухса выртать пирĕн патран. Анăçăрах ларакан Эльментен çырма тарăнланса анать те Сунар юханшывĕ пулса каять. Ешĕрекен тырă пуссипе тата çаранлă çырма пуçĕпе сукмак Сунара çитсе курăк ăшне пытанать. Сылтăм çыранра, пирĕн ял енче, çăлкуç шăнкăртатса юхать. Шăла тивекен сĕткенлĕ шыва ĕçмесĕр ниxçан та иртмен. Çитермере çăлкуç пирĕншĕн сĕт кӳлли вырăнĕнчех пулнă. Ӳслĕк те ермен, хырăм та тăраннă шыв мехлесе, тутлă курăк кĕпçисем çисе.

Хĕвел кăнтăр апачĕ тĕлнелле шуса çитрĕ, хĕрхенмесĕр çунтарать.

Ăш хыпнипе иксĕмĕр те харăс тăсăлса выртрăмăр, кана-кана çăлкуçа ĕметпĕр. Анне сĕчĕ пекех тапса тăрать çĕр чĕччийĕ, кĕлеткене вăй кĕртет. Куçлă çăл пирĕн çине таçтан аялтан, çĕр тĕпĕнчен, тĕнче сăнĕпе пăхать. Шыв таппи çумне тулнă пĕчĕк кӳлĕре хĕвел вылять, канма выртнă кăтра пĕлĕт катăккисем хушшинче упа-утаманĕ те, этемле ĕмĕлке те палăрать. Çутçанталăк çаптарккипе киленнĕ самантра, сисмен хушăрах, пĕлĕт кăтриййĕ хушшине пирĕшти ишсе тухрĕ, хĕвелтен те хитререх кулса, Сунара янратса ячĕ. Шыв тĕпнелле кутăн ӳкнĕ кĕлетки ура тупанĕнчен пуçласа çӳçĕ таранах яп-янкăр çуталса тăрать. Çаруран. Шурă пушмакĕсене хывса сулахай аллине тытнă. Хĕмленнĕ куçсем пикен тăпăлкка пĕççисем тăрăх чăрлаттарса чупса кайрĕç те, кăк тĕлĕнчи чечеклĕ хӳмене çапăнса, мăчлатса илчĕç. Чĕркуççирен çӳлерех туртăннă кĕпе аркипе вылянса кăкăр çине ӳкрĕç, çыхман чĕчĕ хушшипе хĕртĕнсе шевлеллĕ тута хĕррисене хыпашлама пуçларĕç. Ярр! уçăлать те куç — пĕç кăкне çапăнса хупăнать, ярр! уçăлать те куç — тута хĕрринче хупăнать. Хĕрсе кайнă кĕлетке ман та, тусăмăн та çĕр çумнех пăталанчĕ пулас, хускалма та, тăма та вăй çук. Куççем çеç иксĕмĕрĕн те пĕр вăйăра — чечеклĕ чатăр айĕнчи вăйăра. Пĕчĕк шапа шыва шамплатнипе куçлă çăл кӳллийĕ хумханса кайрĕ, хĕвел те, хĕвелтен хĕрӳрех çунтаракан пирĕшти те, ăшри асамлăх вăййи те йĕрлĕн-йĕрлĕн саланса куç умĕнчен çухалчĕç. Чалтах сиксе тăтăмăр та, астармăш самантĕнчен вăтанса, кĕлеткепе айккăнрах тăрса кулса ятăмăр, хĕрӳлĕх лăпланса пынă май тин хирĕç çаврăнтăмăр.

— Пĕлĕтрен вĕссе антăр-им эсир?

— Тĕлĕк курмастпăр-ши?

Йĕкĕлтевлĕн йĕлпĕр турĕ те палламан хĕрĕн тути, хăмăр çăлтăрĕсем пирĕн куçсемпе вăййа хутшăнчĕç.

— Каплах тĕлĕрсе выртсан, леш тĕнчене, çăтмаха та лекме пулать, — мăшкăлласа илчĕ вăл пирĕнтен. — Эсир Çармăсран-и?

— Çармăсран.

— Эпĕ — пăваяльсем. Утă çулатпăр. Шыв ĕçтеретĕр-и?

— Тархасшăн. Шыва кĕртме те пултаратпăр. — Иксĕмĕр те ăмăртмалла ывăçласа илтĕмĕр сивĕ шыва.

Хĕр Улатимĕр ывăç тупанĕнчен, унтан ман ывăç тупанĕнчен чăпăртаттарчĕ. Манăн ĕнтĕ пӳрнесем хушшинчен шывĕ юхса та пĕтнĕччĕ. Хĕвел сăрланă хĕр тути ывăç тупанĕсене пырса тивнипе кĕлеткемри юнăм вĕресе кайрĕ, тĕл пулнă куç шăрçисем хушшине курăнман туртăм вăйĕ асаматланса карăнчĕ. Икĕ куç никамран ыйтмасăрах пĕр-пĕрин симпылне ĕмме пуçларĕ. Çакна сиссе Улатимĕр хĕр аллинчи кĕмĕл тĕслĕ савăта илсе шыв тултарчĕ, хĕре пуç тайса тыттарчĕ.

— Тархасшăн, тăраниччченех ĕçĕр.

— Тавтапуç.

— Пуян иккен эсир, кĕмĕлямашсем, шывне те кĕмĕл савăтран ĕçетĕр.

— Кĕмĕл чир-чĕртен сыхлать, чухлас пулать, — куçĕпе вылярĕ типтерлĕн шыв ĕçекен хĕр.

— Юрату чирĕнчен те-и? — савăта çĕнĕрен тултарчĕ ман Улатимĕр.

— Çук, юратăва чир-чĕртен сыхлать, — иксĕмĕре те тепĕр хут йĕрлесе тухрĕ вăл. — Юрату чирĕ кама кирлĕ? Сывă юрату пултăр. Тӳркаç çăлкуçĕ пек тапса тăтăр.

Хĕр куçĕнчен хам сисмесĕрех хĕрĕвне куçăма туртса илнинчен вăтанса та хăраса ӳкрĕм. Вăл та туйăмлăн пуçне чикрĕ.

— Çаран çулса паратăр-и? — ăшран ăшăнса тухрĕç сăмахĕсем.

Тӳркаç сукмакĕпе Пăваяль улăхне хăпартăмăр. Хĕр пирĕн хушăра утать. Чăнкă тăвайккирен хăпарнă вăхăтра хыçала лекрĕм. Куçлă шыв кӳллинчи ӳкерчĕк куç умне йăлкăшса тухрĕ. Тăпăл-тăпăл урасем кĕпе туртăннипе кӳлĕ тĕпĕнчинчен те чăмăртарах, хĕвел сăрриллĕрех, сывăхарах курăнчĕç. Куç вăйĕ кăна мар, алă туртăмĕ те çивĕчленчĕ.

Пăваяль хĕрĕсемпе инкисене тар юхтарсах паккус çумне паккус шăрçаласа патăмăр. Хĕвел кахал апатне ларсан тин Кăмаш вăрманĕ еннелле пуçа çавăртăмăр. Çырма хĕрринчи сукмакпа тăвалла хăпаратпăр. Каялла çаврăнса пăхрăм та... Çава аври çине ӳпĕнсе тăнă Кĕмĕл Ямаш пирĕштийĕ хĕвел шевли сапать. Икĕ куç хушшине

каллех кĕпер карăнчĕ, ун тăрăх туйăм сăмахсăр йăрăлтатрĕ: унталла та, кунталла та... Тӳркаç сымпылне кĕмĕл савăтран йĕкĕрĕлче пек тутипе тутанса ĕме-ĕме ĕçекен Кĕмĕл Ямаш хĕрĕн ятне çеç ыйтса пĕлме маннă иккен эпир. Вăл хăй те темшĕн-çке ятне парнелемерĕ пире. Мĕн пулчĕ-ши ку? Юрату-ши? Юрату вылявĕ-ши? Юрату чирĕ-ши? Сывă юрату-ши? Вăхăт ăна татса калаймарĕ-ха. Икĕ куç хушшинчи асамат кĕперĕ çеç çăлкуçран çĕр сĕткенне ăша хыврĕ. Куçăм вара манăн пĕç кăкĕнчи чечеклĕ чатăра уçса кăтралăха чăмасшăн. Турă панă канлĕхе путса çутçанталăк телейне тупасшăн. Тӳркаç çăлкуçĕн кӳллинчи пирĕшти хăйĕн куçĕпе мĕн шырарĕ-ши? Мĕн тупасшăн ыйхă çухатĕ-ши? Камăн куçне шартарĕ-ши пĕç кăк пĕрхĕмĕпе?.. Каялла ута-ута алă султăмăр хамăра пăлхантарса та çĕклентерсе вăй панă астармăш пикене.

## *Тыттарман кĕвĕ*

Кăмаш вăрманне чĕлхесĕр çынсем пек çитрĕмĕр. Кашни хăй тĕллĕн шухăшларĕ, ĕмĕтленчĕ ĕнтĕ. Ман хăлхаран Сунар çырми тулли юхакан кулă янравĕ, улăхри çава юрри, лапатка сасси тухма пĕлмерĕ. Куçлă шыв тĕпĕнчи шыв тĕкĕрĕ чĕтренсе илнипе хĕвеле хупнă пĕç хушши вăштăр çилпе вылянчăклăн кĕвĕленĕ кĕвĕ чĕре çумнерех çывхарса, чуна тыткăнласа лартрĕ, анчах çав кĕвĕ... алла кĕреймерĕ.

— Пуçна ан çĕмĕр пустуй, — йăлл кулса ыталарĕ Улатимĕр. — Ăнлантăм сан шухăшна. Сан асапна. Выртса шыв ĕçнĕ чухнех. Эх, пурнăç савăкĕ! Ман та ăшăмра ăшă туйăм тулчĕ, тутлă шăршлă тырă хумĕ, куçа шартаракан чечек улăхĕ, сив кӳлĕ тĕпĕнчи хĕвеллĕ кулă, утмăлтуратлă кĕпе арки айĕнчи шур чечеклĕ хӳме пытарса усракан кăтралăх, ытама лекеймен пĕçĕ, уççалла пăхакан чĕчĕ пуçĕ...

— Тата çĕре пăралакан сăнă пуçĕ мар-и? — ытамран вĕçерĕнсе малалла чупса кайрăм тусăма калаçма пӳлсех.

— Пурте, пурте пĕрлешсе çĕнĕ кĕвве куçрĕç, — хыпăннипе сывлăшне аран çавăрса ячĕ Улатимĕр. — Çăл куçлă, çăлтăр куçлă пирĕшти кĕввине куçрĕç. Сана парнелетĕп. Итле лайăхрах. Тыт ăна!

Улатимĕр аллисемпе выляткаласа тем ĕнĕрлерĕ, тутипе пампапарамлатрĕ, вăрмана çитсен, тăнлар-ха тесе тăрук чарса тăратрĕ. Çывăхри пăри ани çийĕн тăри тăрăлтатать. Шĕшкĕ тĕми вĕлтрен кайăкне хăнана чĕннĕ. Пуç тăрринче алă çупни илтĕнет: шăпăлл-шăпăлл...

— Тирексем концерт итлеççĕ, — пит тарăн шухăшлăн тăнлать ман мусăкçă. — Кĕçĕн Кипеке, вăтам шкула чупнă вăхăтра, юриех чарăнса итлеттĕм. Кашнинче хăйне евĕр уйрăм сасă: çуркунне — çут ĕмĕт саслă, çулла — çӳл тӳпе саслă, кĕркунне — салху саслă. Çуллен,

кайса ӳкицченех юрлать йывăç та. Халĕ те авă, тăрисемпе вĕлтрен кайăксене итленĕ хушăрах, хăй те юрлать. Алла тыттарман сасă. Хăлха кăна тытса юлма пултаракан сасă...

— Шăпăлтатнине илтсен те, пурин хăлхине те кĕвĕленсе кĕрей-мест пуль çав çулçă алă çупни те, тырă уйĕпе йăлтăртатса чупакан ăрша та, хĕр пĕççисене чечеклĕ кĕпе аркипе ачашлакан чарусăр çил хумханăвĕ те, — хаш та хаш сывласа ятăм хам музыка тĕнчин алăкне уçайманшăн хуйхăрса. — Кĕвĕ-юрă янравлăхĕ чун-чĕрере килĕшӳлĕх тупаймасть, халăха тыткăнламалла ăшран шăранса ту-хаймасть кашниннех. Тĕнче илемлĕхĕ, çутçанталăк чĕрĕлĕхĕ, этем сăнарлăхĕ пирĕн тавра явăнса кăна çӳрет, пире тыттармасть. Çапла пуль. Улатимĕр?

Тусăм тӳрех хуравламарĕ, тепĕр кана шăппăн тăнласа тăчĕ те:

— Тĕнче кĕввине ăна ку таранччен никам та алăпа тытса кур-ман пуль, — терĕ.

— Сăнарлă кĕвĕ этемпе пĕрле çуралать, вăл этемĕн пĕр уйрăлми пайĕ — пултарулăх, чи хăватлă шухăшлавлăх тесшĕн пултăн-и эсĕ?

— Çаплах, тусăм, — хулпуççирен çапса илчĕ вăл. — Йăх çыхăн-ăвĕнчен те килет. Авă, хамăр юлташăмăра, Кĕркури Илеперех, илер. Ашшĕ унăн Чăрăшкас Мăратра чи чаплăн купăс каланă. Хăй те баян туртать. Сăвă çырать. Илем ытамĕнчех Илепер.

Мăн Явăш ачи Миша Васильев тусăмăр, пĕрле редакцире ĕçле-кен пултаруллă сăвăç, хаçатçă, калани аса килчĕ. Ара, Улатимĕрĕн хăйĕн те ашшĕ çеç те мар, аслашшĕ те, Якку Макарч, ăста купăсçă пулнă-çке. Купăс калама вара, хăть те хăш ялта та, кашниех пĕлмен, кашниннех пиçмен вăл. Акă ăçтан пырать унăн кĕвĕ-юрă сăнарлăх-ĕпе аташасси! Тĕлĕнмелле тавçăрулăх ăна тĕнче, çутçанталăк кĕвви-юррине ăшри вăйлă туйăмпа çăварлăхлама хистенĕ ӳссе тăн кĕрсе пынă май. Епле калаçать вăл йăрăс пӳллĕ, сарлака çулçăллă тирек-семпе. Хăй чĕлхипе. Пĕр-пĕрин хушшинчи ăнлану кĕвве çаврăнать те çаврăнать. Сунар çăлкуçĕн кĕввине, Кăмаш вăрманĕн юррине Улатимĕр Яковлев Мускава, консерватори ытамне, илсе кайĕ-кайех, кĕçех.

Хулран çавăтрĕ те вăл мана ялĕ еннелле танкăштарчĕ. Уйра ĕçле-кен яш-кĕрĕм, вата-вĕтĕ пире униче хапхине çитиччен пăха-пăха саламларĕ. Çĕр кăшласа, çĕр сухаласа, çĕр тутлантарса ӳснĕ пулин те, эпир ĕмĕрĕпех çум çумлама, утă çулма, тырă вырма çуралманнине вĕсем те туйрĕç пулас, хамăр та ăнлантăмăр пулас: пирĕн илемлĕх тĕнчинче хамăрăн суха кассине тарăнлатасси, хамăрăн каçалăка çĕнтерӳллĕн тухасси, хамăрăн сасса тĕнчене кăларасси.

— Тăхтар-ха униче умĕнче, — ял сывлăшĕпе сывласа ячĕ Ула-тимĕр. — Ăш капланнипе сывлăш питĕрĕнчĕ. Çак алăка уçсанах ман пурнăç симфонийĕ янăрама пуçлать. Унăн пĕрремĕш пайĕ...

Миша Васильев калани, хам илтни-пĕлни ял кĕввипе хутăшса таçта аякка, инçене кĕвĕллĕн хумханса чупрĕ, инçет-инçет тухăç çулĕнчи пысăк хулана çитсе çапăнчĕ.

Свердловск Улатимĕре нуша кулачĕпе илĕртнĕ. Кăмаш сывлăшĕ тăван сывлăш, шерпет сывлăш пулсан та, çын унпах тăранса пурăнаймасть, хырăм выççи хăйĕн кĕввинех юрлаттарать, Аппăшĕ, Зоя, çăкăрлăх та пулин укçаллă пулмашкăн шăллĕне Свердловска чĕнет. Çурт-йĕр купалаççĕ тăвансем. Çи-пуçлăх, хырăм тăрантармалăх ĕçлесе илеççĕ. Хула — хулах ĕнтĕ. Хула шавĕнче каччă хăлхи Кăмашран пĕрле илсе килнĕ ăшри шав канăçсăрлăхне чăтайми пулса пырать. Çав шав хула шавĕн кĕввипе ял шавĕн кĕвви пĕрлешсе чунилли шавĕ пулса тăрать уншăн. Кун пирки аппăшне вăрттăн систерет вăл. Аппăшĕ вара ăна, пĕчĕкренех ашшĕн купăсне туртса ывăнма пĕлменскере, кермене ертсе каять. Керменĕ — консерватори ятлă иккен. Унта музыкăна вĕрентеççĕ, аслă пĕлӳ параççĕ, илем тĕнчин аслă алăкне уçма вăй кĕртеççĕ. Керменĕн картлашкийĕ те çӳллĕ-мĕн. Аялти картлашкине çирĕппĕн пусмасăр, çӳлти çине пусиччен, такăнатăн. Аялти картлашки çинче те пулин йĕр хăварасшăн хăть тесе хăйĕн ăстăн кунтăкне юриех уçса кăтартать Кăмаш ачи сумлă вĕренекенсем умĕнче. Чăваш халăхĕн ăслă-пуçлă кăтрашкийĕ хăйсем патне мĕнле паха сасă илĕнтерсе килнине Леонид Васильевич Богданов текенскер тӳрех курса-туйса ăнланать. Ку ачана унăн хăй пекех ăста рете тăратса, хăйĕн шкулĕн çулĕпе чи пултаруллисемпе пĕрле илем уçлăхне вĕçтерес килсе каять. «Училищĕне илетпĕр те, вĕрентетпĕр, хамăрăн консерваторине мар, Мускавринех, тĕнчипе чи чаплинех, кĕме çул уçса паратпăр», — шухăшланă хăй питĕ чаплă вĕреннĕ, тĕнчери конкурссенче сахал мар çĕнтернĕ фагот ăсти хăйне хăй хăюсăртараххăн тытакан «коммунизм строителĕ» пирки. Кĕвĕ тарăнлăхĕпе пуянлăхĕ, сасă янравлăхĕпе тыткăнлавлăхĕ малтанлăха профессорсене тивĕçтернĕ. Вĕрсе кĕвĕ нăйлаттармалли-юрлаттармалли хитре инструментпа паллаштараççĕ чăваш ачине, халиччен куçпа курман, алла тытса пăхман чунлă япалапа. Хаклă йышши йывăçран ăсталанă çаврака хăвăл сыпăксене хĕлĕхпе пуянлатнă та тутăхман тимĕрпе капăрлатнă. Вĕр кăна, клавишĕ çине пус, тăрпинчен чуна çӳçентерекен, чуна çĕклекен, чĕрене чĕртсе çĕнетекен тĕлĕнмелле уçă сасă янăраса тухать, ытти инструментсен сассипе килĕшӳллĕн оркестра пĕр çĕклентерсе ярать, пĕр хĕмлентерсе вут кăларать. Çапла Улатимĕр фагот ятлăскерпе паллашать те, унран ĕмĕрне те уйрăлаймасса чухлаймасть те-ха, нумай-нумай оркестрсенче пĕччен те янраттарса, фаготистсен ушкăнне те ертсе пырасса ĕмĕтленмест те савăнăçне ниçта хума пĕлмесĕр телей йăпанăвĕпе выляканскер.

Пурнăç симфонийĕн пĕрремĕш пайне чи хаклă паллăпа, пиллĕкпе, вĕçленĕ хыççăн уншăн Мускав хапхи хăех яри уçăлать. Тĕнчипе

чапа тухнă фагот ăстин Богдановăн чарăнма пĕлмен чăваш урхамахĕ Чайковский çĕршывне ĕрĕхсе кĕрсе каять. Петр Ильич чăваш урхамахне вилĕмсĕр çунат хушать, лира парнелет. Çав парнепе таврăнчĕ те ĕнтĕ консерватори студенчĕ Улатимĕр Яковлев тăван Кăмашне. Униче алăкне юрлаттарса уçса кĕчĕ. Малтикаса васкарĕ. Эпĕ унпа аран ĕлкĕрсе пыратăп. «Ман пекех пĕртен-пĕр ывăл иккен вăл та килĕнче. Амăшĕ, Марья инке, пире, ман анне пекех, кăпăклă урпа сăри ĕçтерчĕ. Кĕçех Вăрнарта пурăнакан тăванĕсем Улатимĕрĕн япалисене илсе çитрĕç.

Вăхăт чуппинче эпĕ каярахпа тусăмпа Мускавра тĕл пултăм. Студентсем пурăнакан хăтлă çурта часах шыраса тупрăм. Владимир Яковлев хăш хутра пурăннине кăтартса ячĕç те, кавир тăрăх, Чăвашьен улăх кавирне аса илсе пыратăп. Утнă май хăлхана шыв юххи пек юхакан шăнкăр-шăнкăр кĕвĕ кĕме пуçларĕ, улăх шăршине саракан, тырă пуссине хумхантаракан, шăпăл-шăпăл алă çупакан кĕвĕсем пăн та пăн, ян та ян çĕкленсе уççалла сирпĕнеççĕ. Уçă алăк тĕлне çитрĕм те... хăйне сăнакана асăрхайман Улатимĕр Яковлев, кăтрарах çăра çӳçне вĕлкĕштере-вĕлкĕштере пӳрнисене клавишсем тăрăх каллĕ-маллĕ ăнтăлса чуптарать. Сасăсен янравлăхĕ пĕрлешсе çинçелет те, пĕрешкел пăнтăртатса илсе, çунатлăн çӳлелле вĕçме тытăнать...

Акă, пуçне çĕклерĕ те вăл мана курчĕ, ура çине тăричченех: «Мускава килнĕ ятпа, кĕр-кĕр, вăхăтра çитрĕн, салам, тусăмçăм», — терĕ, вара ыталаса чуптурĕ те юнашар лартрĕ, «Астăватăн-и Тӳркаç çăлкуçне, куçлă çăл тĕкĕрне, кĕмĕл саслă Кĕмĕл Ямаш хĕрне?» — тесе каллех калама пуçларĕ. Пианино сассинче вара эпĕ хамăр тупнă пирĕшти сăнарне, хамăр куç хĕмне сӳнтернĕ шур чечеклĕ хӳмене, хăй патнелле асамлăн туртакан вĕт чĕтревлĕ, çĕрĕ пек тутана, туйăма ĕçекен асамат кĕперне яп-янкăр курма пултартăм.

— Матур-çке эс, тусăм, хыврăн апла хăвăн ĕмĕтне кĕвĕ-юрра!

— «Тӳркаç Асамачĕ» ятлă пьеса вăл, Улатимĕр, сана парнелетĕп ăна. Пьесине çыртăм. Спектакльне хăвах ларт, концертне хăвах итле. Туя чĕнме çеç ан ман. Мĕнле, тупрăн-и шыраса? Мĕн ятлă вăл? Алла кĕчĕ-и утмăлтурат кĕвви?

Хамăн вăрттăн шухăш-туйăма уçса пама çеç пултартăм эпĕ Улатимĕр тусăма. Кăштах пĕрле хуйхăрса та илтĕмĕр хамăр айванлăхшăн, карăннă асамат кĕперне шăварса тăрайманшăн.

Яковлев пӳлĕмре пĕччене пурăнать. Вĕсене кашнине пианино лартса панă. Баян та пур. Фагочĕ ĕнтĕ — алă айĕнчех.

— Пĕлетĕн-и мĕнле телей манăн алăра? — фагота силлесе кăтартрĕ пӳлĕм хуçи. — Геккель шедеврĕ! Нимĕç маçтăрĕн вунтăххăрмĕш ĕмĕрти тĕлĕнтермĕшĕ. Гитлер салтакĕ Раççее музыкăпа та çĕнтерме шутланă, анчах... Фагочĕпе пĕрлех пирĕн алла лекнĕ. Александр Ру-

мянцев Пысăк театрта калатчĕ унпа. Канăва тухсан вăл ăна мана тыттарчĕ. Сана эп Чайковский залĕнче каçса кайса итлерĕм, хăвна вĕрентекен Роман Павлович Терехин профессорпа Павел Александрович Савельев доцент мухтани те кăмăла уçса ячĕ, матур, вĕсен ятне çĕклетĕн, терĕ, ăнăçу сунса ватă мусăкçă.

Тусăм чи паха тытăмлă, уçăмлă фаготпа хăйĕн симфонине малалла тăснишĕн савăнмасăр чăтаймарăм, вăл Лукинпа Хирбю хайлавĕсене тарласах каланине тăнласа итлерĕм. Лукин Чăваш çĕршывне хăлаçласа илсе халăхпа юрланăн, Хирбю чăваш çыннин ăшне кĕрсе чунне хăвелле шăратнăн, шухăш-туйăмне çил-тăвăлла çĕкленĕн туйăнчĕ тусăма итленĕ май.

Чи лайăх паллăпа пĕтерме çăмăлах мар иккен Мускав консерваторине. Хăвăн пултарулăхупа та тертӳпе кăна палăрма пултаратăн. Выçăллă-тутăллă кунсем те сахал мар пулнă Яковлев студентăн. Профессор икĕ-виçĕ кун тăрантарса урок пани те асрах унăн. Арăмĕ, Людмила та, институтра вĕреннĕ-çке. Иккĕшĕ — икĕ общежитире, ачи — Вăрнарта, кукашшĕпе кукамăшĕ патĕнче. Чайковский залĕнче Улатимĕр патшалăх экзаменĕ тытнă самантра, Терехин профессорăн куçĕнчен савăнăç куççулĕ юхса аннине кам манĕ-ха? Теприн, Савельевăн ячĕ, Рахманиновпа Рихтер ячĕсене çырнă мрамор хăма çинче. Акă камсен пултарулăх çăлкуçĕнчен сиплĕх ĕçсе ӳснĕ вăл — Кăмаш ачи.

Каярахпа ĕнтĕ ку, Минска хăнана кайсан, Яковлевсем пире, мăшăрпа иксĕмĕре, Беларусь патшалăх академи симфони оркестрĕн концертне чĕнчĕç. Эпир залра виççĕмĕр лартăмăр. Улатимĕр хăйĕн «сотнинче» фаготпа калакансен ушкăнне ертсе пычĕ. Çĕр çынлă оркестр эртелĕнче Яковлев чăваш ăрăмçи пекех курăнчĕ. Вăл вĕрсе калакан фагот пуринчен те янравлăрах, пуринчен те ытларах тыткăнланăнах туйăнчĕ.

Шутларăм вара, пурнăç симфонийĕн виççĕмĕш пайне вăл çӳлĕ шайра çырнă. Йывăрлăхра. Тӳсĕмлĕх хуранĕнче вĕресе. Мускавран Шупашкара таврăнсан ăна музыка театрне ĕçе илнĕччĕ. Çемйипе виççĕн «Атăл» хăна çуртĕнче нушаланса пурăнатчĕç. Хваттер пирки шантарман та иккен, кĕтме, чăтма хушнă. Чĕмпĕрте симфони оркестрĕ туса хурсан, Яковлева тӳрех унта чĕнсе илчĕç те виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер пачĕç. Оркестр солистĕнче тăватă çул ĕçленĕ хыççăн вăл çĕошыври пысăк конкурса хутшăнать. Çĕнтерет. 1972 çулта вара Минска куçса каять. Унта ăна правительство пултаруллă искусство ăстисем валли тытса тăракан ятарлă хваттерне вырнаçтарать. Çавăнтанпах Сурганов урамĕнче пурăнать Яковлевсен тăватă çынлă çемйи. СССР культура министерстви ăна Африкăна вĕрентме янăччĕ. Тăватă çул арабсене музыкăна вĕрентнĕ хыççăн вăл хăйĕн оркестрне таврăнать. Çав вăхăтрах Беларусь консерваторийĕнче те ĕçлеме

тытӑнать. Ку таранччен — оркестрта та, консерватори кафедринче те. Профессор.

Яла ҫуллен хӑйӗн «Атӑлӗпе» ҫемйине лартса тата юратнӑ йыттине илсе хӑнана килетчӗ. Аппӑшӗ вӑл вӑхӑтра Екатеринбургран Кӑмаша таврӑнать. Амӑшӗ вилнӗ хыҫҫӑн пӳрчӗ пушаннӑ ӗнтӗ. Вӗсем килсен вара пӳрт те ӑшӑнать, кил те чӗрӗлет. Кӑмаш вӑрманӗ те вӑранать. Тирексем юрла-юрла савӑнса алӑ ҫупаҫҫӗ...

Улатимӗрпе хальхинче ҫулла мар, кӗр хӗле ыталама пуҫланӑ вӑхӑтра тӗл пултӑмӑр. Хам ҫамрӑк чухне ӗҫленӗ, Яковлев унта ҫырса тӑнӑ «Ҫӗнтерӳ ҫулӗ» хаҫат утмӑл пиллӗке ҫитнине паллӑ турӑмӑр. Хавасчӗ вӑхӑчӗ. Асаилӳ, тӗлпулу, ӑсату...

«Туслӑхра» туслӑх юрри юрланӑ чухне Улатимӗртен ыйтрӑм:

— Мӗнле, пурнӑҫ симфонийӗн тӑваттӑмӗш пайне вӗҫлерӗн-и?

— Ай-уй, тусӑмҫӑм-тусӑм, юлашки пайӗ-ҫке вӑл, ытла хыт шухӑшлаттарать, — пуҫа пӑркаларӗ вӑл. — Ҫырӑнать-ха, ҫырӑнать, ӗҫлетпӗр, вӗренетпӗр, ачасен ачисене пурнӑҫ кӗввипе ташлаттаратпӑр. Эпир вӗҫлетпӗр ӗнтӗ хамӑр симфоние. Вӗсем мӗнле ҫырӗҫ-ши? Тыттарман кӗвӗ вилмест те, явӑнать, ҫаврӑнать этем тавра, пурӑнать этемре...

Калаҫа-калаҫах ҫывӑрса кайнӑ.

Тӗлӗкре Улатимӗрпе каллех Тӳркаҫра пек. Ӑш хыпнине чӑтаймасӑр ҫӑлкуҫ ҫумне тӑсӑлса выртрӑмӑр та шӑла тивретсех шыва мехлетпӗр те мехлетпӗр. Куҫлӑ ҫӑл ҫумӗнчи пӗчӗк кӳлӗ чӗрӗлчӗ. Ун ҫийӗн кимӗпе Пӑваяль пирӗштийӗ ишет. Вӗт пиртен ҫӗленӗ чӑваш кӗпипе, ҫухавине, ҫанӑ вӗҫӗсене, аркине тӗрленӗ. Пурҫӑн тутӑр ҫыхнӑ. Шапшурӑ пушмакпа. Кӗсмен вырӑнне урисемпе авӑсса пырать. Куҫсем пирӗн иксӗмӗрӗн те тӗрӗ айӗнчи урасем тӑрӑх йӑрӑлтатрӗҫ. Куҫ хӗлхемӗ кӑк тӗлне ҫитет те шур чечеклӗ хӳмене ҫапӑнса сӳнет. «Вӑтӑр ҫул кӗтетӗп сире улӑх ҫырли пуҫтарма, атьӑр пӗрле ишер, хӑшӗ хӑюллӑрах та вӑйлӑрах», — тесе тути ҫинчи ҫӑлтӑрне пирӗн еннелле вӗҫтерет. Хӑйӗн куҫ ҫӑлӗ ман куҫ вӑйне ӗмет те ӗмет. Лартӑмӑр та кӗрсе кимме, кимӗрен пулчӗ-тӑчӗ ҫуна, шӑвать те шӑвать, тур айӑрӗ туртать те туртать. Хамӑрӑн хӑна ҫуртнех кӗрсе кайрӑмӑр. «Ку пир кӗпене анне мана качча кайма ҫӗлесе панӑ, тӗррине хам тӗрленӗ, паян тутӑрӗпе пӗрле арчаран кӑларса тӑхӑнтӑм», — тесе тӗкӗр умӗнче капӑрланать пике. Иксӗмӗр те вӑтанатпӑр, хӑраса ӳкрӗмӗр, хӗре кӑмака хыҫне вырӑн сарса патӑмӑр, хамӑр утиялпа витӗнсе выртрӑмӑр. Кӗҫ кӑмака кимӗ пулса тӑчӗ, ҫӑлкуҫ кӳллинче ярӑнса пырать. Пирӗшти асамат кӗперӗ карчӗ. Шур чечеклӗ хӳме, силленнипе, ишӗрӗлсе ана пуҫларӗ, кӑтралӑх хумӗ пите ачашшӑн ҫитсе ҫапрӗ, куҫа уҫӑлтарса ячӗ...

Иксӗмӗр те харӑсрахах вӑранса кайрӑмӑр пулас, кравatьсене чӗриклеттерсе сиксе тӑтӑмӑр. Улатимӗре тӗлӗк каласа патӑм. Вӑл та тӗлӗкре Тӳркаҫрах аташса выртнӑ-мӗн, ҫӑлкуҫран шыв ӗҫнӗ. Иксӗмӗр пӗчӗк кӳлӗ тӗпӗнче тахҫан курса киленнӗ пирӗшти вырӑнне мекси-

канецсен киновӗнчи Мария саркаланса тӑра парать тет, нимле шур чечеклӗ хӳмесӗр, куҫа хӳтерсе ямасӑр, кӑтралӑхӗпе илӗртсе.

— Эй, ку юмах-тӗлӗкпе, асаилӳпе. Пуҫ ҫаврӑнать, — тесе радио репродукторне ӗҫлеттерсе ятӑм. — «Просто-Марийӑна» сложнӑлатса чӑваш кӗпи-йӗмӗ тӑхӑнтарар та, Кӗмӗл Ямаш пирӗштийӗпе иккӗшне те, Тӳркаҫ ҫӑлкуҫӗнчен ҫӗр сӗткенне ӗҫтерсе, чиперлетер. Ҫӗнӗ хӑватпа Хурӑнсур Ҫармӑс ҫаранне те, Кӑмашӑнне те ҫултарар.

— Анчах... Сунар ҫыранӗсем тунсӑх куракӗпе витӗннӗ, сукмакне такам сухаланӑ пуль ҫав... — кулса ячӗ Улатимӗр.

Репродуктортa юрӑ янӑрать: «Мария?..»

* * *

Уйрӑлас вӑхӑт ҫывхарчӗ. Пӗрин Минска, теприн Шупашкара каймалла. Ҫапах та тӑлӑх мар иккен эпир. Улатимӗр Яковлевӑн хӑлхинче аслашшӗн купӑс сассийӗ, манӑн хӑлхара кукаҫи мӑлатукӗн сассийӗ вӑйланчӗ. Куҫ умӗнче ҫамрӑклӑх асамат кӗперӗ йӑлкӑшрӗ.

*«Ҫӗнтерӳ ҫулӗ», 1995 ҫулхи*
*чӳк уйӑхӗ.*



*Владимир Яковлевпа мӑшӑрӗ Людмила (варринчисем) Римма Ильиничнапа Владимир Прокопьевич Кузьминсем патӗнче Йӗпреҫре хӑнара.*

# ВĂРНАР ÇĂЛТĂРĔСЕМ

## *Вырăссен чи тава тивĕçлĕ басĕ*

СССР халăх артисчĕ Максим Дормидонтович Михайлов çĕр те тăвату çул каялла çурла уйăхĕнче Кульцавра çуралнă. Максимкăн ашшĕпе амăшĕ çамрăкла вилнĕ. Вăл кĕçĕнни пулнă. Михала аслашшĕ пилĕк мăнуклă тăрса юлнă. Ачалăхĕ Максимкăн ялтах иртнĕ. Вăл аслашшĕнех хывнă: юман кĕреш пек, тăлпан, чурăс кăмăллă, тимлĕ, çине тăракан, янăравлă саслă. Юнашар ялта Кушлавăшра вĕреннĕ чухне чиркӳ хорĕнче юрланă. Пуп патне хăнана килнĕ пиччĕшне, юрă ăстине тата вĕрентекене, çак ача юрлани уйрăмах килĕшнĕ. К. Н. Поливанов вара ăна Лаишево уесĕнчи Бетьки текен яла илсе каять, икĕ класлă шкула вырнаçтарать. Ачан сасă майĕпен ӳссе çирĕпленет, баса çитет. Çак ăслă Константин Николаевич Максимкăна тĕрĕс çул çине тухма пулăшать. Вунçиччĕри йĕкĕт çывăхри Хусана çитет. Пристаньте япала йăтса тăранать. Спас мăнастирĕн хорне вырнаçать, çав хушăрах пасторсен (протестант пупĕсен) курсне хăй тĕллĕн вĕренме çӳрет.

Хусанти музыка училищинче Ф.А.Ошустович профессор-вокалистпа паллашни уншăн тепĕр пысăк утăм пулнă. Вăл унран нумай вĕреннĕ.

Пасторсен курсĕ хыççăн Максим Михайловăн тĕн-чиркӳ енĕпе чылай вăхăт Уфара, Омскра, Хусанта, Мускавра тияккăнра (пачăшкăна пулăшаканĕ), аслă тияккăнра ĕçлеме тивет. Унăн уçăмлă та янравлă хулăн сассине итлеме халăх чиркĕве шăнăçми пуханнă.

Чиркӳпе çыхăнман юрăç пуласси ăна Мускавра пурăнма тытăнсан канăç памасть. Паллă юрăçсемпе паллашни, вĕсенчен вĕренни, А.М.Горькийпе тата А.В.Луначарскийпе тĕл пулни, вĕсен канашне итлени паллă баса радиовещани студине илсе çитерет. Унта вăл нумай юрлать. Вăйлă сасса пĕтĕм çĕршыв итлет.

Кĕçех уншăн Пысăк театр алăкĕ те яриех уçăлать. Унта вăл 1932 çултан пуçласа 1956 çулччен пĕтĕмпе 25 оперăра юрлать. Халăх умĕнче вăл юлашки хут 1957 çулта юрланă. Максим Дормидонтович вăйлă юрăçсемпе пĕрле ĕçленĕ, ăна Ф.И.Шаляпин вырăссен чи тава тивĕçлĕ басĕ тесе ырланă. М.И.Глинкăн «Иван Сусанин» оперинчи Иван Сусанин партине чи тĕлĕнмелле юрланă юрăçсен Федор Иванович Шаляпинпа Максим Дормидонтович Михайловăн сăнӳкерчĕкĕсем Воронеж облаçĕнчи Сусанино ял музейĕнче юнашар вырнаçнă.

Çуралнă тăван çĕршыва мухтавлă артист нихçан та манман, килсех çӳренĕ. Мускавра та хваттерĕнчен ентешĕсем татăлман. Республикăна килсен Кульцавра, Шупашкарта концертсем панă. Юрий Илюхин

музыковед аса илнĕ тăрăх, 1956 çулта М. Д. Михайлов Чăвашрадио хорĕнче А. Г. Казакова тава тивĕçлĕ артисткăпа вырăс юррисене юрланине никам та манас çук. Мускав филармонийĕн концертмейстерĕнче чăваш композиторĕн С. М. Максимовăн хĕрĕ Галина Степановна ĕçленĕ. Çивчĕ чунлă аккомпаниаторпа вăл нумай çĕрте юрланă. Репертуарĕнче унăн Гаврил Федоровран çырса илнĕ чăваш юррисем те пулнă. Вĕсенчен пĕрне мухтавлă юрăç Кремльти Пысăк керменти йышăнура шăрантарнă.

Ывăлĕ те, мăнукĕ те çемье йĕрĕпех кайнă. Игорь Максимович Пысăк театрта 27 çул юрланă. Максим Игоревич малтан аслашшĕпе ашшĕн театрĕнче оркестрта ĕçленĕ, каярахпа конкурсра çĕнтерсе, солиста куçнă. Шупашкарта час-часах пулать, оперăпа балет театрĕнче ăсталăхне кăтартать.

Аслă юрăçа халалласа Шупашкарта пиллĕкмĕш хут ĕнтĕ оперăпа балет искусствин пĕтĕм тĕнчери фестивалĕ пулчĕ. Михайлов уявне Раççейри, АПШри, Францири, Турцири тата ытти çĕршывсенчи чаплă театрсенчен пултаруллă артистсем ăмăртма килеççĕ. Максим Дормидонтовичăн мăнукĕ кашнинчех мухтава тивĕçет.

Çавăн пек вĕсем — пирĕн ентешсем!

*1997 çул.*
*«Тăван Атăл», 9 №.*

## *Раççей халăх артисчĕ* *Юрий Васильевич Васильев*

«Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн ĕçĕ-хĕлĕнче 1976 çулта паха улшăнусем пулнă. Çакă нимрен малтан çĕнĕ ăрури мусăкçăсем Ю. В. Васильев (художество руководителĕ), Г.Д.Егоров (тĕп хормейстер) килнипе çыхăннă. Вĕсемпе пĕрлех тĕп балетмейстер вырăнĕнче А. В. Ангаров туслăн килĕштерсе ĕçлеме тытăнать. Ĕçе çĕнĕлле йĕркеленĕ ансамбль тĕрĕс çул çинче тăнине критика та, общественность та палăртнă. Коллектив 1978 çулта Россия Федерацийĕнчи юрăпа ташă ансамблĕсен тата ташă ансамблĕсен смотрĕнче I степень диплом илме тивĕç пулнă».

Юлашки çулсенче ансамбль хăй гастролĕсен географине анлăлатрĕ: Чехословаки, Венгри, ГДР, Итали... Итали критики, музыка искусствине лайăх пĕлсе тăраканскер, чăваш ансамблĕн концерчĕсене çапла хакларĕ: «Питĕ лайăх ертсе пынипе тимлĕн хатĕрленнĕ хор юрланинче тĕлĕнмелле музыка пуянлăхĕ уçăлать, шăпах çавнашкалли ĕнтĕ Мусоргские тата XIX ĕмĕрти вырăс шкулĕн ытти композиторĕсене хавхалантарнă. Чăвашсем çав тери ăста юрлама пĕлнипе

уйрӑлса тӑраҫҫӗ: сасӑсем нумай сасӑлӑх йӗркисемпе килӗшӳллӗн пӗрлешеҫҫӗ тата хӑйсене евӗр лайӑх... Хор юрласа панӑ авалхи юрӑсенче, такмаксемпе хушса юрламаллисенче... Атӑл тӑрӑхӗнчи артистсем чӑннипех те пысӑк ӑсталӑх тата нумай енлӗ пултарулӑх кӑтартрӗҫ». (Коррьере делла сера. 1983. Мартӑн 25-мӗшӗ)».

Вӑрнар районӗнчи Вӑрманкасра ҫуралса ӳснӗ Юрий Васильевич Васильев ӑстаҫӑн пултарулӑхне хак паракан икӗ тӗслӗх илсе кӑтартрӑмӑр. Унтанпа вӑл Чӑваш Республикин патшалӑх премине илчӗ, ӑна Раҫҫей Федерацийӗн искусствисен тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ тата Раҫҫей халӑх артисчӗ ятсене пачӗҫ. Вӑл ертсе пыракан ансамбль ҫирӗм ҫул хушшинче ӑсталӑх тӳпине хӑпарса ҫитрӗ, ӑна тивӗҫлипе академи ансамблӗ ятне пачӗҫ. Коллектив членӗсенчен чылайӑн халӑх артисчӗ, тава тивӗҫлӗ артист ятне, халӑх хакне тивӗҫрӗҫ.

Хӑйӗн ҫур ҫулхи юбилейне Юрий Васильев пурнӑҫ юрринче кӗтсе илчӗ.

*«Тӑван Атӑл»*
*1997 ҫул, 9 №.*

## *Чунхаваллӑх вӗҫевӗ*

Ҫутҫанталӑк этеме хӑватлӑ туртӑм вӑйӗ парнеленӗ. Ҫав вӑй ӑна хырӑм тӑрантармалли, ӗмӗрне пурӑнса ирттермелли пуян ҫӗр ҫумне пӑталать. Этем хӑйӗн ӗҫӗ-хӗлӗпе, ҫутҫанталӑк пуянлӑхӗпе савӑнать. Шухӑш-туйӑмӗпе ӑнтӑлса курӑнми пусма тӑрӑх тӗнче анлӑшне вӗҫет. Чунхаваллӑх вӗҫевӗн ҫуначӗ кашни ҫыннӑн хӑйеверлӗ, хӑйтӗртӳллӗ. Нарӑс вӗҫӗнче итленӗ-курнӑ пӗр пысӑк концертра эпӗ ӑна чӑннипех ҫӗнӗлле ӑша хыврӑм.

«Пархатарлӑ ҫӗрӗм-шывӑм» ятлӑ ҫӗнетнӗ программа Чӑваш патшалӑх юрӑпа ташӑ ансамблӗн пултаруллӑ ӗҫченӗсен чун-чӗри витӗр кӑна мар, филармони залне ырӑ кӑмӑл хевтипе пухӑннӑ ҫынсен чунчӗри витӗр те ӑшӑ хӗвел пайӑрки пек илемлӗн ҫуталса тухрӗ. Артистсен пысӑк ушкӑнӗн илемлӗх йӗркелӳҫи тата аслӑ дирижерӗ, Раҫҫейпе Чӑвашстан искусствисен тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ Юрий Васильев хӑй те талантлӑ ҫынсен ушкӑнӗпе пӗрле чунхаваллӑх вӗҫевӗнче тепӗр ҫӗнӗ утӑм турӗ ӗнтӗ. Вӑл ансамблӗн аслӑ балетмейстерӗпе тата ташӑсене лартаканӗпе, Раҫҫейпе Чӑвашстан искусствисен тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗпе Александр Ангаровпа пӗр тӗллевлӗн ҫине тӑнине пулах Чӑваш патшалӑх премийӗн тата Раҫҫейри конкурссен лауреачӗ халӑх умӗнче, хӗрӳ ывӑҫ тупанӗн шавӗнче, ҫепӗҫҫӗн хӑйӗн утмӑл саккӑрмӗш савӑк утӑмне турӗ.

Акă, илем тĕнчин карри капăррăн уçăлса каять те, куç умне тăван халăхăн ĕмĕртен-ĕмĕре куçса тăнă паха йăли-йĕрки черетленсе тухса пырать. Юрий Плотников сăввисемпе çырнă Аристарх Орлов-Шуçăмăн çĕкленӳллĕ хавас кĕвви пире те Раççейĕн тĕп урамĕнче Атăл çийĕн хĕвел çĕкленнине хавхалануллăн сăнаттарса, Шупашкар хăнисене тулли кăмăлтан кĕтсе илме чĕнет.

Туя чăннипех туй пек туса, халăх юррисемпе ташшисене шăрантарса-хĕмлентерсе чăваш ĕçре кăна мар, вăйă-кулăра та хастар, вутçулăмлă, çав вăхăтрах сарçу кăмăллă та чипер, тыткăнуллă пулнине искусство çитĕнĕвĕн çӳллĕ шайĕнче кăтартса пачĕ ансамблĕн пĕтĕм эртелĕ.

Асамлă туйăм ытамне кĕрсе ӳкнĕ май, вăхăт чуппине те сисместĕн, куç илемлĕх тĕнчине тинкерет, хăлха унти хаваслăх кĕввине ĕнерет. Йĕпреç йĕкĕчĕ Василий Раймов Юрий Жуков хывнă «Юрату кĕперĕ» çине кĕрсе кайсан, чун унпала пĕрлех çав хаваслăх кĕперĕ çине чупса кĕрет. Валентин Сизов халăх кĕввисемпе ташлаттаракан ташăçăсемпе юнашар «Пирĕн ялăн ăстисем» те çавнашкалах пит маçтăр тесех ташша сĕвес килет. Чăваш халăх артистне Николай Димитриева, мăн кĕрӳ такмакĕ хыççăн, хĕрсем темшĕн саваççĕ тесех ирччен юрлаттарас шухăш-кăмăл та çуралать.

Мĕн тĕрлĕ сасă, мĕн тери хĕмленӳллĕ хускану илемлĕх тĕнчинче. Вĕсене тăнласа-сăнаса ларнă самантрах анлă зал çийĕн чуна уçса ирĕлтерсе ямалла савăк сасă вĕçсе иртет... Вăрнар хĕрĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки Людмила Семенова Юрий Кудаков кĕввине професиллĕ шайра шăрантарать.

Юрă-ташă черетлĕхĕнче сисместĕн те хăв юратуллă-ыратуллă кĕвĕ тыткăнне лексе асамлăх тĕнчине çĕкленсе хăпарнине.

Чăвашсен хальхи вăхăтри чи пултаруллă композиторĕсенчен пĕри Юрий Григорьев хуçаланать иккен санăн ăшри туйăмупа. «Сирень сулхăнĕнче» çуралнă хăват хумлăн-хумлăн юхса, майĕпен-майĕпен çĕклет те çĕклет шухăшлавлăх асамлăхне.

Çапла, çутçанталăк эткеме хăватлă туртăм вăйĕ парнеленĕ пулсан, Туррийĕ вара этеме чунхаваллăх вĕçевĕн тепĕр туртăмне пилленĕ. Çав туртăм вăйне туйса тухрăмăр та эпир чаплă концертран, тăван çĕр çийĕн савăк кăмăлпа уттартăмăр.

*«Вучах», 1993, Пуш, 10. 11 №.*

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2006 çулхи нарăсăн 13-мĕшĕнче кăларнă Указĕпе килĕшӳллĕн «Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕ» патшалăх культура учрежденийĕн художество ертӳçине, тĕп дирижерне Юрий Васильевич Васильева Туслăх орденĕпе наградăланă.

## *Пĕрле каласçан — туссем, пĕрле юрласан — тăвансем*

Нимĕçсем чăваш халăхĕн юратнă юррине — Герман Лебедевăн «Тăван çĕршывне» — арçын ушкăнĕпе нимĕçле янăравлăн тăсса ярсан, филармони залĕнчи курса-итлесе ларакансем чăтаймарĕç, ура çине тăрса чăвашла мăнаçлăн юрлама пуçларĕç. Икĕ чĕлхепе пĕр кĕвĕре туслăн шăранчĕ патшалăх гимнĕ туса хунă вилĕмсĕр юрă çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче. Германири Хокенхайм хулинчен иккĕмĕш хут Шупашкара килнĕ арçынсен хорĕ пысăк концерт кăтартрĕ. Ăна Чăваш Республикин юрăпа ташă ансамблĕн илемлĕх пуçлăхĕ, Раççей искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Юрий Васильев ертсе пычĕ.

Классика йĕрĕ çинче тăракан, наци аваллăхĕн йĕркине çирĕп тытса пыракан пултаруллă ушкăн нимĕç юррисене кăна мар, ытти халăхсен юррисене те ăста, професси шайĕнче шăрантарчĕ. Сасăсен тасалăхĕ, кĕвĕлĕхĕ уйрăмах тыткăнлать. Çавăнпах пуль зал кашни номере алă çупса хакларĕ. «Савăнса юрлар», «Ĕçкĕ юрри», «Виноград юрри», «Каçхи шанăç», «Юрату илемĕ», «Ирхи шуçăм юрри», «Юрату хăвачĕ», «Шухăш вĕçевĕ...» Çак ятсем хăйсемех вĕсем чун ăшшиллĕ, кануллă юрăсем пулни çинчен каласçĕ. М. Шмекенбехер, А. Кремер оперăсенчи арисене вăйлăн шăрантарчĕç, лирикăллă юрăсене туйăмлăн юрларĕç.

Тĕнчипе палăрнă хор иккен вăл. Испани, Франци, Венгри, ЮАР тата ытти çĕршывсенче палăрнă. Пултаруллă музыкант тата дирижер Вальтер Мут ертсе пынипе чăвашсене те савăнтарса хăварчĕ юрăçсен «Лидертафель» ятлă пĕрлешĕвĕн пĕр ушкăнĕ.

Лидертафель тесе вун тăххăрмĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Германире юрлама юратакан арçынсен туслăх пĕрлешĕвĕсене каланă. Чи малтанхи лидертафель 1809 çулта Берлинра йĕркеленнĕ. Карл Цельтер композитор, хормейстер Пруссире çапла халăха музыка пĕлĕвĕпе пуянлатас тесе çĕнĕ йĕрке тума пултарнă. Патриотла шухăш-туйăмпа пĕр çĕре пухăннă ушкăнсем сĕтел хушшинче туслăн каласса, юрласа ларнă. Ку юхăм майĕпен Раççее те çитнĕ. Хокенхаймри лидерталь 1874 çулта çуралнă. Юрăçсен обществинче хĕрарăмсен, арçынсен тата ачасен хорĕсем пур. Шупашкара хальхинче икçĕр çынтан тăракан хорăн пĕр ушкăнĕ килнĕ.

Атăл хĕрринчи Чăваш Республикине концертпа каяссине пĕлсен, пурте вĕсем хаваспа хатĕрленме пуçланă, мĕншĕн тесен Шупашкарпа Хокенхайм хушшинче — Атăлпа Рейн хушшинче — туслă çыхăну йĕркеленсе пырать. «Шупашкарти промышленность тракторĕсен заводĕ» производство пĕрлешĕвĕн дизель моторĕсем кăларакан завод Хокенхаймран детальсем илсе тăрать. Хор çав пĕрлешӳре те пулнă.

Концерт ертӳçм пулма та Юрий Васильева ахальтен шанса паман. Унăн ансамблĕпе «Лидертафель» обществи туслă çыхăну тытаççĕ.

Хула бургомистрĕ шупашкарсене саламларĕ, юрăпа ташă ансамбльне 3500 марка, пионер керменне 3000 марка парнелерĕ. Хокенхайм хули çыннисем чăваш культурине аталантармашкăн ятарласа пухнă укçа ку. Чăвашсене, концерта пынă çынсене пурне те нимĕçсенчен пысăк тав пултăр, терĕç хора ертсе пыракансем. Халăхсем хушшинчи туслăха, культура аталантарăвне çынсем кăна тума пултараççĕ. Çавăнпа туслăха тăсасчĕ, терĕç. Çав тĕллевпе çитес çул вĕсем Юрий Васильев ансамбльне хăйсем патне чĕнеççĕ.

Музыка пур халăхшăн та ăнланулла. Юрă чĕрере юлать. Пĕрле калаçсан — туссем, пĕрле юрласан — тăвансем, теççĕ.

Çак шухăш тĕпре пулчĕ нимĕçсен концертĕнче, чăвашсемпе нимĕçсем хушшинчи тĕлпулусенче.

*«Вучах», № 26.*
*1993 ç. çĕртме, 30.*

## *Юрăри Юра*

Чĕрĕлнĕ çĕре ытамласа ачашланăн, уçăлса пыракан сывлăша имлентернĕн, ăш-чике çавăрттарса кĕрсе чуна çĕклентернĕн янăрать кĕвĕ. Ушкăна пĕрлешнĕ сĕрме купăс сасси çур кунĕн хăватне татах та вăйлатса Юрий Васильева тăван ялне вĕçтерсе каять.

Вăрнар енĕ, Вăрманкас. Çутçанталăк куç умĕнчех вăранать. Йăмра тăррине çурхи кĕвĕ кĕртнĕ кураксен шавĕ, пӳрт умĕнчи йăва çинче çунат çапса юрăпа ашкăнакан шăнкăрчсем, анкарти хыçĕнче «ĕçлеĕçле» тăрăлтатакан тăрисем, хуткупăса пулăшакан чуччу хăйăклатăвĕ, каччăсемпе хĕрсен кулли-юрри, хĕл куççульне кула-кула юхтаракан Кĕçĕн Çавал кĕрлевĕ куç умĕнче йăлкăшса, хăлхара пĕр çемме пĕрлешсе чĕрĕ вăй кĕртет. Çутçанталăк вăранăвĕнче вăл хăйĕн аллăмĕш çуркуннине кĕтсе илет. Çав ятпа хăйне хисеплесе парнеленĕ çĕкленӳллĕ кĕвве чĕрипе туйса пĕр хумханать, пĕр савăнать. Георгий Степановĕ те, менелник тăваканăн кăмăл тӳпине çитересшĕн тенĕнех, оркестрне хавхалантарса, ăна филармонин тулли залне пăхăнтарса чуптарать те чуптарать Чăваш çĕршывĕ тăрăх хитре кĕвве. Халăх туйăмĕ — кĕввийĕ çĕнĕлле янăраса мĕнле илтĕннине пьеса авторĕ Александр Васильев хăйне майлă сăнать. Чăваш композиторĕсен ертӳçин парнене йышăнакан мусăкçă умĕнче те, халăх умĕнче те, профессионалсем умĕнче те намăс курас килмест-çке. Ячĕшĕн мар, чи çӳлĕ шайра пулмалла музыка хайлавĕн. Çитменнине тата вăл Юрий Васильева менелникĕпе кăна мар, Чăваш патшалăх академи ансамбльне ертсе пыма пуланăранпа çирĕм çул çитнĕ ятпа халаллать-çке çĕнĕ ĕçне. Курать: итлекенсем кăмăллă, шухăшлавлă, Юрий Васильевичăн питкуçĕнче — çуркунне.

Парне кĕввипе киленсе Юрий Васильев куç умне такăрланса тухса тăнă пурнăç çулĕпе утать. Çулĕ ашшĕ-амăшĕ ырă сунса кăларса янăскерех, купăс çеммиллĕ, пĕлӳ вĕçевĕллĕ çул. Музыка тени унăн хăлхине ашшĕ ăста калакан купăс хĕлĕхĕнчен кĕнĕ. Ӳсерехпе илемлĕ кĕвве шкулта вĕрентекенсенчен тăнлама пуçланă. Хăлха туйăмĕ пурин те пĕрешкел мар çав, илемлĕ те илĕртӳллĕ янрава кашниех вырăнлă тăнлаймасть, ăша мĕн кĕнине, хăйĕн чун-чĕри кĕввине ыттисене савăнтармалла, хумхантармалла шăрантарса кăлараймасть. Пинте пĕрре тенĕ пек çуралать имĕш кĕвĕ ăсти е юрăç. Юра та юрăра çуралнă-мĕн. Ашшĕн кĕввипе, акăшĕн юррипе, вĕрентекенсен ăсĕпе ача тăваттăмĕш класрах ертӳçĕ вырăнне siксе тухать. Тантăшĕсене вăл хĕмлентерсех юрлаттарать-ташлаттарать. Шкул хорне шанса пама та шикленмеççĕ унран. Акă, районти пĕрремĕш çитĕнӳ. Вăрманкас шкулĕ — малта!

Малалла, малалла, малаллах утать мал ĕмĕтлĕ ача. Вăрманкасран Çĕрпӳ хулине çитет. Культурăпа çутĕç училищинче питĕ лайăх паллăсемпе вĕренет, хорпа ĕçлеме, дирижер пулма хăнăхать. Вĕрентекенсем сĕннипе ун хыççăнах Питĕре каять, культура институтĕнче музыка, театр теорийĕпе ăсталăхне тарăнраххăн пуçа хывать. Хусан консерваторийĕ унăн куçне чалтăрах уçать. Чăваш каччишĕн халĕ ĕнтĕ музыкăсăр пурнăç çук.

Юрăпа ташă ансамбльне алла илнĕ çирĕм çул çирĕм хут куç хупнă пекех вĕлтлетсе иртсе каять çапла. Акă ăна çав ятпа саламлаççĕ. Акă вăл хăйĕн менелник касне ирттерет.

«Эсир ялта шăнкăрч, шăпчăк сассипе киленсе ӳснĕ, чăваш юрăçисен ертӳçи пултăр, малашне те халăхшăн тăрăшса ĕçлĕр, таса, çутă пурнăçпа пурăнăр, хамăр ята ан ярăр», — ыталаççĕ вăрнарсем.

«Санăн пултарулăх кăнтăрĕ тин çитрĕ-ха, вăл тата вăйлăрах çиçтĕр», — çыравçăсенчен ырă сăмах парнелет чăваш писателĕсен ячĕпе Хветĕр Агивер.

«Чăвашăн мусăкçă нумай, чăннипе кашни чăваш мусăкçă, вĕсене ертсе пыраканĕ вара — сахал. Вĕсенчен пĕри вăл, чи пултарулли-сенчен пултарулли, — Юрий Васильев. Çак сехет пурнăç таппине çеç кăтартать, сирĕн пек художник пурнăçа сăнлать-сăнарлать, тĕнче илемĕ сирте. Ăсталăхна туптасах тăрăр», — тет ыр кăмăлтан СССР халăх артисчĕ Валерий Яковлев.

«Эс чăваш асĕнче юлмашкăн тивĕç ĕмĕре», — сăвăласа хĕвеллĕн йăлкăшать Светлана Асамат юрăç.

«Туятăр-и, туссемĕр-тăвансемĕр,
Хĕвел пек, уйăх пек çавран-çавран,
Çурхи шевле çĕн туйăм кӳнĕ евĕр
Чăваш юрри çӳрет тĕнче тавра?»

Юрий Сементер сăвăç-юрăç сассине илтнипе Юрий Васильевич кăрт сиксе илет, тутине чăмăртаса лартать, куçĕсене хупа-хупа аса илет.

Чăваш ансамблĕ, вăл ертсе пыракан пысăк ушкăн, чăваш ятне Мускавра çĕнĕрен çӳле çĕклерĕ. Раççейри юрăпа ташă ансамблĕсем хушшинче Пĕрремĕш смотр-конкурсра пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Тинех çул уçăлчĕ. Союза тухма та, чикĕ урлă каçма та. Сакăрвуннăмĕш султа Чехословакири фестивальте тĕнче экзаменне тытрĕç. Ун хыççăн венгрсем, нимĕçсем, поляксем, бельгиецсем, французсем, арабсем, итальянецсем хаваспа паллашаççĕ советсен пĕчĕк патшалăхĕн пултарулăхĕпе. Ташшисене пултаруллă балетмейстер Александр Ангаров лартать. Пĕр вăхăтрах ансамбльте ĕçлеме пуçланăскерсем вĕсем чăваш юррипе ташшине чăннипе чăвашла хĕмлентермешкĕн алла-аллăн тытăнса, туслăн асапланаççĕ. Çирĕм çул!

Çав çирĕм çулăн пуçламăшĕ вара... Каллех Юрий Сементер саламĕн сăмахĕсем аса килеççĕ:

«Садсем саркайăк юррипе мухтавлă,
Чăваш мухтавлă хăйĕн кĕввипе.
Воробьевпа Максимов, Хветĕр Павлов
Çуллен килеççĕ çĕнĕ çемĕпе.

Лукинпала Хирбю ятне-и манăн,
Е манăн Герман Лебедев ятне?
Умра каш-кашлакан туйра-юманăн
Куратпăр Орлов-Шуçăм çунатне...»

Юрий Васильевич мĕн çинчен шухăшларĕ-ши çав самантра, хăй хатĕрленĕ концерчĕн ăнăçлăхĕ, саламлакансен тараватлăхĕ, куракан-итлекен шухăш-кăмăлĕ е тăванĕсем çинчен, пĕлеймерĕм, анчах эпĕ тӳрех виçĕ çул каяллахи çуркуннене аса илтĕм.

Хальхи пекех ака уйăхĕччĕ. Ĕрчев таппипе çунатланнă вĕçенкайăк уйсемпе вăрмансене çут тĕнче кĕввипе янраттарать. Ăшăнса пиçсе пыракан çĕр хăй ытамне çĕнĕ вăрлăх варăнтарма пуçланă. Мĕнпур чĕрĕлĕх хутлă сĕткенпе канленет. Çав туйăм ытамĕнче хавхаланса чăваш илемĕн тĕнчинче чăваш искусствин паллă кунĕ пулчĕ. Чăваш хĕвелĕн хĕлхемне Герман Лебедев композиторăн менелник каçĕнче Юрий Васильев искусство лаççинчи пекех таврана хĕрӳллĕн сапрĕ. Мĕншĕнни паллă.

Пурнăç илемне, этем хăватне кĕвве хывса, çав кĕвĕпе ыттисен чунне вăратма, чĕрине вутлантарма, çав хушăрах çыннăн ачаш туйăмне хитрен, çемçен сăпайлантарса чăвашла юрлаттарма пултарни шăпах ĕнтĕ Герман Степановича çӳлĕ шая çĕкленĕ. Вăл чăваш халăхĕн

сăнарне ĕçре, канура, йăла-йĕркере чăн-чăн пурнăç çемминче кăтартса панă.

Акă, анлă сцена çине чăваш юрăçисемпе ташăçисем ял улăхне юхса тухнă пек капăрланса тухаççĕ те... савăк çĕр уявне пурне те тыткăнуллăн туртса кĕртеççĕ. Юрий Васильев ертсе пынипе патшалăх ансамблĕ тасан та янăравлăн, уççăн та савăнăçлăн шăратать мирлĕ пурнăç юррине; ташăçисем пĕрре хĕмленӳллĕн, тепре йăкăшйăкăшшăн ăшалаççĕ ташшине.

Чăваш тĕррисем хушшинчен вĕсем çине Праски Витти пир çинче чĕртнĕ Герман Лебедев чăваш сăнĕпе, чăваш кăмăлĕпе уççăн та ăшшăн, тиркевлĕн сăнаса пăхать. Вăтăр çул хушши хăй аллинче ӳссе аталаннă пултарулăх эртелĕ — ансамбль — мĕнле çитĕнӳ шайне çитнине профессиллĕ хак парать. Юрий Васильевич та, аслă композитор тата коллективăн хăй умĕнхи ертӳçин кусĕ умĕнче намăс курас мар тенĕнех, ăна хирĕç пăхса тарла-тарла ĕçлет, эртеле пит хитре юрлаттарать, пĕрле хăй те юрлать. Вĕрентекенĕ умĕнче вăл пысăк экзамен тытнăнах туйăнчĕ ансамблĕн икĕ хуçи хушшинчи куç вăййине сăнанă май.

Аслă вĕрентекенĕн куçĕ умĕнче намăс курмалла мар пек-ха Юрий Васильевичăн, çавăнпах вăл, хумханать пулин те, хăйне-хăй яланхиллех çирĕппĕн, хăюллăн тытать.

Ку концерта, хальхинчи пекех, вĕсем пушшех тăрăшса хатĕрленчĕç. Репетицийĕ те (яланхилле!) савăнăçлă каç пулас умĕн кăна вĕçленчĕ. Шутласассăн, программăри çав юрăсемпе ташăсенех кăлармалла пек сцена çине. Çук çав, Юрий Васильевичăн кашни концертне çĕнĕлле, çĕнĕ хавхаланупа, çĕнĕ вăй-хăватпа кăтартас килет искусствăна юратакансене. Искусствăри улшăнса тăракан çĕнĕлĕх илемĕ çавăнта пулмалла та ĕнтĕ. Ăна ансамбль ертӳçи хăй кăна мар, коллективăн кашни членĕ, сахалăн мар вĕсем, чунпа та, юнпа та туйса вĕриленсе тăтăр тесе çине тăрать, хăйĕн хĕрӳлĕхĕпе кашнине вутçулăмлантарса тăма тăрăшать дирижер-концертмейстер. Çавăнпа кашни номерĕ асра юлать, кашни солисчĕ хăйнеевĕр уйрăмлăхпа палăрать.

Чăваш халăхĕн маттур йĕкĕчĕсемпе илемлĕ пикийĕсем юрăпа ташă картинче авалхи тум илемĕпе капăрланса шăнкăртатса юхакан çăлкуç шывĕ пек, ăмăртса чупакан тиха ушкăнĕн тапăртатăвĕ пек чунуççиллĕ сасăпа анлă зала татах та анлăлатнăн туйăнать. Ушкăн юрри-ташши туршăн та тĕнчери чи чапа тухнă пултарулăх коллективĕсемпе тан е вĕсенчен вăйлăрах та пуль. Герман Лебедевăн хăвачĕ — вăйă картине тĕлĕнмелле вăйлă, илемлĕ йĕркелеме пĕлнинче. Юрий Васильев вара çав картана çĕнетсе, капăрлатса пырать. Чăваш хорĕн шайне, хор искусствине академи шайне çитерме пултарчĕ. Унта — халăх йăли-йĕрки, чун хавалĕ, кулăшĕ, çĕкленĕвĕ. Унта — чăнлăх илемĕ. Унта — чăваш тĕнчи.

Юрий Васильев ансамблĕ мĕнпур эртелĕпе çăварни вăййи чăнчăнла кăтартрĕ те... артистсемпе пĕрле куракансем ура çине тăрса хаваслăн юрласа ячĕç:

Çурхи тĕнче вăраннă чух...

Эпир кăна мар, пĕтĕм Чăваш çĕршывĕ юрланăн туйăнчĕ çак хавас та хавхалануллă самантра. Çапла пĕтĕм чăваша пĕр харăс юрлаттарма пултарать ăста дирижер Юрий Васильев. Ансамбльте вăл Лебедев юррисене репертуарта тытса тăма, вĕсене халăх патне, тĕнчене анлăн çитерме, units ертÿçĕн çирĕп йĕркине, ăсталăх культурине тивĕçлипе тытса пырассине мала хурать, чăваш композиторĕсемпе, сăвăçĕсемпе тăрăшса ĕçлет, вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерсе çĕнĕрен çĕнĕ произведение сцена çинче чун кĕртет. Юлашки пилĕк çул хушшинче кăна виççĕре яхăн çĕнĕ юрă янăратнă ансамбль. Акă менелник каçне те «Пурнăç юрри» хĕвел пекех ялкăштарса ячĕ. Çĕкленÿллĕ, мăнаçлă янăрарĕ Федор Васильевăн çĕнĕ хайлавĕ. Сăмаххисене Юрий Сементер сăнарлă, яка çырнă.

Чăваш халăх артисчĕ Виталий Гордеев та нихçанхинчен хавас юрларĕ, Юрий Васильева пуç тайса: «Çакăн пек талантлă çынсем искусствăна çĕклеççĕ, уншăн юрлас килет», — терĕ.

Гордеев пек чунтан юрлас килнĕ пысăк та ырă туйăмпах Любовь Владимирова, Клара Чекушкина, Ирина Резникова, Валентина Корыстина тата ытти юрăçсем те юрату парнелерĕç Вăрнар йĕкĕтне. Чăваш академи драма театрĕн артисчĕсемпе наци музейĕн евчисем авлантарса та пăхрĕç чиперкке Юрăна, анчах... шÿт хыççăн та юрăри Юра юрăпах юлчĕ-ха, уншăн пурнăç мăшăрĕ — Муза. Вăл пĕтĕм чунне, хăватне искусствăна панă. Унпа пурăнать, унпа савăнать. Уншăн вилме те хатĕр. Вăл уншăн — чунхаваллăх вĕçевĕ.

Çутçанталăк этеме хăватлă туртăм вăйĕ парнеленĕ. Çав вăй ăна хырăм тăрантармалли, ĕмĕре пурăнса ирттермелли пуян çĕр çумне пăталать. Этем хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕпе, çутçанталăк пуянлăхĕпе савăнать. Шухăш-туйăмĕпе ăнтăлса курăнми пусма тăрăх тĕнче анлăшне хăпарать. Чунхаваллăх вĕçевĕн хăвачĕ кашни çыннăн хăйеверлĕ, хăйилĕртÿллĕ. Юрий Васильевăн концерчĕсенче пулнă чухне эпĕ ăна чăннипех çĕнĕлле ăша хыватăп. Юлашки вăхăтри сакăр концерт программисем уйрăмах асра.

Ахальтен чунне ачашламарĕç пуль унăнне Сергей Рахманиновăн «Çурхи кунĕсем». Чăваш академи капелли паллă дирижер ячĕпе ырăссен аслă композиторĕн вилĕмсĕр хайлавне çÿлĕ шайра янăратрĕ. Унăн ертÿçи Морис Яклашкин ăна мухтамасăрах çапла каларĕ: «Чăваш юррипе тĕнчене чăннипех тĕлĕнтернĕ халăха Турă панă çын».

Нумай çĕршывра пулса нумай тус тупнă Юрий Васильев. Вĕсенчен пĕри — нимĕç çынни. Германири Хокенхайм хулинчен килнĕ хăна ăна ют чĕлхепе тăванла саламларĕ.



*Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн тĕп дирижерĕ тата илемлĕх ертӳçи Юрий Васильев (сулахайри), тĕп балетмейстерĕ Александр Ангаров, хормейстерĕ Герман Егоров. 1976 ç.*

Ӳркенмен ăста пулнă тесе ăслă çынах каланă çав. Пурнăçра вăл яланах чăнлăха куçать. Юрий Васильев та хăйне Турă мĕн панипе усă курма, унпа чăваш халăхне усă кăтартма тĕллев тытнă. Вăрманкасра, Çĕрпӳре, Питĕрте, Хусанта, Шупашкарта çăмăл пулнă-ши ăна вĕренсе ăс пухма, искусство тĕнчине уçса кĕме? Паллах, çав тери йывăр пулнă. Вуланă, тĕпченĕ, вĕрентекенĕн ăсне-сĕнĕвне пуçа хывнă. Вăрманкас шкулĕнчи, Çĕрпӳ училищинчи мухтавлă учительсене, культура институчĕпе консерватори профессорĕсене халĕ чĕререн тав тăвать. Хор искусствин паллă ĕçченĕ С. А. Казачков Хусанта дирижер маçтăрлăхне вĕрентессипе чап илнĕ. Çав шкул Юрий Васильевичшăн професси шкулĕ пулса тăнă. Опера театрĕн хальхи хормейстерĕ И. А. Рахимуллин чăваш ачине Казачков шкулĕнче тутарла майлах тарлаттарнă. Вĕренӳ тарĕн шăршине паянхи кун та çивĕччĕн туйса хăй те мунчари пекех тарлаттарать ансамбль артисчĕсене. Ларма-тăма, канма пĕлмен ĕçчен хăть те мĕнле концерт умĕн те пĕр шайра — сцена шайĕнче — репетици ирттерет. Сцена шайĕ унăн — чăн-чăн професси, чăн-чăн илем тӳпи шайĕ. Хор, театр искусствин

аталанăвĕ кăна мар, литература, сăнарлă искусство, политика ыйтă-вĕсем те канăç памаççĕ ăна.

Тĕнче искусствинчен юлмалла мар, тĕнче искусствине хамăрăн вăйлатмалла тесе калаçаççĕ, тавлашаççĕ, çĕнĕрен-çĕнĕ шухăш-туйăм çуратаççĕ Праски Виттипе иккĕшĕ, тĕл пулсан. Ентешĕ, паллă художник Виталий Петрович Петров ăна самаях пулăшрĕ, костюм эскизĕсем хатĕрлесе пачĕ. Çав эскизсене тĕпе хурса çĕленĕ чăваш тумĕ артистсене çеç мар, пĕтĕм концерт программине урăхларах уçăм, чăн чăвашларах тĕс кĕртет. Художникăн чăваш халăх пурнăçне сăнарланă картинисем илемлĕх ертӳçине ансамблĕн кĕвĕлĕх килĕшӳлĕхне вăйлатма пулăшаççĕ. Художникпа мусăкçă çыхăнăвĕ çирĕпленни чăваш юрри-ташшине çĕнетсе пырать.

Ытлашши шăв-шава, мухтав чанĕн сассине килĕштерсе каймасть Юрий Васильевич. Искусство е литература ыйтăвĕ калаçăва кĕрсе кайсан вара унран уйрăлма пĕлмест. Академи шайне хăпарнă хорсем Чăвашăн темиçе пулнишĕн хĕпĕртет. Уншăн пирĕн пурин те мухтанмалла, тет. Çав вăхăтрах оркестр дирижерĕсем сахал вĕрентсе хатĕрленĕшĕн, чăвашсен талантлă хăш-пĕр артисчĕсем мухтав чирĕпе чирлесе мăнкăмăлланнишĕн, хăйсене вăхăтра чараймасăр «çунса» кайнишĕн пăшăрханать. Яклашкина, Федорова, Важорова, Мегрелишвилине ăста дирижерсем вырăнне хурса хаклать.

Дирижер ĕçĕ çăмăл мар. Артисчĕсем хăйсемех мĕне тăраççĕ, кашни хăйшĕн гени, кашнин — уйрăм кăмăл-туйăм. Вĕсене пĕр çĕре, пĕр чăмăра пĕрлештермелле. Музыка произведенин партитурине пуринчен тĕплĕ пĕлмелле. Инструментпа юрлаканăн сасă янравлăхне композитор кĕввинче уçăмлăн аталантарса пĕрешкел илемлĕхе куçармалла. Янравлăх килĕшӳллĕ пултăр. Çавăнпа композиторпа та, инструмент калаканпа та, юрлаканпа та уйрăммăн, ушкăнăн, пĕрле ĕçлеме тивет. Тарăн пĕлӳсĕр, професси маçтăрлăхĕсĕр, чăтăмлăхсăр, çирĕп сывлăхсăр янраттарма йывăр музыкăна, юрра. Искусствăна, ĕçе чĕрепе парăннă маэстро çеç çĕнтерӳ тума пултарать дирижер патаккине алла тытсан.

Юрий Васильев искусство тӳпине васкамасăр, ăслайлăн, вĕрентекенĕн хăвачĕпе уса курса çĕнтерӳллĕ утăмпах хăпарать-ха. Пĕрле ĕçлекенсен пулăшăвĕ те вăй парать вĕççĕр пултарулăхра.

Автобусран аннă йăлттам арçын, кутамккине çурăм хыçне çакса, Кӳлхĕрри урамĕпе вашлаттарать. Уничерен тухсан урапа çулĕ пуçланать. Юрла-юрла утать, икĕ аллипе те выляткаласа тăрисен сассине кĕвĕ çеммине куçарать. Çутçанталăкпа этем юрри илемленсе, янăравланса каять. Чун çĕкленет. Хăват ӳсет.

Ачаран утнă çак çулпа: Вăрманкасран — Нурăса. Нурăсран (халĕ Кўлхĕрринчен) — Вăрманкаса. Яланах юрăпа — юратнă юрăпа. Çак çул Юра Васильевщăн яланах илемлĕ. Çак çул уншăн пурнăç çулĕ — юрă çулĕ пулса тăнă.

Юрăри Юра амăшĕ патневаскать.

*«Ялав», 1996 çул, 3 №.*

## *Чăваш халăх артисчĕ Михаил Михайлович Михайлов*



Юрă-ташă çемми калама пуçланă чухне вăл купăсран-баянран кăштах çўлерех пулнă. Ўссе пынă май ăсталăхĕ те, пĕлĕвĕ те ўснĕ. Чăвашрадио хорĕнче Михайлов музыка шкулĕн экзаменне чи пысăк паллăпа тытрĕ, ăста хормейстер пулса тăчĕ, халăх артисчĕ ятне илчĕ.

Михаил Михайлович пултаруллă баянист çеç мар — паллă композитор та. Унăн çепĕç те лирикăллă юррисене хăçантанпа ĕнтĕ питĕ кăмăлласа юрлаççĕ чăвашсем.

Юлташĕсем ăна шўтлесе Михмих теççĕ. Уншăн вăл кўренмест, хĕвеллĕн йăл кулать те, васкамасăр пурнăç еккипе кăмăллăн калаçса каять.

Çавăн пек маттур вăл пирĕн Шуркасси шăпчăкĕ, Чăваш академи капеллин хормейстерĕ, шухă чунлă Михмих.

Чăвашрадио хорĕ хăйĕн янравлăхĕпе çĕршыври, тĕнчери халăхсене тĕлĕнтерсе тыткăнланăччĕ. Мускавран килсе чăваш халăх юррисене студире грампластинка кăларма çырса илетчĕç. Юррисене хор пысăк ăсталăхпа янраттаратчĕ. Умĕнче яланах баянпа Михайлов тăнă е ларнă, артистсен сассине кĕвĕпе пуянлатса илемлетнĕ. Çитмĕлмĕш çулсенче, унта ĕçленĕ май, çавна курса, ăна итлесе, чуна кантараттăм. Унпа пĕрле сисмесĕрех юрласа яраттăм, ăшра хаваслă кĕвĕ кĕрлетчĕ.

Студире тарласа ывăннă хыççăн Михмих иккĕмĕш хута, пирĕн пропаганда редакцине чунне кантарма хăпаратчĕ. Васкамасăр, уççăн калаçса лараттăмăр. Вăл юлашки вăхăтра чăваш кĕввине пăсса çухатса пыракан пуçтах мусăкçăсене, сасăсăр юрăçсене, вĕсенчен «çăлтăрсем» туса яракансене тарăхса вăрçатчĕ, чăваш музыки ют патшалăх шоушавĕнче çухалса пăчланасран шикленетчĕ. Хăй çав хушăрах пире çĕнĕ юррисемпе паллаштаратчĕ.

Кăмăллăх хумĕ çапатчĕ унран. Район пуçлăхĕсем чĕннипе янташлăх ушкăнĕпе Вăрнара темиçе хутчен те кайса килтĕмĕр. Çав вăхăтра вăл хăйĕн ăсталăхне кăтартрĕ. Ентешлĕхĕн Шупашкарта пулакан çулленхи уявĕсене сиктерместчĕ. Вĕсенчен пĕрринче вăл çапла каларĕ: «Йывăр операци хыççăн вăй пĕте пуçларĕ, ăш-чикре, чунра музыка çеç чĕррипех юлчĕ пулас». Малашлăхне туйнă иккен Михмих, ун хыççăн нумаях пурăнаймарĕ.

Музыки вара паян кун та кĕрлет. Малашне те янăрĕ. Чăваша юрлаттарĕ ĕмĕр-ĕмĕрех.

*«Тăван Атăл», 2002, 9 №.*

# ШĂРАНСА ТУХНĂ СĂНАРСЕМ

## *Çĕмрен çулĕ*

Шупашкартан е урăх çĕртен Вăрнара çитсен, редакцие кĕрсе тухманни ман сахал пулнă. Салтакран таврăнсан унта хам ĕçленĕ вырăн та мар, хаçат редакторĕ Миша Васильев кăмăла ытларах туртатчĕ манăнне. Пĕррехинче ăшшăн калаçса ларатпăр. Алăка шаккани, çав самантрах «Кĕме юрать-и?» тесе çемçен ыйтни илтĕнчĕ. Пӳлĕме вăтам пӳллĕ, сарăрах арçын кĕрсе тăчĕ, хул хушшине хулăн тĕрке хĕстернĕ. Хăна йăлл кулса янипе пӳлĕме хĕвел çутатса янăнах туйăнчĕ.

Михаил Алексеевич пукан çинчен тăрса ăна ыталаса илчĕ, манпа юнашар лартрĕ, паллаштарчĕ. Мишăн ентешĕ-тусĕ Виталий Петрович Петров, урăхла каласан, Праски Витти текенскер пулчĕ ку вашават чăваш. Ку таранччен хамăр тавраштра вăл художник çинчен шавласах кайманччĕ те, эпĕ те ăна пуçласа куртăм, унăн тыткăнуллă калаçăвне хумханса хутшăнтăм.

Пĕр черкке эрех ĕçсе панă хыççăн Петров, тĕркине салтса, урайне темĕн тĕрлĕ картинăсемпе хупласа хучĕ, çав хушăрах пире вĕсем çинчен ăнлантарма пуçларĕ.

Акă мĕнле пысăк талант вĕçсе çӳрет иккен пирĕн анлă çĕршыв-ра! Хамăр Чăвашьенне чапа кăлармалли чаплă ӳнерçĕ Тăван çĕрне ыталасшăн, тăван çăлкуç шывне ĕçсе хастарланасшăн!

Ӳнер искусстви пирки виççĕмĕр виçĕ сехет калаçса-тавлашса ларнă май, çапла шухăшларăм эпĕ.

Праски Виттипе манăн чылай вăхăтран тин Шупашкарта тĕл пулма тӳр килчĕ. Эпĕ те Чăвашсен обществăпа культура центрне ĕçлеме куçнăччĕ. Мĕнпур чăвашсем валли эрнере вун ултă страницăллă «Вучах» хаçат кăларатпăр. ЧОКЦ тетчĕç çак организацине вырăсла. Чувашский общественно-культурный центр ĕнтĕ. Ертӳçи, чăвашсен Раççейре кăна мар, Совет Союзĕпех ят илнĕ çыравçă, обществăпа политика деятелĕ Михаил Николаевич Ильин-Юхма, республикăри, чăвашсем йышлă пурăнакан ытти çĕрти ăсчахсене, наци культуришĕн, халăх малашлăхĕшĕн чунне пама хатĕр хĕрӳ çынсене хăй тавра пухма мехел çитерне. Вĕсем хушшинче Праски Витти те питĕ курăмлăн явăнса çӳрет. «Вучахăн» пĕрремĕш номерне хатĕрленĕ кунсенче эпĕ ăна шăпах майлă самантра ярса илтĕм, уçă калаçăва чĕнтĕм.

Кам-ха вăл, çакă хăйĕн хĕрӳлĕхне ниçта хурса пĕтереймен, çĕрĕн-кунĕн ăсталăх шухăшĕпе анракан, ырă кăмăл-туйăмне такама та пама хатĕр чăваш?

*Виталий Петрович Петров — Праски Витти: Тăван çĕршывĕ — Вăрнар районĕнчи Малти Ишек ялĕ. 1936 çулхи авăн уйăхĕнче çуралнă.*

*Шупашкарти художество училищинче вĕреннĕ. Çарта пулнă. Питĕрте В. И. Мухина ячĕпе хисепленекен художествăпа промышленность училищин монументлă декораци живопиçĕн уйрăмне пĕтернĕ. 1971 çултанпа СССР художникĕсен союзĕн членĕ.*

*1983 çулта ăна «РСФСР тава тивĕçлĕ художникĕ» хисеплĕ ят панă. Пермь, Тольятти, Сызрань, Питĕр хулисенче, ют патшалăхсенче илемлĕх ĕçĕпе ĕçленĕ. Пултарулăх ĕçĕсем нумай çĕршывра упранаççĕ.*

*СССР художникĕсен Союзĕн правлени членĕ пулнă.*

*Чăваш художникĕсене ертсе пынă.*

*Çĕршыври, зонăсенчи, ют патшалăхсенчи нумай выставкăсене хутшăннă.*

*«Гран-при» премине çĕнсе илнĕ.*

*Чăваш патшалăхĕн П. Е. Егоров ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ.*

Мĕншĕн çунать-ха вăл? Мĕн тĕллевпе пурăнать? Ун пирки вăл акă мĕн пĕлтарчĕ:

ПРАСКИ ВИТТИ: Тăван халăха тĕнче картне лартас килет.

КОРР.: Ăна пурнăçламашкăн, паллах, пайтах вăй, ăсталăх, чăтăмлăх, сывлăх кирлĕ. Уншăн нумай тертленмелле пулчĕ пуль?

П. В.: Çаруран чупса, çăпата сырса ўсрĕмĕр. Вăрçă пуçлансанах аттесĕр тăрса юлнăскершĕн, маншăн, Малти Ишекри Перасковья Ананьевна Ананьева — хамăр ялти Лявук Анани хĕрĕ, Праски инке — тăван анне кăна мар, тăван атте вырăнĕнче те пулнă. Пĕтĕм хуйхисуйхине иксĕмĕр чăтса ирттертĕмĕр. Анне маншăн пурăнчĕ. Тертлĕхре парăнмасăр чăтулăха хакласа чун-чĕре илемлĕхне çухатман ял хĕрарăмĕн сăнарĕ мана пĕртте канăç памастчĕ. Манăн çав сăнара анне сăнарĕ çеç мар, пĕтĕм чăваш хĕрарăмĕн сăнарĕ тăвас килетчĕ. Шупашкарти ўнер училищине вĕренме кĕнĕ аллă тăваттăмĕш çултах ăсра çырма пуçланăччĕ ăна. Нумай вăхăт хушши тертлене-тертлене вĕри эмальпе усă курса, ăсталарăм-ăсталарăмах. Шăранса тухрĕ пек туйĕнчĕ çуратнă аннемĕн — чăваш хĕрарăмĕн — сăнарĕ çут тĕнчене.

КОРР.: Мĕнле хак пачĕç вăл портрет-картинăна Чăвашра?

П. В.: Эпĕ хамăн çуралнă çĕршыва чикĕ леш енчен таврăнса мар, хамăран анлă çĕршывранах пурăнма куçрăм, совет искусствинче ятăм та палăрнăччĕ, хисепĕ те пурччĕ. Çапах та мана шупашкарсем питĕ асăрханулла, кĕвĕçўллĕрех йышăнчĕç, манăн пултарулăх пуянлăхне хăй хакĕпе хаклама васкамарĕç. Вăрттăн çыртма çăвар карнисем те, шăл хăйракансем те курăнкаларĕç. Эпĕ вара, ним пулман пекех, Чăваш ўнерĕн тинĕсне «Нарспи» карапа ишсе кĕтĕм. Ялавĕ çинче Анне сăнарĕ — Чăваш Пикин сăнарĕ йăлкăшатчĕ. Хура чунлă çынсем, кури куçа курми туса, ăна ўнер тĕтринче

çухатасшăнччĕ, картин ăна халăх куçĕ умĕнче çуталма памарĕç. Çавăнпа эпĕ ăна хам çумра ытларах тытма тăрăшрăм. Кирлех мар пек туйăнчĕ манăн Анне портречĕ Шупашкарти музейсемпе выставкăсенче. Вара эпĕ...

КОРР.: Мĕн, сутса ятăр-и е аннӳ пӳртне кайса çакрăр-и?

П. В.: Ытла йывăр ыйту ку. Нумай шухăшланă эпĕ ун пирки те, кун пирки те, çапах хама хам тытса чараймарăм.

Ют патшалăхра хамăн ĕçсене кăтартнă вăхăтра куракансем ун умĕнче вăрах тытăнса тăнине уççăн та, вăрттăн та сăнаттăм, ют чĕлхепе ун çинчен хĕрсе калаçнине тăнласа итлеттĕм. Ыйтсан — каласа параттăм юратнă аннен, чăваш хĕрарăмĕн йывăр пурнăçĕ, савăнăçĕ, чун-чĕре пуянлăхĕ, пысăк ĕмĕчĕ çинчен. Испанири Барселонăра картинăна туянас текенсем тупăнсан, тарăн шухăша путрăм. Тĕнчери пĕртен-пĕр çывăх, хама пурнăç сĕткенĕ парса çын тунă нимпе хаклама çук аннене сутса яратăп-ши вара? Çăмăл пулмарĕ чунтан çуралнă тăван сăнара ют çĕре хăварма. Çапах та — килĕшрĕм. Мĕншĕн? Курччĕр, туйччĕр, ăнланччĕр, шухăшлаччĕр терĕм юлашкинчен вара фашизм пĕччен тăратса хăварнă, анчах чура пулман, мăшкăл тӳсмен, пуçа усмасăр пурнăçра çĕнтернĕ Аслă Раççей хĕрарăмĕ хăйĕн илемлĕх тĕсĕпе Анăçа хĕвеллĕн — Чăваш хĕвеллĕн йăлкăштарнине.

Каялла пăха-пăха уйрăлтăм аннерен. Малалла пуйăсран ăмăртса чупрăм чун туртăмĕпе анне патне. Тӳрех тăван Вăрнарьенне васкарăм, хаклă аннен ытамне кĕрсе ӳкрĕм.

КОРР.: Аннӳ пĕлчĕ-и ун çинчен? Хăйĕн сăнарне картинăра курнă-и вăл?

П. В.: Килти çĕр ĕçĕсене туса пĕтернĕ хыççăн анне пирĕн пата хĕл каçмаллăхах килет. Манăн мастерской хамăр çуртрах, подьездрах. Вăл эп мĕнле ĕçленине пăхса ларма юрататть. Çавăнта курчĕ хăйĕн портретне. Картинăна хваттере те анса çакнăччĕ. Çывăх юлташсем сĕннипе пурпĕрех «Аннене» вăрăм çулçӳреве — Анлă тĕнчене илсе тухрăм. Сутса янă пирки... Ятламарĕ, сив сăмах каламарĕ, «Мана тĕнче çынни пăхса хаклать пулсан, апла нихçан та вилместĕп-ха, тĕнче пĕтичченех пурăнăп чăваш хĕрарăмĕн сăпайлăхĕпе капăрлăхне упраса», — терĕ çеç.

КОРР.: Хăвăр пуçра ăспа шăратса кăларнă илем татăкне сутма е такама пама шалккă пуль? Писателĕн, сăмахран, кĕнекисем нумай тиражпа пичетленеççĕ. Парнелесен е сутсан, унăн тата юлать. Эсир пĕртен-пĕр хаклă япалана аларан вĕçертетĕр.

П. В.: Çапла, кашни ӳкерчĕкпе сывпуллашни маншăн анне сăнарĕпе вăхăтлăха сывпуллашнă пекех питĕ йывăр. Çапах та манăн хамăн чи вăйлă ĕçсене ют çĕрте кăтартас, тепĕр чухне музейсенче, уйрăм çынсен килĕсенче яланлăхах хăварас та килет. Мĕншĕн кăтартмалла мар-ха пирĕн тăван халăхăн аваллăхне, паянлăхне чикĕ леш енче?

Тухтăр-и чăваш ячĕ пур çĕре те ытларах. Хамăр халăха тĕнче культурипе пĕрлештернишĕн эпĕ савăнатăп çеç.

КОРР.: Хăвăрăн çак тĕллеве пурнăçламашкăн сирĕн хĕрӳлĕхе, талпăнулăха тата ӳстерме тивет вĕт. Ют патшалăха картинăсем илсе каясси, унта ĕçлесе пурăнасси çăмăл мар. Чылай çĕршывра пулма тӳр килчĕ пуль?

П. В.: Венгрире, Германире, Америкăра, Болгарире пулнă вăхăтра миçе наци çынни чăвашăн тĕлĕнмелле пуян культурипе, тĕнчери ватă халăхсенчен пĕрин илемлĕхĕпе паллашмарĕ пуль. Манăн хамăн та ют çĕршыв художникĕсемпе юнашар ĕçлеме тӳр килчĕ. Ху пĕччен ӳкерни мар унта. Тем тĕрлĕ пултаруллă талантпа ăмăртатăн. Унран вĕренетĕп. Вăл — санран чи лайăххине, унччен хăй тавçăрайманнине е курайманнине илет. Вăрлани мар ку, пĕрне-пĕри малалла утма, ĕçе çăмăллатма çеç пулăшать. Тĕнче курса çӳрени, матур ăстаçăсемпе туслашни, сывлăхлă çынсемпе пĕрле пулни пурнăçра нумай пулăшать.

КОРР.: Вĕсемпе танлашма, пĕр шайра ĕçлеме, вĕсенчен ӳксе юлас мар тесен, ай-яй мĕнле талант кирлĕ, а? Самаях шухăшлаттарать вĕт?

П. В.: Ман ĕçе аван тăвас килет. Ĕçе чăннипех арçын алли, ĕмĕрлĕх тунă тесе калаттарас килет. Художник ĕçĕ такама та савăнтартăр, хавхалантартăр. «Кун пек хам та сăрмаклама пултаратăп» тесе калама ан пултарччĕр. Ĕçе япăх тусан — намăс. Çавăнпа халăх умне кăларакан кашни япалашăн чун пăлханать. Çапах та ăна кăтартасах килет. Нимле художник те хăйĕн тертлĕ ĕçне тусан ăшне путарма е путвалта юрăхсăра кăларма тумасть. Халăх умĕнчи тивĕçе çеç манма юрамасть пирĕн. Эпир тăрăшса çутта кăларнă сăнартан куракан ыррине,усăллине илме пултартăр. Вăл ăна пăлхантартăр, шухăша ятăр, хăй патне чунпа турттăр. Çавăн чухне çеç пире тăван халăх та хамăрăн тăван сăнарçах тесе хаклама пултарĕ.

КОРР.: Хăвăрăн такăрламалли çулна тĕрĕс çулах тесе шутлатăрха апла. Унта такăнасси туйăнмасть.

П. В.: Хамăн ĕçсене ют патшалăх выставкисенче, кăçалхи анлă выставкăра темиçе хут та пăхса тухрăм, пĕччен мар — йышлă çынсемпе. Вĕсем пирки кам мĕн шухăшланине те, ырланине-хурланине те ăспа тăнларăм. Куракана мĕн ытларах кăмăла кайнине те, вăл хăшне ăнлансах каяйманнине те туйрăм. Картинăра эпĕ мĕн каласси-не ăçтан-ха пурте пĕлсе çитерччĕр? Çапах та çакна ĕнентĕм: эпĕ — тĕрĕс çул çинчех.

КОРР.: Эсир Чăвашеньрен уйрăлса ытти вырăнсенче нумай ĕçлесе пурăнтăр. Совет Союзĕ калăпăшĕнче хакланă ĕçӳсем сирĕн пĕри те чăвашлăхпа çыхăнман, совет искусствин штампĕпе тунăскерсем тесен те йăнăш пулас çук. Вĕсемпе тăрмашса-аппаланса вырăсланса кай-

марӑр-и? Чӑваш тӗнчи пӑлхантармасчӗ-и чун-чӗрӳне? Тӑван ҫӗр тинӗсӗн хумӗ пырса ҫапмасчӗ-и тӗлӗкре те пулин питна-куҫна?

П. В.: Ой, ан та асӑнтарӑр-ха йывӑрлӑх вӑхӑтне. Вӗри ҫатма ҫинчи пекех ӑшаланаттӑм эпӗ чӑвашлӑхшӑн. Анчах аслӑ шкулта вӗреннӗ чухне те пире искусствӑн пӗтӗмӗшле пӗлӗвне кӑна панӑ-ҫке. Наци искусствин уйрӑмлӑхӗсемпе пуҫа ҫӗмӗрттермен, ун ҫинчен мар, ытларах тӗнче, совет искусствин вӑрттӑнлӑхӗсене пуҫа хывса ӑсталама хӑнӑхтарнӑ. Направленипе ӗҫе ярсан та Компарти палӑртнӑ йӗртен, социализм чӑнлӑхӗн мелӗнчен, пӑрӑнма йывӑрччӗ. Тӑранма, тумланма укҫи те кирлӗччӗ тата. Кӑштах ура ҫине тӑрас-ха тесе тапаҫлантӑм. Вӑй илсенех вара ҫав мӑйкӑча татса пӑрахрӑм.

Мана ачаран чӑвашлӑх туйӑмӗ, чӑваш аваллӑхӗ, чӑваш тӗнӗ, йӑли-йӗрки, кӑмӑл-сипечӗ, ӑс-хакӑл шайӗ канӑҫ паман. Ҫавна пулах ӗнтӗ Константин Ивановӑн «Нарспине» ӳкерӳ сӑнарлӑхӗнче хамӑн пурнӑҫа куҫартӑм. Ӳкернӗ май ӳкерес килет ҫав вилӗмсӗр поэмӑн ҫӗнӗлле те ҫӗнӗлле юхса тухакан сӑнарӗсене. Унта эпӗ чӑвашӑн мӗнпур хӑватне, илемне, пуянлӑхне куратӑп, ытти ҫынсене те ҫав туйӑма парнелеме тӑрӑшатӑп. Маншӑн илемлӗх, пурнӑҫри йӗркелӗх, ҫирӗпленнӗ йӑла чи пахи. Халӑх чӗрӗлӗвӗ сӑнарлӑ курӑнтӑр.

КОРР.: Халӗ ӗнтӗ, чӑваш халӑхӗ куҫне хӑрамасӑр уҫса тӳррӗн пӑхма пуҫланӑ саманара, сирӗншӗн те ирӗклӗх чаршавӗ яриех уҫӑлчӗ. Шикленмесӗрех ӗҫле те ӗҫле. Чӑваша ҫӗкле.

П. В.: Тӑван халӑх ура ҫине тӑма вӑй-хал ҫитерчӗ. Чӑваш чунлӑ художниксен ҫавраҫилӗ ҫавӑрттарса анлӑ уҫлӑха — Чӑваш илемӗн уҫлӑхне вӑйлӑн тухрӗ. Хамӑрӑн пурнӑҫ, хамӑрӑн искусство ҫине чылайӑшӗ хамӑрла ҫаврӑнса пӑхма пуҫларӗ. Чӑваш ҫыннине тӗнче искусстви тата ытти халӑх искусстви кӑна мар, чи малтан тӑван халӑх искусстви кирлине чун-чӗрепе туйрӑмӑр. Вӗсемпе пӗрле кӑна тӗнчере хамӑр чӗлхепе калаҫма май пуррине те ӑнлантӑмӑр. Пирӗн, пӗрлӗхе ҫирӗплетсе, чӑваш искусствин теорине чӑмӑртамалла, чӑваш искусствин, культурин историне ҫырмалла. Чӑваш ӳкерӳ искусствине вӑйлатнӑ май, хамӑрӑн тӗссене, халӑх пурнӑҫне, ӗҫне, йӑли-йӗркине тӗпе хурасчӗ. Хамӑр халӑхӑн йӑли-йӗркине, чӑвашӑн ӗҫне-хӗлне чӑвашсене кӑна мар, ытти халӑхсене те анлӑн кӑтартасшӑн. Кӑҫал Германире нумай художникӑн ӗҫӗсене кӑтартрӑмӑр. Ку — питӗ аван пулчӗ. Чӑваш халӑхӗпе, унӑн культурипе Анӑҫра туллинрех паллашасси пулманччӗ-ха.

КОРР.: Тӑван ҫӗршыва таврӑниччен сирӗн монументлӑ ӗҫсен пысӑк планӗсем те пулнӑ-ҫке. Сире ытти хуласене те чӗннӗ. Мӗн палӑртнине пурнӑҫлаймасӑрах хӑвартӑр-и? Ӑсри ҫав сӑнарлӑх ҫухалмарӗ-и?

П. В.: Пурте асӑмрах, куҫ умӗнчех. Кай та, тыт та ту. Шантарнисем кӗтеҫҫӗ мана. Ман пата ҫыру та яраҫҫӗ, шӑнкӑравлаҫҫӗ те. Анчах...

Манăн чăвашах çÿле çĕклес, чăвашах тĕнчипе кăтартас килет. Ырă таван халăхăм, эпĕ сирĕн умра тăратăп, ман çурăм хыçĕнче — хамăн ку таранччен тунă ĕçсем. Йăлтах вĕсем — ăшра пиçсе тухнăскерсем. Ăсăм-тăнăм, кĕлеткем таван халăх туйăмне туйнишĕн эпĕ хĕпĕртетĕп. Çавăнпа та чăвашăн авалхи, хальхи пурнăçне аталануллă йĕр çинче ÿкерсе халăха халаллатăп. Хамăн халăхăн йăли-йĕркине, чĕлхине, историне сăнарласа сыхласа хăварассишăн эпĕ яланах кĕрешме хатĕр. Шухăшлавпа шырав ăмăртăвĕнче манщăн чи малта тăраканĕ вăл — чăваш çынни. Наци культури, халăх илемĕ нихçан та пĕтмелле мар. Çав вăхăтрах хамăр халăх çитĕнĕвне манăн тĕнче культурипе хутăштарса вăйлатса, пуянлатас килет, таван халăха тĕнче картине лартас килет.

КОРР.: Сирĕн çулу, Виталий Петрович, çĕмрен çулĕ. Чăваш халăхĕн пултарулăх пуянлăхне çав çулпа тĕнче цивилизацине хăюллăн илсе тухакан чăваш ÿнерçисенчен пĕри ĕнтĕ эсир. Хăвăрăн ырă ятна Чăвашра хăварма пултартăр. Унашкалли вăл историре сахал пулать. Ырă ята вилĕмсĕрлетесси кашниннех тухмасть. Мĕн шухăшлатăр кун пирки?

П. В.: Мухтанас килмест. Каппайланма куян çеç пултарать. Эпĕ вара... кашкăртан та хаяртарах... хамăн пултарулăх анине ют йĕр, усал йĕр юлсан. Юлташсем, ырă çынсем пулăшаççĕ. Анне сăнарĕ, тăван халăх сăнарĕ пулăшать мана çав çула такăрлама. Тавах вĕсене. Халăх хакĕнчен иртейменĕпĕр.

КОРР.: Илем тĕнчинче нушаланакан пултаруллă этем çурисен халăх хушшинче хăйне евĕр ят-хушаматпа çÿрес йăла пур. Эсир те çав «чиртен» сыхланса юлайман-мĕн. Псевдоним тенине хăçан тупрăр-ха?

П. В.: Хушма хушаматпа мухтанас тесе те, хамăн тĕп хушамата кăмăлламасăр тăман пирки те мар. Ăнсăртран пулса тухрĕ. Чиперех ĕçлесе пурăнаттăмччĕ-ха Петров хушаматпа. Венгрире чухне чирлесе ÿкрĕм. Пульницанах лекмелле пулчĕ. Мадьярсен йăли-йĕрки пирĕннинчен урăхларах, чирлĕ çыннăн хучĕ-картти çине амăшĕн ятне те çырса хураççĕ. «Аннÿ мĕн ятлă?» — тесе ыйтрĕç те, эпĕ: «Праски», — тесе пĕлтертĕм. Вĕсем вара Петров Виталий Петрович кăна мар, Праски Витти те тесе палăртрĕç. Ялта та мана мĕн пĕчĕкрен Праски Витти тетчĕç те... Хама та килĕшрĕ ку. Мăшкăлласа чĕнни мар. Çакăн хыççăн картинăсем айне те «Праски Витти» тесе алă пусма пуçларăм.

КОРР.: Питĕ килĕшÿллĕ, кăмăллă ят. Аннÿ ятне вилĕмсĕрлетет. Сирнешкел кăмăллă та пултаруллă, хастар ентешсем çумра пулнишĕн хĕпĕртес килет. Хăвăрăн ырă ĕçÿсемпе малашне те тĕнче илемне вăйлатса пымалла пултăрччĕ.

П. В.: Пирĕн халăхăн культури, сăнарлă искусстви çав тери тарăн тымарлă, пысăк шухăшлă, сарлака çунатлă. Йăхран-йăха куçса пыракан йăла-йĕрке, пуян чĕлхепе искусство — тăван халăхăн пуласлăх

шанăçĕ, ытти халăхсем хушшине шăтарса кĕмелли анлă çул. Çав çула уçрăмăр ĕнтĕ эпир. Ăна сарса, такăрлатса çеç пырасчĕ. Пĕтĕм эртелпе. Патшалăх шайĕнче.

*1990 çулхи раштав.*

## Халăх çурчĕн никĕсĕ валли

Республика пурнăçĕнче иртнĕ уйăхра пулса иртнĕ паллă ĕç-хĕлтен пĕри вăл — художниксен анлă пухăвĕ. Вун виççĕмĕш съезд ятпа иртнĕ çав пуху, çавраçил çавăрттарса илнĕ май, икке пайланнă. Чăнчăн чăваш чунлĕ художниксен çавраçилĕ, союз лăпкăлăхне хумхатса, никĕсне кисретсе, хăй анлă уçлăха — Чăваш илемĕн уçлăхне вăйлăн тухнă, Чăваш художникĕсен союзĕ çуралчĕ! тесе тĕнчене пĕлтарнĕ. Вун тăватă «пăлхавçă» пĕрремĕш съезд ирттерсе, хăйсене ертсе пымашкăн эртеллĕ пуçлăх — правлени суйланă. Кам-кам кĕнĕ-ха унта? Камсем вĕсем — çав çавраçиллĕ «пăлхавçăсем»? Акă, Праски Виттинех илер. Виталий Петрович Петров хăйĕн чăвашлăх çĕнйĕрĕпе тахçанах тĕнче искусствин анлă хирне ярăнса тухнă Раççей тава тивĕçлĕ художникĕ. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕ Ф. И. Мадуров тăван халăхăн авалхи вăй-хăватне, паянхи çирĕплĕхне, малашлăх чуппине сăнарлăн кăтартса, наци культурине тĕнче культурин çыхăнăвĕнче уйрăлми аталантарассишĕн çине тăрать. Пушкăртстан тава тивĕçлĕ художникĕсем Ю. П. Матросовпа В. П. Нагорнов тата П. С. Пупин, С. Н. Кадикин, В. А. Зотиков скульпторсем юлашки вăхăтра чăваш искусствинче хăйсен пултарулăхĕпе, ăсталăхĕпе палăрнă. Эртеллĕ пуçлăх пуçĕнче тăма вĕсем Петр Степанович Пупина шаннă.

Çак çавраçиллĕ хĕрӳ кун чăваш халăхĕн историне кĕрсе юлнă хыççăнах манăн Чăваш халăх художникĕсемпе Владимир Иванович Агеевпа тата Виталий Петрович Петров — Праски Виттипе тĕл пулма тӳр килчĕ. Вĕсен шухăш-туйăмĕ, ĕмĕчĕ, хуйхи-суйхи пĕрешкел пулнăран-ши, вĕсен хĕрӳлĕхĕ, чăвашлăхĕ пĕр юхăра юхнăран-ши, тахçанах ман вĕсене чăваш сăнарлă искусствин хальхи вăхăтри чи вăйлă урхамахĕсем вырăнне хурас килет. Чăваш илемĕн тулли лавне çак ывăнма пĕлмен икĕ урхамах мăшăррăн, пĕр кĕвĕллĕн тăвалла туртаççĕ. Ямшăкĕ вĕсен — чăваш. Çĕрĕ-шывĕ — чăвашăн. Сывлăшĕ, тĕнчийĕ — чăвашăн. Çулĕ — чăваш çулĕ. Йывăр та, çăмăл та пуль вĕсене çавăнпах тулли лава туртма. Хуравлăхĕ те пысăк çав. Ланкашкара лакса та лармалла мар, сулнăкра çапăнса илем лавне те тăкса сапăтса ямалла мар. Ăна чăваш çыннин çивĕч куçĕпе, чăвашăн хĕрӳ чĕрипе, халăхăн хастар таппипе пĕрешкел илсе пымалла.

Виççĕмĕр хушăри калаçăва эпĕ çак йĕрпе илсе пытăм:

В. И. АГЕЕВ: — Пире вара ялан ура хуратчĕç, хамăр чăвашăн çăпатине сырма та чаратчĕç, тĕрленĕ кĕпе тăхăннăшăн та, сурпан çакнăшăн та, салтак юрри юрланăшăн та, вăйă картине тăнăшăн та намăслантаратчĕç. Йăлтах çĕнĕ йăла-йĕрке картине пушăпа хӳтерсе кĕртсе яма пуçланăччĕ. Соцчăнлăх пăрĕ пирĕн халăх илемне те шалкăм çапнă пекех çапрĕ. Мĕн чухлĕ пултарулăх çимĕçĕ усăсăр шыва юхса кайрĕ, аслă идея юшкăнĕпе витĕнчĕ. Хамăр тăван халăх сывлăшĕ пĕтсех ларма пуçланăччĕ çав пирĕн художниксен союзĕнче. Эпир, чăваш ӳнерçисем, тăван сывлăш çитменнипе пӳлĕнме пуçларăмăр, хамăрăн вăя усăсăр пĕтерме тытăнтăмăр. Çавăнпа ĕнтĕ, хамăрăн тахçанхи ĕмĕте пурнăçлас тесе, çавраçил çĕклерĕмĕр.

ПРАСКИ ВИТТИ: — Пилĕк çул каяллах пуçланнăччĕ вăл. Тăван халăх ура çине тăма вăй-хал çитерсен, тĕрĕссипе чăваш ура сырма пуçласан, эпир те хамăрăн пурнăç, хамăрăн искусство çине хамăрла çаврăнса пăхрăмăр пулас. Чăваш çыннине тĕнче искусстви, вырăс тата ытти халăх искусстви кăна мар, чи малтан тăван халăх искусстви кирлине чун-чĕрепе туйрăмăр.

В. И. АГЕЕВ: — Эсир ыйтнипе, Владимир Прокопьевич, эпĕ ун пирки «Вучахра» хаçат тухма пуçланă çулах темиçе статья çырса кăлартăм. Манăн ытти чăваш художникĕсене те хам пекех чăвашла ӳкерме, чăвашла сăнарлама ыйтас килетчĕ. Чăваш чунне уçса кăтартасшăн чĕрисенче вут чĕртес килетчĕ.

ПРАСКИ ВИТТИ: — Ман хамăн та çав шухăшах пулнă. Художниксен Союзне ертсе пынă вăхăтра та пайтах çапăçмалла пулчĕ хамăрăн чăвашлăха чăваш чунĕ патне çывхарттарассишĕн. Анчах мана та, ман шухăшлă ытти чăвашсене те итлекенех тупăнмарĕ. Хирĕçлеме пуçларĕç. Çавăнпах пуçлăхра «тытăнса тăраймарăм» пуль. Тĕрлĕрен халăх çынни, кашни хăйĕн наци туйăмĕпе ĕçлесе пурăнни, пирĕн чăвашлăха ăнланса çитейменни е тата ăнланма тăрăшманни чăваш искусствине аталанма нумай чăрмавларĕ.

В. И. АГЕЕВ: — Вырăсланса кайнă чăваш художникĕсем те эпир пуçарнă ырă шухăша хирĕçлерĕç. Хăйсем кам сывлăшĕпе сывланине, кам çăкăрне çинине, хăйсене кам çуратса ӳстернине туххăмрах манчĕç.

ПРАСКИ ВИТТИ: — Ачаран чăвашлăха хисеплеме, упрама, хаклама вĕрентменнинчен килет вăл çак рак суранĕ пек суран. — Унпа чирленĕ чăваш ачисем ниепле те сывалса çитеймеççĕ. Шутлăр-ха хăвăрах, тĕрĕссипе илсен, ăçта тата кам вĕрентнĕ-ха вĕсене, çамрăк художниксене, скульпторсене, — чăвашлăха? Хăш вĕренӳ çуртĕнче? Мускавран, Санкт-Петербургран, Минскран тата ытти хуласенчен те пултаруллă ачасемех вĕренсе таврăнаççĕ. Анчах вĕсене пĕтĕмĕшле пĕлӳ панă. Пĕтĕмĕшле ӳкерме вĕрентнĕ. Киле таврăнсан та вара вĕсем чăваш илемĕн тĕнчин алăкне шыраса хăшкăлаççĕ, тупсан та, уçса кĕреймесĕр асапланаççĕ.

В. И. АГЕЕВ: — Çав йывăрлăха çĕнтерме пулăшас тесе тăвас терĕмĕр ĕнтĕ эпир Чăваш художникĕсен канашне.

ПРАСКИ ВИТТИ: — Чăваш çыннин пурнăçне, ĕçне-хĕлне, йăли-йĕркине чăвашла ӳкерсе чапа тухнă художниксем пирĕн пулнă-ха, унччен те, эпир хамăр та вĕсенчен нумай вĕреннĕ. Юлашки çулсенче çеç пире пĕрешкел калăплантарса ярасшăн пулчĕç. Эпир ăна хирĕçлерĕмĕр. Халĕ ĕнтĕ эпир те пĕр чăмăрта. Эпир те вăйлă. Эпир те хамăрăн шухăш-ĕмĕте тăван халăхшăнах пурнăçа кĕртме пултарăпăр.

В. И. АГЕЕВ: — Кивĕ Союзра юлнă хăш-пĕр художниксем пирĕнпе килĕшменни самаях шухăшлаттарать мана. Вĕсем хушшинче вĕт чăвашлăх сывлăшĕпе сывласа пурăнакан талантсем те пур-ха. Халăх тахçанах йышăннă вĕсен пултарулăхне, вĕсен ăсталăх çимĕçне тутлăн тутанса киленет.

ПРАСКИ ВИТТИ: — Каярахпа ăнланса илеççĕ ак. Чăваш художникĕн Чăваш художникĕсен пĕрлĕхĕнчех тăмаллине. Хамăрăн тăванлăха аталантарма вĕсем те пулăшасса шанатпăр. Вара эпир пурте пĕрле чăваш искусствин теорине чăмăртăпăр, чăваш искусствин, культурин историне çырăпăр, чăваш ӳнер энциклопедине кăларас ĕçе хастартарах хутшăнăпăр. Чăваш ӳкерӳ искусствине вăйлатнă май, хамăрăн тĕссене, халăх пурнăçне, ĕçне, йăли-йĕркине тĕпе хурасчĕ. Кивĕ Союз правленийĕ вĕсемшĕн тăрăшмарĕ-çке.

В. И. АГЕЕВ: — Тĕрĕс. Союзăн чăваш искусство теорине аталантармалли программа та пулман. Чăваш халăхĕ ячĕпе, чăваш пурнăçĕн темипе уйрăм выставка та йĕркелемен.

ПРАСКИ ВИТТИ: — Чăваш художникĕсен ĕçĕсене хакласах кайманни пулнă-ха. Çавăнпа эпир хамăр халăх йăли-йĕркине, чăвашăн ĕçне-хĕлне чăвашсене кăна мар, ытти халăхсене те анлăн кăтартасшăн. Пирĕн халăхăн сăнарлă искусстви çав тери тарăн тымарлă, пысăк шухăшлă, сарлака çунатлă. Йăхран-йăха куçса пыракан йăласем, пуян чĕлхепе искусство — тăван халăхăн пуласлăх шанăçĕ, ытти халăхсем хушшине кĕмелли анлă çул.

Чăваш çĕршывĕ ирĕклĕх илсе пынă вăхăтра патшалăха ертсе пыракансем, Министрсен Канашĕнчи пуçлăхсем пирĕн пуçарăва ырласа, пире пулăшасса шанас килет. Чăваш художникĕсен Союзĕ тунине тĕрĕс çул çине тухни тесе шутларăмăр. Вĕсем те çаплах шутласса шанатпăр. Аслă влаçсем çак ĕçе чăваш халăхĕн çурчĕн илем аталанăвĕн çурчĕн никĕсĕ валли ăнăçлă усă курасса кĕтетпĕр.

* * *

Чăвашра чăвашăн çĕнĕ тепĕр пултарулăх канашĕ çуралчĕ. Чăваш культурин саккунĕпе килĕшӳллĕн, унăн аталану малашлăхĕ анлă пулма кирлĕ. Анчах та... Çак пархатарлă ĕç çине чăвашла, чăваш чунĕпе, чăваш куçĕпе пăхсан çеç.

*«Вучах», 30 №, 1992 çул.*

## ЧĂВАШ ХĔВЕЛĔ ЧĂНАХ ХĔЛХЕМЛĔ

Ака уйăхĕ кăçал хăйĕн чупу вĕçне çанталăка ăшăтса илсе çитерчĕ. Ĕрчев таппипе çунатланнă вĕçен-кайăк уйсемпе вăрмансене çут тĕнче кĕввипе янраттарать. Вăрăм хĕл хыççăнхи пĕрремĕш чечексем этем куçне саррăн-кăваккăн йăлкăштарса илем кӳчĕç. Ăшăнса пиçсе пыракан çĕр хăй ытамне çĕнĕ вăрлăх варăнтарма пуçларĕ. Мĕнпур чĕрĕлĕх тутлă сĕткенпе канленет. Хаваслăх, çĕкленӳлĕх кашни çыннăн чунне хĕрӳ туйăмлăн вăратать. Çав туйăм ытамĕнче хавхаланса чăваш илемĕн тĕнчине юлашки вăхăтра икĕ хут лекме пултарнăшăн эпĕ хама çав тери телейлĕ тесе шутлатăп. Мĕншĕн тесессĕн, иртнĕ уйăхăн 28-мĕшĕпе 29-мĕш кунĕсем чăваш искусствинче тăван халăхшăн паллă кунсем пулчĕç. Икĕ чăн-чăн чăвашăн, икĕ чăн-чăн мухтавлă ăстаçăн пултарулăхĕ музыкăра тата сăнарлă искусствăра хăш шайрине чăваш патшалăх филармонийĕпе Чăваш патшалăх ӳнер музейне пыма кăмăлланисем тивĕçлĕ хак — чăвашлăх хакĕ пачĕç. Чăваш хĕвелĕн хĕлхемне Герман Лебедев композиторăн менелник каçĕнче тата Праски Витти художникăн выставкинче чун-чĕрепе ăшшăн туйрăмăр.

### *Тăван çĕршыв юрлать*

Хĕвеллĕ ире татах та хитрен çĕклентерсе юхса тухнă чун кĕвви кунĕпех хăлхаран каймарĕ, вăл, лирикăллă çепĕç те хавас хăпартлануллă сăвă йĕркисемпе шăранса, мухтав юрри юрлаттарчĕ:

Çурхи тĕнче вăраннă чух,<br>
Хаваслă кун шăраннă чух<br>
Чун савăнать, чĕре сикет....

Атте-анне чĕлхи урлă ачаран ăша хывнă çак юрă маншăн кăна мар, ытти нумай-нумай чăвашшăн пурнăç юрри пулса тăнă. Ахальтен-и ăна халăх тăван çĕршывăн, Чăваш патшалăхĕн тĕп юрри — Гимнĕ вырăнне йышăнчĕ. Паянхи самана музыкçисем те, пултарулăх ăмăртăвĕнче, ăсталăхĕпе çак вилĕмсĕр кĕвĕ шайăнчен иртеймерĕç. Вăрçă чарăннă çул «Тăван çĕршыв» спектакльте пуçласа халăх умĕнче янăранă хыççăн вăл пĕтĕм чăваш халăх хорĕнче хаваслăн та мухтавлăн, çĕкленӳллĕн те хăватлăн янăрать:

Тăван çĕршыв,<br>
Тăван çĕршыв,<br>
Асран кайми юратнă çĕршыв!

Герман Степанович Лебедев менелникне тăванĕсемпе, ял-йышĕпе, тус-тантăшĕпе, юнашар вĕреннĕ, ĕçленĕ юлташĕсемпе, хăйĕн юрăпа ташă ансамблĕпе, музыкине юратакансемпе тата пултарулăхне

хисеплекенсемпе пĕрле çурхи туйăм кĕввипе кĕтсе илчĕ. Шупашкар çывăхĕнчи вунвиççĕмĕш çулхи Салапайкассипе тăхăрвун виççĕмĕш çулхи ватă Шупашкар хушшинче наци культурин аталану çулĕн пĕр сукмакĕ мĕнле такăрланни асаилӳсенче, чаплă концертра яр-уççăн курăнса пычĕ.

Акăш çунатлă йăхран çуралнă Çтаппан ачи, Герман, акă, Варпуçпе Анат Кĕнер шкулĕсене çăпата çĕтсе чупать. Уй-хир кĕввиçемми, ял-йыш юрри-ташши чуна канăç паман ăшри çĕкленӳллĕ туйăмпа хутăшса ял ачине илем тĕнчине вĕçтерсе кĕртет. Халăх пултарулăхĕн çирĕп çуначĕпе вашкăртса вара вунçиччĕри йĕкĕт Шупашкара çитет. Уншăн Чăваш патшалăх музыкăпа театр техникумĕн алăкĕ ун чухне яриех уçăлать. Пилĕк çул хушшинче вăл хор ертӳçи пулма тата юрă-кĕвĕ çырма вĕренет, çав хушăрах хорта та юрлать. Владимир Кривоносовăн пултарулăх лаççинче унăн юрă-кĕвĕ çырас ăсталăхĕ пуçласа туптанать. Техникум директорĕ Иосиф Люблин ахальтен мар ăна консерваторие вĕренме ярасшăн пулнă. «Музыкăна эпир, — асăнать Виктор Ходяшев, — вăйлă композиторсен шкулĕсенче вĕрентĕмĕр, аваллăхран куçса пыракан халăх талантне хамăр пултарулăхра пуянлатса халăха савăнмашкăн пама тăрăшрăмăр.Тăван çĕр, тăван халăх, юратнă хĕрарăм вăйĕ Герман Степановича çавăнпа вилĕмсĕре хăварчĕ».

Пурнăç илемне, этем хăватне кĕвве хывса, çав кĕвĕпе ыттисен чунне вăратма, чĕрине вутлантарма, çав вăхăтрах çыннăн ачаш туйăмне хитрен, çемçен сăпайлантарса чăвашла юрлаттарма пултарни шăпах ĕнтĕ ăна Акă халь те анлă сцена çине чăваш юрăçисемпе ташăçисем ял улăхне юхса тухнă пек капăрланса тухаççĕ те... савăк çĕр уявне пурне те тыткăнуллăн туртса кĕртеççĕ. Юрий Васильев ертсе пынипе патшалăх ансамблĕ тасан та янăравлăн, уççăн та савăнăçлăн шăрантать мирлĕ пурнăç юррине; ташăçисем пĕрре хĕмленӳллĕн, тепре йăкăш-йăкăшшăн ăшалаççĕ ташшине.

Чăваш тĕррисем хушшинчен вĕсем çине пирĕнпе пĕрлех Герман Степанович та чăваш сăнĕпе, чăваш кăмăлĕпе уççăн та ăшшăн, тиркевлĕн сăнаса пăхать. Хĕрĕх виççĕмĕш çултан пуçласа çитмĕл пиллĕкмĕш çулччен хăй аллинче ӳссе аталаннă пултарулăх ушкăнĕ мĕнле çитĕнӳ шайне çитнине професиллĕ хак парать. Юрий Васильевич та, аслă композитор тата ертӳçĕ умĕнче намăс курас мар тенĕнех, ăна хирĕç пăхса тарла-тарла ĕçлет, ушкăна пит хитре юрлаттарать, хăй те юрлать. Вĕрентекен умĕнче вăл экзамен тытнăнах туйăнать ансамблĕн икĕ хуçи хушшинчи куç вăййине сăнанă май.

Аслă вĕрентекенĕн куçĕ умĕнче намăс курмалла мар пек-ха Юрий Васильевăн та, çавăнпах вăл, хумханать пулин те, ĕнер кăна музыка театрĕнче çулталăк экзаменне — икĕ çулхи программа концертне —

ăнăçлă вĕçлесе куракансемпе итлекенсем умĕнче ăнăçлă тытнă хыççăн, хăйне-хăй çирĕппĕн, хăюллăн тытать. Ара, çитмĕл пиллĕкмĕш çултанпа Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕ тăван халăх хушшинче кăна мар, Раççейĕн, Совет Союзне кĕнĕ нумай республикăн, тĕнчери чылай çĕршывсен халăхĕсене чăваш искусствипе, чăваш чĕлхипе, йăли-йĕркипе пысăк культура шайĕнче тĕлĕнтернĕ. Ку концерта вĕсем пушшех тăрăшса хатĕрленчĕç пулас. Репетицийĕ те савăнăçлă каç пуçланас умĕн кăна вĕçленчĕ. Шутласассăн, программăри çав юрăсемпе ташăсенех кăтартмалла пек. Çук çав, Юрий Васильевичăн кашни концерта çĕнĕлле, çĕнĕ хавхаланупа, çĕнĕ вăй-хăватпа кăтартас килет искусствăна юратакансене. Искусствăри улшăнса тăракан çĕнĕлĕх илемĕ çавăнта пулмалла та ĕнтĕ. Ăна ансамбль ертӳçи хăй кăна мар, коллективăн кашни членĕ чунпа та, юнпа та туйса вĕриленсе тăтăр тесе çине тăрать, хăйĕн хĕрӳлĕхĕпе кашнине вутçулăмлантарса тăма тăрăшать дирижер-концертмейстер. Çавăнпа кашни номерĕ асра юлать, кашни солисчĕ хăйнеевĕр уйрăмлăхпа палăрать.

Чăваш халăхĕн вуникĕ маттур йĕкĕчĕ тата илемлĕ вунултă пикийĕ юрăпа ташă картинче авалхи тум илемĕпе капăрланса шăнкăртаттса юхакан çăлкуç шывĕ пек, ăмăртса чупакан тиха ушкăнĕн тапăртатăвĕ пек чунуçиллĕ сасăпа пысăк зала татах та анлăлатнăн туйăнчĕ. Ушкăн юрри-ташши тĕнчери чи чапа тухнă коллективсемпе тан е вĕсенчен вăйлăрах та пуль. Лебедевсен кĕçĕн ывăлĕ (Германĕ чи асли) Валентин Степанович каланă тăрăх, пиччĕшĕн хăвачĕ — вăйă картине тĕлĕнмелле вăйлă, илемлĕ йĕркелеме пĕлнинче. Çĕртен, халăх ăшчикĕнчен шăранса тухнă пек вĕсем. Юрий Васильев та чăваш хорĕн шайне çĕклеме нумай вăй хуни, хор искусствине малалла аталантарса тĕнчере анлăн сарма тăрăшни çинчен калать. Ансамбльте Лебедев юррисене репертуарта тытса тăма, вĕсене халăх патне массăллăн çитерме, аслă ертӳçĕн çирĕп йĕркине, ăсталăх культурине тивĕçлипе тытса пырассине мала хураççĕ.

Халăха тăватçĕр юрă пама пултарнă Чăваш Республикипе Раççейĕн искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ яланах халăхпа, халăх хушшинче. Çавăнпах пуль... юнашар ларакан пĕр хĕрарăм манран ыйтрĕ: «Пурăнать-и вăл?». Ку ыйту мана ытлах тĕлĕнтермерĕ, мĕншĕн тесен, чаплă та пултаруллă çынсем яланах чĕрĕ пек туйăнаççĕ. Çав хĕрарăма эпĕ Герман Степанович сакăрвуннăмĕш çулта çĕре кĕнĕ, ĕнер К.Маркс урамĕнче унăн Асăну хăмине уçрĕç тесе калама ĕлкĕреймерĕм, сцена çине ачасем сиксе тухрĕç. Г. С. Лебедев ячĕпе хисепленекен Чăваш наци лицей-интернатра вĕренекенсем паллă композиторăн вилĕмсĕр произведенийĕсене çĕнĕ сасăпа янраттарма пуçларĕç.

Юрий Васильев ансамблĕ мĕнпур ушкăнĕпе çăварни вăййи чăн-чăнла кăтартрĕ те... артистсемпе пĕрле залри халăх ура çине тăрса хаваслăн юрласа ячĕ. Эпир те, Праски Витти ентешĕм-тусăмпа, халăх хорĕнчен юлмарăмăр:

Çурхи тĕнче вăраннă чух...

Эпир кăна мар, пĕтĕм Чăваш çĕршывĕ юрланăн туйăнчĕ çак хавас та хавхалануллă вăхăтра.

## *Халăх сăнарĕ — вăхăт сăнарлăхĕ*

Праски Виттин анлă выставкине уçнă кун мана пĕр илемлĕх саманчĕ темшĕн-çке ытларах асра юлчĕ. Искусствăна, уйрăмах сăнарлă искусствăна юратакансем йышлăччĕ, тумĕ те вĕсен уяври пекехчĕ, шухăш-ĕмĕчĕ те çĕкленӳллĕ туйăмлăччĕ. Тĕнчипе чапа тухнă чăваш художникĕн ĕçĕсене пурне те пĕрле пăхса хаклама тата вĕсемпе киленме художниксем, писательсем, артистсем, журналистсем, илем тĕнчинче хăпартланса пурăнакансем ытларахчĕ. Ку Илем çуртĕнче сахал мар выставкăра пулса курнă пулин те, паянхи пек хăпартлану асăрхаманччĕ çынсем хушшинче. Ку ĕнтĕ мĕншĕнни паллă. Кашни ĕçĕ — живопись, графика, эмаль е мăнайлă курăну искусствин япали — хăйнеевĕр уйрăм кĕвĕпе янăрать, чăвашăн чăн-чăн тăван чĕлхипе калаçать, хăй çумне туртса шухăша ярать, маннине аса илтерет, пĕлменнине шыраттарать. Чăваш культурин тата нацисем хушшинчи çыхăнусен министрĕ Виталий Иванов кун пирки питех те вырăнлă та ăслă палăртрĕ. «Праски Витти пире, — терĕ вăл, — хамăр халăхăн аваллăхне çывхартса паянхи куçпа пăхса хаклама, несĕлсемпе калаçма, тĕнчекурăмпа çыхăнма, шухăшлава тарăнлатма пулăшрĕ».

Савăнăç вăхăчĕ куравпа, салам сăмахĕпе тата пăшăл-пăшăл тавлашупа иртсе пырать. Аристарх Дмитриев писательпе эпир пĕр портрет умĕнче самаях хавхаланулăн калаçса илтĕмĕр. Степан Максимов, Тăвайьен чăвашĕ, пирĕн çине çивĕч куçпа витхать. Пысăк маçтăр ăсталанă сăнартан тарăн шухăш, шырав, кăмăллăх, çирĕплĕх палли чĕррĕн тухса тăрать. Художник портрета яланхи сăнӳкерчĕк меслечĕпе мар, çĕнĕлле, пурнăç ӳкерчĕкĕсемпе, наци уйрăмлăхĕсемпе пуянлатса, симфониллĕ поэма майлă çырнă. Сулахай кĕтесре, акă, чăваш тĕнчин курăмлăхĕ. Автор ăна Хĕвелпе, Çĕрпе, Этемĕн пилĕк пӳрнипе уйрăлми çыхăнура ăнлантарать. Сылтăм кĕтесре кĕвентеллĕ хĕре ытама илнĕ Уйăх чиперрĕн йăлкăшать. Чăваш халăхĕн чаплă композиторĕ çав тĕнчекурăмра, Вăхăтпа калаçса, ял пурнăçĕпе пурăнать. Сулахай хулпуççийĕ тăрринче унăн лашана

симĕс курăк çитерекен арçын ача, сылтăм хулпуççийĕ тăрринче — хĕрсемпе яшсен вăйă карти. Галстукĕ чăваш тĕррилле. Аял енче — выльăх кĕтĕвĕ...

Чăваш композиторĕсенчен музыкăра аслă пĕлӳ пуçласа илме пултарнă, халăхăнне икĕ пин ытла юрăпа кĕвĕ çырса хăварнă, çĕр çул каялла çуралнă илем паттăрĕ кĕç-вĕç чĕрĕлсе тăрса çынсемпе калаçса каяссăнах туйăнать. Çав туйăма чĕртсе янăнах, авă, Морис Яклашкин ертсе пыракан чăваш хорĕн капелли Степан Максимов илемлетнĕ «Шăнкăр кăна» халăх юррине шăрантарса ярать. Вăрнарьен каччи Праски Витти çак саламлă чун юххинче тăван Малти Ишек ялне аса илет пуль, халăх ахахне пурнăç юханшывĕнчен кăларса илемлесе хăварнă Шупашкарта ĕмĕр çывракан Степан Максимов чăваш хĕрĕсем урлă уяв хуçине тав тăвать пуль. Пурнăç кĕвви çапла, пĕрпĕтĕмĕшле илем симфонине пĕрлешсе, пирĕн чуна уçса хĕпĕртеттерет.

Эх, курас пулсанччĕ халь ялти ватă карчăк, хисеплĕ Праски кинемей хăйĕн пĕртен-пĕр юратнă ывăлĕн пичĕ-куçĕ епле хĕвеллĕн çиçнине, илтес пулсанччĕ вăрçăра пуçне хунă ашшĕсĕр нуша-тертпе асапланса çитĕннĕ Праски Виттин — Виталий Петрович Петровăн, Раççей тава тивĕçлĕ художникĕн, чăн-чăн чăваш художникĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен мĕнле ырă та мухтав сăмахĕсем каланине. Анчах...

— Яла ятарласа кайса килтĕм. Анне, ман мăн выставкăна курма пыраятăн-ши, терĕм. Пыраяс çук, ывăлăм, вăй çук, тесе юлчĕ... — хашш сывласа ячĕ Виталий Петрович. — Яла илсе кайса кăтартсан çеç ĕнтĕ. Ялта та, Вăрнарта та выставка уçма шантараççĕ-ха.

Саламлама килнĕ янташĕсем Вăрнар районĕн администрацийĕн пуçлăхĕ Валерий Наумовпа «Ленинец» колхоз председателĕ Виссарион Афанасьев кун пирки кăрлачра илем кунĕсем ирттернĕ чухнех сăмах панăччĕ. Мухтавлă янташĕн ĕçĕсене тăваньен халăхĕн тĕплĕн курмаллах ĕнтĕ.

Курмалли, хакламалли вара художникăн пурах. Илем ларĕ Виталий Петровичăн чăп тулли. Ытлашши мухтаттарма та, мухтанма та юратман лăпкă чăваш пурпĕрех хăйне лăплантараймасть. «Манăн чăваша çӳле çĕклес, чăваша тĕнчипе кăтартас килет. Ырă тăван халăх, эпĕ сирĕн умра тăратăп, ман çурăм хыçĕнче хамăн ку таранччен тунă ĕçсем. Йăлтах вĕсем — ăшран пиçсе тухнăскерсем. Ăсăм-тăнăм, кĕлеткем тăван халăх туйăмне туйнишĕн эпĕ хĕпĕртетĕп. Çавăнпа чăвашăн авалхи, хальхи пурнăçне аталануллă йĕр çинче ӳкерсе халăха халаллатăп. Хамăн халăх йăли-йĕркине, чĕлхине, историне сăнарласа сыхласа хăварасшăн эпĕ яланах кĕрешме хатĕр. Шухăшлавпа шырав ăмăртăвĕнче маншăн чи малта тăраканĕ вăл — чăваш çынни. Наци культури, халăх илемĕ нихçан та пĕтмелле мар. Çав вăхăтрах хамăр

халăх çитĕнĕвне манăн тĕнче культурипе хутăштарса анлă çул çине кăларас килет».

Праски Витти каланисене эпĕ çапла пĕр çĕре пухма тăрăшрăм. Унăн шухăшĕ яланах анлă та тарăн. Унпа пĕрле чухне хăвна-ху темле анлă тинĕсре — Чăваш тĕнчин тинĕсĕнче караппа ишнĕн туятăн. Илем карапне вăл çирĕппĕн тытса пырать, вăйлă хумсем çийĕн тĕрĕс курспа малалла çĕмĕртгерет.

Паллах, çăмăл пулман ялти чухăн ачана çав карап капитанне çитмешкĕн. Тантăшĕ, Виссарион Афанасьев каласа панă тăрăх, Праски Виттипе иккĕшĕ те вĕсем шкулта вĕреннĕ чухнех сăрлама, ӳкерме юратнă. Каярахпа вара... пĕринчен киçтĕк маçтăрĕ. тепринчен çĕр ĕçĕн маçтăрĕ тухнă. Тĕрĕссипе ĕнтĕ иккĕшĕ те вĕсем — художниксем. Халăх пултарулăхĕ, пур енĕпе илес пулсан та, тăван çĕртен шăтса тухать, тăван çĕр сĕткенĕпе аталанать, тăван халăх ăсталăхĕпе илемленет. Çав илем çутийĕ выставкăра Праски Виттипе Виссарион Афанасьев пичĕкуçĕнче те хитрен йăлкăшрĕ.

Витĕр курса, пуçпа çавăрттарса, чун-чĕрепе туйса, халăх пурнăçĕнче ĕмĕрсем хушши купаланса пынă илем пурлăхĕн хăватне ăша хывса утнă Виталий Петров хăйĕн тумхахлă пурнăç çулĕпе. Шупашкарти художество училищине ятарлă пĕлӳ илме килни уншăн аллă тăваттăмĕш çулта шырав тĕнчинче вĕçмелли çунат хушнăнах туйăннă, анчах... салтак ячĕ тухнă. Çартан таврăнсан вĕренĕве малалла тăснă. Каярахпа çуната Ленинградри художествăпа промышленнăç училищинче çирĕплетнĕ. В. И. Мухина ячĕпе хисепленекен аслă вĕренӳ заведенийĕнче çамрăк художник тĕнчекурăмне антлăлатнă, ăсталăхне ӳстернĕ. Ун хыççăн вăл кĕнеке илемлетессипе нумай ырă ĕç тунă, выставкăсенче çĕнтернĕ. Çитмĕл пĕрмĕш çулта СССР художникĕсен Союзне илнĕ ăна. Унăн анлăкурăмлă, сăнарлă ĕçĕсем — стена çине ӳкернĕ ĕçсем — Ижевскра, Пермьре, Пущинăра, Тольяттире, Самарта тата ытти хуласемпе ялсенче çынсен кăмăлне уçаççĕ.

Праски Виттин ĕçĕпе эпĕ пĕрремĕш хут Çĕнĕ Шупашкарта паллашса тĕлĕннĕччĕ. Спорт керменĕнчи «Тăван çĕр» ятлă панно тăванлăх, чăвашлăх туртăмĕпе илемлĕн те ытарлăн илĕртет, шухăшлаттарса ярать.

Сакăрвуннăмĕш çулсенче художникăн чăвашлăх, тăван çĕр туйăмĕ пушшех вăйланса пиçсе çитет пулас. Вăл халăх историне Константин Ивановăн «Нарспийĕ» урлă питĕ ăста, маçтăрла сăнарлать, тĕнче картине кĕрет.

Тĕнче искусствин картинче вара ăна валли те тивĕçлĕ вырăн тупăнать. Тĕрĕссипе вăл ăна хăйĕн пултарулăхĕпе çĕнсе илет. Кăçал кăна-ха «Гран-при» премине панă ăна. Нумай пулмасть Германире, Венгрире, СШАра хăйĕн ĕçĕссене кăтартнă вăл.

— Тĕнче курса çӳресе маттур, сывлăхлă, ăслă çынсемпе курса калаçни мана нумай пулăшать. Ман ĕçе питĕ аван тăвас килет. Ĕçе чăннипех арçын, ĕмĕрлĕх тунă тесе калаттарас килет. Художник ĕçĕ çынсене савăнтартăр, хавхалантартăр, «кун пек эп хам та тăвап» тесе ан калаччĕр. Япăх тусан ĕçе — намăс. Çын мĕнле ĕçлет, çапла пурăнать. Ют çĕршывран вăйлă шухăш, ĕмĕт, çынсен пурăнан пурнăçне хисепленине илсе килетĕп, вăл мана ĕçре пулăшать. Вĕсем пек культурăллă пулас килет. Чăваш темипе, чăваш фольклорĕпе ӳкернĕ чухне халиччен курманни чуна туртать. Чăваш хакне хамăр майлă, тĕнчери художниксен çулĕпе, вĕсенчен вĕренсе сăнарлăн кăтартас тетĕп. Халиччен курман технологи, тĕс чуна туртать. Пĕччен ĕçленĕ чух çын вăйсăр пек. Пĕр вăтăр художник пухăнсан вара, кашнин таланчĕ вăй парать. Пĕр-пĕринчен юлас мар тесе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлетĕн. Филармони мана чăваш композиторĕсен вун виçĕ портретне ӳкерме сĕнчĕ. Пĕлтĕр эпĕ, тĕнче симпозиумĕнче, Венгрири Кечкемет ятлă хулара, Степан Максимов портретне питĕ хĕмленӳллĕ хавхаланупа ӳкертĕм, — куçне-пуçне чалкăштарса ăшшăн йăлл кулса илет Виталий Петрович.

Вĕри эмаль меслечĕпе ӳкернĕ чăваш композиторĕн сăнарĕ чăннипех вĕри алă витĕр тухса чĕрĕлнĕ. Чун кĕртнĕ сăнар авă епле калаçать выставкăна пынă халăхпа, капеллăпа пĕрле юрлать, Праски Виттине ăшшăн саламлать.

Чăваш хĕвелĕн çутине сăнарлăх витĕр халăх чун-чĕрине ăшăтмалла хĕмлентерме пултарнă Виталий Петрович Петров — Праски Витти хăй те чăваш хĕвелĕн пĕр çутă пайăрки.

Чăваш хĕвелĕ чăнах хĕлхемлĕ-мĕн.

*1996, авăн, 17.*

## *Халăхпа ытакланса*

Чăвашăн тулăх кĕрĕ утмăл çул каялла хăйĕн пĕр илем пĕрчине Хĕвел çуттине кăларнă — Вăрнар тăрăхĕнчи Малти Ишекре тепĕр улăп уалатса хастар халăх çумне çĕнтерӳллĕ сассипе хутшăннă. Праски инке ывăлне Виталий ят хурас тенĕ. Праски Витти çапла ял ачисемпе ӳссе, салтака кайса килсе, Шупашкарти ӳнер училищинче, Питĕрти илем аслă шкулĕнче вĕренсе, Турă панă хăвата йăх тымарĕн сĕткенĕпе чечеклентерсе халăх художникĕн ятне илет, Раççей, тĕнче ӳкерӳçисен ретне хăюллăн йышăнать.

Витĕр курса,ун-чĕрепе туйса, халăх пурнăçĕнче ĕмĕрсем хушши пухăнса пынă илем пурлăхĕн хăватне ăша хывса утать Виталий Петрович Петров хăйĕн тумхахлă пурнăç çулĕпе. Ăçта кăна çитмен пуль

вăл, анчах тăван халăхăн аваллăхĕпе паянхи хăватне, илемне çавăнта ĕмĕрлĕх хăварать. Çуралнă тăван çĕртен аяккалла кайсассăн вăл яланах ăшра та, сасăпа та хăй сисмесĕрех юрласа ярать: «Вĕç, вĕç, куккук, вĕç, куккук...» Вара вăл хăйне çунат хушнăн, пĕтĕм чăваш халăхĕпе ытакланса шăратнăн туять вилĕмсĕр юрра. Ют патшалăхсенче хăйĕн ӳнер пултарулăхне — чăваш искусствине — нумай-нумай халăха ăнăçлă кăтартнă хыççăн, ютсемпе тăванлăн уйрăлнă чухне те çав юррах парнелесе хăварать вĕсене.

Çитес уйăхра художник Японие каять. Анăçри тата Америкăри сăнар искусствин маçтăрĕсемпе юнашар ĕçлесе, калаçса-тавлашса чунне кантарнă хыççăн унăн хĕвелтухăç çĕршывĕнче пулса япунпа чăваш хитрелĕхне сăнарлă куçпа танлаштарса хак парас, ăсталăх картлашкинче çĕнĕ йĕр хăварас килет.

Çавна май хĕрӳллĕн калаçса каять те, чăваша, чăваш маçтăрлăхне тĕнче умне чи мала кăларса хурать. Вĕренсе ăс пухнă, ют халăх художникĕсемпе алла-аллăн тытăнса тарланă ӳнерçе ĕненсе кăмăллă кулă парнелетĕн çеç вара. «Эпĕ чăннипех чăваш художникĕ, манăн ĕçĕм никамăн ĕçĕпе те пĕрешкел ан пултăр, чăваш халăх искусстви ытти халăх искусствипе хутăшса ан кайтăр, хăйĕн нихçан çухалми тĕс-сăнарĕпе тĕнчене тĕлĕнтертĕр тесе çине тăрса тăрăшатăп». Çак шухăша уçса парасшăн, аталантарасшăн çунса çӳрет вăл.

Тĕлпулусенче, выставкăсенче тарăн шухăшлă та савăнăçлă Праски Витти. Виçĕмçулхи пуш уйăхĕнче эпир, Вăрнарьен çыннисем, Шупашкарти литература музейне пухăнтăмăр. Унччен унта Виталий Петровичăн илем ĕçĕсене пиншер çын курса пысăк хак панă. Выставка хупăннă ятпа иртрĕ хавас тĕлпулу.

«Мĕн тума пултарнине эпĕ йăлтах халăхран илетĕп. Халăх культури — халăхра. Ăна аталантарма пире Турă пил панă. Унпа туллин усă курмасан хамăр наци умĕнче — этемлĕх умĕнче — намăс пулать. Шел, хамăрăн ăсталăх пултарулăхне анлăн та уççăн тĕнчене кăтартмашкăн пирĕн умра пĕртте хамăртан килмен чăрмавсемпе чаркăçсем пулчĕç. Аякра вĕреннĕ чухне эпир наци культуринчен уйрăлнăччĕ. Чăваш наци искусстви çинчен эпĕ Питĕрти аслă шкулта пĕр сăмах та илтмен. Мĕн калăн, Шупашкарти ӳнер училищин ку тарана çитсе те чăваш наци искусствине тĕллевлĕн вĕрентмелли планĕ çук. Чăвашăн пултаруллă унерçисем аякри çĕре саланни те ахальтен пулман. Хĕсметлĕ пурнăç вĕсене çунаттисене анлăн сарма паман. Чăваш искусствисен историйĕ те, ăна вĕренмелли кĕнекесем те çук. Самана сăн-сăпачĕ наци аталанăвĕн çĕнелĕвĕнче, халăхăн пурнăç паллин тĕсĕсен чечен килĕшĕвĕнче, хăйнеевĕрлĕхĕнче пулнине чăн-чăн чăвашла ăнланса ӳкерме тытăнсан тин туйса илетпĕр. Чăвашра художник нумай, анчах чăвашла ӳкерекенни — сахал. Пирĕн илем

ĕçне аякра курса ăнланакан «Чăваш халăхĕ чĕрĕ, Чăваш çĕршывĕ пур» тесе калама пултартăр. Эпир йăхсăр йытă мар, Кашкăр йăхĕнчи хастар этемсем. Çавăнпа картинăсенче, ӳкерчĕксенче хăюлăх та, чарусăрлăх та, хаярлăх та, çав хушăрах уçă кăмăллăхпа сăпайлăх та палăрса тăтăр тетĕп. Венгрире çемье çулталăкне паллă тунă вăхăтра эпĕ те вĕсен ӳнерçисемпе ăмăртса ĕçлерĕм — «Чăваш çемйи» картина ӳкерсе кăтартрăм хамăр халăхăн сăнарне уçса панă май. Çуратнă аннен тата ял хĕрарăмĕн сăнарне Çĕр турри пек кăтартасшăн...» Çак хумхантаракан ыйтусем тавра пычĕ аслă художникăн калаçăвĕ. Ӳнерçĕсем, литература ĕçченĕсем,искусствоведсем, куракансем Раççей тава тивĕçлĕ художникĕн пултарулăхне тĕрлĕ енчен хакларĕç. Чăваш искусствине чĕртекен тухтăр — халăх тухтăрĕ. Анлă тинĕсре ишекен Парăс. Читлĕхе çĕмĕрсе уçса тухнă Çĕмрен... Татах та сăнарларĕç тĕлпулура.

Чăнах та ĕнтĕ çĕнтерӳçех. Вĕри эмаль меслечĕпе ӳкерсе чăваш искусствине чи малтан вăл çĕнĕлĕх кĕртрĕ. Чăваш асамлăхне тĕнче искусствине никампа пăтраштармалла мар уйрăмлăхпа кĕртсе пуянлатрĕ. Тĕнче искусствин анлă тинĕсĕнче Праски Витти Чăваш киммипе малалла ишет. Чăваш сывлăшĕ Илем Парăсне асаплă çĕнтерӳ çулĕпе хăвалать.

Çав çул çинче яланах ăнăçу, сывлăх çирĕплентĕр тесе эпир те, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан Вăрнар чăвашĕсен «Туслăх» янташлăхĕ ячĕпе хамăрăн чи хаклă та чи пултаруллă яш-кĕрĕмрен пĕрне — Праски Виттине — менелник ячĕпе саламлатпăр. Уяв кунĕсем савăк пулччĕр!

*1996, авăн, 17.*

## *Праски Витти кĕвви*

Чăваш ӳнер искусствин анлăшĕнче лăпкă тинĕсе хумхантарса янă вичкĕн çавраçиле курчĕç те, туйрĕç те тăван çĕрĕм-шывăмра. Тĕлĕнмелле вăй пулчĕ ку. Вăл аçтахалла нимех те çĕмĕрсе аркатмарĕ, хытса ларнă тусан сийне çеç тĕпретсе пĕлĕте çĕклерĕ. Тусан майĕпен сирĕлсе пынă май, йăлтăркка хĕвел çуттинче Праски Витти кулса ячĕ. Пуçĕ тăрринче унăн — Чăваш турри. Ури айĕнче — Чăваш çĕрĕ. Шухăшĕнче — Чăваш чунĕ. Çав чун-хавалĕ — унăн Хĕвелĕ. Тăван амăшĕ, çĕр-амăшĕ, юратнă чăваш халăхĕ вăй парса тăнипе Виталий Петрович Петров хăйĕн тулли лавĕпе Шупашкара кĕрлеттерсе çитрĕ. Хула алăкĕнчен ăна ӳнер хуçисем шикленереххĕн те пит асăрхануллăн кĕртсе ячĕç. Мĕн тăвăн ĕнтĕ, чарма вĕсен — халĕ çук, хуплама — пĕркенчĕкĕ шăтăк. Нумай çулсем хушши сăнарланнă чăн-чăн чăваш

художникĕсемпе искусство тĕпчевçисене кăна мар, унăн ахах-мерченĕсене куракан кашни çынна тĕлĕнтерсе пăрахрĕ. Чăваш та тĕнче тытăмĕнче, этемлĕх йăшăлтатăвĕнче хăйĕн сăнне-питне, вăйне-хăватне çухатман иккен, арпаштарса яман; мĕнле çуралнă вăл Çĕр çине, мĕн тăхăнса тухнă çутлăха, мĕн туса чапа тухнă тĕнчере, мĕн ăсталама шухăшлать, ĕмĕтленет çак вăхăтра, малашне — йăлтах куç умне тухса тăрать, пуçа çавăрттарать, темле хамăренлĕхе шыраттарать, çунатлантарать талантлă художникăн кашни картини.

Тĕнче касса çӳренĕ шыравçă-тĕпчевçĕ утмăл çул хушшинче чăннипех тӳпелесе тултарнă иккен ăс-тăн пурлăхĕпе хăйĕн кăрманне: сулнăкра та тӳнтерсе яман, хумлă шывра та путарман.

Çав лав пуянлăхне миçе хутчен кăтартмарĕ пуль вăл тăван халăхне. Акă, 1996 çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче те унăн чи лайăх ĕçĕсем халăх умне тухрĕç — яланхилле çĕнĕлле чĕрĕлсе. Кашниййĕ — хăй уйрăм тĕнче, кашниййĕ — хăйне евĕр кĕвĕ. Чăваш кĕвви. Праски Витти кĕвви. Анне сĕчĕн вăйĕ, Кĕçтенттин Ивановăн «Нарспи» хăвачĕ ман пултарулăх вăйĕнче тесе ăнлантарать художник хăйĕн пурнăç çитĕнĕвне.

Хамăрăн Вăрнар çĕнтерӳçин пултарулăхне çуралнă кунĕпе пĕрле чаплăн чысларăмăр ӳнер музейĕнче. Культура тата наци ĕçĕсен министерстви, наци академийĕ, Вăрнар чăвашĕсен Шупашкарти «Туслăх» ентешлĕхĕ нумай тăрăшрĕç республикăри çак пысăк уявшăн. Чăваш академикĕсем ятарласа пуху ирттерчĕç, Виталий Петров член-корреспондент хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ, художникпа паянхи вăхăт уйрăмлăхĕ çинчен каланине итлерĕç, ăна Чăваш патшалăх университетне çитĕнекен ăрăва илемлĕхе вĕрентме чĕнни, профессор тумне тăхăнтарни çинчен мăнаçлăн пĕлтерчĕç. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисткипе, Кӳлхĕрри хĕрĕпе Валентина Смирновапа пĕрле художникăн шырав тĕнчин юррине юрласа патăмăр.

Сăввине эпĕ 1993 çулхи нарăсра Вăрнарта, ресторанта эртелпе апатланнă хушăра, çырнăччĕ. Эпир, Шупашкарта тата Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан Вăрнар чĕпписем, район пуçлăхĕ Наумов чĕннипе, тăван çĕре пултарулăха кăтартма таврăннăччĕ. Халăха савăнтарса хавхалантартăмăр. Хамăрăн кăмăла та ĕнтĕ поселокри тĕп хупахра хăпартса ячĕç. Анатолий Никитин композитор баян каларĕ, эпир Людмила Семеновапа иксĕмĕр чăваш халăхĕн «Мĕн çитмест-ши пирĕн пурнăçра» юррин кĕввипе шăрантартăмăр кăна. Акă епле хитрен янăрать вăл:

Мĕн çитмест-ши Праски Виттине,
Мĕн çитмест-ши Праски Виттине?
Асран кайми Малти Ишек пур,
Чун юратнă Праски амăш пур.

Мĕн çитмест-ши Праски Виттине,
Мĕн çитмест-ши Праски Виттине?
Ĕмĕр манми Вăрнар çĕрĕ пур,
Мăшăр тунă савни хĕрĕ пур.

Мĕн çитмест-ши Праски Виттине,
Мĕн çитмест-ши Праски Виттине?
Йăх тăсмалăх ачи-пăчи пур,
Çитмесессĕн, вăйĕ тата пур.

Мĕн çитмест-ши Праски Виттине,
Мĕн çитмест-ши Праски Виттине?
Ытарайми Илем тĕнчи пур,
Çав илемре чăваш чунĕ пур.

Мĕн çитмест-ши Праски Виттине,
Мĕн çитмест-ши Праски Виттине?
Пурте пур ун çутă пурнăçра,
Анчах çуккă канăç уçлăхра.

Чăваш халăхĕн ытамлă кĕвви ăшран тухакан сывлăш хумĕпе çĕкленсе уçлăхра вилĕмсĕр юрату ташшине ташлаттарать, вилĕмсĕр юрату хĕвне кĕрсе çăлкуç уçтарать.

Ентешлĕхе ертсе пыракан Леонид Тянгов ученăй йăх тăванлăхĕн чун туртăмĕпе ыталарĕ те кÿршĕ ял каччине, «Сире эпир Чăвашрадио, Мускав радиовĕ пулăшнипе эсир утмăл çул тултарнă ятпа саламласа эсир чăваш çăпатипех тĕнче çулне такăрлатăр тесе, Турă мĕн панипе тăрăшса ĕçлесе, халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетсех пыратăр тесе ырă ят ятăмăр, тĕнче сассине кăлартăмăр, — терĕ ырă сунса.

Район кантурĕн пуçлăхĕ Валерий Наумов укçаллă салампа çемьен хальхи нушаллă пурнăç самантне те май килнĕ таран татса пачĕ.

Таркăн çуралнă кĕтессех çитсе çапăнать. Чунĕ унăн, аякра вĕçсе çÿресен те, çывăрма килех таврăнать. Çак шухăша палăртрĕ Ершепуç ачи. Сирĕн мухтав тĕнчи Вăрнар тĕнчи те, тăван ялун тĕнчи те, тăван урамун тĕнчи те, тăван килÿн тĕнчи те пултăр. Вăл тĕнчене хăвăрпа пĕрле кăна кăтартма пулать. Çавăнпа кĕтетпĕр сире хавас-пах, тесе çамкаран шаккасах каларĕ район халăхĕ ячĕпе Валерий Петрович.

Ентешсен хушăвне вăл ăнланчех пулĕ тетпĕр. Ахальтен мар итлерĕ Виталий Петрович пурне те. Кăмăлтан. Хăйне саламланă çынсене, организацисене тав туса.

Наумов саламĕнчи туслăх йĕппи тирмесĕр палăртаймарĕ Вăрнар каччине, çамка хумханăвĕн йăрлатăвĕнче паллă йĕр хăварчех. Ăна

Виталий Петрович ăнланчех ĕнтĕ, ахальтен мар вăл çамкине картлантарсах итлерĕ тăваньенсене.

Çав вăхăтра мана темшĕн вăл Кандинские аса илнĕн туйăнчĕ. Ӳнер искусствин ирĕклĕх чаршавне уçакансенчен пĕри кăвак çĕмрен пек вирхĕннĕ урхамахпа, анчах хĕрлĕ чукмар çамкаран çапнипе, ют çĕр çине кайса ӳкнĕ. Тăван Раççей имлĕхĕ ăна та, нумай-нумай ăсчаха, çуралнă çĕр сипленĕ пекех, чĕртрĕ, вăл хăйĕн наци тумĕпе каялла, хăватлă халăхĕ патне чун туйăмĕпе таврăнчĕ.

Шăпах çав вăхăтра Шухăшлав тинĕсĕнче Праски Витти чăваш Василий Кандинскипе тĕл пулать. Тăваллă тинĕсре икĕ карап ишет. Капитансем пĕрне-пĕри эйухнĕмле саламлаççĕ, калаçса илеççĕ:

— Эсир ăçталла çул тытатăр?

— Америкăна.

— Эсир тата ăçталла?

— Раççее.

— Мĕн тума?

— Чăваш искусствине кăтартма.

— Эсир тата мĕн тума?

— Раççей искусствине тăван çĕре тавăрса пама.

— Унта вырăн çук-им, пархатарĕ çитмест-им?

— Эй ачамккă, унта классикăна тахçанах ăнланнă. Ирĕклĕ шухăшлав вĕçевне чарман пулин те, пирĕн вырăс, Раççей халăхĕсен искусствине пурăнма тăвăр. Ирĕклĕх туйăмĕн те хăйĕн вырăнĕ пур иккен Çĕр çинче. Çавна ан манăр, коллега.

— Манăн çапах та тĕнчене уçас килет-ха, Америкăна уçас килет, хамăрăн Чăваш çĕршыв пурри çинчен пуян халăха çитсе пĕлтерес килет, чăваш çыннин сăнарне кăтартса этемлĕх умĕнче мухтанас килет.

— Шухăшу тарăн, анлă, вĕçевлĕ. Хăвăрăн ĕмĕтне пурнăçлама тăрăшăр, анчах та ют шухăш юхăмне кĕрсе ан кайăр, тилхепӳне çирĕп тытăр, хура хумсенчен асăрханăр, тăван халăх туртăмĕпе унăн аваллăхне çĕнетĕр, пуçа мĕн килнине, мĕн пуррине такама салатса пама ан васкăр, çуратнă халăху валлиех хăварăр ăс-пуç туприне, халăхнах тавăрса парăр ăна. Çавăн чухне вăю вилĕмсĕр пулса юлĕ.

Çапла, çăка хуппин кăрманĕнче юман кĕсменпе авăсса ишет Праски Витти Шухăшлав тинĕсĕнче. Йăмра юпи çинче вĕлкĕшекен тĕрленĕ сурпан чăваш сывлăшĕ çапнипе вăл киммине хăй кăна пĕлекен тĕрĕс çулпа малалла илсе пырать.

Хăй пĕлекен çулĕ пурах çав Праски Виттин. Вăл хăй камне, хăш халăх ачине пĕлтерекен уйрăмлăх, хăй мĕнле ăнлантарма пултаракан чĕлхи, тĕнче ӳнерлĕхĕнче кама сăнарласа кăтартма май паракан вăй пур унăн — вăл пĕтĕмпех чăваш вăйĕ. Искусствăра хăйĕн вăйĕ, хăйĕн кĕвви, хăйĕн шкулĕ пур канăçсăрăн.

Вăл этемĕн, чăвашăн, çутçанталăкăн, Чăваш тĕнчин философилле шухăшлавне, ансат тытăмлăхĕпе аталануллă вĕçевне ăнланма, туйма, курма, çав илем астарăвне ытти çынсене кăтартса кĕлеткене тĕпĕртеттерсе шухăша пăтратма, тавлаштарма, чăнлăха шыраттарма пултарать. Акă мĕнре унăн тĕп вăртăнлăхĕ, акă мĕнре унăн илем вăйĕ.

— Эпĕ Иванов «Нарспийĕ» витĕр чăваша куратăп, Америкăна çитсе чăваш искусствине кăтартни вăл чăваш хăйĕн ывăлне, хăйĕн тĕнчине кăтартниех пулать. Эпĕ ятсăр ўкерчĕксем нумай турăм. Кайран шутларăм та, анне сăнарне ўкерес терĕм. Барселонăра аннен портретне художниксем тархасласа ыйтнипе куççульпех парса хăвартăм. Виличчен аннене тăван ялта хамăн пултарулăха анлăн кăтартасчĕ, — ассăн сывласа амăшĕн çĕнĕ ўкерчĕкне сăрă хыççăн сăрă хушса пырать ăста ўнерçĕ.

Ан тив, вĕсене, чăваш халăх художникĕсен чи пултаруллă ушкăнне, Чăваш Республикин художникĕсен канашĕнче ăнланма шутламарĕç, вĕсенчен сехĕрленсе ўкрĕç, çĕнĕлĕх кĕрешĕвĕнче вĕсене, Владимир Агеевсемпе пĕрле, Раççей Союзĕн художникĕсен Канашĕнчен те кăларттарчĕç, вăйсăррăн таптама пăхрĕç. Пурпĕрех çĕнтерейменĕç кĕвĕçсем — хăйсен хытса типнĕ киçтĕкĕсемпе пурнăç кайăвне мăкан çулса юлчĕç. Вĕсем, — Петровсемпе Агеевсем — чăвашшăн юнне, чунне пама хатĕр тарăн шухăшлавçăсем, хăйсем пĕр чăмăра пĕрлешрĕç, йăлана кĕнĕ аваллăх керменĕнчен çĕмĕрсе уçлăха тухрĕç.

Çуратнă амăшĕ, тăрантарса вăй панă Вăрнар çĕрĕ Праски Виттине ниçта та нумаях тытмĕ, хăй патнех туртса килĕ. Ют халăхпа чăвашла калаçса вăл чăваш илемне тĕнче илемĕ çумне хутшăнтарать. Çавăнпа та:

Пуçу чăвашлăхпах минретĕр,
Хăлху тăри юрри итлетĕр,
Куçу çичĕ тĕспе вылятăр,
Туту Юратăва чуптутăр,
Аллу ĕç киçтĕкне вылятттăр,
Уру Чăваш çĕрнех таптатăр.
Вăрнарьенсем çапла калатпăр:
Халăхпала эс пулăн паттăр.

Вăрнар çĕрĕ, чăваш халăхĕ, юратнă ял-йыш сирĕнпех, Праски Витти. Сирĕн кĕввех ĕнĕрлет, сирĕн юррах юрлать: вĕç, вĕç куккук, вĕç, куккук...

*Хыпар, 198 №.*
*1996 çулхи юпа, 3.*

## *Праски Виттин Украинăри тусĕсем*

Писательсем-çыравçăсем пекех, художниксем-ӳнерçĕсем те талăкĕ-талăкĕпе пĕр канăçсăр çынсем. Çывăрнă чухне те пуç миминче сăнарлăх хĕлхемĕ сӳнмест. Ялан пуш вăхăтсăр. Çавна пулах Праски Витти тусăма та, кăшт калаçса лармаллăх ярса илес тесе, вăхăта кунран-куна ирттерсе пытăм. Ӳнер музейĕнче, Николай Карачарсковăн çитмĕл çулхи менелник куравĕнче, Виталий Петрович хăй вĕрентекен çамрăк хĕрсен çуначĕ айĕнчен ман пата ирĕкленсе тухаймарĕ. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче тин хĕвеллĕн ăшăтса пăхрĕç унăн куçĕсем ман еннелле. Ку хутĕнче те — нумайлăха мар. Сехечĕ çине пăхсах калаçать. Професс-сорăн университетра ученăйсен канашĕнче пулмалла-мĕн. Унта сӳтсе явакан тĕп ыйтусенчен пĕри шăпах ăна та пырса тивет иккен — чăваш ачисене ӳнер искусствине чăвашларах вĕрентесси пирки. Сăмахĕ-юмахĕ манăн пуçра тахçан çуралнăскерехчĕ-ха. Тĕлпулусенче хăй ялан украин ачисене аса илет те, çавăнпа çав туслăх историне питĕ пĕлес килчĕ.

Акă эпĕ Мускав анлă урамĕнчи 38-мĕш номерлĕ çӳллĕ çуртра, 29-мĕш хваттерте. Арăмĕ, Лидия Михайловна, пĕр хушă килĕнче пулманнине пула-ши, вăл хваттерне мастерской майлах туса янă. Ăçта ирĕклĕ вырăн пур, çавăнта темĕн тĕрлĕ картина сарса хунă, урайĕ те ӳкерчĕксемпе тулса ларнă. «Кунта сана пĕр шĕвĕркке кирлĕ те йĕрке тума», — тесе шӳтлекелесен, вăл: «Унччен ирĕклĕн саркаланас-ха, ачасен ачисем, ачисен ачисем çитсе пӳлĕмрен-пӳлĕме чупма пуçласан, эпĕ чи çӳлти хута, хамăн мастерскоя вĕçсе таратăп. Ӳкернĕ-пурнăçланă ĕçĕ нумай та, аптраса ӳкетĕп, ниçта хурса пĕтерейместĕп. Унта-кунта кăтартма, пичетлеме хатĕрлеме тытăннă-çке. Сирĕн — кĕнекесем, пирĕн — куравсем. Авă, Киевран Бородай тусăм ярса панă ӳнер гобеленне те майлаштарса хураймастпăр-ха. Канăçĕ те, вăхăчĕ те çук. Минстройпа «Гражданпроект» заказне пурнăçласа халран кайнăнах пăшăхмалла пулчĕ. Ижевскри Станислав Медведев художник-монументалистпа пĕр уйăх хĕпĕртесе, хавхаланса нушалантăмăр. Владимир облаçĕнчи Гусь-Хрустальный хулинче унччен те илемлĕ япаласем туса курнăччĕ-ха. «Вунсаккăрмĕш ĕмĕртенпех тĕнчене тĕлĕнтернĕ кунти кĕленче маçтăрĕсем. Эпир те «Художественные промыслы» опытлă заводра вĕсенчен вĕрене-вĕрене пĕçернĕ тĕслĕ-тĕслĕ кĕленчерен пин те виççĕр ытла пай ăсталарăмăр. Вĕсене пухса, Чăваш Республики Правительствин çĕнĕ çурчĕн мал енне, çӳле вырнаçтарнă ĕнтĕ. Каçалапа витраж Атăл енчен йăлтăркка тĕспе илем çути сапать. Ултă метр диаметрлă çак ӳнер ĕçĕ — тăван Шупашкара парнеленĕ çĕнĕ произведенисенчен чаплăраххиех пулчĕ пулмалла. Çынсен хакĕ мĕнле, пĕлместĕп. Манăн хамăрăн тăван Вăрнар поселокне илемлетнĕ çĕре те хутшăнас килет те... Район акатуйне те çĕнĕлле капăрлантарса

чапа кăларас, унăн йăли-йěркине тěпрен тěкěнмесěр, тематикине, содержанине урăхларах сăнлăн, халăха тыткăнламалларах, шухăшлаттармалларах, интереслěрех йěркелеттерес килет. Канма-савăнма пынă çын акатуйěнчен çěнě ěмěт-шухăшпа, хавас туйăмпа хавхаланса килне таврăнтăр. Акатуй çырмари концертпа та, спорт вăййипе те, шашлыкпа ěçкě-çикěпе те кăна ан ирттěрччě. Тем тěрлě вариант та пур манăн ку енěпе. Чěнсен, ыйтсан — пулăшма яланах хатěр», — тесе, пит хěрсе, алăкěн-тěпелěн утрě-утрě те, кăшăрт пырса ларчě ман çума.

Ыйту хыççăн ыйту, хурав хыççăн хурав шăрçаланма пуçларě тинех.

— КОРР.: Эсир, чăваш художникěсем, юлашки çулсенче самай тěнче касса çӳрерěр, нумай выставкăсенче чăваш наци культурине тěрлě халăхсем хушшине сартăр, ылтăн, кěмěл медадьсем çěнсе илме пултартăр. Саншăн халě Венгрие, Испание, Германие тата ытти ют патшалăха кайса унти ӳнерçěсемпе ушкăнланса, ăмăртса ěçлесси хăв çуралнă Малти Ишеке кайса килнинчен те çывăхрах пуль?

П. В.: — Мěн калас, хăнăхрăм эпě творчествăлла çулçӳреве. Нумай, пысăк ăнăçу турăм çав хушăра. Нумай-нумай наци культурин аталанăвěнче чăваш халăхěн мěн ěмěртен пыракан йăли-йěрки, культури те тивěçлě вырăн йышăнма пуçларě. Ют халăх художникěсенчен пěрмай вěренетěп. Пěрле шутсăр аван ěçлеме. Кăмăл уçăлса пырать. Çав украинецсемех...

КОРР.: Хăçантанпа пырать вăл сирěн чăваш-украин туслăхě?

П. В.: Ай-вай, унтанпа ěнтě... Çур ěмěр те иртрě. Паллă, ача чухне эпир хамăр ялти, таврари чăваш сăнě-пуçне курса, чăваш йăлийěркине хăнăхса пурăннă. Вăтам шкул хыççăн Шупашкарти ӳнер училищине вěренме кěрсен те хамăр чăвашсем хушшинче чăвашлах çăрăлкаласа пурăннă. Çав шайпа лăплантарнă хамăра хамăр, «пырать пире, чăвашсене» текен психологи ункинчен ниепле те хăтăлса тухайман. Чухăнлăх, айванлăх, хăравçăлăх туйăмě ытларах хуçаланнă пирěн ăшра, чун-чěрере. Ытти наци çыннисемпе хутшăнайман та, çывăхланайман та. Мěскěнлěх чатăрне манăнне Пěрремěш Петěр патша хули — Питěр, хěвел хăйěн çутă пайăркипе уçса янă пекех, сирчě.

Начарах вěренмен пулмалла çав ӳнер искусствине. Тăван республика хěрěх çул тултарнă тěле Атăл çыранěнче тěп хулан уяв капăрлăхěпе халăха тěлěнтерněччě. Хамăн ěмěрте пěрремěш хут калăплă илем ěçě туса кункурсра çěнтертěм. Акă, диплом та кěсьере, пурнăç çулě те уçă. Культура министерстви панă шанăç хучěпе Ленинградри И.Е.Репин ячěллě ӳнер, скульптура тата архитектура аслă шкулне кай та кěр.

КОРР.: Тěлěнмелле, сана вěренме кěмешкěн пěр аслă шкула направлени панă, эсě вара урăххине суйласа илнě. Çăмăл çулран, йывăртараххине. Çапла мар-и?

П. В.: Ха-ха, халь калама ҫăмăл та, ун чухне пайтах вăшталанмалла пулчĕ. Тĕрĕсех, йывăр ҫул ҫинех тухрăм. Мана анне суйман та, каппайланма та чун паман, пурнăҫра чи тĕрĕссине, усăллăраххине суйласа илме тавҫăрмаллăх пил панă. Енчен те, культура министерстви шантарнă официаллă хутпа «репинкăна» кĕрсе кайнă пулсан, мана хамăр чăваш художникĕсем кайран ҫисе яратчĕҫ. Кĕвĕҫӳ чăваш чунĕнче-юнĕнче мĕнле вĕренине те туйма, тавҫăрма пултарнă. Тепĕр сăлтав та канăҫсăрлантарчĕ. «Направленипе вĕренме кĕресшĕн ҫунакан ку чăваш ачи ăс-тăн енчен кăшт катăкрах пуль-ха», — тесе ан шухăшлаччĕр «репинка» профессорĕсем, терĕм тата. Лартăм та ҫыртăм вара заявлени «мухинкăна». тытрăм экзаменсене. Ăнăҫлах. В. И. Мухина ячĕпе хисепленекен ӳнер промышленность аслă училищин студенчĕ пулса тăтăм.

Чи интересли акă ҫакăнта пулчĕ-ха. Экзаменсем тытнă вăхăтра мана институт общежитине шукăль тумланнă, йăрăс пӳллĕ, хитре сăн-питлĕ, сенкер куҫлă йĕкĕтсемпе вырнаҫтарчĕҫ. Украинăран иккен. Ужгород, Мукачево хулисенчен килнĕ маттурсем, ҫивчĕ чĕлхеллĕ, питĕ ҫаврăнăҫуллă, хăйсене типтерлĕ тытма пĕлекенскерсем, мана чи малтанах тыткăнларĕҫ. хамăр ҫити-ҫитми пурнăҫра нушаланса имшеркке ӳсни, тавракурăм енĕпе аталанайманни, чĕлхе-ҫăвар якалайманни мана вĕсем умĕнче вăтантарсах пăрахрĕ. Вырăсла кăна мар, украинла, полякла, чехла, словакла, венгрла таса калаҫаҫҫĕ пĕрпĕрин хушшинче. Хула киоскĕсенче туяннă США, ФРГ журналĕсене акăлчанла-нимĕҫле хăйсем тĕллĕнех шакăртаттарса вулаҫҫĕ. Эпир вара, нимĕҫле аран-аран вĕренкеленисĕр пуҫне, мĕн пĕлетпĕр? Шупашкарти училищĕре те пире тусанлă мишукри пек ҫыхса усранă, унтан пуҫа кăларттарман. Каккуй ют патшалăх хаҫат-журналне тытса вулама унта.

Анăҫ ен ачисем кăмăлĕпе те уҫă пулчĕҫ. Ултă ҫул пĕрле вĕренсе, пĕр-пĕрне пулăшса пурăнтăмăр. Шандор Шихерман «чарльстон» ташлама вĕрентрĕ. Тĕкĕр ҫине пăхса хам тĕллĕн те авкаланаттăм, тăпăртататтăм. «Анне курас пулсан-и мана, ывлăм тытамак чирĕпе аптăрать, тесе кулянса вилет ĕнтĕ», — шухăшлаттăм. Аякра ĕҫлесе тупнă укҫапа йăрăмлă костюм, шлепке, матруссен аллинчен Гонконг кĕпи, итальянецсен лакпа витнĕ шĕвĕр пуҫлă пушмакне туянтăм. Хамăр пӳлĕм ачисемех мăя бант ҫыхма вĕрентрĕҫ. Нева хулинчи чаплă театрсене ушкăнпа ҫӳреттĕмĕр. Ушкăнпа ӳнер ĕҫне тума та вĕсенченех вĕрентĕм. Ăмăртса аппаланаттăмăр. Шанчăклă, ăслă-тăнлă, анлă пĕлӳллĕ, тавракурăмлă, уҫă кăмăл-туйăмлă украинецсенчен уйрăлас та килместчĕ. Институтран вĕренсе тухсан, Иван Нимиц Алма-Атана ĕҫлеме кайрĕ, Иван Богович Мукачево хулин тĕп архитекторĕ пулчĕ, Калман Шлихтляйтнер Ужгородра, паллă монументалист.

КОРР.: Ҫыхăну тытатăр пуль-ха вĕсемпе?

П. В.: Пĕрне-пĕри манмастпăр, хушăран тĕл пулкалатпăр. Кашниннех пĕлес килет-ҫке пĕрле вĕренсе пурăннă юлташĕн пурнăҫĕ, пултарулăх ӳсĕмĕ ҫинчен. Тĕнче симпозиумĕсенче, выставкисенче, ытти ҫĕрте те, ятарласа та, ăнсăртран та, — сиксе тухатпăр пĕрпĕрин умне. Володя Макаренкопа, акă, 1999 ҫулта Парижра курнăҫса ыталашнăччĕ. Эпĕ ун чухне шăпах хамăн выставкăна йĕркелеттĕм. Мана вăл хăш-пĕр енчен пулăшрĕ. Хĕрĕх ҫул ҫак паллă хулара пурăнать. Хăнăхрăм, илем тĕнчи сарлака, хăв пултарсан, таҫта та ырлăх саншăн, тет. Ҫăмăлах мар иккен ирĕклĕ ӳнерҫе Анăҫра та. Сăмахран, Парижра 50 пин паллă художник, вĕсенчен 5 проценчĕ ҫеҫ ҫав ĕҫпе тăранса пурăнать. Вăл шутра — Макаренко та. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, ҫулталăкра унăн та 500—600 ӳнер ĕҫĕ тумалла. Унсăрăн телей кураймастăн, пурнăҫ пушмакĕ айĕнче таптанса юлатăн. Ку вăл — Анăҫри пурнăҫ йĕрки-тытăмĕ. Шăпах унта Бородай та персе ҫитнĕччĕ.

КОРР.: Кам-ха вăл Бородай?

П. В.: О-о, питĕ вăйлă ҫын, ҫав тери ырă чунлă, пултаруллă украинец, Гени, СССР халăх художникĕн, тĕнчипе паллă скульпторăн, монументалистăн, Василий Захарович Бородайăн ҫывăх тăванĕ. Киевра пулнă чухне академик-ӳнерҫĕн скульптура тата графика произведенийĕсене пăха-пăха тĕлĕнеттĕм. Манăн тусăм та аслă тăваннех хывнă. Александр Андреевичпа тĕл пулни маншăн пурнăҫăмри чи паллă та телейлĕ самантсенчен пĕри шутланать. Эпир унпа миҫе хутчен ăмăртмарăмăр-ши? Кечкемет хули — вĕри эмальпе ĕҫлекен монументалистсен тĕнчери тĕп хули-ҫке. Кам кăна пурăнмасть пулĕ унта. Мĕнле кăна илемлĕх шăранмасть пулĕ нумай-нумай халăх художникĕсен пуҫĕ-алли урлă. Кашниййĕ хăйĕн наци культурин ҫитĕнĕвне палăртать, ăна тĕнчере чи вăйли, чи чапли тесе мухтанса кăтартма тăрăшать. Ăс-тăн кĕрешĕвĕ те ай-яй хĕрӳ, шелсĕр. Куҫа кĕретех таптаҫҫĕ сана. Ҫӳлелле ҫĕкленсе ҫĕнтерӳ тӳпинче ярăнма кашниннех май килмест. Эпĕ хамăрăн вилĕмсĕр «Нарспи» сăнарĕпе чăваш хĕрарăмĕн, чăваш халăхĕн, Бородай вара хăйсен мухтавлă «Кобзарĕнчи» Катерина сăнарĕпе украин хĕрарăмĕн, украин халăхĕн пурнăҫне вĕри эмаль тĕсĕнче сăнарласа, пĕтĕм тĕнчери искусство мухтавне темиҫе хутчен те черетпе ҫĕнсе илме пултартăмăр. Наградăна Кечкеметре ăмăртакан художниксен чи чаплă ĕҫĕшĕн ҫулталăкра пĕрре параҫҫĕ.

КОРР.: Ҫавă-и-ха вăл ак ҫак чаплă гобелен-произведенин авторĕ?

П. В.: Шăпах ҫавă. Ай маҫтăр-ҫке. Ай епле пахалăх, пур енĕпе те чаплă ăстаҫă вăл. Александр Андреевичăн мăшăрĕ те, Оля ятлă хĕрĕ те пултаруллă ӳнерҫĕсем. Ăру тăсăмĕ вĕсен илемлĕн аталанать.

Украинăра тата тепĕр гобеленҫă — тус пур манăн — «мухинец» Михаил Кищенко. Пĕр вăхăт вăл Минскра ăсталаса пурăнчĕ. Ҫав ху-

шăра тĕнче тĕлĕнтермĕшĕсен Гиннес кĕнекине кĕрсе юлчĕ. Ниҫта ҫук гобелен ăсталарĕ. Ăна вырнаҫтарма вырăн тупаймаççĕ. Телевиденипе кăтартнăччĕ, стадиона шăнăҫмасть. Шур вырăссен историне, кĕрешĕвĕпе ҫĕнтерĕвне, Белорусси патшалăхĕн ҫитĕнӳ тапхăрĕсене, хальхи пурнăҫ аталанăвне, халăх паттăрĕсене тĕлĕнмелле илемлĕх кăтартăвĕнче сăнарланă. историлле произведени валли халĕ ятарлă ҫурт хатĕрлеççĕ. Асăрханă пуль, Лукашенко президент ҫав гобелен умĕнче часчасах ҫĕршывшăн паллă сăмахне калать.

Йышлă манăн Украинăра туссем-ӳнерҫĕсем: Киевра — Гайдамака, Днепропетровскра — Данилов, Ужгородра — Монайло тата ыттисем те. Маншăн вĕсем чунпа, ĕҫпе ҫывăх ҫынсем, талантлă маҫтăрсем. Вĕсем — манăн пурнăҫа илем кӳрекенсем.

КОРР.: Эсир вĕсене пĕр ҫĕре, хамăрăн Чăваш енне, Шупашкара, Вăрнар тăрăхне, Малти Ишеке пухма шутлатăр пуль-ха та...

П. В.: Тахҫанхи ĕмĕтĕмех ку. Ниепле те пурнăҫланаймасть. Хăҫантанпа йыхравлатăп ĕнтĕ. Нихăшĕ те хăйĕн ĕҫĕнчен вăхăтлăха та пулин хăпса Атăлта шыва кĕме, Ҫавалта пулă тытма ҫитеймерĕ-ха. Пурте сăмах параççĕ, шантараççĕ. Халĕ ĕнтĕ ҫапла шутларăм: коллективлă портрет тăватăп. Ҫитмĕл ҫул тултарнă тĕле ҫĕнĕ картинăра пурте ман тавра пуҫтарăнаççĕ. Ҫитес ҫулхи кĕркунне.

*2005 ҫулхи ҫу уйăхĕ.*



*Вăрнар ентешлĕхĕ Праски Виттине 60 ҫул тултарнă ятпа саламлать. 1996 ҫул, Шупашкарти ӳнер музейĕ.*

# ХАЛĂХРИ ЧЫСЛĂ ЯТ

Алексей Александрович Воробьев 1922 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнче Чăваш Республикинче, Вăрнар районĕнчи Мăн Явăш ялĕнче, вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Хăйсен ялĕнчи пуçламăш шкулта, унтан тулли мар вăтам шкулта вĕреннĕ.

1941 çулта вăл Çĕрпӳри ялхуçалăх техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Çав çулах ăна Канаш районĕнчи çĕрĕç пайне ĕçлеме янă, каярахпа Вăрнарти машинăпа трактор станцине куçарнă, унта вăл участок агрономĕнче ĕçленĕ.

1942 çулхи май уйăхĕнче вăл фронта нимĕç фашисчĕсемпе кĕрешме кайнă. Сталинград патĕнчи хаяр çапăçура йывăр аманнă. Вăрçăри паттăрлăхшăн ăна виçĕ медальпе наградăланă.

Кăштах сывалса таврăнсан, Алексей Воробьев малтан хăйсен ялĕнче агроном, унтан колхоз председателĕ пулнă. 1945 çулта ăна Йĕпреç районĕнчи МТС директорне лартнă. 1946 çулхи кĕркунне вăл Хусанти ялхуçалăх институтне вĕренме кайнă. Вăрçăра суранланнă сывлăх тапĕр хут хавшатма тытăннă пирки унăн кĕçех яла таврăнма тивнĕ. 1955 çулччен вăл хăйсен Ленин ячĕпе тăракан (халĕ Ульянов ячĕпе хисеплененнĕ.

А. А. Воробьев 1957 çултанпа Шупашкарта пурăнать. Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи радиокомитетра ялхуçалăх передачисен редакцине ертсе пырать. Мускавра Горький ячĕллĕ литинститутра вĕреннĕ хыççăн, Чăваш писателĕсен Союзĕн литконсультатĕнче ĕçлет. 1964 çултанпа вăл СССР писателĕсен Союзĕн членĕ. Поэзири ӳсĕмсемшĕн ăна Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл ячĕпе хисепленекен премине панă. Унăн чăвашла — 12, вырăсла — 6 кĕнеке тухнă.

Алексей Воробьев 1976 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче Шупашкарта вилнĕ.

Вăрнарти тусăм М. А. Васильев, пĕрле хаçат кăларнă чухне, ялан хăйĕн ялне хăнана чĕнетчĕ. «Алексей Александрович килне килет». «Воробьев колхоз хуçипе Михаил Петрович Петровпа ятарласа уй тăрăх курса çӳресшĕн». «Çурçĕр Флотĕнчен Виктор Туринге капитан-лейтенант курма таврăннă та поэзи каçне Алексей Александрович ятарласа ун ячĕпе ирттересшĕн...» тесе хăналăх серепине лартсах пыратчĕ хăй те каçса кайсах лирика туйăмĕпе вылякан çыравçă. Те ĕçри, те вĕçри сăлтавсене пула эпĕ Мăн Явăша кашнинчех çитеймерĕм. Хамăрăн чаплă ентешĕмĕрпе Вăрнар редакцийĕнче, Шупашкарта темиçе хутчен те тĕл пулса калаçнăччĕ-ха.

Шăпа çулĕ телейлĕ теççĕ те, çаплах пуль çав. Çав çул çапла 1974 çулхи çуркунне чăваш ăс-хакăл вучахĕсенчен пĕрийĕн умне çитсе тухрĕ.

Çу уйăхĕн илемлĕ кунĕ — пичет кунĕ. Хĕвел çĕр питне ачашшăн çутатса тĕнчене чĕртет. Тӳпери тăрисен юррине хупласа хăватлă тракторсем уй кĕввине пуянлатаççĕ. Нӳрлĕрех кăпăшка çĕр ылтăн тулă пĕрчисене кăкăрĕ çумне йышăнать. Тырă акма тухнă пĕрремĕш кун. Кабинăран гусеницăсем çине тухса тăнă çĕр ĕçченĕ ялалла çывхаракан автобуссемпе çăмăл машинăсене карттусĕпе сулласа саламлать.

Хĕрӳ вăхăт пулин те, культура çурчĕ умĕнче халăх йышлă. Пысăк Упакассине кӳршĕ ялсенчен те, Йĕпреçрен те капăр çынсем Семен Элкер менелникне хавас кăмăлпа пухăннă. Аслă уява районта тивĕçлипех хатĕрленсе кĕтсе илтĕмĕр. Мана та, редактора, юбилей комиссине кĕртнĕччĕ. Ялĕнче уйрăмах тимленĕ.

Ушкăнăн çурма ункă варринче хăнасене çăкăр-тăварпа сăйлаççĕ.

— Тавтапуç ырă кăмăлшăн, хамăрăн юлташа Семен Васильевича пĕрле илсе килеймерĕмĕр пулин те, вăл пирĕнпех, юнашарах, пирĕн чĕререх, — илтĕнет Алексндр Кăлканăн çирĕп сасси. Аслă юптаруçă тĕрленĕ алшăлли çинчи çăкăра Аркадий Эсхеле парать те аллине сăра курки тытать. Кăпăклă чăваш сăрине — Упакасси сăрине — пурте активсе пăхаççĕ: Элкер мăшăрĕ Евдокия Алексеевна, Аркадий Эсхель, Алексей Воробьев, Георгий Краснов, Василий Давыдов-Анатри, Анисим Асламас. Хветĕр Агивер, Николай Теветкел, Порфирий Афанасьев, Петĕр Ялгир, Виталий Родионов, Зоя Ананьева, Венера иванова, Иван Аршинов.

Ачасем хăнасене чĕрĕ чечек çыххи парнелеççĕ, вĕсене çывăхри вăрмантан, ĕлĕк-авал Чакка çӳренĕ çĕртен татса килнĕ.

Хĕрӳ сăмах — асаилӳ, мухтав, пултарулăх сăмахĕ тыткăнлать культура çуртне пухăннисене. Артистсем юрă шăрантараççĕ, сăвăçсем хăйсен чĕлхе-шухăш ăсталăхĕпе тĕлĕнтереççĕ. Акă, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премине тивĕçнĕ Алексей Воробьев та халăх умне хăюллăн утса тухать.

— Кунта килес умĕн, ĕнер, — тет вăл кăшт хумханарах парса, — эпĕ ятарласа сăвă çыртăм. Пĕчĕккĕ чухне те сирĕн яла Вăрнар енчен сахал мар килнĕ, 1945 çулта, Йĕпреç МТСĕнче ĕçленĕ чухне те пулнă. Çавăнпа мана ял сăнĕ улшăнни, сирĕн ӳсĕм, аталану уйрăмах куçа лайăх курăнать.

Сцена çумĕнчи пӳлĕмре иксĕмĕр ентешле калаçса асилсе ларнă вăхăтра Алексей Александрович çав сăвăпа мана малтанах паллаштарнăччĕ-ха, Эсхель те вуласа пăхрĕ ăна, мухтарĕ. Улăпла ĕç, паттăр ĕç тунă, халăхра чыслă ят, тивĕçлĕ ят илнĕ ăсчах ентешĕсене халаллană сăнарлă илем сăмахĕсем пĕрремĕш хут Упакассинче янăранине хăлха тăратсах итлерĕмĕр эпир те. Сăвва манăн пĕтĕмпех илсе кăтартас килет, «Упакасси» ятлă вăл.

Салам сана, Упакасси,
Эльгер поэт çуралнă ял!
Сăмах нумай ман каласси,
Анчах епле çитерĕн хал!
Кунти çĕрсем — вăрман енчи,
Кушлавăш уйĕ тенĕ ен,
Эп çавăнта, вирьял ачи,
Килсе çӳренĕ пĕчĕкрен.
Ани-çаранĕ хĕсĕкрен
Тертленнĕ халăх авалтан.
Асаплăн выçă вилесрен,
Юрать-ха, çăлнă сĕм вăрман.
Хĕле кĕрсессĕн пĕр шăпа —
Çынсем пĕлмен кунне-çĕрне,
Тăрмашнă вутă-шанкăпа,
Турттарнă пӳртлĕх пĕрене.
Пӳлме çаралнине кура
Сутмашкăн тивнĕ çурт-йĕре.
Кĕлет-сарай е хыр пура
Пайтах ăсаннă ют çĕре.
Кунта тăпра та — кĕл тăпри,
Тырпул ӳсет-и ун çинче?
Вĕçсе килмен кунта тăри,
Юрланă урăх уйсенче.
Аса илме ырри мĕн пур?
Пит йывăр килнĕ чухăна.
Эльгер поэминчи хĕн-хур
Хĕстернĕ хĕскĕч пек ăна.
Халь ĕнтĕ урăх самана.
Тĕп пулчĕ хурлăх та асап.
Упакасси, сăн-сăпатна
Эп тĕлĕнсе паян сăнап.
Тĕрленĕ çĕн çуртсем, куран,
Тăрри çыруллă — кил, вула.
Вăрман пек ялĕ катаран,
Çитсе кĕретĕн — чăн хула!
Телей ыйтмасть ял-йыш кивçен,
Пуян пурнать колхоз касси.
Çак тăрăхра, ĕçпе илсен,
Малта пырать Упакасси.
Мĕн чухлĕ паттăр çак ялтан
Çунат сармарĕ хальçине?
Салам калатăп кăмăлтан

Ĕçчен те ырă çынсене.
Тен, çĕнтерӳ тума ансат?
Çук çав, ĕçре тупса ăна.
Хирте тырпул пулать ăнса
Тар пĕрчине тăксан кăна.
Мухтав Упакасси ялне!
Эп хĕпĕртетĕп чĕререн:
Çемен пиччен манми ятне
Кунта упраççĕ килĕрен.
Куратăп эп: хастар чунсем
Пит хапăл сасса.
Шанас килет, малаш кунсем
Çĕн эльгерсем çуратасса.
Çак ĕмĕт — чи пахи, таси,
Вăл кĕрĕ пурнăça кал-кал.
Ялан ыр кур, Упакасси,
Тăван поэзири мăн ял.

Сцена çумĕнче, артистсен пӳлĕмĕнче, Алексей Александрович Пысăк Упакассинче хăй тĕлĕннине пытармарĕ. Манран вăл хăй ĕçленĕ МТС пирки ыйтса пĕлчĕ, ун чухнехи çынсене аса илчĕ. Эпĕ ентешĕме, хам кунта чылай ĕçленĕ май, нумай-нумай ырри çинчен каласа патăм. Унта вăл тепринче ятарласах çитесшĕнччĕ. «Пысăкупакассисене тарăн касă çăкăрлă турĕ, Шордеев сухапуçне упаллах туртать çав», — терĕм те, Воробьев куçлăхне хывса чеен кулчĕ, çыравçăсемпе çĕкленӳллĕн ахăлтатса тăракан Антон Григорьевич еннелле çаврăнчĕ те: «Семен Васильевичпа иккĕшĕ те вĕсем çĕр шкулĕ — чи аслă шкул пĕтернĕ çав, çавăнпа пĕри — поэзире, тепри — çĕр çинче тарăн йĕр хăварнă», — терĕ пуçне ухса.

Çĕр тухтăрĕ Алексей Воробьев Пысăк Упакассинче Шордеевпа уйрăммăн та чылай вăхăт калаçрĕ, хам ăнкартнă тăрăх, паллах, вĕсем Эльгер пултарулăхне те, поэзири лару-тăрăва та шĕкĕлченĕ пулас çук, мĕншĕн тесен Антон Григорьевич литературăран аякра тăракан хресченччĕ, Алексей Александрович та кайран, сăмахне çăкăр çине куçарнă май, «Трудовикри» çĕр академикне пит тавçăруллă, туйăмлă мужик тесе çине-çине мухтаса пынăран ăнлантăм вĕсем мĕншĕн хуйхăрнине, ĕмĕтленнине: вăйлă тырпулшăн. «Çĕр чăмăрĕ евĕр çавра Çĕн çăкăр куратăп умра», — ăшра кĕвĕлесе калаçнă пуль ĕнтĕ вăл тепĕр çĕр тухтăрĕпе.

Алексей Александрович йĕпреçсене те уй-хир культурине лайăхлатма пулăшнă, тăван Вăрнар тăрăхĕнче те тулли пучах ӳстернĕ. Унăн хресчен туйăмĕпе çырса кăларнă «Хиртех ман чун», «Йăмра», «Хĕрлĕ пучахсем», «Ывăçри тырă» кĕнекисем ял çыннисен кĕреке кĕнекисемччĕ.

Серте яшки тутаннă хыççăн, чăх тукмакки алла тытсан, сăра-эрех курки шăнкăртатсан, купăс сасси ян-ян кайсан... Элкер уявĕ иртрĕ пит хавас. Çыравçăсем те, вăл шутра Алексей Воробьев та, ташша сӳрĕç кăна.

Тепĕр çирĕм çултан та иртсе кайман иккен çак хаваслăх. Семен Элкерĕн çĕр çулхи менелникне эпир чăваш çыравçисем, йышлăн килтĕмĕр. Ун чухнехи çамрăк çыравçă, Кушлавăш каччи Виталий Родионов, хăй хайланă Кушлавăш гимнне ял артисчĕсене юрлаттарнă хыççăн, мана çапла каларĕ: «Çакăнта халăх хушшинчен кĕç-вĕç Алексей Воробьев кампа та пулин калаçса тухассăн, мăнаçлăн сăвă вуласссăн туйăнать». Эпĕ те хамăн çавнашкал шухăшăмах пĕлтертĕм ăна, «çĕн эльгерсен ретĕнчи» пултаруллă çыравçа, ученăя, ырă кăмăллă чăваша. «Кушлавăш текен вуникĕ ял уйĕ» ăслăлăх, ĕçченлĕх тухăçĕпе пуянлансах пырать.

*Хурăнсур Çармăс ялĕ,*
*1997 çулхи ака уйăхĕн 3-мĕшĕ.*

## Вăрнарпа Йĕпреç çĕрĕ вăй панă

Патăрьел тăрăхĕнчи Каншелтен Йĕпреçе ĕçлеме лекнĕ Ермошкин, Саратоври ялхуçалăх инженерĕсен институтĕнче илнĕ пĕлӳпе, вăрман ен хуçалăхĕсене техникăпа аталантарассишĕн мĕнле тăрăшнине эпĕ питĕ аван пĕлетĕп. Тăвай чăвашĕпе Владимир Иванович Ушмаринпа Пантелеймон Михайлович районти машинăпа трактор станцине, каярахпа юсавпа техника станцине, «Сельхозтехника» пĕрлешĕвне пĕчĕк завод майлах ĕçлеттерсе янăччĕ.

Йĕпреçре эпир унпа утмăлмĕш çулсен варринче чи малтанах литература юмах-халапĕпе çывăхлантăмăр. Ачаранах сăвă-поэмăпа, калав-романпа аппаланнă иккен вĕсем — кӳршĕ ялсенчи Панька Ермошкин, Геннадий Лисин (Айхи), Ева Лисина, Ваçлей Игнатьев. Хальхи паллă режиссер Алексей Васильев вĕсене спектакльсенче артист пек выляттарнă. Çав вăхăтри сăнарлăх илемĕ унăн вăйлă питкуçĕнче чăваш хĕвелĕн çутă пайăрки пек çиçетчĕ. Туслăх вунă çула çывхарнă тĕлелле те вăл мана хăйĕн ачалăх, çамрăклăх поэзийĕн çăкăрне хуçса-касса пĕр татăк та, пĕр чĕл те тутантармарĕ.

«Эпĕ поэт мар, эпĕ — инженер, Айхисем ӳстерччĕр поэзи тырпулне, пире вăл тутлă çăкăра мĕнле тутăпа çисе тăраннипе те çитет», — тетчĕ те Ермошкин мана машинăна ларма кăчăк туртатчĕ. Çӳреттĕмĕр вара ял-ял тăрăх уазикпе. Упакасси упин менелникне çитейменшĕн час-час кулянатчĕ Семен Васильевич Элкер сакăрвуннă тултарнă вăхăтра, çу пуçламăшĕнче. Ун чухне вăл Мускавраччĕ. Ăна, республи-

кăри чи ăста ертӳçĕ — инженера, Пĕтĕм Союз калăпăшĕпе ирттерекен семинара хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пама чĕннĕчĕ.

Кĕçех çитрĕ те акă пирĕншĕн тепĕр телейлĕ кун. Йĕпреçе Вăрнартан Алексей Воробьев сăвăç хăйĕн Пегасĕпе юрттарса каçрĕ. Ун пирки эпĕ тӳрех Ермошкина систертĕм. Вăл уазикĕпе туххăмрах парти райкомне кĕрлеттерсе пычĕ. Виçсĕмĕр район тăрăх калаçăва тухрăмăр. Алексей Александровичăн чĕлхи çинче пĕр сăмах кăна: «Ай епле улшăннă Хурамал, Чăваш Тимеш, Упакасси...» Пантелеймон Михайловичăн та пĕр хурав: «Хурамалта эпир юсавпа-техника мастерскойĕ турăмăр, вĕсен 30 трактор, 25 автомашина...» «Хĕрĕх пиллĕкмĕш çулта, эпĕ кунта МТС директорĕнче ĕçленĕ чухне, манăн 20 трактор çеçчĕ...» — тесе пуçне пăркалать Воробьев. Çав самантрах вара вĕсем, Йĕпреçри икĕ хуçа, калаçăва пĕр çĕре кĕртеççĕ — аталану йĕрне. Хăйсем те сисмеççĕ çав, такăш хушăра тĕп калаçу уттинче такăнаççĕ те, ун çинчен пач манса кайса, сăнарлăх тĕнчине кĕрсе каяççĕ, чăваш, совет, тĕнче литературине тутлăхлăн шĕкĕлчеме тытăнаççĕ.

Воробьевăн кашни ялта тенĕ пекех паллană пĕр-пĕр вата тупăнатех. Çанăран туртмалла пуличченех асаилӳпе çĕтеççĕ вара. Çын йышлă çĕрте сăвă янăрать: поэт чĕлхийĕ те уй-хир кĕрлевĕпе вăйланать.

Алексей Александрович, Йĕпреçе таврăнсан, Ермошкин «хулипе» тата «завочĕпе» сăмах чĕнмесĕр — шухăшлавлăн та, калаçа-калаçа — тĕлĕнтермĕшлĕн те, аллисене пĕç çумне çапсах паллашрĕ, хăй кунта камантланă çулсенчех сыхланса юлнă йывăç çурт умĕнче шăппăн, карттусне алăра лӳчĕркесе, вăрахчен тăчĕ, астăвăмĕпе пĕрлех, унпа ĕмĕрлĕхех сывпуллашнăн туйăнчĕ.

Кĕрнеклĕ, кăмăллă, вĕçев шухăшлă икĕ директор калаçăвне итлеме те хавасла: сăмахĕ иккĕшĕн те мал ĕмĕтлĕ.

Вăрнарпа Йĕпреç çĕрĕ вăй панă чăваш шăпчăкне чикке çитичченех ăсатрăмăр. Çула май Шордеев патне кĕтĕмĕр. «Трудовик» колхоз ертӳçи, Социализмла Ĕç Геройĕ Антон Григорьевич хăйĕн эртел хуçалăхĕпе паллаштарчĕ, хăналанма вăрманти утара чĕнчĕ. Тăватсăмăр пĕвере пулă тытрăмăр. Пулă яшкине те, ăшаланă какайне те çирĕмĕр, пыл кăрчамине те тутантăмăр, юрларăмăр та, ташларăмăр та, хамăрла — чăвашла савăнса килентĕмĕр.

«Сывă пул — Йĕпреç, сывă пул — Упа касси! Тавах сана вăй панăшăн, поэзи лаççинче хĕрме пулăшнăшăн», — тенĕнех çиçрĕç. Мăн Явăш улăпĕн куçĕнчи хĕлхем йăлтăрккисем.

*2003 çулхи юпа уйăхĕн 20-мĕшĕ.*
*Шупашкар.*

## *«Тăван Атăл» парни*

Пултаруллă этем çурисем кама кăмăл тунине тата кама хăмăл выранне кăна хунине эпир аванах пĕлетпĕр. Чăваш сăмахлăхĕн-литературин явăнăвĕнче те питĕ уçăмлăн курăнать вăл. Пегас çине утланса Парнас тӳпине улăхнă çыравçăсемпе пĕрлех, Пегас хӳрине те çавăрса тытайман çыравçăсем те ĕнтĕ хальхи чараксăр ирĕклĕ саманара «чăваш халăх поэчĕсем» тата «чăваш халăх писателĕсем» шутланаççĕ. Пурин те — патшалăх ячĕпе панă пĕрешкел çутă хут тата хаклă паллă. Элкерсемпе Ухсайсем тата Хусанкайсемпе Уярсем тата Алгасемпе Артемьевсем чăннипех тивĕçлĕ-ха çав хисепе. Анчах Иван Мучин, Митта Васлейĕн, Валентин Урдашăн, Юрий Скворцовăн, Юрий Айдашăн, Николай Теветкелĕн, Валентина Эльбин, Алексей Воробьевăн ку таранччен те çуккă-çке çав патшалăх паллисем? Сатту вĕсен пурин те халăх палли пур — чăваш вулаканĕ хăй ячĕпе панă чи сумлă ят: «Чăваш халăхĕн чи юратнă çыравçи».

Талант картинче нихçан та çухалса кайман Хаетĕр Агивер вĕсене манран та ăслайрах карт хума пултаратчĕ. Тахçанах. Чăваш писателĕсен канашĕн ертӳçи, «Тăван Атăл» журналăн тĕп редакторĕ, пĕррехинче мана, куçран çивĕччĕн пăхса каларĕ: «Ентешӳ çитмĕл пиллĕк тултарать вĕт. Питĕ паллă тапхăр. Чаплăн палăртмалла ăна пирĕн». «Пĕлетĕп. Вилнĕренпе те çирĕм çул иртрĕ ĕнтĕ, çĕр çине аллă тăватă çул пуснă-пусман çут тĕнчерен уйрăлчĕ. Ухсай Яккăвĕ хыççăн унашкал çĕр поэчĕ-хресчен сăвăçĕ пирĕн Чăвашра пулманах пуль», — терĕм. «Астăватăн-и «Пуçелĕк» сăввине?» Эпĕ сăвă пуçне каласа патăм:

Шухăшăмсем чупаççĕ вĕçе-вĕçĕн,
Пусараймасть чĕре пăлхав хумне:
Çынна пулинччĕ юрăхлă ман ĕçĕм,
Вăл çăкăр пек выртинччĕ ун умне.

Питĕ йывăрлăхраччĕ эпир вăл вăхăтра — 1997 çулта. Чăваш кĕнеке издательствинче мухтавлă поэтăн юбилей кĕнекине кăларасси пирки никам та шантарса каламасть. «Çĕнĕ демократи ĕни» чăваш кĕнекине ывăнма пĕлмесĕр мĕшĕртеттерет. Литературăпа культура тата искусство журналĕ «Тăван Атăл» Чăваш Республики писателĕсен Союзĕшĕн тăванах марччĕ. Учредителĕсем: журнал редакцийĕн коллективĕпе Чăваш Республикин культурăпа наци хутшăнăвĕсен министерстви. Иккĕшĕ те халсăр: пĕрин — кĕсйи шăтăк, теприн — кутран пушă. Çăлăнăç тупмаллах. Тупрăмăр. Федор Георгиевич, А. А. Воробьевăн литература эткерлĕхĕн комиссине ертсе пыраканĕ, çапла шут тытнă: «Юратнă поэтăмăра, ырă кăмăллă юлташăмăра парне тăватпăрах». Министерство — учредитель журнал çине алă сулнă май, эпир ăна

йёркипе каларса тарассине пётёмпех хамар çине илнёччё. Пулашакансем-спонсорсем тупкаласа, журнала халах патне 3 пинрен кая мар çитеркелетпёр. Çулталак вёçёнчи номёре вара чаваш поэтне Алексей Воробьева халаллас терёмёр.

Ыйткалама тухса кайрамар таван хуламар Шупашкар тарах. Чаваш Республики Пенси фончён ман алакё умёнче ватам çулсенчи ватам пуллё, чан-чан чаваш сан-питлё «хамарял» хёрарамё кётсе илчё! Роза Кондратьева çак фондан пуçлахё иккен. Шакал-шакал калаçу саралчё унан ман пулёмне.

«Ма пулашас мар куккие, пулашас, вал хай те пире нумай пулашна, — хавасланчё Роза Алексеевна. — Атте ячёпе хурсан ман хушаматам Воробьевах. Кукки вал чылай ачалла пысак çемьере ÿснё. Пилёк ачаран кукки асли пулна. Ашшё варçара вилнё. Кукки ашшё выранёнче юлна. Кукки каланинчен пёри те иртеймен. Вал калана самах тура калани выранёнче пулна. Ман аттепе кукки пёр çулхи çынсем, пёр класра вёреннё, тусла пулна. Хай таванёсене çын тавасшан, вёрентесшён пулна. Тав таватпар ана уншан. Чапла çын пулсан та, пирён пата пырсан, хайне ман камалла тытса çÿреместчё кукки: ачасемпе ачаллаччё, ваттисемпе ваталлаччё. Çынна хёрхенетчё, пулашма васкатчё. Ана ёмёрех асра тытатпар».

Ыйткалакана ура тарантарать тенё пекех. Çёнё Кантар енне çитрёмёр.»Шупашкар керамики» уça акционер обществин президенчё Борис Николаевич Якушкин хайён ман ентешне пулашма хавасах пулчё. Васкамасар, чунран калаçрё вал:

«Алексей Александровичан Шупашкарти хваттерёнче пёрре кана мар пулна. Андриян Николаев урамёнче. Аша камалла, питё тараватçынччё вал. Хай пирки шавласа çÿреме юратмастчё. Мана унан саввисем питё камала каяççё. Вал питё чаваш чунне пырса тивмелле çырать. Вал çырнисенче — чаваш халахё хайён ылтан çÿпçинче упранакан санарлах. Пуçра шухашласа каларна санарлах мар ку. Халах чунёнче упранакан санарлах. Алексей Воробьев чаннипех те çёр какарёнчен тапса тухна саваç. Унашкал саваçсем тёнчене кашни çулах килмеççё пуль çав. Вал хайён тертлё ёçне чан-чан арçын пек питё тёплё турё. Таван çёршыва, чаваш халахне юратрё. Чаваш халахён çёнё çырулахёнче хайён пёртен-пёр выранне тупрё. Маншан вал пичче те, хамар Ман Яваш ачи те, чапла саваç та. Унашкал пултарулла саваça манас марччё. Унан пултарулах ёнчисене пухар, çуттан упраса хаварар. Унан палакне таван ялта лартасчё. «Воробьев фончё» тавасчё».

Терт пурнаçёнчи ыйткалакан хутаççи тула пуçласанах эпир Хветёр Агиверпе çана таварса ёçе пикентёмёр. Вал поэтан архивёнчи материалсене ман сётел çине пырса купаларё. Авторёсене яваçтарма пуçларамар.

Ятарлă номерпе тĕпленсе манăн лармалла пулчĕ. Номере калăплама Николай Чембек тăрăшса пулăшрĕ. Илемлĕх енчен ĕнтĕ эпир Федор Георгиевичпа журнала епле калăпламаллине тахçанах вĕренсе çитнĕ.

Ашшĕ Александр Андреевич Воробьев Хĕрлĕ Çартан, Смоленск облаçĕнчи Паново ялĕнчен 1943 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕнче А. А. Воробьев патне çырнă çыру та сыхланса юлнă иккен. Ку пирĕншĕн ылтăн пĕрчи пекех пулчĕ.

Поэтăн кун-çулĕ, пултарулăхĕ, синкерлĕ пурнăç тапхăрĕ, кĕрешĕвĕпе çĕнтерĕвĕ çинчен каланисемпе аса илнисем хушшинче вăл хăйĕн лирикипе вулаканăн чунне уçса пытăрччĕ тесе майлаштарса-шайлаштарса пытăмăр журналăн пур страницине те, сăвви-поэмине кĕртрĕмĕр. Тĕрлĕ çулсенче Алексей Припалов çапса илнĕ сăн ӳкерчĕксенче тата ытти ӳкерчĕксенче те — унăн ентешĕсем, юлташĕсем, ĕçтешĕсем чĕррĕн курăнаççĕ.

Иван Ивникпе пĕр ялта, Çавалкас Мăратра çуралнă Юрий Айдаш, тĕп редактор çумĕ, пĕр ирпеле шутсăр хавасчĕ, калаçăвне тӳрех Воробьевран пуçларĕ: «Хăйĕн хавхаланăвне Алексей Александрович ыттисен чĕрисене те хыватчĕ. Вăл тертре те, телейре те лăпкă пулма тăрăшнă. Ирпе çеç пăнчăсем лартрăм «Вăл Траль çăлкуçĕнчен шыв ĕçнĕ...» асаилӳ хыçне». Çав самантрах Юрий Григорьевич, куçлăхне хывса тепре тăхăнчĕ те, хулăнрах сассипе вулама пуçларĕ: «Шутлăрха, тăвата ял çĕрĕсен чикки тăвата кĕтеспе пĕр тĕвве тĕвĕленнĕ. Тĕвви — çăлкуç. Траль çăлĕ теççĕ ăна пирĕн тăрăхра. Тралĕ хастар чăваш пулнă иккен. Ячĕ халап-юмахра тăрса юлнă. Мăн Явăш, Туçи Мăрат, Çавалкасси, Сăкăт çыннисем тап-таса, тăп-тăрă çăлкуç шывне ĕçсе имленнĕ-хĕмленнĕ. Аш хыпнă чух ĕçетĕн те ăна — çан-çурăма вăй кĕрсе каять. Ĕçлес килет, пурăнас килет! Траль çăлĕн хăвачĕпе. Траль юррин илемĕпе ӳснĕ, вăй илнĕ Алексей Воробьев та, эпĕ те, Мăн Явăш поэчĕсем Михаил Васильевпа Виктор Туринге те, ман ентешĕм Иван Ивник те. Маншăн Воробтев — пысăк хисепре. Пуç каçăртса çӳрекен йышши марччĕ вăл, пухусенче-мĕнсенче те хытă павракансем çине тĕлĕнерех, сăнне ирони çутипе йăлкăштарса пăхса ларатчĕ. Хăй хакне пĕлнĕ поэт. Мĕншĕн тесен унăн поэзири сасси çирĕп пулнă. Халĕ те çирĕп, витерӳллĕ».

Çырнă хут листисене тыттарсан, Агивер ун çумне хушса хучĕ: «Воробьев вăл чăваш литературин классикĕ çав, тен, чăваш тĕнчин классикĕ те. Манăн та çуралчĕ пĕр хайлав: «Чăвашăн ултавсăр сăвăçи» ятлăскер. Хам мĕн каламаллине каларăм пуль унта. Воробьев пирĕншĕн вĕрентекен пулнă. Унăн чунĕ — йăмрара, тăпрара, çăкăрта, çӳçенчĕк ĕнерте».

«Ялав» журналăн тĕп редакторĕ Юрий Сементер те Пичет çурчĕн саккăрмĕш хутĕнчен пирĕн пата «Ун сассинче — тăван уй-хир

кĕввиччĕ» статьине çавăрттарса, юрланăн васкаса анчĕ, асаилĕвне пичете сĕнчĕ те, «Пуç пĕтсен те çĕр çинче эп йăмра пулса кашлам» — тенĕ сăвăç сасси тăван поэзи оркестрĕнче яланах янрĕ. Пурнăçра та, поэзире те поэт йăмрисем ĕмĕр-ĕмĕр кашлĕç», — тесе, йăлл кулчĕ.

«Тăван Атăлăн» яланхи тусĕ-хăнийĕ Николай Аршуткин тухтăр Алексей Воробьевпа пĕр шкулта вĕреннĕ, ачалăх тусĕ. Унăн асаилĕвĕсем те номĕре пуянлатрĕç.

Чăваш литературин энциклопедисчĕ, чăваш халăх поэчĕ Георгий Ефимов, Мăн Явăш ачи çинчен сăмах-юмах пуçарсан, ялан: «Вăйĕ-халĕ иксĕлмиччĕ Воробьевăн», — тесе пĕтĕмлетӳ тăватчĕ çывăх тусĕ пирки. Георгий Андреевичăн асаилĕвĕ пуян. «Унăн сăввисенче тăри юрри янăратчĕ, уй-хир ĕçченĕн чунĕпе чĕри анлăн та тарăннăн сăнарланатчĕ, пуласлăха ăнтăлатчĕ сăвăç кулленех. Сăввисемпе поэмисенче тĕнче курăмлăхĕ, аслă тавралăхра пурăнакансен ĕмĕчĕпе туйăмĕччĕ, çав вăхăтрах чăвашлăх çĕприпе йӳçсе хăпарнă вăй-хăват тапса тăратчĕ», — çапла хакларĕ Канаш ен сăвăçĕ Вăрнар ен сăвăçне.

Мăн Явăшра ӳснĕ Михаил Васильев писатель хаклавĕ — тăван ял хаклавĕ. Акă вăл: «Алексей Александрович, хресчен ачи, сăпайлă, ĕçчен, тăпра-çĕр ăрăмçи, паттăр салтак-çĕнтерӳçĕ, шанчăклă тус, ытарайми юлташ, хăйне хăй мирлĕ пурнăçпа чунтан-вартан киленсе пурăнма тивĕçлĕ çын тесе шутлатчĕ, хăйне яланах — пачах курнăçланмасăр — аслă халăх ывăлĕ, самана поэчĕ вырăнне хуратчĕ, хăй çывăх пĕлнĕ çынсене хĕрӳллĕ юратса, вĕсем урлă самана сăнне ӳкермешкĕн пĕр хăйне майлă ăсталăхĕпе хавхаланатчĕ, Алексей Воробьев поэт паян çукки чăваш поэзийĕнче хытă сисĕнет».

Вăрнарта 1997 çулта тĕл пулнă чухне, Михаил Алексеевич мана Воробьевăн ăнсăртран тупăннă сăввисене кăтартнăччĕ. Вĕсене вăл клеткăллă тетрадь листисем çине шăрçаланă, 1956 çулпа палăртнă. чун сăввисем — ялти чун савнийĕ патне çырнăскерсем-мĕн. Çамрăклăх хĕлхемĕн вăрттăнлăхне те пĕлтернĕччĕ.

«Вунпилĕк çул каялла, — каларĕ ун чухне тусăм, — мана паллан ă пĕр чипер хĕрарăм чарса тăратрĕ. «Çак самантчен никама та кăтартман, халь вара сирĕн алла шанма вăхăт çитрĕ пулас, — терĕ вăл, кивĕ хутсен тĕркине тыттарса. — Эп унти кашни сăмаха асăмра усратăп, çав сăвăсене кирек хăçан та пăхмасăр калама пултаратăп...» Сăпайлă чиперкке самай хумханса калаçрĕ. «Кама та пулин ман ята пĕлтерме кирлĕ мар тулĕк», — терĕ.

Васильев сĕннипе эпир вĕсене пĕр страницăна кĕртрĕмĕр, сăвăсене пуçласа вулакан патне çитертĕмĕр.

Воробьевăн тантăшĕ, Петĕр Ялгир поэт та аякра юлмарĕ çак кăларăмран. Хаваспах çырса пачĕ унпа пĕрле пулнă, пурăннă вăхăт çинчен.

«Пирĕншĕн, çыракан çамрăксемшĕн, Алексей Александрович тăван пиччерен те пичче выранĕнче пулчĕ. Çамрăксене юрататчĕ вăл. Юрататчĕ çеç-и, пĕтĕм чунне пама хатĕрччĕ вĕсемшĕн. Писательсен Союзĕн çамрăксемпе ĕçлекен совет сăн-сăпатне эпир унра кураттăмăр. Çамрăксене чĕрĕ çулăмĕпе хыптарса, çырма хавхалантарса тăратчĕ пирĕн пиччемĕр», — палăртрĕ ЧГУ профессорĕ Виталий Родионов «Вĕрентекенĕме асăнса» статйинче.

Васлей Эктел Наманган политехникумĕнче ачасене черчени вĕрентнĕ вăхăтра (1973—1974 çç.) Алексей Воробьев патне янă çырăвĕсем сиксе тухрĕç. Интересĕ нумай вĕсенче.

Мăн Явăшра тата тепĕр пултарулă поэт пурччĕ. Виктор Туринге Тинĕс-Çар флочĕн офицерĕччĕ. Сăвă нумай çыратчĕ. Пĕрмаях пичетленетчĕ. Унăн Воробьев çинчен «Тăванăм, аслă пиччем...» асаилĕвĕ те питĕ выранлă пулчĕ. «Хăюллăх, творчествăлла паттăрлăх, чăнлăхшăн тӳрĕ кăмăлпа ĕçлени, усала парăнманни — Алексей Воробьевăн пурнăç урокĕсем», — тенĕ унта.

Константин Мастеров хăй КПСС Нурăс райкомĕнче ĕçленĕ чухне Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕпе А. А. Воробьевпа паллашни тата ун хыççăнхи тĕлпулусене аса илет. «Хăй кĕрнек пӳ-силлĕ, сăн-питĕнче — тараватлăн сăрхăнса тăракан тӳлек кулă». Çакă ăшра сыхланса юлнă авторăн çамрăк поэта курсан. «Алексей Воробьев чап илесшĕн мар, халăхшăн çырнă, çынсене яланах халăхпа çĕршывшăн ырă ĕçсем тума чĕннĕ», — палăртнă Мастеров «Чун вăйĕ çирĕп пулнăран» статйинче.

КПСС обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулнă, маларах Нурăс райкомне ертсе пынă Илья Павлович Прокопьев «Воспевал он землю и труд» ятпа асаилĕвне вырăсла çырса пачĕ. Унти йĕркесене илсе кăтартатăп: «В моей домашней библиотеке бережно хранятся книги Алексея Воробьева с дарственными надписями. Открывая их, каждый раз вспоминаю прекрасные годы тесного сотрудничества с творческой интеллигенцией республики. Скромный до стеснительности, он не любил ходить, как некоторые, по обкомовским кабинетам с просьбой о содействии в издании книг, ибо Чувашское книжное издательство само было заинтересовано в этом».

Известный русский поэт Виктор Кочетков в статье «Слово, отмеченное печатью народности», дал высокую оценку деятельности нашего земляка: «В поэзию Воробьев принес не только и не столько жар молодости, сколько опыт труда, зрелые впечатления пережитого, отличное не книжное — знание народной жизни, народных характеров».

Филологи наукисен кандидатне, Валентин Тимаков поэта пусахласа тенĕ пекех хăйĕн çамрăклăхне аса илтертĕмĕр. Вăл вĕт пултарулăх урокĕсене Алексей Воробьевран нумай илнĕ. 1975 çулта ăна



*А.А. Воробьев поэт.*

Ухсай Яккăвĕпе тата Стихван Шавлипе пĕрле СССР писателĕсен Союзне кĕме Воробьев та рекомендаци панă. Хавхаланса çырчĕ вара Воробьевăн ырăлăхĕпе таланчĕ пирки чăвашсен тепĕр паллă сăвăçĕ.

Хветĕр Агивер ертсе пынипе çапла «Чăваш поэчĕ Алексей Воробьев» ятлă журнал-кĕнеке кун çути курчĕ. «Тăван Атăл» парни пулчĕ ку аслă та ăслă ентешĕмĕре çуралнă кунĕ ячĕпе. Вăрнар район администрацийĕн пуçлăхĕпе Александр Ильич Кушковпа тата Мăн Явăш ял хуçалăх предприятине ертсе пыракан Федоровпа çак кăларăм пирки халăхпа курнăçса калаçмашкăн килĕшнĕччĕ. Вĕсем мана писательсемпе юрăçсен пысăк ушкăнне йышăнма хатĕрри çинчен шантарчĕç. Анчах та, пурнăç çилтăвăлĕнче, пиртен килмен сăлтавсене пула, поэт çуралнă ялне хăйĕн çĕнĕ кĕнекипе çитеймерĕ. Ентешĕ Борис Якушкин хăпартланса калани те пурнăçа кĕреймерĕ. Алексей Воробьев палăкĕ çинчен пуçланнă калаçу çилпе вĕçрĕ пулас. Поэтăн çулăмлă, сăнарлă, илемлĕ Сăмахĕ çеç халăхра ĕмĕрĕмĕре сыхланса юлĕ.

*2005 çулхи çу уйăхĕн 11-мĕшĕ.*
*Шупашкар.*

# ЭЛКЕР ЧӐВАШ ХАЛӐХӖШӖН, ШӐПИЙӖШӖН ҪУННӐ

Элкер 100 ҫул тултарнине чӑваш халӑхӗ, ытти шӑв-шавлӑ ҫыравҫӑсене пӗлӗте ҫити сиктерсе уявланӑ пекех паллӑ тӑваймарӗ. Ҫапах та Аслӑ ҫыннӑн ӗмӗрне чыс туса, тӗнче уҫлӑхӗнчи Элкер ҫӑлтӑрӗ ытти ҫӑлтӑрсенчен ҫуттӑнрах йӑлкӑшрӗ. Ҫӗр Элкерне Ҫӳлти вӑй-хӑватпа тата ҫӳлерех ҫӗклерӗ, унӑн ятне халӑхра ҫӗнӗлле вӑратрӗ. Кӳрши, Хураҫырма ачи Виталий Родионов профессор, унӑн пилӗк томлӑ ҫырнисен пуххи ҫумне тепӗр хулӑн кӗнеке хушса кӑларчӗ. Йӗпреҫ районӗнчи шкулсен пултарулӑх смотр-фестивальне Семен Васильевича халалланӑ. Шупашкарсем асӑну палӑкӗ хатӗрленӗ. Чӑваш Республики писателӗсен Союзӗ те паллӑ кунран ҫывӑрса юлмарӗ. Манӑн, «Илем» хаҫатӑн тӗп редакторӗн, тӑван ентешӗме халалласа, ятарлӑ номер кӑлармалла пулчӗ. Ҫав ӗҫпе аппаланнӑ хушӑра иртнӗ вӑхӑтри паллӑ кунсем аса килчӗҫ.

## *Ҫирӗм ҫул каялла*

Ун чухне эпӗ Йӗпреҫ районӗнчи «Ҫӗнтерӳшӗн» хаҫат редакцийӗнче ӗҫлеттӗм. Парти райкомӗ Чӑваш халӑх поэчӗн Семен Васильевич Элкерӗн менелникне ирттерме комисси йӗркелерӗ. Ӑна райком секретарӗ Христина Сергеевна Башкирова ертсе пычӗ. Унта мана та кӗртнӗччӗ.

Ака уйӑхӗн 5-мӗшӗнче Пысӑк Упакассине Шупашкартан хӑнасем автобуспа килсе ҫитрӗҫ. «Элкер менелникне килнӗ хӑнасене хӗрӳллӗ салам!» — чӗнет Культурӗ ҫурчӗ ҫинчи хӗрлӗ хӑмач. «Трудовик» колхоз председателӗ А.Г.Шордеев, парторганизаци секретарӗ В.И.Герасимов, ял Совет председателӗ Т.И.Степанова, Пӗчӗк Упакассинчи «Путиловка» колхоз председателӗ Г.С.Ильин, менелник комиссийӗн членӗсем, упакассисем, йӗпреҫсем, вӑрнарсем ҫурмаункӑ варринче. Чӑваш литературипе искусствин ӗҫченӗсене авалхи йӑлапа ҫӑкӑр-тӑварпа кӗтсе илчӗҫ.

— Тавтапуҫ ырӑ кӑмӑлушӑн, хамӑрӑн юлташа Семен Васильевича пӗрле илсе килеймерӗр пулин те, вӑл пирӗнпех, юнашарах, пирӗн чӗререх, — тет Александр Кӑлкан. Вӑл тӗрленӗ алшӑлли ҫинчи ҫӑкӑра Аркадий Эсхеле парать те, аллине сӑра курки тытать. Кӑпӑклӑ чӑваш сӑрине — Упакасси сӑрине пурте активсе пӑхаҫҫӗ. Элкер ячӗпе хисепленекен вӑтам шкул ачисем хӑнасене чӗрӗ чечек ҫыххисем парнелеҫҫӗ.

Культура ҫуртӗнче халӑх лӑк тулли. Чӑваш писателӗсен Союзӗн правленийӗн ответлӑ секретарӗ Георгий Краснов хӑйӗн сӑмахӗнче

«Элкер пирӗншӗн атте те, асатте те, тӑван та, чӑваш литературине ӳстерессишӗн вӑй хурса ӗҫленӗ тантӑшӑмӑр та. Ҫавӑнпа унӑн ятне ҫӳлте тытас пулать, тытатпӑр та», — тесе хумханса каласрӗ.

Аркадий Эсхель чӑвашсен паллӑ писателӗн пултарулӑхӗ ҫинчен нумай каларӗ, хӑй ҫырнӑ «Поэт кунҫулӗ» кӗнеке парнелерӗ упакассисене. Кӗнекине менелник тӗлне ятарласа кӑларнӑ-мӗн.

Сӑвӑ-юрӑ шӑранчӗ анлӑ залра. Василий Давыдов-Анатри, Александр Кӑлкан, Аркадий Эсхель, Алексей Воробьев, Николай Петровский-Теветкел, Хветӗр Агивер, Петӗр Ялкир, Порфирий Афанасьев, Виталий Родионов поэтсем сӑвӑ каларӗҫ, Зоя Ананьевапа Венера Иванова тата Иван Аршинов чӑваш юррисене юрларӗҫ.

«Эпӗ Семен Васильевичпа 39 ҫул куллен ҫывӑх пулнӑ ҫын, — терӗ Элкерӗн мӑшӑрӗ Евдокия Алексеевна, — вӑл чӑваш литературишӗн мӗнле тӑрӑшнине, мӗн чухлӗ вӑй хунине никамран лайӑх пӗлсе тӑрататӑп. Шӑпчӑк епле канмасӑр ҫӗрӗпе юрлать, Ҫемен те ҫавӑн пекех хӑйӗн поэзи канвине тӗрлесе пурӑнчӗ. Унӑн сывлӑхне, унӑн ӗҫлес вӑй-халне упрасси, кӑмӑлне хавхалантарасси манӑн тата пирӗн ачасен кулленхи тимлӗх пулнӑ. Хаклӑ пӗлӗшсем, ял-йыш, тавах сире, ӗҫӗрсем ӑнса пыччӑр».

Ҫӗрлечченех тӑсӑлчӗ Элкер уявӗ.

Маншӑн уяв хӗрӳллӗ хӗвел тухсан та малалла тӑсӑлчӗ, хамӑр хаҫат валли мӑшӑр страница хатӗрлерӗм. «Элкер улӑпла ӗҫ, паттӑр ӗҫ тунӑ, халӑхра чыслӑ ят, тивӗҫлӗ ят илнӗ» сӗмахсем айне чаплӑ кун репортажне, Порфирий Афанасьев поэтӑн «Вилӗмсӗр идейӑсен ҫӗнтерӗвӗшӗн» статйине, Алексей Воробьевӑн «Упакасси», Виталий Родионовӑн «Сӑпка юрри», Василий Хурамалӑн «Поэзи уявӗ» сӑввисене, упӑшкин менелникӗнче упакассисем умӗнче ӑшӑ кӑмӑлпа тав туса каланӑ Евдокия Алексеевна Эльгерӗн сӗмахне тата Чӑваш писателӗсен Союзӗн правлени председателӗ Н. С. Дедушкин КПСС Йӗпреҫ райкомне, «Трудовик» колхоз правленине янӑ саламлӑ телеграммӑна, Дмитрий Киселев корреспондентӑн сӑнӳкерчӗкӗсене вырнаҫтартӑмӑр. Паллах, Ҫемен Элкерӗн «Этеме» сӑвви те вулакан чун-чӗрине хускатмасӑр хӑвармарӗ пуль:

Ырӑ чунлӑ этем!
Инкек-хӗн ҫапсан — йӑшса ан йӳте,
Этем тӗршӗнет вӑл хуйхӑ-суйхӑран,
Ун чух хавшӑрма тытӑнать ӑшран.
Асту, ан ҫемҫел, — чул пек ҫирӗп пул;
Хыт пурнӑҫ айне таптанса ан юл!
Пӗлсе тӑр: пурнӑҫ вӑл — пӗрре кӑна;
Вилсессӗн, урӑх курмӑн ҫут куна.
Ҫакна манмасассӑн, чунтан пикенсех

Тăрăш пурăнма çӳç шуричченех.
Тен, хăш чух, инкек хытах аптратсан,
Пуçна та усăн пит ывăннăран;
Çапах та, тусăм, ĕмĕтне ан хуç, —
Умри кун-çулна пуçпа хирсе уç!
Кĕреш хытăрах, пур вăйна пухса,
Чĕлхӳ уçăлсан, ыр туйăм тупса,
Кĕрешĕвĕнти пур паттăрлăхна
Кăтарт юрласа çынна — халăха.
Чăтăмлăх юрри вĕçтĕр сывлăша,
Пĕр йывăр шухăш та ан юлтăр ăша.
Юрăç-сăвăç çулĕ — анлă, ирĕк çул,
Пӳлеймĕç ăна шыв-шур, ни сăрт-чул.
Ун тăрăх пырса кĕрешме çăмăл.
Хуплаймĕ ăна пурнăçри тăвăл.

«Çĕнтерӳшĕн» хаçатра пит хастарланса, пултаруллă ĕçленĕ çамрăк тусăм, вĕренекенĕм Виталий Родионов «Элкер номерне» шупашкарсем валли пĕр çыхă илсе кайрĕ. Элкер çĕршывĕнче журналистика çулĕ çине хăйĕн уттипе тухнăскер вăл «Илемпе» çывăхланма та ютшăнмарĕ. Семен Васильевичăн 1966 çулта çырнă «Произведенисене тĕрĕс хак памалла» критикăллă статйине пичете хатĕрлесе пачĕ. Унччен вăл йышлă вулакан патне çитеймен пулас. Хастар чунлă çыравçă Элкер хăюллăн, уççăн калаçать чăваш литературин кун-çулĕ пирки:

«Отечественнăй вăрçă хыççăнхи çулсенче пирĕн чылай пысăк произведенисем тухрĕç. Ун пеккисем хушшинче Турхан Çеркейĕн «Йăмраллă ялпа» «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романĕсем, Я. Ухсайăн «Акăшкӳл», «Çĕр» поэмисем, Хусанкайăн «Аптраман таврашĕ», Марье Ухсайăн «Кăра çилсем» романĕ, Мраньк普кан виçĕ томлă «Ĕмĕр сакки сарлака» романĕ, Агаковăн «Юманлăхра çапла пулнă» пысăк повеçĕ, Ĕçхĕлĕн «Хĕвеллĕ çумăр» повеçĕ, Кипек Мĕтрин юлашки çулсенче пичетленнĕ повеçĕсемпе романĕсем тата ыт. те, урăххисем те. Кунта асăннă хăш-пĕр произведенисем тухнăранпа вунă çул та иртсе кайнă ĕнтĕ, анчах та вĕсем пирки пĕр дискусси те пулман, вĕсене творчество секцийĕсенче те сӳтсе-явса татăклă хак паман. Чăн та, Мранькккан «Ĕмĕр сакки сарлака» романĕн иккĕмĕш кĕнеки пирки пĕр-икĕ çул каялла пуху туса ирттернĕччĕ. Ăна та проза секцийĕ роман авторĕ хăй Сироткин профессор критикине хирĕç тухнă пирки çех сӳтсе явнăччĕ. Пысăк произведенисем çинчен пĕчĕк рецензисемпе çиелтен кăна тишкерсе çырнисемпех çырлахса тăнă.

Пирĕн пысăк произведенисене нумайăшне ятлă писательсем çырса кăларнă. Çакна пула вĕсенче чылай çитменлĕхсемпе кăлтăксем пулсан та, авторсене кӳрентерес мар, юлташлăха пăсас мар тесе, пирĕн

критиксемпе рецензентсем çав çитменлӑхсене кӑшт-кашт асӑрхаттарнипех е хӑш-пӗр чух нимӗн шарламасӑр та иртсе каяççӗ.

Тӗрӗс хакласа тивӗçлӗ вырӑн паман пирки хальхи вӑхӑтра пирӗн хӑш-пӗр чухӑн произведенисемех малти вырӑна йышӑнса илнисем те пур. Тӗслӗхе çакнах илер. Турханӑн «Йӑмраллӑ ял» романӗ, ман шутпа, типӗ хаçат чӗлхипе çырнӑ художествӑсӑр япала. Анчах та Мускаври «Академкнига» 1965 çулта кӑларнӑ «Народы Европейской части СССР» текен хулӑм кӗнекере, чӑвашсем çинчен уйрӑмра, «Йӑмраллӑ яла» чи малти вырӑна тӑратнӑ. Ку вӑл СССР-ти халӑхсем çинчен калакан кӗнеке, Совет Союзӗнче кӑна мар, тӗнчипех саланма пултарать. Çав кӗнекерех чӑвашсен совет поэзине пуçлакан çулӑмлӑ Çеçпӗл, малтанхи писательсем Хумма Çеменӗ, Исаев, Н. Васянка çинчен ниçта пӗр сӑмах та асӑнни çук. Кам айӑплӑ-ши кунта? Паллах, статйине çыракан Н. Воробьев профессор мар, ӑна материал паракан чӑваш историкӗсемпе этнографӗсем ответлӑ. Вӗсем тӗрӗс çырнӑ материал тупса парайман».

Илемлӗн, кӑмӑллӑн, çирӗппӗн пӑхать Çемен Элкер «Илем» хаçатӑн пуçелӗкӗнче, «Ман пурнӑç килет пӗр вӗççӗр...» сӑмахсемпе вулакана хавхалантарса хӑй çумне туртать. Юнашарах — паттӑр чӑвашӑн пурнӑçӗ çинчен çырнӑ тӗп редактор умстатйи:



*С.В.Элкерӗн мӑшӑрӗ Евдокия Алексеевна, йӑмӑкӗ Клавдия Васильевна, ывӑлӗ Петр.*

## *Поэт чĕри — халăх чун-чĕри*

Семен Васильевич Элкер 1894 çулхи çу уйăхĕн (майăн) 1-мĕшĕнче Чăваш Республикинче. Мăн Упакассинче, вырăнта Пысăк Упакасси теççĕ, вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă. Пысăк Упакасси 1917—1927 çулсенче Етĕрне уесне кĕнĕ. 1917 çулта ăна Туçа (хальхи Йĕпреç районĕ) вулăсне кĕртнĕ, 1918 çулхи нарăсăн 17-мĕшĕнчен Кушлавăш (хальхи Вăрнар районĕ) вулăсне, 1919 çулхи авăн уйăхĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа 1927 çулччен каллех Туçа вулăсне кĕртнĕ. 1927 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнче Пысăк Упакассине Вăрнар район территорине кĕртнĕ. 1928 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче яла каллех Йĕпреç районне куçарнă. 1962 çулхи раштавăн 20-мĕшĕнчен пуçласа 1965 çулхи пуш уйăхĕн 14-мĕшĕччен Пысăк Упакасси çĕнĕрен Вăрнар районĕнчи ял шутланнă. Çавăн хыççăн тин вăл Йĕпреç районне çирĕпленсе юлнă. Упакассисене вăрман пуянлăхĕ ытларах туртнă-ши, е Вăрнара Йĕпреçрен çухрăм ытларах утмалла пулнăран, пĕлме хĕн, шутласан, Вăрнерĕпе Йĕпреçĕнче те чукун çул станцийĕсем пур, Кушлавăша Вăрнар районне хăварсах, Кульцавсемпе икĕ район чиккиллĕ пулсах, кăнтăралла пуçа çавăрнă. Пурăнаççĕ халĕ вĕсем Пысăк Упакасси ял Советне кĕрекен «Трудовик» колхозра. Пысăк ĕçченсем. Ял Совечĕ вĕсен 1927 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Упакасси ятлă. 1935 çулхи кăрлачăн 31-мĕшĕнчен — Пысăк Упакасси ятлă. Халĕ вара темле шутласа кăларнă администраци ятпа çӳрет пулас.

Шавлă пурнăç аварĕнче пысăк ял, тем пек шампа-çăрттан ункинче явăннă пулин те, хăй вырăнĕнчен куçса ларман, халĕ те «...Кушлавăш текен вуникĕ ял уйăнчех» сарăлса ларать, хамăр çĕр çинчех: Вăрнарпа Йĕпреç çĕрĕнчех.

Çавăнпа вăрнарсемпе йĕпреççен Чăваш халăх поэтне ниепле те пайлама май çук. Вăл — хамăрăн.

Пысăк Упакассинче ун чухне хальхи пек нумай енлĕ пĕлӳ паракан вăтам шкул пулман. Пуçламăш пĕлӳ çеç панă ачасене. Малалла вĕренме каясси, паянхи пек тĕнче университечĕсем хыççăн хăваласси çинчен ĕмĕтленме те пултарайман ял ачи. Çав вăхăтрах тата тĕнче вăрçи йăтăнса тухнă. Ака-суха туса, çемьере усă парса пурăннă каччăна патша çарне илсе кайнă. Уйăх хушши пăшал тытма вĕрентнĕ салтак юнлă вăрçа лекнĕ. Çапăçусенчен сывă кĕрешӳçĕ сахал тăрса юлать, Васĕли ачи Çемен те йывăр аманать, хăйĕнчен килмен йывăрлăха пула, тăшман аллине лекет. Вăл вăхăтра Упакасси ачи, 1915 çулта, 51-мĕш пехота Литва полкĕнче службăра тăнă. 1916 çулта вăл, вăрçакан çĕршывсен аманнă çар çыннисене пĕр-пĕринпе улăштарнă май, Раççее тыткăнран таврăнать. Аманнă урапа. Питĕрпе Хусанти госпитальсенче сывалать.

1917—1918 çулсенче С. Элкер çитĕнсе çитнисен шкулĕнче Хусанта вĕренет, çав çулсенчех литература ăçне тытăнать. 1918 çулхи утă уйăхĕнче вăл, хăйĕн çуралнă ялне таврăнса, малтан ял Совечĕн чи малтанхи секретарĕнче, унтан чухăнсен комитечĕн пуçлăхĕнче ĕçлет. 1919—1920 çулсенче, Хусанти педагогика курсĕсенчен вĕренсе тухнă хыççăн, икĕ çул Пысăк Упакасси шкулĕнче учительте ĕçлет. 1922 çулхи юпа уйăхĕнчен вара «Канаш» хаçат редакцийĕнче ĕçлеме пуçлать. Çавăнтанпах вăл хăйĕн тапса тăракан пултарулăхĕпе иксĕлми вăй-хăватне чăваш литературипе журналистикине аталантарас ĕçшĕн парать.

С.В.Элкер 1930 çулта Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине кĕнĕ.

Поэтăн ячĕ чăваш вулаканĕсемшĕн 1928 çулта «Самана» ятлă сăвă кĕнеки тухнă хыççăн паллă пулса тăрать. Çавăнтанпа вăл пирĕн халăхăн чун-чĕрине яланлăха кĕрсе юлнă произведенисем сахал мар çырнă. Унăн «Хĕн-хур айĕнче» историлле поэми, «Вутпа тăвăл витĕр», «Шурăмпуç килсен» романĕсем, «Вăл вилĕмсĕр», «Вунсаккăрмĕш çул» поэмисем, нумай-нумай сăввисемпе калавĕсем, очеркĕсемпе статйисем чăваш литературин ӳсĕм çулĕ çинчи сулмаклă утăмĕсем пулса тăнă. Куçне хупиччене Элкер, вăл 1966 çулхи авăн уйăхĕн 6-мĕшĕнче Шупашкарта вилнĕ, тăван чăваш литературине çĕклессишĕн хыпса çуннă, чунне парса тăрăшнă. Тăван халăха хăй çырнисен пилĕк томне (1960 ç.) парнелесе хăварнă.

Семен Васильевич Элкерĕн нумай енлĕ те пуян пултарулăхне халăх, правительство яланах пысăка хакланă. Литературăри тата обществăлла ĕçри паллă çитĕнĕвĕсемшĕн ăна 1940 çулта Чăваш халăх поэчĕн хисеплĕ ятне панă, 1945 çулта Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, 1950 çулта Ленин орденĕпе наградăланă. 1964 çулта Чăваш Республикин Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăх Хисеп Кĕнекине кĕртнĕ. Раççей Федерацийĕн аслă Канашĕн депутатне суйланă. 1934 çулта ăна СССР писателĕсен Союзĕн членне илнĕ.

Чăваш Республикин писателĕсен Союзĕн правленийĕнче упранакан ĕç-пуç кĕнеки С. В. Элкерĕн çак сăмахĕсемпе усăлать:

Нихçан та манми<br>
Пĕр юратнă çĕршыв.<br>
Мана та нихçан<br>
Эс манăçа ан хыв.

С.В.Элкер Шупашкарти Ярославский урамĕнчи пĕчĕкрех йывăç пӳртре, кайран Карл Маркс урамĕнчи тăватă хутлă чул çуртра, электричество таварĕсем сутакан магазина хирĕç (ĕлĕкхи универмаг) пурăннă. Ун çине халĕ Асăну хăми вырнаçтарнă.

Поэт чĕри халăх чĕрипеле халĕ те пин-пин хĕлĕхпе çыхăнса тăрать, «Ман пурнăç килет пĕр вĕççĕр» тени унăн — ĕмĕр-ĕмĕр чăваш халăхĕнче пурăнакан вилĕмсĕр сăмахĕсем.»

1994 çулхи çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче эпир ятарлă автобуспа Пысăк Упакассине мăн эртелпе персе çитрĕмĕр. Калаçу çул тăршшипех литература çинчен хĕрсе пычĕ. Аркадий Эсхель чăваш халăх поэчĕпе тĕл пулнисене аса илчĕ. Вăл ăна çамрăк вăрманти кĕреш юманпа танлаштарать. Ун йĕри-тавра пĕрмаях йăрăс хунав кашлать, ку вăл пирĕн литературăри çамрăк йыш, тет. Элкер хăйĕн пысăк кĕнекисенче халăх кун-çулĕн питĕ паллă тапхăрĕсене çутатса панă. Тăван çырулăха чĕререн юратакан поэт малтанхи чăваш писателĕсен йышне пĕр организацие пĕтĕçтерес ĕçе хастаррăн хутшăннă. Шухăш — Элкер сăввин çуначĕ. Элкер пултарулăхĕ вăл — хăй пĕр пысăк шкул, тенисене эпир тăнласа итлетпĕр. Хамăр та калаçăва хутшăнатпăр.

Вăрнар урлă кайма тăнăскерсем, Мăньял Хапăсран Емельянова илсе тухас терĕç. Çăрăлчăк пирки урамне машина тавраштĕ кĕреймест те, анкартисем хыçĕпе çурран утрăмăр. Шел, Анатолий Викторович, йывăр чире пула, Упакассине пыраймарĕ. Вăл Элкер енне вăрнарсемпе хапăссенчен салам кăшăлĕ çеç парса яма пултарчĕ.

Çанталăкĕ ăшă. Хĕвел çунтарать. Пысăк Упакасси писательсен, журналистсен, художниксен, ученăйсен йышлă ушкăнне, патшалăх органĕсенче ĕçлекенсене, поэтăн тăванĕсене, хăнасене хапăлласа кĕтсе илчĕ.

Уяв Семен Васильевич çуралнă мăн урамра пуçланчĕ. Вăл пурăннă кил-çурт умĕнче уçăлнă митингра ЧР культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министрĕ В. П. Иванов, аслă поэт ентешĕсене саламласа, çапла каларĕ:

— Чăваш халăхĕн писателĕсем сахал мар, анчах халăх историйĕнче, культуринче вĕсенчен кашниех тарăн йĕр хăвараймасть. Çемен Элкер пирки вара ун пек калаймăн. Эпир унăн произведенийĕсем тăрăх вĕренсе ӳснĕ. 1994 çул — Элкер çулĕ. Эпир паян ăна çакăнта чысланипе вĕçленмĕ вăл. Юпа уйăхĕнче Шупашкарта республика шайĕнче паллă тăвăпăр. Çитес вăхăтрах хисеплĕ поэтăмăр çырнисен пуххи пичетленсе тухмалла. Эпир те сире парне тăвас терĕмĕр. Ялти клуба аталантарма 300 пин тенкĕ уйăртăмăр. Паян эпир Элкерсен çемйи пурăнакан пӳрт умне асăну палăкĕ вырнаçтарăпăр. Çак вырăн ял çыннисене ентешĕ пирки аса илтерсех тăрĕ. Ир те, каç та вĕсене асăну палăкĕ çине ӳкернĕ поэт сăнĕ тинкерĕ.

Палăк çинчи çивиттине Иванов министр, ял администрацийĕн пуçлăхĕ Н. Н. Яковлева уçса ячĕç. Пурте палăк çине çырнине вулаççĕ: «Чăваш халăх поэчĕ Семен Васильевич Элкер (1894—1966) çак ялта çуралнă». Йĕпреçри ӳнер шкулĕнчен тухнă В. А. Зотиков скульптор хăйĕн ĕçне пысăк ăсталăхпа тунă. Асăну палăкĕн пултарулăх ушкăнĕ ячĕпе П. С. Пупин скульптор сăмах каларĕ. Элкерĕн ывăлĕ Петр Семенович ашшĕне хисеплесе асăну палăкĕ уçма, уява йĕркелеме хутшăннă çынсене çемйи, тăванĕсем ячĕпе тав турĕ.

Уяв Элкер ячĕллĕ вăтам шкул картишне капланса çитрĕ. Ял шкулĕ Семен Васильевичăн тантăшĕ-мĕн. Икĕ менелник вĕсен паян. Шкул директорĕ Н. А. Васильев шкулăн унчченхи тата хальхи пурнăçĕпе паллаштарчĕ, Элкерĕн вĕрентӳри пĕлтерĕшне палăртрĕ.

Çемен Элкер музейĕнче пулса тĕлĕнтĕмĕр. Р.А.Евграфова учительница епле ăслайлă йĕркелеме пĕлнĕ ăна. ЧР писательсен Союзĕн ертӳçи Ф.Г.Агивер, «Ялав» журналăн тĕп редакторĕ Ю.С.Сементер, Н.А.Теветкел поэт, ЧР вĕрентӳ наука тата аслă шкул министрĕн çумĕ В.Сапожников, Йĕпреç район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В.А.Михалик, Элкер уявне пичетре çутатма Чĕмпĕртен ятарласа килнĕ «Канаш» хаçат фотокорреспонденчĕ Николай Казаков тата эпĕ музее парнесемпе пуянлатрăмăр.

Акă клубра савăнăçлă пуху уçăлчĕ. Райадминистраци пуçлăхĕн тепĕр çумĕ Г.М.Петров Элкерĕн вырăнти пĕлтерĕшĕ, кăçалхи район акатуйне ăна халаллама палăртни, ялсемпе поселоксен пурнăçĕ пирки каларĕ, ун хыççăн Ф.Г.Агивере сăмах пачĕ.

— Леонид Леонов писатель каланă тăрăх, — терĕ Федор Георгиевич, — кашни çыравçăн тĕп теми пур. Мĕнле темă-ши вăл Элкерĕн? Ахăртне эпĕ тĕрĕс шутласа тупрăм пулсассăн, «Вутпа тăвăл витĕр» романĕнче те, «Вунсаккăрмĕш çул» тата ытти поэмисенче те, ман шутпа, пĕр тема пулнă: чăваш чуралăхра пурăнать. Çав чуралăх, тӳррипе каласан, паян та иртсе кайман. Тĕрĕсех. Пирĕн литература вăйлă, эппин халăхĕ вăйлă, çыравçисем вăйлă. Кĕнекесем çырса халăха парнеленисĕр пуçне, халăх ăс-тăнне тытса тăнисĕр пуçне, паянлăха вĕсен патшалăха тытса тăма вăйсем çителĕксĕр. Вăл ӳлĕм писательсен, ӳнер тата ытти пултарулăх ăстисен аллинче пулнине курасчĕ. Çемен Элкер пулни — халăх телейĕ. Пирĕн çуллен паллă тăвакан уявсем пур. Иван Яковлев, Константин Иванов, Çеçпĕл Мишши, Митта Ваçлейĕ кунĕсем. Çемен Элкере асăнассине те йăлана кĕртесчĕ. Вăл ăна тивĕçлĕ. Чăваш çыравçисенчен пĕртен-пĕр вăл çеç хăй пурăннă чухне хăйĕн произведенийĕсене пилĕк томпа кăларма пултарнă. Унăн чăваш литературинчи виçĕ тĕп юпи ман шутпа çаксем — «Вутпа тăвăл витĕр», «Шурăмпуç килсен», «Хĕн-хур айĕнче». Çак произведенисем пурри чăваш халăхĕ пуррине, çухалманнине, хăçан та пулсан чуралăхран тасалассине калать.

Çемен Элкерĕн пултарулăхне тахçантанпах тăрăшса тĕпчекен Виталий Григорьевич Родионов, кӳршĕри ялта çуралса ӳснĕ ученăй. Чăваш патшалăх университечĕн профессорĕ, филологи наукисен докторĕ ытла пуян килнĕ иккен аслă вĕрентекенĕн менелникне. Малтан хĕрӳ сăмах каларĕ:

— Çынна ĕççĕр пуçне асăну йĕрки те тытса тăрать иккен, — ăслăн çавăрттарса пычĕ вăл. — Паян çакăнта пуçтарăнни çакна çирĕплетет. Çемен Элкер çинчен калаçнă чух ăна çитĕнтернĕ Кушлавăш

тăрăхĕ пирки чарăнса тăмасăр май çук. Элкер кунта çуралман пулсан, урăх çĕрте çуралман та пулĕччĕ. Илемлĕ тавралăх, кăмăллă çыннисем май панă ăна пултарулăха аталантарма. Эпĕ çапла шутлатăп: литературăра икĕ Элкер пур: пĕри — официаллă Элкер, тепри — кун кĕнекисенче юлни. Иккĕмĕшĕнче вăл чăваш халăхĕшĕн, шăпишĕн çунакан çын. Элкер пурнăçĕпе пултарулăхĕ чăваш идейи тавра иртнĕ. 1917 çултах вăл чăваш хăйĕн чĕлхипе калаçманнишĕн пăшăрханать. Ху чĕлхӳне ан хурла, тет вăл кашни чăваша. Наци идейи тенĕрен, вăл утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнче хайланă сăвă йĕркисене аса илер:

Ĕçленĕ хĕрĕх çул таран,
Чăвашлăха сунса чунтан.

Çакă унăн пурнăç тĕллевĕ пулнă. Çав чăвашлăхшăнах ăна вăтăрмĕш çулсенче айăплама пăхнă, ун çинчен çăхавсем çырнă. Вăл аллăмĕш çулсенче «Хурапа шурă» повесть çырать. Ун пирки критиксем калаçсах кайман. Мĕншĕн? Унта класс кĕрешĕвĕ çук. Унта — чăн-чăн пурнăç. Повеçĕн тĕп шухăшĕ — кашни çыннăн турă çырни пур, унтан иртейместĕн тени. Анчах эпир хамăр пурнăçа мĕнле илемлетме пултаратпăр? Турă çырнипе килĕшӳллĕн, тасанirтерме пултаратпăр. Эппин, кашни çыннăн турă çырнипе килĕшӳре пулмалла. Эпир Элкер пултарулăхĕ пирки тĕпчесе пĕлменнисем татах пур-ха. Çак ĕçсем кĕтеççĕ пире, тĕпчевçĕсене.

Тем вăхăтра Родионов хăйсен ялĕсене уяв кăщăлне çавăрчĕ. Хăй çырнă савăнăç юррине баян каласа хураçырмалла янраттарчĕ.

Йĕпреç шăпчăкĕ Микулай Теветкел ăслă шухăшлă сăввине шăрантарчĕ. Элкере вăл ачаран астăвать. Район хаçачĕ çумĕнчи литпĕрлешӳре чаплă поэт канашĕсене сахал мар пуçа хывнă. Элкер йĕрне поэзире те, прозăра та çирĕп тытса пырать, Кушлавăш тăрăхне кăна мар, Чăваш çĕршывне те пултарулăхра çӳле çĕклет. Ăна курсассăнах эпĕ хамăн пĕр кулăша аса илетĕп:

«Хисеплĕ ят паракан Аслă кантур алăкĕ умĕнче кĕтӳç пушши пек икĕ вăрăм черет. Пĕр енчисем сăвă сăвăрса, поэма пырши кумаççĕ, тепĕр енчисем калав-роман кăрманĕнчен шыв юхтараççĕ. Унта Николай Теветкел çыравçă çывхарать.

— «Чăваш халăх поэчĕ» пулас килсен, сăмсуна ытлашши ан каçăрт, пурпĕрех пирĕнтен мала иртейместĕн, тăр черете, — сĕнеççĕ ăна хывăх вĕçтерекенсем.

— «Чăваш халăх писателĕ» ят та япăхах мар, хисепрех, кутна хĕстер кăрман хыçне, — кăчăк туртаççĕ сăмах купи купалакансем.

— Чăваш халăхĕ мана хăйĕн хисеплĕ ятне черетсĕрех панă, — тет те Теветкел, аллисене шарт! çупса çунатланать, тӳпери Элкер çăлтăр çумне вĕçсе хăпарать.

Халран кайнă икĕ черечĕ те ун хыççăн сиксе пăхать, анчах Аслă кантур мачминчен çӳлерех вĕçме Микул чăваш поэчĕнни пек Турă

панӑ хӑватлӑ çунат нихӑшин те çук иккен. Ирĕксĕрех черет çитессе кĕтме тивет».

Ура хурса пыракансем йӑшсан, хӑй вӑхӑчĕпе Теветкел те чӑваш халӑх поэчĕсен ретне, анчах малтисен ретне, тӑрĕ-ха та...

Сӑмах калас текенсем татах та пулчĕç. Акӑ. Пысӑк Упакассинче çуралнӑ Игорь Юрьевич Миронов. Элкерпе пĕр урамран. Вӑл Чӑваш Республикин экономика министерствине ертсе пырать, СССР Наука академийĕн Экономика институтĕнче, Раççей Федерацийĕн вĕрентӳпе экономика министерствисенче, РФ Правительствинче хуравлӑ вырӑнсенче ĕçленĕ. Философилле тарӑн шухӑшлӑ сӑмах каларĕ ентешĕсем умĕнче. Тулĕк, чӑвашла калаçма манарах пырать пулас.

Унпа юнашар — Йĕпреç ялĕнче çуралнӑ Борис Михайлович Яковлев. Кунти округран ӑна нумаях пулмасть Чӑваш Республики Аслӑ Канашĕн депутатне суйларĕç. Вӑл йĕпреçсемшĕн хаклӑ хӑна. Шупашкарти энергетика техникумĕнчен тата Чӑваш патшалӑх университетĕнчен вĕренсе тухнӑ, хуçалӑхпа йĕркелӳ ĕçĕнче приборсем тӑвакан заводран пуçласа КПСС Чӑваш обкомĕ тата Республика аслӑ Канашĕ таранах ӑнӑçлӑ ĕçленĕ, пултарулӑхĕпе ӳссе çитĕннĕ. Район экономикипе культурине аталантарас ĕçре вӑл палӑрмалли пулӑшу кӳнĕ.

Чӑвашсен паллӑ поэчĕсенчен пĕри Г. А. Ефимов та Йĕпреçьеншĕн асра юлнӑ çын. Георгий Андреевич çамрӑк чухне Йĕпреçри колхоз театрĕнче ĕçленĕ. Пысӑк Упакассинче те ӑсталӑхне сахал мар кӑтартнӑ. Театрпа çыхӑннӑ асаилӳ артист-поэтшӑн сахал мар пулчĕ. Хӑй Шупашкарта Семен Элкерпе пултаруллӑ ĕçлени, туслӑ пурӑнни çинчен вӑл хумханса каласа пачĕ.

Туслӑ калаçу майĕпен аслӑ кĕрекене куçрĕ. Кунта та кашнин аса илӳ сӑмахĕ чĕлхе çинчен каймарĕ.

Купӑс каласах, юрласах ӑсатрĕç пире упакассисем. Вӑрнара кĕрес умĕн хырлӑхра Элкерпе пĕрлелартӑмӑр, Шетмĕ тӑрӑхне çывхарсан, Юрий Сементер Элкерпе траксен юррине юрлас, терĕ. Шупашкара çитсен, Петр Семенович хӑйсен хваттерне туртрĕ. «Мĕнле-ха капла, аттепе юнашар кĕреке хушшине лармасан», — терĕ те çамрӑк Элкер, никам та хирĕçлекен пулмарĕ. Çĕр çула çĕрĕпех паллӑ турӑмӑр вара. Уççăн. Кӑмӑлтан.

*2005 çул,*
*çу уйӑхĕн 12-мĕшĕ.*

## *Элкер сехечĕ çĕр хыççĕн пиллĕк çапсан*

Халӑх умне манӑн яланах çĕнĕ хайлавпа тухас килет, мĕншĕн тесессĕн, çĕнĕ çынсене курнӑ май, вĕсемпе çĕнĕ шухӑшпа калаçмалла-çке, вĕсен умĕнче пĕрмай пĕр юрӑ юрламалла мар, вĕсене çывӑх,

кӑмӑллӑ, витӗмлӗ сӑмах ҫаптармалла. Ҫапла, Виталий Григорьевич Родионов университетран шӑнкӑравласан, пуҫӑм сисмесӗрех Йӗпреҫ еннелле сулӑнчӗ, тӑван вырӑнсем, ҫывӑх ҫынсем куҫ умӗнче вӗлтлетсе явӑнма пуҫларӗҫ. Ӗҫленӗ вӑхӑтра Мӑн Упакассинче мӗн чухлӗ пулнине астумастӑп, анчах та «Трудовик» колхоза кӗрекен ялсен ӗҫченӗсемпе калаҫнине, савӑннине шутпа палӑртма та май ҫук пуль. Ҫывӑх тӑванӗ те, шанчӑклӑ юлташӗ те, пархатарлӑ пуҫлӑхӗ те, ҫӗр ӗҫченӗ те Элкер ялӗнче манӑн никамӑннинчен те нумайрах пуль тесе шухӑшланӑ эпӗ тахҫанах. Хураҫырма ачи ыранхи авточупу пирки пӗлтернӗ хыҫҫӑн ҫав вӑхӑт туйӑмӗ чуна уҫса ячӗ. Пуҫра «Элкер ҫӗршывӗ» ятлӑ сӑвӑ ҫуралчӗ:

Элкер тесен, чӑваш ҫынниййӗ
Сӑнанӑ анлӑ тӳпене
Йӑлкӑшакан ҫӑлтӑр ҫутиййӗ
Парать тесе мӑн телейне.

Элкер тесен, Упа кассиййӗ
Татах мӑнаҫлӑн курӑнать,
Ҫуратнӑ шӑпчӑкӗн сассиййӗ
Ялта паян та пурӑнать.

Элкер тесен, Илем картиййӗ
Ытла та анлӑн сарӑлать
Чӑваш сӑмахӗн чӗр хуртиййӗ
Пулса чечек пек ҫурӑлать.

Элкер тесен, кӗрлет хӑватлӑн
Поэт хайланӑ «Самана»,
«Вӑл вилӗмсӗр» юлать сӑваплӑн
Килсен ҫӗн шуҫӑм таврана.

Элкер тесен, кунҫул чуппиййӗ
Хӗн-хурлӑ пулнӑ, мӗн тӑван.
Паян Чакка пурнӑҫ хуҫиййӗ,
Сӑнарлӑх паттӑрӗ — тӑван.

Элкер тесен, вун ик ял уййӗ
Пуян та кӑмӑллӑ кӗтес.
Янрать Ҫемен мучин уявӗ,
Ӑмӑртмалла туртар йӗтес.

1999 ҫулхи ҫу, 27.

Ирпе, 1999 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче, Чăваш патшалăх университечĕн тĕп никĕсĕ умне, эпĕ пит хаваслăн персе çитрĕм. Ăслăлăх çурчĕ умĕнче ăслă чăвашсем ушкăншарăн-ушкăншарăн халап çапса тăраççĕ. Вĕсем хушшинче — Николай Александрович Петровский-Теветкел, Георгий Иосифович Федоров, Валентин Александрович Абрамов, Виктор Леонтьевич Немцев... Таса ӳт çинчи ӳпне çăпан пек, литературă çумçаккийĕ, вăрттăн сутакан йăпăлти те вĕсенчен юлман.

Чăвашăн тĕп элкерçи Родионов кӳршин менелникне малашне кашни пилĕк çулта пĕрре чаплăн паллă тăватпăр, тенĕччĕ. Ĕçчен ентеш хăйĕн сăмахне çирĕп тытать. Паянхи çулçӳреве шăпах вăл паллă-ртнине пурнăçлас тĕллевпе йĕркеленĕ. Чăваш филологийĕпе культури факультечĕн деканĕ хăйсен автобусне çыртарса илнĕ, йĕпреçсене юрă-ташăпа савăнтарма «культурниксен» артисчĕсене те хăйсенчен хăварман. Вĕсен хĕрӳлĕхне чăтаймасăр, Вăрнартан тухсан, çамрăк хырлăхра ушкăнпа хăпартланса, сăмах-юмах пăтти пĕçерсе çирĕмĕр. Ун хыççăн, чиперех манпа юнашар ларса пыракан Федоров профессор, «çав хĕрсене кăштах консультаци памалла-ха» тесе, сулахай питçăмарти çинчи пĕчĕк тур паллиллĕ чиперкке еннелле туртăнчĕ. «Вĕрентекенпе вĕренекен хушшинче пуплемелли пĕтмест пуль çав», — тесе шухăшласа пытăм вара çав хĕр куллипе пите çăва-çăва.

Родионов килсен кунта, Упакасси çĕнĕлле — ентешле сывлама пуçлать. Хăйсен ялĕсем те капăррăн ушкăнланса пынă. Виталий Григорьевич вĕсенчен уйрăлма пĕлмест, Хаваслăх тĕлпулăвĕсенче калаçмалли, ыйтса пĕлмелли, пĕлтермелли, шантарса сăмах памалли вĕçĕмсĕрех. Халăхпа лăк тулнă ял клубĕнче эпĕ те хамăн хĕрсе çуралнă сăввăма пăхмасăр каласа патăм: «Элкер тесен...» Манăн тата, Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн правлени председателĕн çумĕ пулнă май, хамăрăн çыравçăсен ячĕпе хĕрӳ салам валеçмелле пулчĕ упакассисене. Василий Николаевич Еникова та алă тытрăм. Самай туртăннă ял маçтăрĕ, пӳрт-çурт ăсти. Пуçласа эпĕ унпа 1967 çулта, совет влаçне туса хунăранпа çур ĕмĕр çитнĕ тĕле очерк хатĕрлеме пырсан, хăйсен типтерлĕ килĕнче паллашнăччĕ. Хастар салтак-сапер, рота старшини вăрçăран Ленин, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсем, икĕ «Мухтавшăн» медаль кăкăрĕ çине çакса таврăнни питĕ тĕлĕнтернĕччĕ. Ара, паттăрлăхĕ пулнă çав унăн. Мирлĕ ĕçре те вăл тепĕр виçĕ медаль илме тивĕçрĕ. Наградăсемшĕн темиçе хутчен те саламланăччĕ ăна. Питĕ тараватлăн, васкамасăр, тулăхлă юхтарса пырать вăл калаçăвне. Семен Васильевичăн тăван çĕрти кун-çулĕпе хăпартланса паллаштарать. Эпĕ вара хамăн юратнă упакассисем иртнĕ вăхăтра мĕнле пурăннине тĕпĕ-йĕрĕпе тенĕ пекех пĕлсе юлатăп.

Район, ял пуçлăхĕсем йĕркеленĕ савăнăç тĕлпулăвĕ шупашкарсене яланах чунтан килĕшнĕ. Хальхи тĕлпулу вара уйрăмах кăмăллă çӳллĕ шайра иртрĕ пек туйăнчĕ. Виталий Родионов «камантине» шут-

сăрах хисепленĕшĕн пулчĕ пулмалла ку. Упакассин ватă улăпĕ Кушлавăш çĕрĕн çамрăк улăпне хăй ытамне тăванла йышăнать. Унăн пултаруллăхне хăйĕн вăй-хăвачĕпе, ăс-тăн пуянлăхĕпе пĕрешкел шайра танлаштарса.

«Элкер сехечĕ тепре пиллĕк çапсассăн, çурхи хĕвелпе пĕрле, каллех эртеллешсе килĕпĕр», — çак шухăшпа уйрăлтăмăр эпир чăваш халăх поэчĕпе, унăн курăмлă ентешĕсемпе ун чухне.

*2005 çулхи*
*çу уйăхĕн 18-мĕшĕ.*

## *Элкерçĕсĕр ирттернĕ уяв*

2004 çулхи ака уйăхĕн вĕçнелле писательсен союзне кĕмен пулсан, хальхинче эпĕ Элкер мучипе тĕл пулаймастăмччĕ те пуль. Икĕ вашнăй писатель-профессионал Йĕпреçе кайма хатĕрленеççĕ. Пысăк Упакассине. «Мана илсе каймастăр-и?» — тесе ыйтса пăхрăм та, вĕсем пĕр-пĕрин куçĕнчен ытарлăн пăхса илчĕç те, кăшт тăхтасан, пĕри сăмах хушрĕ: «Эсĕ те каяс шухăшлă-ха апла унта...» Пирĕн пеккисемсĕр, ытарлă ушкăн пухма хатĕрленнине туйрăм-ха, çапах, çине тăрсах, аслă «профессионалсемпе» кайса курас терĕм хаклă ентешĕме. Чаплă çыннăмăрăн 110 çулхи уяв кĕрекинче Упакасси сăрине тутанса пăхассăмах килчĕ.

Шухăшăмпа эпĕ унта университет ачисемпе пĕрле каясшăнччĕ. Вĕсем транспорт ыйтăвĕпе çыхланса ларнă курăнать. Ик мулкача хăваласа пĕрне те тытайман тенĕ пек, шăхăрса тăрса юласран та шиклентĕм, ирĕксĕрех вара «профессионалсем» çумне çыпçăнма тиврĕ.

Шупашкарти Ленин палăкĕ çумĕнчен уйрăлса вăрăм çул тытрăмăр кăнтăралла. Ятарлă автобусра — ЧР культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерствин, республикăри наци библиотекин хуравлă çыннисем, ЧР профессионал писательсен Союзĕн правлени председателĕн çумĕ П.В.Афанасьев, Г.А.Ефимов поэт тата Элкерĕн çывăх тăванĕсем. Унчченхи çулçÿревсем пек шав тĕнчи мар. Пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл калаçса пымалли çул пулчĕ. Ăнлантăм: нимле Теветкелсем те, Родионовсем те кирлех мар иккен паянхи ушкăнра. Вĕсем пултарулăх эртелĕнче çуккишĕн хыпса çунаканах пулмарĕ. Хама хам ытлашши çын вырăнĕнчи пек туйса пытăм.

Юрать манăн вăрăм çула кĕскетмелли тахçанхи юлташăм тупăнчĕ: Владимир Иванович Немешкин. Унпа эпир хăй вăхăтĕнче Компартин Чулхулари аслă шкулĕнче пĕрле вĕреннĕччĕ. Кайран вăл Хĕрлĕ Чутай райсовет ĕçтовкомне чылай çул ăнăçлă ертсе пычĕ, канăва тухсан та алă усса лармасть иккен, краевед, çав хушăрах республик-

ăри ветерансен юхăмĕн активлă çĕмĕрттерÿçи. Республика лапамĕнче Элкер патне каякансем хушшинче ăна курсассăн, эпĕ малтанах тĕлĕннĕччĕ-ха, «Мĕнле сăлтавпа лекнĕ-ха ку ырă çыннăм пирĕн ушкăна», — тесе шутласа илтĕм. Сăлтавĕ часах уçăлчĕ. Унăн мăнукĕпе Элкер ачин, Петр Семеновичăн ачи пĕрлешнĕ иккен. Йыш та хушăннă. Ватă Немешкин пукане пек пĕчĕк мăнукне чĕрçи çине лартсах çитерчĕ мăн аслашшĕн ялне. Унта Владимир Иванович питĕ интересленсе паллашрĕ аслă поэтăн ялĕпе, ял çыннисемпе, тăхлачă-хăтисен тăванĕсемпе, халăх умĕнче уççăн, кăмăллăн калаçрĕ.

Упакассисем пире маларахах кĕтнĕ иккен. Унчченхи йăлапа эпир хамăра официаллă чинсем кĕтсе илеççĕ пуль, тенĕччĕ. Çавăнпа пуçлăхсене шыратпăр тĕп лапамра. Пире вара Семен Васильевичăн йăмăкĕ пĕтĕм Йĕпреç тăрăхĕ ячĕпе кĕтсе илчĕ. «Атьăр шÿрпе çиме, кăпăклă сăра ĕçме», — тесе вăл чи малтан хăйĕн тăванĕсене ытакласа илчĕ, унтан пире ăшă аллине парса тухрĕ. Элкерсен йăхĕнчи Владимир Ильич Герасимов, унччен вăл партком секретарĕнче, ферма заведующийĕнче ĕçлетчĕ, яланхиллех хăна кĕтсе илмелли йĕркепе пирĕнпе тĕл пулчĕ.

Вĕсем çавăтнипе эпир пуян кил-çурта çитсе кĕтĕмĕр. Пиччĕшĕн çуралнă кунĕ ячĕпе йăмăкĕн упăшки сысна пуснă. Килте ирех така хуранĕпе шÿрпе пĕçернĕ.

Анлă пÿрт ăшчиккине эпир тултарсах лартрăмăр. Йăмăкĕ Семен Васильевичăн епле йăрăскер, сывлăхлă, ĕçлекен чипер хĕрарăм.

Пăхсан тинкеререх, каснă-лартнă пиччĕшĕн сăнĕ. Калаçăвĕ те унăнни майлах, çемçен, типтерлĕн тухаççĕ сăмахĕсем. Çаврăнăçулăхĕ тата мĕнлерех. Хăнасене сăрине те, сăмакунне те, каçуннăй эрехне те питĕ меллĕн ĕçтерме пĕлет. «Мана халь аташма юрамасть-ха», — текелесе калаçакан Ефимов та чăтаймарĕ, «тусăм ячĕпе» тесе, шуррине стаканĕпех пушатса пачĕ. Чĕлхи тата ытларах уçăлса пынă май, Георгий Андреевич иртнине аса илме пуçларĕ.

— Писательсен Союзĕнче пирĕн, Атăл хĕрринчи çуртра, иксĕмĕрĕн пĕр сĕтел пурччĕ. Пĕр енчи сунтăхĕнче — Çеменĕн ĕç хучĕсемччĕ, тепринче — манăнччĕ. Хирĕç те ларса пăхнă, черетленсе те ĕçленĕ. Çав туслăх сĕтелĕ хушшинче ларнă пекех туятăп эпĕ паян сирĕн хăна сĕтелĕ хушшинче. Тавах сире ырă кăмăлшăн, — тесе вăл Семен Васильевичăн йăмăкĕпе тата Петĕр ывăлĕпе сăра куркине шаклаттарчĕ.

Апат хыççăн мухтав вăхăчĕ пуçланчĕ. Яланхи йăлапа мăн ушкăн Элкерсен тĕп килĕ еннелле хăпарчĕ. Траккассинче çуралнă, ÿснĕ паллă сăвăç. Пÿрт умĕнчи палăк сăнарĕ чĕрĕлсе пире хирĕç утса пынăнах, кашнине алă парса саламланăнах, кĕреке хушшине чĕннĕ пекех туйăнчĕ. Вăтам шкул картишĕнче те вăл бронза палăкĕнчен чĕрĕ çын пулса пирĕнпе юнашар ытакланса тăнă пекех пулса кайрĕ савăнăç самантĕнче. Эпир ăна çурхи чечек çыххисем тыттартăмăр. Хăйне хавасланса,

çунатланса калаçрăмăр пек. Музей пӳлĕмĕсем тăрăх та вăл хăй кăтартса çӳрет пек, парнеленĕ пирĕн кĕнекесене уçа-уçа хупать пек. Сасси çеç илтĕнмест. Ун вырăнне кĕçĕн ывăлĕ калать: «Атте сăнарне тасан упранăшăн, унăн еткерлĕхне çухалма паманшăн сире чун-чĕререн тав сăмахĕ калатăп», — тет Петр Семенович. — Ял атте сывлăшĕпех сывлать. Çакă савăнтармаллипех савăнтарать пире кашнинех кашнинчех, Упакассине килсессĕн».

Вăтам шкул çуртĕнче çар мухтавĕн музейне уçнă вăхăтра эпĕ пухăннă çынсене тепĕр хут пăхса çаврăнтăм, хамăн авалхи паллаканăма Еникова шырарăм. «Василий Николаевич çуккă-çке...» теме ĕлкĕреймерĕм, мана Герасимов хурлăхлă хыпар пĕлтерчĕ: «Нумаях пулмасть пытартăмăр ăна». Ячĕ çеç юлнă паттăрăн, С. В. Элкерпе Пысăк Упакассин ытти мухтавлă ывăл-хĕрĕн ырă ячĕ мăнаçлăн курăнать музейра, халăх асĕнче пурăнать.

Мĕн авалтан библиотека вăл кĕнеке, хаçат-журнал пуххисен пуянлăхĕ пулнă. Çĕнĕ самана ăна та çĕнĕ сăн, çĕнĕ пулăм кĕртнĕ. Электронлă тĕлĕнтермĕшпе халĕ пĕтĕм тĕнчепе çыхăнса, тĕнче культурин аталанăвĕпе ниçта тухмасăрах паллашма пулать. Республикипех моделлĕ библиотекăсем уçăлаççĕ. «Тĕслĕх библиотеки» текен çĕнĕлĕх паян Пысăк Упакассине те çитрĕ. Парнесем, тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан мăн телевизор таранах, пачĕç библиотекăна. Компьютер пулăшнипе, ял пурнăçĕ çинчен ӳкернĕ фильма пăхрĕç. Пурнăç аталанăвĕнче тăван чĕлхе, чăваш сăмахĕ ан çухалса кайтăрччĕ çеç ку «модельсемпе». Элкер те хăйĕн ятлă çăлтăрĕ пекех ялкăштăрччĕ чăваш халăхĕн чунчĕрине ăшăтса.

Каллех пире Элкер тăванĕсем çула ăсатрĕç.

Шупашкарта Родионова тĕл пултăм. Упакассине мĕнле кайса килни çинчен каласа парас тесе çăвара уçнăччĕ çеç, вăл мана, аллине ласт сулса, чарса лартрĕ:

— Манран ытла нимле «профессионал» та Элкере тĕплĕн, тарăннăн пĕлмест. Ячĕшĕн, «галочкăшăн» кăна тĕл пулмалла мар унпа. Пурне те чунран йышăнмасть вăл. Каласа пачĕç мана...

Писательсен Союзĕнче ĕçлекенсем хăйне Элкер юбилейне илсе кайманшăн кӳренмесĕр епле чăттăр-ха вăл — чăвашăн тĕп элкерçи?

Упакассинче çав кун кама куратăн, çавă: «Родионов ма килмен тата?», «Родионова эпир чунтан кĕтеттĕмĕрччĕ», «Виталий Григорьевичсăр епле-ха капла...» «Ах, чĕререн калаçаттăмăр...» тесе ыйтнисем çине хуравласа ĕлкĕреймерĕм.

Теветкел Микулайĕ те хăйне пăрса хăварнăшăн хытах кӳреннĕ. Питĕ ятлаçрĕ.

Мĕн тăвăн ĕнтĕ, уяв тени уявлах иртрĕ, анчах... Кушлавăш тăрăхĕнчи вăйлă та талантлă писательсемсĕр, Элкер тымарĕн чĕрĕ хунавĕсемсĕр.

Эпĕ вара хамăн пуçра çуралнă сăвă йĕркисемпе хама хам лăплантартăм:

Йĕпреç вăрманĕ, эс сип-симĕс, анлă,
Хĕвеллĕ тухăçран инçе анат таран,
Тĕнче кăрманĕ, эс пуян, ытамлă,
Хĕрӳллĕ пурнăçпа çиçсе тăран.

Йĕпреç кĕтесĕ, эс ытла асамлă,
Чăваш йăхне авалтанпа упран,
Тĕнче картийĕ ăшĕнчи çĕр халăх
Çемйи йышне вăйлантарса пыран.

Йĕпреç çĕршывĕ, эс вутра та çуннă,
Тăшман килсен çĕн пурнăçа ватма.
Тĕнче хăвачĕ пулнă иккен санăн
Хура эшкер çулне пӳлсе лартма.

Йĕпреç кĕтесĕ, эсĕ — мăн тăванлăх,
Епле манайăн сиплĕ çăлкуçа.
Тĕнче картинĕ — хурăнлăх, юманлăх,
Сăнарлăн, паттăр курăнан куçа.

Йĕпреç çынниийĕ, эсĕ çил-çунатлă,
Чапна кăтартрăн вăрçăра, ĕçре,
Тĕнче юррийĕ шăратан уç саслăн,
Ытакланса ларса кĕрекере.

Йĕпреç телейĕ, эс — манра, санра та,
Çĕнсе туптаннă çутă ăраскал.
Тĕнче паллийĕ илнĕ çич ютра та,
Кĕрешӳре нихçан чакман вăй-хал.

*2005 çулхи*
*çу уйăхĕн 19-мĕшĕ*

# ИЛЕМ ÇĂЛТĂРĔ

## *Чун сăнарĕн уйĕнче*

Илемлĕх вăл — пурнăç.

*Халăх каларĕшĕнчен*

— Анне, эпĕ килтĕм... Аванах-и?

Ăшран ăшăнса тухакан çемçе сасă ăмăртса юрлакан кайăксен сассипе сывлăша хутăшса каять.

Тутăрне тирпейлĕ çыхнă, кăмăллă пит-куçлă, уçă чунлă ватă хĕрарăм йăмра çулçисем витĕр ӳкекен хĕвел шевлипе çăвăнса умри сывăх çын çине чĕрĕлĕх хĕлхемĕ сапалать.

— Час килеймерĕм, анне, каçар...

Хăйне пуçран ачашланине туйнă пекех, хĕрарăм ăна ачашлăх техĕмĕпе йăпатать.

Ывăлĕ амăшĕпе сăмах вĕççĕн калаçать. Амăшĕ ывăлĕпе сасăсăр калаçать. Вилтăпри çийĕн çĕкленнĕ амăшĕн сăнарĕ чĕрĕ пекех. Ывăлĕ ăна тимĕртен шăратса илемлетнĕ, хăйĕн ăсталăхĕпе чĕрĕ чун кĕртнĕ. Амăшĕ те ăна çитмĕл пĕр çул каялла çут тĕнче кăтартнă. Ывăлĕ те амăшне, ĕмĕр палăкĕ вырăнне, вилĕмсĕр туса хăварчĕ. Çавна пула амăшĕн сăнарĕ чăтуллă чăваш хĕрарăмĕн пурнăç кунçулĕн тĕкĕрĕ — пурнăç илемĕ пулса юлчĕ. Аксаринкасси масарĕн илем кĕтесĕ вăл халĕ çав чĕрĕ палăк. Ун умĕнчен таврари нумай-нумай çын тарăн шухăшлăн, ытарлă туйăмлăн пăхса иртет. Тунсăхпа хурлăх мар, ырă туйăм палли çутатать Çатракассинчи Самарин Элекçи арăмĕн сăнпичĕ. Курма килнĕ, чунтан калаçма унпа юнашар ларнă аслă ачи Аркашкă палăк çине пĕрре амăшĕ çине пăхнă пек, тепре тĕнче илемĕ çине тинкернĕ пек хăпартланса пăхать. Ӳнерçĕ чунĕ, вилĕмсĕр икĕ хăвата пĕрлештерсе, уйрăлми çыхăнуллă сăнарпа — амăшĕпе — калаçать:

— Анне, мăнуксем пурте сывах. Хама та ватлăх пуса пуçларĕ. Хамăн та мăнуксем вуннăран иртрĕç ĕнтĕ. Мăнуксен ачисене те куртăм. Пуринчен те тăванла пысăк, ăшă салам илсе килтĕм. Лайăх юл, юратнă анне...

Ура çине çĕкленсен те утăм малалла тăваймарĕ Аркадий Алексеевич. Варкăшса выляса килнĕ уçă çил кăвакарнă çӳçне пайăркан-пайăркан вĕлкĕштернĕ самантра ăна амăшĕ пуçран ачашланă пекех туйăнчĕ. Вăл скульптурăри тимĕр куçра унăн çырă тĕслĕ ăшă хĕлхемлĕ куçне курчĕ, тимĕр тута хĕррисенче хăйне пĕчĕк чухне чуптунă ачаш тутан сĕтеклĕ тутине туйрĕ...

Пурнăç карри уçăлса пынă май, Самарин куçĕ умне ачалăхри чи асра юлнă ӳкерчĕксем туха-туха тăчĕç.

Акă вĕсем улăхра, выртмара. Лашасем тулхăра-тулхăра сĕтеклĕ курăка капăртаттараççĕ. Ыйхă таçта вĕçнĕ. Анлă уçлăх тĕнчи ухмаха кăларать. Уйăхĕ хуллен куçать. Йăрр та йăрр юхакан, ушкăнăн-ушкăнăн кĕпĕрленсе йăлтăртатакан çăлтăрсем пуç тӳпинчен çӳлерех те тĕнче ăнланмалла мар йăшăлтатнине систереççĕ. Микихвер аслашшĕ, тӳпенелле янахне каçăртса, калать:

— Тĕнчере мĕн чухлĕ çын — çавăн чухлĕ çăлтăр. Кашни çыннăн хăйĕн çăлтăрĕ пур.

— Чăнах-и? Ман та пур-ши?

— Чăнах, ачам. Сан та пур çăлтăру. Ман та.

— Хăшĕ-ши вăл?

— Хăшĕ хăвна çывăхрах, хăшĕ хăвăншăн çутăрах — çавă. Шыра ăна, тĕнче аслă. Уйăх çумĕнче çеç ан шыра.

— Мĕншĕн, асатте?

— Çăлтăр уйăх çумне пырсан, ялта çын вилет, тет.

Аслашшĕ калани тĕл килчĕ-ши, мĕн инкекĕ пулчĕ, анчах кĕçех Самаринсен килне хуйхă татăлса анчĕ: ашшĕ сарăмсăр вилсе кайрĕ. Амăшĕ пилĕк ачапа тăлăха тăрса юлчĕ. Чи асли — Аркашкă.

Асаилӳри тепĕр ӳкерчĕкĕ пит-куçа хаваслăх паллипе çутатрĕ. Сĕнтĕрвăрринчи курăс склачĕсене хураллакан Микихвер аслашшĕ Аркашкăпа пĕрле кӳршĕ ялта — Кечкейра. Çунса кайнă чиркӳ çуртне кирпĕчрен купаланă. Аякран килнĕ турăш ăстисем унăн ăшчикне илемлетеççĕ. Ватă çынпа ача вĕсен асамлă сăрăран шăранса тухакан çветуйĕсене ăмсанса, çăвар карсах сăнаççĕ.

— Пирĕн сăна та ӳкерсе памăр-ши? — ыйтать аслашшĕ.

— Хакла ларать, старик. Тӳлеме ĕнӳ хакĕ те çитеймĕ, — кулать вĕсенчен пĕри.

— Ан кулян, асатте, — чиркӳрен тухсан, лăплантарать ăна Аркашкă. — Сан сăнна эп пурпĕр хам ӳкеретĕп.

Микихвер мăнукне тăрмаланчăк çӳçĕнчен шăлса илет:

— Шанăç пур-ха апла ман. Санра темле асамлăх палли курăнать. Тетте тума та, сăрлама-каскалама та ăнкаратăн. Анчах пĕлӳ çитмест пире — пĕлӳ. Ман хамăн та тем те ӳкерес килетчĕ. Шухăшăмĕмĕтĕм çунса кĕлленчĕ. Сӳнчĕ çăлтăрăм. Авă, тĕксĕммĕн çеç мĕлтлетет. Эс, ачам, вĕрен. Сире валли халь çутă çул уçăлчĕ.

Акă тата кукашшĕсем патне хăнана кайни аса килчĕ. Куславкка енчи Кутемере лашапа çитсен вĕсен яланах савăк вăхăт пуçланать. Илле куккăшĕпе пĕртăван Микулайăн Хусанта вĕренекен Петĕр ятлă ывăлĕ курма килнĕ-мĕн. Пысăк хулара пурăнаканскер вăл шĕвĕрккесене сĕрме купăс каласа тĕлĕнтерет: юрлаттарать, ташлаттарать. Осиповсем типтерлĕ, сăпай, илемлĕ чун-чĕреллĕ çынсем. Аркашкăн та чунĕ çав тĕнченеллех талпăнса туртăнать. Ăста тухтăрпа, паллă çыравçă-драматургпа вăл мĕн виличченех тăванлăх туйăмĕпе хăпартланчĕ.

Ялти пуçламăш шкулта вĕренекенсем лартнă спектакльте Аркашкă Самарин суккăр ача рольне вылять. Сцена çинче пĕрремĕш утăм тăвать вăл.

Вăтăрмĕш çул... Çатракассинче те уйрăм хуçалăхсене пĕр çĕре пĕрлештереççĕ. Аркашсем колхоза лашапа, ĕнепе кĕреççĕ.

1934 çулхине Улатăрта ўкерўçĕсемпе гравюра ăстисен шкулĕ уçăлать. Вунтăватă чăваш ачипе пĕрле вунпиллĕкри Самарин та илемлĕх тĕнчине кĕмелли алăк хăлăпне ярса тытать.

Ачалăх вырăс хулинче хыçала тăрса юлать.

Аркадий Алексеевич, амăшĕн ыйтуллă куçĕнчен тепĕр хут тунсăхлăн пăхса илнĕ хыççăн, пуçне усса хуллен утса каять, масартан уя тухать. Çула май çамрăклăхне аса илсе пырать.

Микихвер аслашшĕ чĕртнĕ хĕлхеме çамрăк Аркаш ăшĕнче илемлĕх шкулĕнчи вĕрентекенсем çулăмлантарса ячĕç. Быков, Тагаев-Сурбан, Сверчков тата ытти художниксем вĕрсе ялкăштарнă ăсталăх вучахĕ ăна халĕ те ăшăтса, пĕçертсе тăрать.

Канашри пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкул. Сăнарлă искусствăна вĕрентекен Аркадий Алексеевич Самарин пуçласа урок ирттерет. Эх, аслашшĕ итлесе ларас пулсанччĕ партта хуппинче! Мăнукĕн çăлтăрĕ епле çуталнине курас пулсанччĕ! Анчах Самарин Микихверĕ çуккă ĕнтĕ. Унăн çăлтăрĕ çўл тўпере сўннĕ. Ячĕ çеç юлнă çĕр çинче. Ўкерчĕ-ўкерчех унăн сăнне каярахпа мăнукĕ. Турăш сăрлакана мĕн тери ўкерттерес килнĕччĕ унăн. Халĕ несĕл тымарĕн сăнарĕ ĕмĕрлĕхех юлчĕ мăнукĕн ĕçĕнче.

Учитель кăна мар, инспектор та, артист та, художник та пулса курчĕ Самарин вăрçăччен. Республикăри Министрсен Канашĕ çумĕнче сăнарлă искусство енĕпе ĕçлекен управлени пурччĕ. Пĕр хушă çавăнта патшалăх ĕçне турĕ. Патăрьелĕнче колхоз театрĕ уçăлсан, унта куçса кайрĕ.

Патăрьеле аса илсенех, унăн амăшĕпе калаçса ыраттарнă чĕри çĕнĕрен чиксе килчĕ. Амăшĕн сăнарĕ çумне арăмĕн сăнарĕ йăпшăнса тухрĕ. Хăйĕн ĕçĕсен сăнўкерчĕк пуххинче те вĕсем иккĕшĕ хирехирĕç пăхса лараççĕ, пĕр чĕре суранĕ вырăнĕнчех ăша çунтараççĕ.

Колхоз театрĕ ял-ял тăрăх спектакльсем кăтартса çўрет. Труппа Первомайскине çитрĕ. Шăпах вăл вăхăтра шкулсенчи пултарулăх ушкăнĕсен тупăшăвĕ пыратчĕ. Театр художникĕ тата артисчĕ Аркадий Самарин та юлташĕсемпе пĕрле концерт курать. Темшĕн-çке ăна сцена çинче илем ăсталăхне кăтартакан пĕр чипер хĕр çине çеç пăхнăн, хăйпе кăна вăрттăн калаçнăн туйăнать. Каччă та, ирĕк ыйтнă пекех, шухăш-ĕмĕчĕпе вăтам пўллĕ çав йăрăс пикен кăтра хумлă вăрăм çўçĕпе выляса йăпанать, унăн куллипе кулать, кĕлеткинчи кашни хусканăвĕпе чунтан каçса кайса киленет.

Сисрĕ-ши чиперкке çакнашкал асамлăх вылявне, анчах каярахпа, ташăсем пуçлансан, иккĕшĕ пĕр мăшăра лексен, вăл, йĕкĕт хулпуççийĕ çине аллине хурса ун кĕлеткине хĕрнĕ хурçă перĕннĕ пек пĕçертсе ячĕ, ăслăн пăхакан пысăк та тарăн куçĕпе хăй çумне уйрăлми пăталарĕ, çӳç пайăркипе питĕнчен çепĕççĕн сĕртĕнтерсе, чĕрс патне çитиччен асран кайми йĕр хăварчĕ.

Вальс кĕввине уçăмлă сасăпа пуянлатса хĕр çинçен кулса ярать те, çăмăллăн çаврăнса, ушкăн хĕррине тухать, ташланă май, хăйпе паллаштарать: «Галина Петровна». Унтан, тепĕр çаврăм тăвать те, хушаматне асăнать: « «Барашевская». Çаврăнса алăк тĕлне çитет те: «Царицын енчен эпĕ, чăваш ачисене истори вĕрентме янăскер», — тет çепĕççĕн чĕвĕлтетсе. Аркадий хăй камне калать.

Аслă Атăл хĕрĕпе каччи çапла, ăнсăртран паллашса, пĕр юхăма, çутçанталăк юхăмне, алла-аллăн тытăнса кусаççĕ. Тĕнче саккунĕпе, хĕрĕхмĕш çулта, çĕнĕ çемье çуралать. Хăй вăхăчĕпе çынсенни пекех вĕсен хушшинче те виççĕмĕшĕ тупăнать. Ачашшăн Лера-Валерия тесе йăпанаççĕ Самаринсем хăйсем пĕрремĕш пепкипе. Савăнăçĕ çеç нумая тăсăлмасть. Çĕршыв çийĕн аслати кĕрлеме, хуласемпе ялсене аçа çапса çунтарма тытăнать. Тăван çĕр-анне хӳтлĕх ыйтса макăрать.

Фашизм аçтахине алла хĕçпе пăшал тытмасăр касса ваклама, вĕлерсе тĕп тума май çук. Унсăрăн вăл хăй пирĕн халăхсен пуçне касать. «Çĕклен, анлă çĕршывăм, кар тăр хаяр вăрçа...» Хумхантарса чĕнет, хушать хăватлă юрă кашни совет çыннине.

Аркадий Самарин арăмĕпе хĕрачине Çатракассине килсе ярать. Амăшĕ патĕнче пилĕк çул пурăнаççĕ вĕсем. Ольга Ильинична — колхозри чи ĕçчен те паттăр хĕрарăмсенчен пĕри. Уй ĕçне те хастар хутшăннă. Ĕне пăхса, сĕт суса Сĕнтĕрвăрри районĕпе чапа тухнă. Галина Петровна шкулта ачасене вĕрентнĕ. Аркадий Алексеевич...

Вăрçă тухсанах тăхăннă салтак тумне хĕрĕх улттăмĕш çулчченех хывман. Иккĕмĕш Белорус фрончĕн стрелоксен 108-мĕш дивизийĕн артиллери чаçĕнчи Самарин связист Пысăк Çĕнтерĕве Хĕрлĕ Çăлтăр, Тăван çĕршыв Аслă вăрçин иккĕмĕш степень орденĕсемпе тата «Çапăçура палăрнăшăн» икĕ медальпе кĕтсе илет. 1945 çулхи çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче Мускавра Çĕнтерӳ параденче Хĕрлĕ площадь чулĕсем тăрăх хăюллă салтак утăмĕсемпе хастаррăн утса тухать.

Çав паллă кун, çав хăпартланулла самант хăвачĕ вата салтак кĕлеткине халĕ те вăй кĕртсе хытарать, вара вăл хăй сисмесĕрех тӳрленет, ăшри марш кĕввипе урисене çӳлерех çĕклесе вăрăмраххăн, уçăмлăраххăн утса каять. Фронтра пĕрле пулнă, вăрçă хирĕсенче çухатнă тусĕсем куç умĕнчен вĕлтлетсе иртеççĕ. Вăл вĕсене асра кăна тытмасть, тăвата юнлă-вилĕмлĕ çулталăк хушшинче сăрласа хăварма ĕлкĕрнĕ эскизсенче, ӳкерчĕксенче, вăрçă чарăннăранпах çине тăрса

ӳкерекен портретсемпе картинăсенче чĕртсе пырать. Парад хыççăн тунă автопортречĕ те унăн çав стройрах — çав ăшрах. Салтак йышĕнче — пăшаллă çыннăн вилĕмсĕр сăнарĕн йышĕнче.

Пуç тӳпинче хĕвел чăтма çук çунтарать. Таврара ăрша вылять. Марш кĕвви тăрисен юрри-кĕввипе хутăшса каять. Атăл енчен хăпаракан çамрăк хĕрсем çул кукăрĕнчен сиксе тухрĕç. Выляса-кулса вĕсем сывлăша çĕклентерчĕç, ватă çынна çамрăклăх хумĕпе сапса уçăлтарчĕç, урăх шухăш тĕнчине кĕртсе ячĕç.

Çак урапа çулех вĕт. Çак çулпах утатчĕ вăл хĕрĕх улттăмĕш çулта та. Салтак тумне хывнăччĕ. Амăшĕпе, арăмĕпе чунтан калаçса, хĕрачипе выляса киленнĕччĕ. Вăрмана кайма тухнăччĕ. Мĕн пĕчĕкрен йывăçран каскаласа çын кĕлетки тума, ăсталама хăнăхнăскер, вăл пуçра капланнă сăнарлă шухăшсен илемне çиеле кăларас ĕмĕтпе миçе çул асапланса пурăнчĕ. Çарта чухне унпа аппаланма май килменччĕ. Вăрман хуралçипе калаçса, хăйне майлă йывăç суйласа илесшĕнччĕ.

Сиксе тухрĕç ыраш пуссинчен ун чухне те çакнашкал хĕрсем. Тулькклăш, кусенчен чылай уйрăмрахчĕ вĕсем. Хальхисен кĕлетки те чăп-чăмăр, тумĕ те пит капăр, кăмăлĕ те чурăсрах. Пăхмарĕç те вĕт çулпа пĕччен пыракан ватă çын çине, сăмах та чĕнмерĕç. Вăрçă хыççăнхи хĕрсем ырханрахчĕ, кивелнĕ, саплăклă кĕпепеччĕ, çаруранччĕ... Чĕлхи вара... тăванрахчĕ, ырăрахчĕ, кăмăллăрахчĕ. Вĕсенчен пĕри, çӳлĕреххи, аслăраххи пулас, вичкĕн куçлăраххи, — пуринчен те ытларах кăмăллăн пăхать. «Ку — пирĕн бригадир, пичче, ку вара — пирĕн уй», — тесе пĕлтерчĕ те ун çумĕнче тăракан лутрарах хĕрĕ, малалла чупса кайрĕ. Ыттисем ун хыççăнах тапса сикрĕç.

Ĕнерхи салтак ял хĕрĕсене курăнми пуличченех ăсатса ячĕ, ун хыççăн тулли ыраш пучахне ывăçа хурса шухăшларĕ: «Акă камсем çăкăр çитернĕ пире вăрçăра. Акă камсен черченкĕ ури çинче тытăнса тăнă пирĕн çĕршыв пурнăçпа вилĕм умĕнчи шăпа çулĕсенче. Чи лайăх йывăçран маçтăрлас çăкăр хĕрĕн, çĕр пикин вилĕмсĕр сăнарне».

Çутçанталăк йывăçа капăр ӳстерет. Этем унра тĕрлĕ хитре ӳкерчĕк курма, унăн тураттисемпе тымарĕсенчен çав тери чаплă эреш, сăнарлă япала майлаштарма пултарать. Анчах та, касса тураттисенчен иртнĕ хыççăн, йывăçран яка вулă çеç тăрса юлать. Çав каскара художник хăйĕн пулас скульптурин сăнлăхне курса палăртать. Ăна касать, савалать, якатать. Унпа пуплет, хирĕлет, çураçать, ăна хăйĕн пултарулăх сĕткенĕпе шăварса чĕртет, унран тĕнчепе калаçакан вилĕмсĕр сăнар çуратать.

Куçа çапăнса чĕрене кĕрсе юлнă ял хĕрĕн, уй-хир бригадирĕн сăн-пичĕ те çавăн пекех питĕ тертлĕ тухса пычĕ куç умне. Аркадий Александровичăн чунне самаях лăскарĕ вăл. Хĕрарăма ача çуратма тем пекех йывăр пуль те, ăсталăх çыннине те йывăçран чунлă сăнар çуратма çăмăлах мар иккен.

Акă вăл, хăюллăн малалла тинкернĕ чăваш пики, çĕр çинче çирĕп тăрать. Çара урисене сĕртĕнсе, чĕркуççирен çӳлерех туртăнса çĕкленнĕ кĕпи çумĕпе пĕр тăплăм ыраш явăнса хăпарать. Хĕр хăй ӳстернĕ тырă пучахĕсене тăпăлккан мăкăрăлса тăракан сулахай чĕччи, чĕри çумне çупăрласа тытнă. Çĕр сĕткенĕпе хĕрарăм сĕчĕ пĕрлешсе пурнăçа малалла аталантарса ямалли чĕрĕ çăлкуç пек курăнать йывăçран касса илемлетнĕ хĕр кĕлетки. Пурнăç çăкăрĕн уйĕнчи ĕмĕр-ĕмĕр чĕрĕ те тутлăхлă сăнар çакă «Бригадир» ятлă скульптура. Художник унра çав палламан хĕрĕн хĕрӳ сăнарне те, арăмĕн çамрăк чухнехи юрату хĕмлĕхне те пĕр ытама пуçтарнă. Çавăнпах пуль сĕтеклĕ пиçнĕ сăнар çăкăрĕ.

Çăкăр, çăкăр... Этем тарĕпе, çĕр сĕткенĕпе пиçнĕ çăкăр... Сăнар çăкăрĕ пĕçерме пулăшакан çăкăр... Авă епле пуç таяççĕ тулли пучахсем. Утнă май алла, урана перĕнсе ачашшăн калаçаççĕ хăнари çывăх çынпа. Вăл хăй те вĕсемпе калаçать, вăштăр çилпе хумханакан ыраш пуссине пуç таять. Ун куçĕ умне çав вăхăтра пучах тинĕсĕн варрине Çăкăр пики ишсе тухать. Вăтам çулсенчи хĕрарăм уринче — çăпата. Тăпăл-тăпăл кĕлеткине пир кĕпепе саппун капăрлатать. Вĕçĕсене умалла ярса тутăр çыхнă, сылтăм хулпуççийĕ çинче — çурла. Сулахай аллине тулли кĕлте тытнă. Хăпартлану та, çирĕплĕх те, мăнаçлăх та уççăн палăрать унăн чĕрĕ пит-куçĕнче. Путарах панă çивчĕ куçĕнче — чăваш йăвашлăхĕн ăшă çути. Çĕкленчĕк пуçĕ паттăрлăх мухтавĕн хăвачĕпе тулнă. Халăха тутă тыттаракан, çĕршыва тăрантаракан юман пек çирĕп чăваш хĕрарăмĕ çутçанталăк панă илемĕпе мăнаçлăн малалла тинкерсе тăрать Çĕр çинче.

Тин кăна уйрăлнă амăшĕн сăнарĕ те, Ольга Ильинична пек тертленсе тăван çĕре, юратнă халăха ырă кăмăл-туйăмпа, ĕçри паттăрлăх çăкăрĕпе пуянлатнă пин-пин чăваш хĕрарăмĕн асран кайми хитре сăнарĕ те тухрĕ юман каскаран. Çулталăк тăрмашрĕ, кунне-çĕрне мансах чутларĕ Самарин чул пек çирĕп йывăçа. Совет влаçĕ çитмĕл çул тултарнă кун тĕлне парăнтарчĕ ăна — вĕçлерĕ йывăр ĕçе. Çитмĕл пилĕк сантиметр диаметрлă, çĕр сакăрвун пилĕк сантиметр çӳлĕш юман кĕлеткине чĕрĕ чун кĕчĕ темелле. Хăватлă чăваш хĕрарăмĕ, пурнăç аталанăвĕн тăрантаруçи Йĕпреç музейне курма пынă кашни çынна çăкăр шăршипе тутлăхлăн кĕтсе илет.

Ыраш уйĕнче курăнса тăракан асамлă сăнар Аркадий Алексеевич пуçне йăлтах пăтратса ячĕ. Вăл халĕ пĕрре амăшне, унтан арăмне, кĕç çамрăк бригадира курма пуçларĕ. Тырă, çăкăр, пурнăç... Пĕр çĕр çинчи хăват, пĕр çыхăри сăнар явăнчĕ умра.

— Анне, ан ятла мана ялтан çамрăклах кайнăшăн. Пурнăç çулĕ çапла пулса тухрĕ. Шăпа...

Утнă май Самарин çурăм хыçĕнче амăшĕн кăмăллă пит-куçне хирĕç пăхнă пекех туйса пычĕ. Аркадий Алексеевич утасне хăвăртлатрĕ.

Унăн халĕ часрах яла çитсе тăвансемпе тепĕр хут калаçас та Йĕпреçе тухса каяс килчĕ. Унта унăн иккĕмĕш килĕ-çке. Унта унăн мастерскойĕ. Унта унăн сăнарлă искусствăри пурнăçĕ — ўнер нуши.

## *Ĕмĕрлĕх хисеп тĕкĕрĕ*

Музыкăпа сăнарлă искусство
пĕр çăлкуçран шыв ĕçеççĕ.

*Халăх шухăшĕнчен*

Ялтан тухсанах чĕлхе çумне пĕр кĕвĕ сыхланчĕ те, ватă çыннăн чунне çĕклентерсе, çамрăклатса ячĕ. Уçăмлă, янравлă, ташлаттаруллă кĕвĕ çак ыраш хумĕпе пĕрле çĕртен сирпĕнсе тухнă пек, хăйпе пĕрле пĕтĕм тавралăх, кутран-кут ларса тухнă Çатракасси, Аксарин, Кĕчкеç, Чикмеçин пĕр хорта юрланăн туйăнчĕ Самарина.

Çунат хушассăм килет,
Шăпчăк пулассăм килет;
Садран сада çўре-çўре
Юрă юрлассăм килет...

Аркадий Алексеевич чарăнса тепĕр хут пăхса илчĕ хăйне çуратнă тăван кĕтес илемĕ çине. Йăмраллă лăпкă ялсенче пурнăç вĕрет, аталанать, çĕнелет. Чикмеçин ялне Кĕчкей хăй ытамне ытларах çавăрса илнĕ, авă. Унăн ячĕ те çуккă пулас халь патшалăх хучĕсенче. Халăх хушшинчи ячĕ çеç тăрса юлнă. Анчах та кĕвĕ Чикмеçин енченех, çав ялтанах вĕçсе килет. Чăнах, çавăнтанах! Ăрша пек йăрласа килет те вăл вара ăна та, Çатракасси ачине, хаваспах юрлаттарать:

Ик çунатăм çук-и ман,
Шăпчăк сасси çук-и ман?
Садран сада çўремешкĕн
Сад пек çĕршыв çук-и ман?

Улма-çырлаллă пахчасем, шăпчăк сассиллĕ пуян пахчасем, тулли пучахлă уйсем... Чикмеçин енчен кĕвĕ хĕлĕхĕ янравлăн тăсăлать. Самарин пĕлет, çав хĕлĕх Хирбиковсен килĕнчен тытăнать. Патша саманинче Якку ятлă чухăн хресчен çемйинче çуралнă Кĕркури карăнтарнă ăна, — кĕтўçре çўренĕ пултаруллă ача. Ашшĕ-амăшĕн тымарĕнчен чăваш халăхĕн хăвачĕпе çыхăнтарса карăнтарнă. Çав хĕлĕх çинче Кĕркури Хирбю тĕнчене илтĕнмелле шăрантарать халăх сĕткенĕнчен илнĕ, пуçра, чĕрере çуратнă лирикăллă юрă-кĕвве. Халăх шăпчăкĕ чăвашăн тепĕр юрăçне, Валентин Урдаша тупса, унпа тĕнче ирĕклĕхне çунат хушса тухнă. Вĕсемпе пĕрле Самарин та юрлать:

Уйăх çути çук-и ман,
Хĕвел хĕмĕ çук-и ман?

Уйăхпа хěвел пулманшкăн
Ырă ěçсем çук-и ман?

Хирбю чăваш халăхне панă музыка парни, Аркадий Алексеевич шухăшěпе, халăх хăйне панă фольклор пуянлăхěн тěкěрě вырăнěнче. Чикмеçин çăлкуçěнчен тапса тухнă талант чăвашăн илемне тата çӳлерех шая çěклеме пулăшрě. Ентешěн иксěлми хăвачěшěн Самарин, ун кěввине ěнерлесе пынă май, чунтан хěпěртерě. Анчах та шел, ял культури, чăваш халăхěн культури мěнле пуян никěс çинче аталаннине асăрхама тавçăраймасăр е ун çинчен тараннăн шутлама пěлмесěр, авалхине, ватлăхрине тивěçлě вырăн парасшăн мар пек хăтланаççě-ха пирěн. Тăван çěр çуратнă пултарулăха паянхи çынсен, çамрăксен ăсхакăл пуянлăхě те туса хума пултарайманççě. Пурнăç кěрнеклěхě пурнăç илемлěхěпе пěрех, пěрлех, уйрăлми пěр çыхăрах пулмалла-çке. Музыка та, сăнарлă искусство та, театр та халăх кěввиех — ěç кěввиехçке — яланхи пурнăç кěвви. Çав нумай сасăллă кěвě художник чěрине çунатлантарса, вăй хушса пырать.

Хирбиковсен Кěркурийěпе пěр шкулта, Кěчкейре вěреннě пулин те, Аркадий Алексеевич кӳршě ял ачине малтан пěлмен. Вăл унран сакăр çул аслăрах пулнă. Çывăххăн вěсем Йěпреçре паллашнă. Пултарулăхăн илем çулě вěсене çак вăрман поселокне вăрçă хыççăн илсе çитернě. Автобусра ларса пынă май, халě Самарин çамрăклăх вăхăчěпе киленчě.

Салтакран таврăнни нумаях та пулмасть-ха. Вăрçăччен Патěрьелěнче пěрле ěçленě Фролов ырă хыпар пěлтерчě:

— Аркадий Алексеевич, мана Чăваш искусство управленийě театр йěркелеме ирěк пачě. Ржанов алă пуснă. Управлени пуçлăхне Василий Тимофейча питě тав тăвас килет. Мана, театр техникумěнчен тин кăна вěренсе тухнă «сар тутана», çавăн пек пысăк ěç шанса пачě.

— Эс, Василий Павăлч, хăвна ытлашши ан пěчěклет. Пěлетпěр сана мěнле «сар тутине». Директор пулма, театра илемлěх енчен ертсе пыма пултарайман артиста нихçан та шанмаççě, — терě Самарин. — Тавçăрса илтěм калаçăва мěншěн пуçарнине.

— Апла пулсан, аван. Атя пěрле ěçлеме. Эпě труппа хатěрлерěм.

— Камсенчен?

— Хамăр пěрле ěçленě Митюковпа Ершов, Терентьев, Григорьев. Васильев баянист. Çавăн пекех Фаяльская, Цаплина, Стахеева, Митюкова килěшрěç.

— Мěн лартăпăр-ха?

— Максимов-Кошкинский ятарласа пьеса çырма шантарчě. Хирбю та хутшăнма килěшет.

— Григорий Якăльччă-и? Вăт ку тата лайăхрах. Апла ентешпе пěрле кěрлеттерěпěр.

Çак саманта аса илнипе Самарин хăлхине хĕрĕх улттăмĕш çулхи хавас кĕвĕ таçтан аякран вĕçсе килсе кĕчĕ. «Телейлĕ çуркунне» комеди куç умне тухса тăчĕ. Хăй илемлетнĕ сценăсем, хатĕрленĕ костюмсем... Артистсен ăста вылявĕ... Чăвашсен иккĕмĕш колхоз театрĕ йĕпреçсем умĕнче ăсталăхне кăтартрĕ. Вăрçă вĕçленсе пынă тапхăрти ял пурнăçне, халăх çĕнтерĕвĕн утăмĕсене, çынсен хуйхипе савăнăçне ĕненмелле кăтартса пачĕç вĕсем. Умĕнчен пуçласа вĕçне çитиччен Хирбю музыки янăрарĕ. Пьесăри ĕçсем аталанса пынă май куçăм çемми тикĕс çемĕпе хĕрӳ туйăмлăн, чĕрене çĕклентермелле лирикăллă шухăшкăмăллăн юрăланса илтĕнсе тăчĕ. Декорципе костюмсен тата артистсен ăсталăхĕпе пĕрлешсе çав çемĕ спектакль куракансене хăй çумне тыткăнларĕ.

— Пултаратăн, Григорий Якăльччă, — мухтаса илчĕ Самарин.

— Нушаланатăп çав, — ăшшăн кулса ячĕ хура çăра кăтра пуçлă Хирбю. — Ăçтан тĕл пулчĕ мана Максимов композитор... Ялтах пурăннă пулсан, тен, çак нушана та курман пулăттăм-ши? Питĕ йывăр-çке ĕçлеме.

— Турă тĕллесе янă пуль çав ăслă çынна сан пата.

— Турах-ши? Чăнахах-ши? Ĕненес те килмест. Ялти шкулта ултă çул çеç вĕреннĕ эп. Шупашкарти коммуна шкулне лекрĕм. Çавăнта куçларĕ мана Степан Максимович. Серепене çаклатрĕ те вара çавăтса кĕчĕ музыка тĕнчине.

— Санра талант пуррине курнă вăл.

— Темле. Тĕрĕссипе, эп хамăр тăрăхри юрăсене юрлама юраттăм. Ман сасăран çырса илчĕ вăл вĕсене. Вăтăр иккĕмĕш çулта Мускавра кĕнекен те кăларчĕ. Кайран — музыка шкулĕ, Питĕрти консерватори.

— Вăйлă музыкантсен аллине лекнĕ эс.

— Чăн та, куншăн турра тав тăватăп. Хамăн вĕрентекенĕмсене Максимова, Павлова, Кривоносова, Люблина, Габера, Питĕрти профессорсене кăвапана çити пĕшкĕнсех пуççапас килет. Вĕсем пулман пулсан ман шăпа çулĕ çинче, паянхи çак музыка та янăраймастчĕ Йĕпреç вăрманĕнче, Аркати шăллăм.

Спектакль хыççăн, икĕ хутлă йывăç клуб çумĕнчи тирексем айĕнче пулса иртнĕччĕ ку калаçу.

— Тăнла, Аркати, епле юрлаççĕ йывăççем? — çӳлелле пăхса хăй те тăнларĕ Хирбю. — Çулçăпа çулçă сĕртĕнсе çут тĕнче кĕвви çуралнине илтетĕн-и? Ха, кайăксене юрлама епле пулăшать çав музыка? Эх, пысăк калăплă янрав хăвачĕ кĕрлеттерес килет. Ивановăн «Нарспийĕ» чуна илет. Çеçпĕл те чĕре витĕрех шăтса тухать.

— Ман хамăн та мĕн чухлĕ тарăн, анлă шухăш пуçра. Ял пурнăçĕ, аваллăх шутсăр канăç памасть. Вăрçă çулĕсем те асран тухмаççĕ...

— Ĕçлер-ха вăй пур таран, шăллăм. Вăхăта ахаль сая ярар мар. Халăх ыйтать, пит нумай ыйтать пиртен, — хавхаланчĕ Хирбю çав лăпкă каç.

Вăрман касса йывăçран тĕрлĕрен япала тăвакан ĕçчен çынсен поселокĕ театр труппине ăшшăн йышăнчĕ. Патĕрьел, Комсомольски — Аслă Каçал, Елчĕк районĕсене те тухса çӳререç артистсем. Пултарулла чăваш ачисем театра вăй парса пычĕç. Вĕсенчен пĕри вăл — чăваш халăх поэчĕ, Канаш районĕнчи Малти Ăнтавăш ял ачи Георгий Андреевич Ефимов. Чăваш патшалăх академи театрĕ çумĕнчи студирен вĕренсе тухнă сăвăç-артист халăха хăйне евĕр тыткăнлама, курса итлемешкĕн çунатлантарма ăстаччĕ. Репертуар пуянланса пычĕ. Максимов-Кошкинскин «Сенкер двойки», «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан», Катаевăн «Полк ывăлĕ», Мольерăн «Жорж Данден», Чеховăн «Дядя Ваня», Гоголĕн «Женитьба» пьесисене лартма мĕн чухлĕ декораци тума, костюм хатĕрлеме тиврĕ Самаринăн. Хушăран хăй те юратнă рольсене вылярĕ. Хирбю вырăнне Трак енчи Чернышев-Шетмĕ килчĕ. Федор Павловăн пултарулăх шкулĕнче Лукинсемпе тата Хирбюсемпе ăсталăха вĕреннĕ Никита Константинович та спектакльсене хитре кĕвĕсемпе маçтăрласа пуянлататчĕ. «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан» комедири Алка сăввисемпе çырнă музыка Чернышев-Шетмĕн палăрмалли ӳсĕмĕ пулчĕ. Ку спектакльпе вĕсем Мускавах çитрĕç. Çĕршывăн тĕп хулинче те чăваш артисчĕсем чаплă вылярĕç.

Никита Чернышев-Шетмĕ те илемлĕ Йĕпреçе ун пекех хăйĕн иккĕмĕш çĕршывĕ туса хучĕ. Нумай çул хушши ачасене кăна мар, мăннисене те музыкăна тăрăшса вĕрентрĕ, юрă нумай çыратчĕ, кĕнеке те кăларатчĕ, искусство анлăшĕнче хăйĕн тӳпине çитсех, вĕсенчен уйрăлса, вилĕмсĕр тĕнчене — муза тĕнчине куçрĕ. Шетмĕ тăрăхĕнчи талантлă чăваш Йĕпреçре тунă ыра ĕç халăх асĕнче юлчĕ.

Питĕ аванчĕ ун чухне. Шел, васкаса пĕтерчĕç колхоз театрĕсене. Халăх пултарулăх шăнăрне пуртăпах касса татрĕç. Унта вĕт пĕтĕмпех ялти пултарулла каччăсемпе хĕрсем туртăннă, сцена çинче хăйсен илем тĕнчине уçнă, театра пурнăç килĕн алăкне уçса кĕнĕ пек кĕнĕ. Митюкова, Бикулова, Митрофанов, Голубева, Уфимцев тата ытти артистсем те каярахпа пĕтĕм Чăвашра палăрчĕç. Тата мĕн чухлĕ талант чапа тухатчĕ пуль халăх театрĕсем ялсенче нумайрах вăхăт ĕçленĕ пулсан! Çынсен ăслăлăх шайĕ, культури еплерех аталанатчĕ. Çав пысăк йăнăша тунă пуçлăхсен тӳрккес алли чăваш халăхне малалла аталантарма чарса тăнăшăн мĕншĕн кулянмалла мар-ха.

Самарин хăйĕн пурнăçне Чăваш театрĕпе çыхăнтарса йăнăш тумарĕ. Хăйне аталантарма та, халăха усă кӳме те нумай пулăшрĕ вăл ăна. Пултарулăхра çыннăн чунне илемлĕх витĕр курма, шухăш-туйăма сăнарлăхра шăратса кăларма, музыкăна сăнарлăх искусствин хăйне евĕр кĕввинче палăртма, юратăва тупса çĕнтерме пулăшрĕ. Театр ĕçленĕ

Йĕпреçри культура çуртне ÿкерсе хăварчĕ. Театр директорĕ Василий Фролов Вера Голубева артисткăпа ларакан картина тата темĕн чухлĕ эскиз, декораци валли ÿкерчĕксем пур унăн. Вĕсем пурте çав вăхăта — çамрăклăха аса илтереççĕ.

Хирбю юрри автобус чÿречинчен вĕлтлетсе юлакан хурăнсен çутçанталăк кĕввипе хутăш çĕкленÿллĕн янăрать. Çав кĕвĕре Самарин хăйĕн телей кĕввине туйса, пурнăç утăмĕсене васкавлăн утасласа пырать.

Акă вăл вуннăсенче. Ачалăх. Тÿпери çăлтăр. Микихвер аслашшĕ. Кĕчкей чиркĕвне илемлетекенсем. Петĕр Осипов писатель-куккăшĕн сĕрме купăс янравĕ...

Çирĕмсенче... Улатăрти илемлĕх шкулĕ. Канаш ачисене сăрăпа ĕçлеме, тĕс уйăрма, киçтĕк тытма вĕрентни.

Вăтăрсенче... Колхоз театрĕ. Пĕрремĕш юрату. Туй. Малтанхи ача. Вăрçă. Мирлĕ пурнăç.

Хĕрĕхсенче... Тăватă ача ашшĕ. Юратнă арăм вилтăпри — сăрăсен илемлĕ тĕсĕпе вилĕмсĕрлетнĕ Галина Петровна сăнĕ-сăнарĕ. Тăван республика вăтăр çул тултарнине халалланă ÿнер выставкине хутшăнни.

Аллăсенче... Интернат-шкулта вĕренсе пурăнакансен воспитателĕ. Йĕпреçре культура пайне ерсе пыракан. Аслă Çĕнтерÿ юбилейĕ ячĕпе Шупашкарта ирттернĕ выставкăна хутшăнни. Амăшĕн портречĕ. Пултарулăх ĕçĕн пĕрремĕш выставки. Иккĕмĕш арăм. Кĕçĕн ывăл. Йĕпреçри «Илемлĕх академийĕ». Вăрçăра пĕрле çапăçнă связистсен вилĕмсĕр сăнĕсем. Иккĕмĕш вăтам шкулти Гайдар ячĕллĕ отрядăн хисеплĕ пионерĕ.

Утмăлсенче... Амăшĕпе ĕмĕрлĕхех сывпуллашни. Культура çуртĕнче йĕркеленĕ иккĕмĕш выставка. Владимир Агеев художник панă чаплă хак. Сысна самăртмалли комплекс тăвакансен портречĕсем. Йĕпреç тăрăхĕн пейзажĕсем. Йывăçран касса тунă скульптура: «Буденовка тăхăннă красноармеец».

Çитмĕлте... Патшалăх хакĕ: Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Халăх хакĕ: Аслă Октябрь çитмĕл çул тултарнă ятпа культура çуртĕнче Йĕпреç художникĕсем пултарулăх отчечĕ тăваççĕ — унта Самаринăн вун виçĕ ĕçĕ. Чăваш краеведени музейĕн Йĕпреçри филиалĕнчи юбилей выставки. Çав анлă тĕкĕртен ун çине кам кăна пăхмасть пулĕ: амăшĕ, арăмĕ, аслашшĕ, ачисем, мăнукĕсем, Шупашкарти ÿнер училищине уçаканĕ, хăйĕн пĕрремĕш вĕрентекенĕ Федор Семенович Быков, «Потемкин» броненосец çинчи восстание хутшăннă Шăрттан паттăрĕ Иванов, Çĕрпÿ уесĕнчи хресченсен пăлхавĕнче палăрнă Хвостенков, ялти пир çапакансем, тăла пусакансем, уй-хир бригадирĕ, çĕр пики, çăкăр амăшĕ, артиллерист-связистсем, ятсăр тÿпемре çапăçакансем, плацдарм ярса илме васкакан салтаксем, Жу-

ков маршалпа пĕрле Çĕнтерӳ парадне хутшăнакансем, партипе ĕç ветеранĕсем Федоров, Палькин, Иванов, Тимофеева учительница, Ефимов студент, хăй вĕрентнĕ пиллĕкмĕш класс ачисем...

Пурнăç çыранне пĕрин хыççăн тепри çитсе çапăнаççĕ ăс-хакăл тинĕсĕнчи илемлĕх сăнарĕсем. Искусствăна пуçа чикнĕ май, вăл çамрăклах хăй умне çакăн пек тĕллев лартнăччĕ: этем чунĕн чи сисĕмлĕ те карăнса тăракан хĕлĕхĕсене янăратса унăн шалти туйăмне вăратмалла, ăна чун кĕлмĕçлĕхĕнчен сыватса ырăлăхпа, çирĕп чĕрепе, пуян ăс-тăнпа пурăнма пулăшмалла.

Хăйĕн пурнăçĕн, ăс-тăн саманин тĕкĕрĕ мĕн кăтартать-ха? Пурнăçланă-ши вăл хăй мĕн шутланине? Туйăм тĕнчин шухăш йĕрĕ палăртнă тĕлеллех куçать-ши? Çитмĕл çул тултарнă ятпа ирттернĕ выставкăна пырса курнă çынсем мĕн-мĕн калани аса килчĕ:

«Картинăсемпе скульптурăсенче этем чунĕн пуянлăхĕ, халăх савăнăçĕпе хуйхи. Сăнарсем сисĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ».

«Выставкăран эпир телей илсе тухрăмăр».

«Калама çук пысăк ĕç тунă эсир халăх валли».

«Эсир хăвăрăн ăсталăхупа тăван тавралăхăн, Чăваш çĕршывĕн иртнĕ вăхăчĕпе паянхи пурнăçне илемлĕн сăнласа кăтартма пултарнă».

«Сирĕн ăс-тăн пуянлăхĕ халĕ пĕтĕм халăх пуянлăхĕ пулса тăчĕ».

«Галлей кометине куратпăр» картинăна пула эпир шкул пурнăçне çĕнĕрен таврăнма пултартăмăр. Çак хăватшăн тем пекех тав Аркадий Алексеевича. Вăл пирĕн чун-чĕрене хăйĕн ăсталăхĕпе паян та тĕнче уçлăхне чĕнет, пире шанăç юхăмĕпе хавхалантарать».

Ку пархатар сăмахĕсене Самарин хăй вĕрентнĕ ачасенчен илтрĕ. Сергей Ефимовпа Андрей Ивашкин студентсем, Юрий Бурмистров художник ăна алă тытсах саламларĕç, картинăшăн та, хăйсене искусство вăрттăнлăхĕсене шĕкĕлчеме вĕрентнĕшĕн те халăх умĕнче чĕререн тав турĕç. Иккĕмĕш вăтам шкулта эстетика урокĕсем ирттерни усăсăр пулмарĕ иккен. Ачасен чунĕнче илемлĕх вучахĕ епле йăлкăшса çунать.

Ун чухне, 1986 çулта, вăтам шкул пĕтерекен йĕкĕтсемпе хĕрсем, класа ертсе пыракан Гертруда Викторовна Тимофеевăпа питĕ хăпартланса ӳкнĕччĕ. Акăлчан астрономĕ Эдмунд Галлей вунсаккăрмĕш ĕмĕрте çăлтăрсен куçу йĕркине палăртнине тата кометăсен вăхăт çаврăнăшĕн тапхăрне шутласа кăларнине пĕлеççĕ-ха вĕсем. Вăл пĕр комета Хĕвел тавра çитмĕлултă çулта çаврăнса тухать, тесе тĕнчене ĕнентернĕ. Галлей ячĕпе панă комета чăнах та çав вăхăтпа куçать иккен. Тăвата çул каярахпа Галлей планети шăпах Çĕр çывăхне килмеллеччĕ. Тĕнчери нумай ученăйсемпе тата астрономие юратакансемпе пĕрле йĕпреçсем те историллĕ саманта тĕплĕн хатĕрленчĕç. Аркадий Алексеевич та вĕсемпе пăлханса, вĕсен шухăш-ĕмĕчĕпе хавхаланса пурăнчĕ, алăран киçтĕк ямасăр эскизсем турĕ. Çапла çуралчĕ

«Галлей кометине куратпăр» ятлă сюжетлă-тематикăллă пысăк ĕç. Унта ÿкерĕннисен кашнин сăнĕнче мал ĕмĕт, ăслăлăх туйăмĕ, çамрăклăх хĕрÿлĕхĕ çиçсе тăрать. Самарин вĕсемпе пĕрле хăй те ватлăх çулĕнче тепĕр хут тĕнче уçлăхне тинкерчĕ, телескоп витĕр çав асамлă кометăна сăнарĕ, мĕльюн-мĕльюн çăлтăр хушшинчи хăйĕн çăлтăрне чĕри çумнерех çывхартрĕ. Микихвер аслашшĕ каланине аса илчĕ: «Кашни çыннăн хăйĕн çăлтăрĕ пур». Тĕрĕсех пуль, унăн та, çак çамрăксен те — хăйĕн сăнарлă геройĕсен — кашниннех пур-мĕн ĕмĕтри çăлтăр. Çыннăн тÿпере ĕмĕт-шухăш юхăмĕн çăлтăрĕ пулсан, Çĕр çинче вара... Çĕр çинче вăл хăй çăлтăр, сÿнми çăлтăр: вĕренÿре, ĕçре. Авă вĕсем, сăнарлă искусство тĕнчинчи çăлтăрсем, епле сăнаççĕ асамлă кометăна?

Кÿршĕ ялĕн шăпчăкĕ халăха парнеленĕ пурнăç кĕвви сăвă сăмахĕсене аса илтерсе хиствлĕн юрлаттарать:

> Çунат хушассăм килет,
> Вĕçсе каяссăм килет,
> Уйăх çине, çăлтăр çине
> Çитсе курассăм килет.

Шухăшĕпе, ĕмĕчĕпе кăна мар, ĕçĕпе те, хăтланăвĕпе те, ăш-чикĕпе те хитре, çунатлă пулмалла çыннăн. Илемлĕх, эстетика пахалăхĕ, ачаран аталанать. Çавăнпа, Аркадий Алексеевич шутланă тăрăх, шкулсенче пĕрремĕш класран пуçласа юлашки класченех искусствăна вĕрентмелле. Мĕншĕн тесен искусство ăс-хакăлпа шухăш-кăмăла пуянлатать. Ăс-тăн аталанăвĕ хитрелĕх ăшĕнче чÿхенсе, чăпăл туса кĕрнекленни камшăн ырă мар пуль.

Анчах темшĕн-çке çак ăслăлăх мелне шкул алăкĕнчен пур çĕрте те кĕртме васкамаççĕ. Вăл пĕлнĕ тăрăх, хăш-пĕр районсенче искусствăна вĕрентекен дипломлă çамрăксем схал. Вĕсене те пулин ĕç урокĕсем парса тултараççĕ иккен. Илем хĕлхемне пĕчĕкрен чĕртсе, ачана асамлă шухăш йĕрĕпе вăйлă туйăм тĕнчине илсе кĕме искусство урокĕсем çеç май параççĕ. Ăна вăл хăйĕн пурнăç опытĕнчен илсе çирĕплетме пултарать. Сахал ирттернĕ-и пысăк ĕмĕтлĕ, анлă çунатлă ачасемпе илемлĕх сехечĕсем? Çичĕ çул хушши Йĕпреçри ÿнер шкулне ертсе пынă. Ачакран килнĕ Илья Григорьевич Бородкин вĕренекенĕ, çав шкула йĕркелесе яраканĕ тата Виктор Немцев нумай пулăшрĕ Йĕпреç таланчĕсене çунат сармашкăн. Йĕпреçри «Илем академийĕнчен» шăранса тухнă ачасенчен мĕн чухлĕ художник шутланать. Сăнарлă искусство ĕçĕсен выставкисенче вĕсем хăйсен пултарулăхĕпе самаях тĕлĕнтереççĕ, ячĕ вĕсен таçта çитиех сарăлать.

Эх, пур çав, пур талантсем халăхра. Вĕсем çĕр çинчи хаклă йышши металсем пекех, шыв тĕпĕнчи ахах пекех, тÿрех куçа курăнмаççĕ. Шырама, тупма, уççа кăларса çут тĕнчере çутăлтарма пĕлмелле вĕсене. Утмăлмĕш çулсен вĕçĕнче Йĕпреçре илемлĕх шкулĕ уçăлман пул-

сан, тен, Алексей Зотиков учитель ачи Владислав хальхи пек паллӑ скульптор пулаймастчӗ-и те? Нумай пӗлме тӑрӑшакан вичкӗн ӑслӑ ачара Самарин шалтан тапса тӑракан ӑс-хакӑл вӑйне асӑрхарӗ. Живопись, графика, скульптура занятийӗсенче вӑл хӑш енне ытларах сисӗмлине туйса палӑртрӗ. Зотиковӑн пултарулӑх ҫӑлкуҫӗ скульптурӑра! Ҫакна ӑнланнӑ май, унпа уйрӑммӑн ытларах ӗҫлеме пуҫларӗ. Тӑма, метала, йывӑҫа чун кӗртсе хӑйсемпе калаҫтарчӗҫ вӗсем иккӗшӗ ӳнер шкулӗнче. 1972 ҫулта харӑсах икӗ шкултан вӗренсе тухнӑ Владислав Чӑваш пединститутӗн художествӑпа графика факультетне ӑнӑҫлӑ утӑмпа пырса кӗчӗ. Диплом илсе Йӗпреҫе таврӑнсан, искусствӑра хӑй мӗн пӗлнине Энтриел ачисене вӗрентрӗ. Ҫав ҫулсенче ҫамрӑк скульптор выставкӑсене хӑюллӑнах хутшӑнма пуҫларӗ. «Утмӑл мухтавлӑ ҫул» ятпа ирттернӗ Пӗтӗм Союзри выставкӑра «Барабанщикпе» хӑйӗн уйрӑм сассине пачӗ. Вӗренме чарӑнмарӗ. Ӑнтӑлу ӑна Мускава туртрӗ. Суриков ячӗпе хисепленекен художество институтӗнче Бабурин профессор мастерскойӗ уншӑн йывӑрлӑх, ӳсӗмлӗх, савӑнӑҫ шкулӗ пулчӗ. Унӑн диплом ӗҫне Кербель профессор йӗркелесе ертсе пынӑ.

Самарин хӑй йывӑҫпа ӗҫлеме юратать пулсан, унӑн вӗренекенӗ Владислав Алексеевич гипса ытларах кӑмӑллать. «Фермӑра», «Ҫу кунӗ», «Пӑру пӑхакан ҫамрӑк», «Униче умӗнче» скульптура композицийӗсем чӗрӗ сывлӑшпа сывлаҫҫӗ, илемлӗ те хӳхӗмлӗ, питӗ килӗшӳллӗн курӑнаҫҫӗ. «Сӑпка юрри» хӑех мӗне тӑрать! Сӑпка умӗнче ҫамрӑк хӑрарӑмпа пӗчӗк пепки хушшинче амӑшне кӑна ӑнланмалла туйӑмлӑ калаҫу пырать. Ҫепӗҫлӗхпе ачашлӑх ҫӗкленӳлӗхе куҫса, иккӗшне чӗрӗлӗх сӗткенӗ параҫҫӗ. Амӑшӗн сӗчӗпе, савӑкӗпе ача ӳсет, аталанть, пурнӑҫа малалла ярать. Сӑнарлӑх куҫӑмӗ питӗ пахалӑхлӑ, вӑйлӑ ҫак ӗҫре.

Аркадий Алексеевич мӗншӗн нумай вӑхӑт хушши шухӑшласа пычӗ-ха хӑйӗн талантлӑ вӗренекенӗ пирки? Ахальтен мар. Сӑнарлӑ искусство вӑл яланах тӗллевлӗ. Пушӑ ҫӗрте пӗр-пӗр кӗлетке е композици туни кӑна мар. Искусство вӑл — этем чунне аталантарса ҫӗнетмелли вӑй. Живопиҫ-и, графика-и, скульптура-и — вӗсем пурте хӑйсене ҫеҫ тивӗҫлӗ уйрӑм чӗлхепе этем чунне мӗнле илемлӗх ҫӑкӑрӗ кирлине палӑртаҫҫӗ, кӑтартса каласа параҫҫӗ. Ҫав пит кирлӗ ҫӑкӑра ҫав меслет урлӑ кӑна пама пултарнине аван ӑнланать-мӗн Владислав Зотиков.

Тӗссен витӗмлӗхне, характерне, ҫыхӑнӑвне, шайлашӑвне ытти вӗренекенӗсем те тарӑн ӑнланса, тӗрӗс пӗлсе пир ҫине шӑрҫаласа кӑларнине Татьяна Акимова, Юрий Бурмистров, Алексей Краснов, Станислав Романов, Владимир Шведов картинисенче те аван курать вӑл.

Йӗпреҫ поселокӗнче, вӑрманлӑхра ҫуралса ӳснӗ Шведов ытларах театр искусствине кӑмӑлларӗ. Живописҫе те чунтан юратать ӗнтӗ ача,

анчах пурнăçне театрпа çыхăнтарчĕ. Питĕрте ятарлă аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн пултарулăхне сарса пынине сăнасах тăрать. Çамрăк чухне хăй те театрта ĕçлекенскершĕн уншăн Владимир Шведов художник илемлетнĕ спектакльсем питĕ шухăша яраççĕ. Вăл хăйĕн ĕçĕсене выставкăра кăтартса ырă ят илчĕ.

Ăна хăйне ватлăха çитсен те Улатăрти илемлĕх шкулĕ туртма пăрахман пекех, вĕсене те Йĕпреç «академийĕ» виличченех çывăх, пултарулăх ĕçĕн пуçламăш кĕвви — тĕп тĕвви пулса тăчĕ. Çапла шухăшлать Аркадий Алексеевич.

Ăс-хакăл илемлĕхĕн тĕнчинчен çичĕ тинĕс урлă Раççее çĕнĕрен ишсе çитнĕ Кандинский живопиçе музыкăпа танлаштарать. Тĕс — клавиш, куç — çапкăч, чун — нумай хĕлĕхлĕ рояль, тет вăл. Тĕрĕсех пуль. Тĕссен кĕвĕлĕхĕ музыка кĕвĕлĕхĕ пекех. Уйрăлми шайлашу пур вĕсем хушшинче. Çав тĕнче шайлашăвĕнче Самарин ĕмĕрĕпех пултарулăх мелĕн тĕшшине шырать. Илемлĕ сăнар çав çулпах пырать имĕш. Чăнлăхпа çуклăх, сисĕм-туйăм, тавçăру, шухăшсен çыхăнăвĕн салтăнăвĕ, шухăш хăвачĕ ăна юлашки çулсенче ухмаха кăларас пекех лăскарĕç. Унчченхи портретсене, картинăсене çĕнĕлле куçпа пăхса якатрĕ. Çĕнетĕвĕн вĕçĕ нихçан та пулас çук, тесе алă сулса та пăхрĕ. Анчах шалти хистев ăна каллех вĕсем патнех хăваларĕ, вĕçленмен ĕмĕт-шухăша сăрăсен кĕввипе юрлаттарчĕ. «Пир çапнине» тахçанах ӳкернĕччĕ. Ял ураменчи çурхи ĕç илемĕ пурпĕрех тăлăххăн курăннă пекчĕ. Амăшĕсемпе кӳршĕ хĕрарăмĕсем, хĕрĕсем тăла пусни куç умĕнчен кайма пĕлместчĕ. Ачаран асра юлнă ӳкерчĕк ниепле те тематикăллă картинăна куçаймасть. Виçĕмçул вара хăйĕн те вĕсемпе пĕрле пăчăхса тар юхтармалла пулчĕ. Йĕпе кĕлеткеллĕ хăрарăмсен йывăр ĕçĕ пусăрăнчăк туйăмлă ан тухтăр, кисĕп тытнă алăсенче вăй вылятăр, сăнĕ-питĕнче хĕвел палли çиçтĕр тесе тăрăшрĕ. Картинăн тĕп героини çав шухăша тĕпрен уçса пачĕ. Вăл — варринчи — ыттисенчен кĕрнеклĕреххи, çӳлĕреххи, хăйсем патне ĕçлеме чĕннĕ пекех, уçăмлăн пăхса, илĕртӳллĕ кулать. Кăкăрĕ тĕлĕнче кăшт уçăлса кайнă çара ӳчĕ, çав куллăн ытарлăхне çавăрса илсе, пĕрле ĕçлекен хĕрарăмсен илемлĕх таппине вăйлатать.

Хăлхара кисĕп сасси, шыв юххи... Хутăш — Хирбю кĕвви:

Атăл пулассăм килет,
Тинĕс пулассăм килет;
Хам чĕреме, хам хăвата
Çĕршыва парас килет.

Инçе çул вĕçленни те сисĕнмерĕ. «Икарус» Йĕпреçе çитсе чарăнчĕ.

## *Хуҫӑлнӑ ҫунат*

Искусство хӑйне ӑнланакана тата илемлӗхпе киленекене хӑех ҫуратать.

*Карл Маркс*

Автобусран аннӑ Самарин вокзал хыҫӗпе такӑрланӑ сукмак ҫине тухрӗ, чукун ҫул урлӑ каҫса ҫеремлӗ урама кӗчӗ. Кӗчӗ тени тӗрӗсех те мар пуль. Урамӗ ку — хӑрах енлӗскер: сулахайра — чукун ҫул, сылтӑмра — ҫуртсем. Инҫех мар — унӑн ӗҫ вырӑнӗ. Ҫавӑнта васкарӗ вӑл. Чус витнӗ вырӑсла хапха умӗнче ӑна пӗчӗк йытӑ кӗтсе илчӗ. Январ нӑйӑклатса, авӑна-авӑна хуҫа ури ҫумӗнче ачашланчӗ.

Алӑка чӗриклеттерсе уҫса кӗнӗ хыҫҫӑн Аркадий Алексеевич тарӑннӑн сывласа ячӗ, сулахайри хӑнӑхнӑ ӳкерчӗкре тем ҫӗнни шырарӗ, анчах нимӗнле уйрӑмлӑх та курмарӗ. Хӑйсен ялӗнче асра юлнӑ ӳкерчӗксемпе кунтине танлаштарчӗ-ши? Ялтан — яла ҫитсе кӗчӗ-ҫке вӑл. Вӑхӑтпа инҫӗш ҫеҫ уйӑрса тӑраҫҫӗ халӗ вӗсене. Ҫатракасси ҫирӗммӗш ӗмӗрӗн тӑхӑрвуннӑмӗш ҫулӗнче пурӑнать пулсан, кунти чӑваш ялӗ — иртнӗ ӗмӗрхи вӑхӑтпа.

Авӑ, пӗве умӗнчи хура пӳрт, вӗрлӗк карта, улӑм витнӗ сарай, икӗ хутлӑ кӗлет. Ҫурт ӑшчиккине пӗтӗмпех ҫавӑн чухнехи ӗҫ хатӗрӗсемпе, япаласемпе тултарнӑ. Хыҫаларах — ҫил арманӗ. Чӑваш хресченӗ ӗлӗк-авал мӗнле пурӑннине кӑтартнӑ. Музей ялне этнографи экспозицийӗсем вырнаҫтарнӑ ҫуртпа картинӑсен галерейи кӗреҫҫӗ.

Чӑвашра кунашкал курӑмлӑ аваллӑх кӗтесӗ ҫуккӑ-ха. Ӑна йӗркелессишӗн Патӑрьел тӑрӑхӗнчи Каншел чӑвашӗ Пантелеймон Михайлович Ермошкин хытӑ вӑшталанчӗ. Хӑйне райӗҫтӑвком шанса парсанах вӑл колхоз хуҫисемпе тата ял Совет пуҫлӑхӗсемпе мӑн ӗҫ турӗ. Кивӗ пӳрт-ҫурта, авалхи япаласене Йӗпреҫе пӗр ҫӗре пухтарчӗ, вырнаҫтарттарчӗ. Унра илемлӗх ҫулӑмӗ ҫуннине Самарин ҫеҫ мар, таврари нумай ҫын пӗлет ӗнтӗ. Тӑмран савӑт-сапа тӑвассине ҫӗнӗрен чӗртрӗ. «Сельхозтехника» пӗрлешӗвне нумай ҫулсем хушши ертсе пынӑ, халӗ те ҫавӑнтах тӗлӗнтермӗш ӗҫсем шутласа кӑларса пурнӑҫа кӗртекен ҫак талантлӑ ҫынра Самарин тахҫанах илем вут-ҫулӑмӗ ялкӑшнине курса тӑнӑ. Нумай вулакан, халь те хӑй тӗллӗн вӗренме пӑрахман, литературӑпа искусствӑна юратакан, типтерлӗ, ҫирӗп ыйтма пултаракан интеллигент тавралӑхра хӑйӗн сӑнлӑх илемӗпе палӑрнӑ. Пантелеймон Михайлович ҫине тӑнипех ҫапла вунӑ ҫул каялла Чӑваш патшалӑхӗн юбилейӗ тӗлне Йӗпреҫре этнографи музейӗн комплексӗ уҫӑлчӗ.

Анчах темшӗн Самаринӑн паянхи ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлӗ автобусран тухсанах хӑрӑк турат пек шартлатса хуҫӑлчӗ. Тепре сулахаялла витӗртерех тинкерчӗ те вӑл ҫил арманӗн хуҫӑлнӑ ҫунатне асӑрхарӗ. Ҫавӑ йӑшкаттарса ячӗ-ши ӑша? Ҫавах. Вокзал енченех илемсӗррӗн курӑ-

нать хăрах çунатсăр арман тăрри. «Красный партизан» колхоз парни вăл. Çĕн Кĕлĕмкассинче вунтăххăрмĕш ĕмĕр вĕçнелле тунăскер. Çăнăх авăртма хатĕрскерех. Тĕнче çил-тăвăлне, Раççей тата Чăваш çил-тăвăлне тӳссе кĕлĕмкассисене куççуллĕ çăкăр çитернĕ пурнăç арманĕ. Чăваш хресченĕн миçе сыпăкĕ унран çăлăнăç илсе хырăма тăрантарнă пуль, ăна хуçинчен туртса илсе миçе çынна макăртса чухăна хăварман пуль, пĕрлешӳллĕ хуçалăх усă курса ыйăннă хыççăн вăл миçе çул çил çинче шăхăрса ларман пуль. Кунта куçарса килсе сыватнă хыççăн, чиперех мăнаçланса ларатчĕ-ха. Таçтан ахăрса килсе çапăнчĕ-çке хăрушă çил-тăвăл, çуната çĕре çавăрса çапрĕ. Этем тытăмĕн-тăсăмĕн арман çунаттийĕ хуçăлнă пекех хуçăлчĕ çак çулсенче илем çуначĕ те. Çыннăн чи черченкĕ те туйăмлă çунатне ĕмĕрне ĕмĕтленмен-курман çил-тăвăл аçтахийĕ Мускав енчен çавăрттарса килсе тĕпсĕр шăтăка çавăрса çапрĕ. Килĕшнĕ тăрăх, армана малтанхи хуçисеннех юсамалла. Вăхăт иртсе пырать, анчах çунат хăй ыйăнне вырнаçаймасть. Музей ялне нĕрсĕр тĕс парса ларать арман. Пĕтĕм илемлĕхе пăсать.

Акă, этнографи уйрăмĕн алăкĕ уçăлчĕ те, унтан çамрăксен ушкăнĕ кĕпĕрленсе тухрĕ. Вĕсен умĕнче филиал хуçи Киргизов çăмăллăн утса пырать.

— Аркадий Алексеевич, ăнăçлă çаврăнса çитнĕ ятпа сире, салам пултăр, — алă тытрĕ ăна Сильвестр Иванович. — Çĕншупашкарсемха кусем. Малалла сирĕн алла парас пуль вĕсене. Галерейăра хăвăрах ăнлантарсамăр.

— Юрĕ, хамах калаçăп. Аван-и? Халĕ пурне те хам хыççăн пыма чĕнетĕп. Тархасшăн. Чăвашла е вырăсла калаçăпăр-и?

— Чăвашсемех-ха эпир, ялсенчен пухăннăскерсем. Хамăр тăван чĕлхепе итлеме тата аванрах, — терĕ вĕсен аслийĕ.

Самарин Йĕпреçри «Третьяковкăра» сăнарлă искусство пирки халăхпа миçе çул чунтан калаçать ĕнтĕ. Унăн пурне те курăнман вăрттăнлăх илемне çынсен ăс-тăнне варăнтарма тăрăшать. Галерея историйĕн пуçламăшĕнчен паянхи юлашки çĕнĕ ĕç таранах питĕ кăсăклă унăн калаçăвĕсем.

Галерея алăкне уçсассăнах куракансене чăвашлăх туйăмĕ ытамласа илет, тăван халăхăн ĕмĕрсем хушши пыракан йăли-йĕрки тĕлĕнтерсе ярать. Виктор Немцев шедеврĕсенчи ял шăрши сăмсана пырса çапать. Ирĕксĕрех шухăша путатăн. Акă, сылтăмра, урайĕнчен маччана çити чаплă картина. Ватăрах икĕ хĕрарăм тĕрĕ тĕрлеççĕ. Юнашарах — туй савăкĕ. Аккăшĕпе йăмăкĕ. Вĕсем çумĕнчи хĕрарăм четвĕртпе тăм курка тытнă. «Хăна пулăр?», — тенĕнех чĕнет унăн чĕрĕ сăнарĕ кунта ура ярса пуснă кашни çынна. Кĕтне енче ӳкернĕ картинăсенчен ăшă кăмăл турамĕ тутлăн курăнса каять, чăваш сăпайлăхĕн сĕткенĕ сăрхăнса тăрать. Аркадий Алексеевич сăмахĕсемпе пылакланса искусство шерпечĕ çынсен ăшне хитре йĕрпе йăнкăртатса кĕрет. Чăвашсен

тава тивĕçлĕ художникĕ, республикăн Иванов ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ Немцев Йĕпреçри вăтам шкултан вĕренсе тухнине, Йĕпреçпе Канаш хушшинчи Кĕлĕмкассинче пурăннине, вăл «Третьяковкăна» уçма çав тери нумай вăй хунине, хăйĕн аллă ытла ĕçне çак илем керменне килсе панине пĕлчĕç çĕншупашкарсем.

Шалти туйăмпа тыткăнлакан картинăсемпе скульптурăсем кашни хăйне евĕр сăнарлă, хăйне майлă чĕлхеллĕ. Пурте акă Федоров картини умне кĕпĕрленчĕç. Николай Васильевич вăл Самаринран виçĕ çул çеç кĕçĕнрех. Шупашкарти художество училищинче, пединститутăн худграф факультетĕнче искусство теорине вĕреннĕ. Чăваш Тимеш ачисене паянхи кунччене илемлĕх ăсталăхне парнелет. Тинех Чăваш çĕршывĕн анлăшне питех мăнаçлăн та сăпайлăн тухма пултарчĕ. Федоров художник хăйĕн пуянлăхĕпе — Шупашкарти выставкăра пурнăç утăмĕсемпе паллаштарчĕ куракансене. Ĕçри юлташне республикăри культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ят панишĕн чунтан савăнчĕ Аркадий Алексеевич. Акă, ку картинăра — хĕрĕх пĕрремĕш çулхи хаяр кĕр. Кустăрмаллă трактор рульне çирĕппĕн çатăрласа тытнă çирĕп кăмăллă хĕрарăм. Ашшĕн буденовкине тăхăннă арçын ача ун çумĕнче пĕлĕтсем хушшинчен сиксе тухнă самолета хăраса пăхать. Колхозри пĕрремĕш трактористкăн Тарасован сăнарне уçăмлăн, шухăшлавлăн ӳкерсе кăтартнă ăстаçă. Унăн «Кантăр тыллани», «Сӳс тӳни», «Çип арлани» ӳкерчĕкĕсем ял пурнăçĕн иртнĕ вăхăтне аса илтереççĕ. «Ульянов Хумпуç патĕрьелĕнчи земство шкулĕнче» картинăна та çынсем каялла çаврăна-çаврăнах пăхаççĕ.

Аркадий Алексеевич хăйĕн скульптура портречĕсен историйĕпе паллаштарчĕ: вăл вĕсен кашни кун-çулĕпе юнашар, пĕрле утса тухнăçке. Суялăх, шухăшласа кăларнă пушă сăнар çук унăн. Хăйĕн геройĕсемпе пĕрле йăлтах çĕршыв утăмĕсен тапхăрĕсем пек уçăлса пыраççĕ халăх пурнăçĕн страницисем.

— Эсир паллашнă ытти ĕçсен авторĕсем те, акă, сăмахран, Владимир Белов, Альфред Алексеев, Владислав Зотиков, Владимир Шведов, — пурте йĕпреçсем. Меркурьев çеç Канашран. Павел Меркурьевича та ентешех теме пулать. Хăçантанпа ĕнтĕ вăл пирĕнпе туслă çыхăну тытать, района килсе ĕçлет. Авă, «Эйпеçри çуркунне», «Эйпеçри аслатиллĕ çумăр» пейзажсем епле тыткăнуллă. Калинин ячĕпе хисепленекен колхоза ĕçпе вăрçă ветеранĕсен галерейине тума пулăшрĕ. Нумай ӳкерчĕ унта. Районта пирĕн вăтăр художник...

Майралла тумланнă çамрăк хĕрарăм Аркадий Алексеевича каласа пĕтерме памарĕ, хăпартланнă кăмăлпа ыйтрĕ:

— Самарин юлташ, каçарăр ĕнтĕ мана сире чарнăшăн...

— Тархасшăн, итлетĕп.

— Эп хам етĕрнесем. Тури Ачакран. Мана сирĕн музей та, картинăсен галерейи те шутсăр килĕшрĕç. Пуян эсир ку енĕпе. Маттур

ĕçлетĕр. Кашни картинине, скульптурине ăмсанса пăхрăм. Ăнланса шухăша кайрăм.

— Ăнланса пăхма пултартăр пулсан, сирте художник чунĕ пур, — ăшшăн йăл кулса илчĕ Самарин.

— Мĕн-ха, эп хам та ялти художество шкулне пĕтернĕ-çке. Бородкин вĕрентетчĕ. Илья Григорьевич. Хамăр кӳршех.

— Чăнах-и? — тĕлĕнсе ӳкрĕ Аркадий Алексеевич. — Вăл кунта манпа пĕрле илемлĕх шкулĕ пуçласа ячĕ. Миçе ачана искусство вăрттăнлăхĕн уççине пачĕ. Ун вĕренекенĕсем халĕ çĕршывĕпе, тĕнчипе чапа тухаççĕ. Салам калăр ăна пиртен. Пысăк салам.

— Саламне яла кайсанах калăп-ха. Анчах мана çакă тĕлĕнтерчĕ.

— Мĕн-ши? Мĕнпе кăмăлсăр эсир?

— Çак галерейăра Бородкин картинисем сахал. Унăн ĕçĕсем вĕренекенĕсен ĕçĕсемпе юнашар пулсан, тата çыпăçуллăрах, илемлĕрех пулнă пулĕччĕ.

— Парнеленĕ-ха вăл картинисене. Кунта тăвăр та, çавăнпа вырнаçаймарĕç. Куртăр пуль этнографи музейĕпе юнашар ларакан вăрăм çурта? Вăт çавăнта пурне те вырнаçтаратпăр. Илья Григорьевича та тивĕçлĕ вырăнах парăпăр галерейăра. Ăна йĕпреçсем манмаççĕ.

— Пирĕн хамăрăн та «Третьяковка» пур халь ялта, — мухтанса илчĕ Ачак хĕрарăмĕ. — Колхозра ӳнер шкулĕ иккĕ.

—Аван, аван. Аркадий Павлович Айдак пĕлет çыннăн чун хавалĕ ăçта пытанса ларнине. Ăна вăл, хавхалантарса, алла ĕç хатĕрĕ тыттарма пĕлет. Сахал-ха, сахал халлĕхе унашкал культурăллă çынсем пирĕн пуçлăхсем хушшинче, — терĕ ассăн сывласа Самарин. — Тепре унашкалах искусствăна чунне панă çынсене эпĕ «Янгорчино» хуçалăхра пĕлетĕп. Кӳршĕсем — вăрнарсем. Чăвашри ял «Третьяковки» унта чи малтан уçăлнăччĕ. Ĕмĕрсем хушшинчи пĕрремĕш çĕнтерӳллĕ илем ĕçĕ турĕç вĕсем. Карачарсковпа туслашса кайрĕç те...

— Пирĕн патра та хытă ĕçлерĕ вăл Николай Прокопьевич, — хушса саларĕ хĕрарăм. — Бородкин та.

— Карачарсковсем арăмĕпе иккĕшĕ те маттур вĕсем. Хăйсен Пăрачкавĕнче те уçрĕç галерея. Крамской передвижникĕсем пекех ĕçлеççĕ халăх хушшинче. Халăхшăн, халăх малашлăхĕшĕн тăрăшаççĕ. — Хăйсене ыттисем те питĕ тăрăшса итленине асăрхарĕ те Аркадий Алексеевич, пуçланнă калаçăва малалла тăсрĕ: — Патăрьеленче те уçнă терĕç «Третьяковка» пекки. Кайран ăна путлантарса лартнă тесе те çырчĕ хаçатра Карачарсков.

— Пирĕн ялта унта каккуй галерея, клубĕнче те пĕр илемлĕ ӳкерчĕк çук, — ĕнсине хыçса кăмăлсăр пулчĕ кăтра пуçлă йĕкĕт.

Аркадий Алексеевич вĕсене шухăша кайса итлерĕ, вара çапла каларĕ:

— Пирĕн чăваш халăхĕ художниксемпе пуян. Анчах вĕсен пултарулăх çимĕçне халлĕхе халăха тутантарса кăтартаймастпăр-ха. Худож-

ник е скульптор çуралнă кашни ялта, поселокра, хулара илем кĕтесĕ уçсан та искусство халăхра вăйлăрах тымар ямалла. Анчах шел, район центрĕсенче те çукрах-ха картина галерейисемпе музейсем. Айдакпа Карачарсков мĕншĕн «Çĕр тата этем» ятпа ирттернĕ живопиçпе графика ăстисен Пĕтĕм Союзри семинарне сирĕн ялта йĕркелеттерме пултарнă-ха? Чун хушнипе, чĕре ыйтнипе. Чăваш халăхĕн ырă кăмăлĕ хĕтĕртнипе. Акă, пирĕн пата Немцев час-часах килсе çӳрет. Виктор Леонтьевич та çав чирпех асапланать. Тĕлĕнетĕп эпĕ унран. Сĕнтĕрвăрринче те, Вăрнарта та, Етĕрнере те, тата таçта та çитсе ĕçлет. Хамăр районти «Красный фронтовик», «Новая сила» колхозсенче тата миçе картина çакăнса тăрать унăн? Кайса курасчĕ сирĕн! Немцевăн хăйĕннех пĕтĕм Чăваш çĕршывĕпе галерея. Пирĕн, художниксен, хамăрăн та çывăрса лармалла мар, вырăнти пуçлăхсен те, культура енĕпе ĕçлекенсен те çаврăнăçулăх — илем çаврăнăçулăхĕ — пултăрччĕ.

Тата чылайччен калаçрĕç вĕсем искусство, халăх пултарулăхĕ, эстетика вăйĕ çинчен. Самарин куншăн хĕпĕртерĕ, çапах та, чунне канăç паман ыйтусем çĕнĕрен чĕрĕлнине пула, çакнашкалах шухăшларĕ пуль.

Мĕншĕн, мĕншĕн халăх культурине малалла ярас тесе çине тăмаççĕха? Мĕншĕн пирĕн çĕршыра культурăна хӳрене тăратса хăвараççĕ, station уншăн укçа-тенкĕ хĕсеççĕ? Художниксем уйрăмшарăн та, ушкăна пайлана-пайлана ĕçлесе те калама çук ырăлăх кӳреççĕ халăха. Çав вăхăтрах художниксен союзĕсем те, Культура министерстви те, вырăнти хуçасем те вĕсене яланах тĕллевлĕ усă параймаççĕ. Пĕр тĕвĕре мар культура ĕçĕ. Искусство вăйĕ мĕнлине е маннă, е ăнланса илеймен, унпа епле усă курмаллине пĕлсех çитерейменççĕ. Юлашки юлнă кĕлмĕç вак укçапа усранă ку таранччен культура интеллигенцине. Çавна пула çĕршывра мĕн тери путсĕрлĕх аталантарман-ши? Культурăпа йĕрке-тирпей, чыс, ят-сум, хисеп юнашар утнине курма çукши? Çын вăл мĕн чухлĕ культурăллă, мĕн чухлĕ хитре чунлă — çавăн чухлĕ йĕркеллĕ, ӳсĕмлĕ, курăмлă: йăлара та, çемьере те, ĕçре те. Культурăна хисеплеменни — хамăра хисепе хуманниех. Культурăна ăнланман, эстетикăна ăша хывман çын чухăн. Кĕлмĕçлĕх лачакине путать унашкал этем тени. Йĕркесĕрлĕх, путсĕрлĕх, курайманлăх çуралать илеме туйман çынра. Тĕнчене илемлĕх çăлса хăварать, тесе ахальтен каламан пуль çав Достоевский. Илемлĕх, хитрелĕх хăй тĕллĕн кăна мар вăйлă, паллах, çын хăйĕн пурнăçĕн шайне чеченлĕх хӳхĕмĕпе чиперлĕн виçсе танлаштарма пĕлни, пултарни хăватлă.

Самарин хăйĕн кун-çулне çав йывăр ĕçе панăшăн пурпĕрех хĕпĕртеме пăрахмасть.

— Аркадий Алексеевич? Сире калатăп-çке, Шупашкарта пултăр-и, тетĕп. Министерствăра...

Шухăша кайнă Самарин кăртах сиксе илчĕ. А-а, Сильвестр Иванч калаçать-çке унпа? Киргизовăн тарăн йĕрлĕ пит çăмартийĕсем çинчи ăшă кулла асăрханипе хăй те ăшшăн кулса ячĕ, куçлăхне хывса сулахай аллинче çавăрттарчĕ:

— Мĕн усси? Вĕсен хитре сăнне пăхса тухнипех пирĕн ĕç чапланас çук.

— Тĕрĕсси тĕрĕсех пуль. Ытла аякра эпир тĕп хуларан, Сильвестр Иванович, — çырă куçне чеенрех вылятса илчĕ Самарин. — Хамăр вăя шанмасан... Чăтма, тӳсме вĕренмен-и эпир, салтаксем.

Киргизов та вăрçăра паттăр çапăçнă çын. Шкулта ачасене вĕрентсе пенсие тухнă. Аркадий Алексеевич ăна ырă кăмăлшăн, уçă чунĕшĕн, ĕçченлĕхĕшĕн хисеплет. Икĕ фронтовика пĕр чĕлхе тупма та çăмăлрах.

— Çав «Çăкăр» скульптурăшăн тӳлемеллеччĕ те ĕнтĕ сире, Аркадий Алексеевич... — каллех илтĕнет Киргизовăн çемçе сасси. — Çулталăк ĕçлени харама ан кайтăрччĕ.

— Ан та кала-ха. Тӳлесси пирки ĕнтĕ... Аптрамалла. Краеведени музейĕн дирекцийĕ хăлхасăр. Хăнăхнă-çке эпир унашкал мăшкăла. Вăрçă хыççăнхи çулсенче, кунта çемьене илсе килсен, театр хупăннă май хам та шкула куçнăччĕ, арăм та ачасене истори вĕрентетчĕ. Мĕн чухлĕ сăрламарăм, çырмарăм, ӳкермерĕм пуль шкулшăн. Тав тăвас вырăнне, директор пире вăхăтлăха пурăнакан пӳлĕмрен те хуса кăларса ячĕ. Кивçен укçа пухса туянкаларăмăр вара халĕ пурăнакан кивĕ çурта. Культура пайĕнче, райкомра ĕçленĕ чухне пурнăçланă илемлетӳ ĕçĕсем тата... Выставкăсемшĕн мĕн чухлĕ укçа пĕтертĕм. Ыйткалакан пек алă тăсса çӳрес килмест. Эпĕ çеç-и? Авă Немцевăн картинисем. Халĕ те тӳлесе татаймаççĕ-ха вĕсемшĕн. Парне — парне вăл. Çапах та, художник та этемех-çке. Унăн та хырăм выçать, унăн та йĕркеллĕ тумлансах çынла пурăнас килет. Çапла-а. Енчен те, художникăн илемĕпе киленетпĕр пулсан, ăна хăйне те пурлăх енчен хавхалантарса чунне кантармалла пек.

— Ман шутпа та çавах, Аркадий Алексеевич. Ытти çын вăл, паян ĕçлерĕ те, ыран укçине илчĕ. Эсир уйăхĕ-уйăхĕпе, çулталăкĕ-çулталăкĕпе пуç ватса тăрмашатăр-тĕрмешетĕр те, ĕçне алăк умне кăларса çакатăр та... çакăнпа вĕçленет. Асăрхани — асра юлать, асăрхаманни, ăнлансах пĕтменни — çаплах юлать. Выставкине те лекейместĕн-ха тата. Ытла усăсăр, путвала кĕрсе выртнă пек туйăнать сирĕн ăс-хакăл вăйĕ. Çапах та, укçа-тенкĕсĕр пурăнма май çук-çке.

— Манăн ĕнтĕ пĕр шухăш, Сильвестр Иванович. Итле. Чун тухиччен, алăран киçтĕк ӳкиччен, алла пуртă-ăйă тытайми пуличчен ĕçлесчĕ-ха. Çамрăк художниксене те ман çаплах тăнран тухиччен хытă ĕçлеттерес килет. Районти художниксен вăйне пĕр çĕре пухасчĕ. Хамăра хисеплесех кайманнине, ăна-кăна пăхмасăр пирĕн ĕççынннисене çуллен хамăр пултарулăх япалисемпе паллаштарасчĕ. Пирĕн ӳкер-

чĕксемпе картинăсем, скульптурăсем çынсене мĕн чухлĕ те пулин пулăшĕç, тетĕп. Культура ĕмĕлки, эстетика мехелĕ вăл çавсенченех вăйланать халăх хушшинче. Выставкăри ĕçсене предприятисем, учрежденисем, колхозсем туянсанччĕ... Хăйсене те, пире те аванрах пулнă пулĕччĕ вара. Çапах та, художник халăха ĕмĕрлĕх хисепĕ парнелет, çынсем валли ĕмĕрлĕх хисеп хăми ӳкерсе хăварать. Вĕсем — пурнăç тĕкĕрĕн ӳкерчĕкĕсем.

— Мана та çакă тĕлĕнтерет-ха, — каллех кăсăклă ыйту парать Киргизов. — Кала-ха, мĕншĕн сире, ялсенчи, аякри хуласенчи художниксене, ытла шутах хумаççĕ?

— Шупашкартан ытла аякра эпир, терĕм-çке...

— Аяккарах пурăнатăр пулсан та таçти çăва шăтăкĕнче мар вĕт, — кулса илет Сильвестр Иванович. — Галерейăра ирттернĕ хăвăрăн юбилей выставки пиркиех-ха эп. Пĕр уйăхра миçе пин çын кĕрсе курмарĕ-ши ăна? Тăвайра пулчĕç тата ĕçӳсем. Шупашкарта та, хăв çуралнă Сĕнтĕрвăрринче те кăтартас пулсанччĕ вĕсене... Культура министерствин наукăпа-методика центрĕ те асăрхамасть-ши? Художниксен союзĕ те пулăшаймасть-ши?

— Союз правленийĕ вăл, Сильвестр Иванович, союз членĕсемшĕн ытларах çунать, пирнешкеллисемшĕн хыпмасть.

— Хам ларап пулсан-и çавăнта, эпĕ сире — Меркурьевпа Федорова виççĕре те — сăмахсăрах йышăнмалла художниксен союзне.

— Çапла çав, пуль çав, ватăлтăмăр пуль çав, эпир унта кирлех мар пуль çав, пирĕн хамăрăн ĕçех малалла тăсмалла пуль çав...

Çапла каласа, кулкаласа Самарин галерея çуртĕнчен тухрĕ, хăйĕн пултарулăх мастерскойне васкарĕ. Унăн унта тепĕр юмана чĕртмелле, утма вĕрентмелле, ăна «Çăкăр» скульптура çумне арçын кĕлеткипе çитерсе тăратмалла. Чăваш арçынĕ кунтăкри тырă пĕрчисене пиçнĕ çĕр çине пĕрешкел сапалатăр. «Тырă акакансăр» «Çăкăр» пулмасть. Çак скульптура ансамблĕ пиççе çитмен-ха. Ăна пĕçермеллех унăн. Унсăрăн çăкăр пикийĕ тăлăх арăм пулса юлать.

Арман çине пăхса илнипе чĕри çĕнĕрен ыратса кайрĕ. Хăрах çунатсăр арман авăраймасть. Вăл — чунсăр япала. Анчах Самарин — чĕрĕ этем. Çу-ук, çуначĕ унăн, тем пек хăрушă çил-тăвăлра та, хуçălман-ха. Куç курать, алă ĕçлет, ура утать, чĕре тапать. Пĕр тĕллев халĕ унăн: «Тырă акакан» чăваш хресченне кăмăллă, вăйлă, сăпайлă сăнар тăвасси.

Мастерскойра юман каскана чутлакаласа, якатса ĕшеннĕ хыççăн чун уçă сывлăша туртрĕ. Вăрман çийĕн анăç хĕрлĕ-çутă тĕспе йăлкăшать. Тӳпе янкăр таса. Тĕнче уçлăхĕ хăйĕн саккунĕпе йăшăлтатать. Микихвер аслашшĕ асăрхаттарни аса килчĕ: «Уйăх çумĕнче çăлтăрна ан шыра». Аркадий Алексеевичăн çăлтăрĕ унран аякрах та мар иккен. Анчах хушши самаях вăрăм-ха. Авалхи сăмах-юмах тĕшмĕшлĕхĕпе

сӗмленсе Самарин урама тухрӗ, васкавлӑ уттипе килелле тӑклаттарчӗ. Пӗчӗк пӗве умӗнчи ватӑ пӳрт ӑна кӗтсе ывӑннӑ пулас, сасӑсӑр хӑй ытамне туртать.

Березники хулинче ҫыру килнӗ. Аслӑ хӗрӗ Лера-Валерия хӑйсен пурнӑҫӗ ҫинчен пӗлтерет, ашшӗн сывлӑхӗпе кӑсӑкланать. Вуланӑ май унӑн куҫӗ умне малтанхи арӑмӗ Галина Петровна, вӑл ҫуратнӑ ачасем тухса тӑчӗҫ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи Татьяна Ишлейре ачасене вӗрентет, Олег — агрегат завочӗн инженерӗ. Софья Шупашкарти пӗчӗк пепкесемпе ӗҫлет. Иккӗмӗш арӑмӗ Вера Васильевна ӑна Владимир ятлӑ ывӑл ҫуратса пачӗ. Ку ачи хӑйӗн ҫемйипе Йӗпреҫрех пурӑнать.

Шӑпа Самарина ырӑ кӑмӑллӑ, культурӑллӑ хӗр тӗлнех тунӑччӗ. Анчах юратнӑ арӑм аллӑ виҫҫӗмӗш ҫулта, пӗр тухтӑр йӑнӑшне пула, ӑна тӑватӑ ачапа тӑлӑха тӑратса хӑварчӗ. Асли те вуниккӗре ҫеҫчӗ. Ҫулталӑк ытла пӗччен пурӑнма тиврӗ. Юрать амӑшӗ килсе пулӑшса пачӗ. Юлашкинчен вӑл та аллине чӗри ҫумне тытсах каларӗ: «Авланан пуль, ывлӑм, ман вӑйӑм пӗтсе пырать, ачусене те хӗрарӑм ачашлӑхӗ кирлӗ, ху та ӗмӗрна пӗччен ирттерейӗмӗн».

Йӗпреҫьенчи Вырӑс Тимешри Малышевсем вара Аркадий Алексеевича хӑйсен хӗрне шанса пачӗҫ. Эх, пурнӑҫ вӑл, пӗр ӑнмасан... Каллех тухтӑрсен айӑпӗпе унӑн иккӗмӗш арӑмӗ те ҫӗрс кӗчӗ. Миҫе ҫул халь пӗччен...

Ачисем, мӑнукӗсем киле килес пулсан, Аркадий Алексеевичӑн мӑн уяв ҫитет. Вӗсемпе аппаланса вара тӗп ӗҫӗ ҫинчен те манса каять. Ахаль те ача юратакансскер, вӑл вӗсемпе вылять, кулать, — вӗсен тӗнчинче пурӑнса юлать пӗр хушӑ. Ыйтса, анратса тӑнран кӑлараҫҫӗ. Пӗри: «Ой, Самара, городок, беспокойная-я» тесе юрлать, тепри: «Асатте, эпир Самаринсем, Самартан-и?» тесе тӗпчет. Аркадий Алексеевич вӗсене пуҫран шӑла-шӑла ӑнлантарать:

«Эпир, ачамсем, Сӗнтӗрвӑрри енчен, Атӑл ҫыранӗнчен шӑтса тухнӑскерсем. Самара Раҫҫейӗн тӗп юханшывӗ ҫинчи пысӑк хула. Ӗлӗкавал пирӗн несӗлсенчен пӗри ҫав хула тӗлӗнчен Шупашкара ҫити ҫӑвӗн-ҫӑвӗн баржа туртса хӑпарнӑ. Ҫав бурлакран тухса кайнӑ теҫҫӗ пирӗн хушамат». «Репин «Бурлакӗсем» пек-и?» «Эпир — бурлак йӑхӗнчен-и?» Ыйту ҫине ыйту....

Апат ҫикелерӗ те Аркадий Алексеевич вырӑн ҫинче вӑрах шухӑшласа выртрӗ. Вӑрман комбиначӗн эстакади ҫинче суйласа тупнӑ пиҫӗ юман, ҫав юманран ҫуралма пуҫланӑ чӑваш ҫынни, тырӑ акакан хресчен сӑнарӗ куҫ умӗнче мӗлтлетсе тӑчӗ. Сисмесӗрех тӗлӗке кусрӗ. Вӑл Атӑл ҫинче пек. Сарлака вӑрӑм кимӗ ҫине ҫав юмана хунӑ пек. Хулсемпе кӑкӑр урлӑ чӗн хӑюпа вӑл хӑйне нихҫан курман бурлак несӗлӗпе, Микихвер аслашшӗпе, ашшӗпе, «Потемкин» броненосец матросӗпе, буденовка тӑхӑннӑ хӗрлӗ армеецпа, фронтри Балаян связистпа, Сильвестр Иванчпа туртать пек. Ҫыран тулли халӑх. Ҫатра-

кассипе Чикмеçин енчи ыраш уйĕпе чуна хавхалантаракан кĕвĕ юхса килет. Аксарин масарĕ енчен шурă пир тăрăх амăшĕ утса пырать...

— Ах, анне, ытла йывăр-çке мана çак кимме туртма — Илемлĕх киммине тăвалла хăпартма. Пулăш, тархасшăн? — тесе сасартăк вăранса каять Самарин.

Çĕнĕ кун пуçланнă. Чăвашрадио Хирбю музыкине кĕрлеттерет. «Çунат хушассăм килет...» — юрлать çамрăк юрăç. Чӳречерен хĕвел ура янă. Çичĕ тĕспе куçа йăмăхтаракан илемлĕ пайăркара вăл хăйĕн пурнăç сăнне курчĕ.

*Йĕпреç— Шупашкар*
*1990, 1997 çç.*





*Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ А. А. Самарин.*
*Унăн йывăçран касса тунă «Тырă выракан» скульптури.*

# ИЛЕПЕР ÇĂЛКУÇĔ ЧĔРĔ

Вăрнарьенĕн çĕр-пин çырминчен пĕрийĕ вăл Илепер — Чăрăшкас Мăрат ялĕн улăхлă, çăлкуçлă çырмийĕ. Унăн чечеклĕ симĕс кавирĕ çинче чупса-йăваланса, савăнса ӳснĕ чукун çул çумĕнчи Çарăклăран тăван ялне куçса килнĕ Михала лесникĕн ывăлĕ Кĕркури. Ăш хыпсан, шăла тивекен тăп-тăрă шыва выртса ĕçнĕ. Ешерекен чĕрĕ пурнăç кĕввине тăнланă. Ашшĕ калакан купăс çеммипе йăлл кулнă та амăшĕн ăшă ытамне кĕрсе ӳкнĕ.

Кил-çурт ĕçĕ патне алă пыманни пулман ун, хресчен ĕçне туса курманни те юлман. Ял туртăмĕ ытла та вăйлă явăкланă ăна çĕр çумне. Ахальтен-и, утмăлалла тапаçланса пырать пулин те, вăл çуралнă вăрман кĕтесĕпе ӳссе вăй илнĕ уй пуянлăхне хула шăв-шавĕпе улăштармарĕ. Шупашкара килсен те унăн хӳрине çеç курса юлатăн, такăш вăхăтра тухса вĕçтернĕ: те машинпа, те çурран. Утма-чупма ухутах та, хăваласа çит-ха ăна! Район чемпионĕ пулнă. «Знамя» колхозри ватти-вĕттине йăлт ура çине тăратнăччĕ. Ял çыннисем Гриша Михайлов астарнипе физкультурăпа спорта мĕнле юратса пăрахни çинчен эпĕ хамах «Советский спортра» тĕплĕн çырнăччĕ.

Ун чухне ĕнтĕ вăл Вăрнарти зооветтехникумран вĕренсе тухнăччĕ, пĕрле райхаçатра ĕçлеттĕмĕр. «Сельская жизнь» хаçатран корреспондент килнĕччĕ. Райкомра, пĕрремĕш секретарь пӳлĕмĕнче, хамăр патра виçсĕмĕр чылай калаçса лартăмăр. Çавăн чухне эпĕ журналиста: «Гриша вăл купăс калама ашшĕнчен вĕреннĕ, ашшĕ вăрçăра пуçне хунă хыççăн тальянккине ун ячĕпе упрать, унпа ял халăхне юрлаттарать-ташлаттарать», — терĕм. Çапла пичетленсе тухрă «Отцовская гармонь» очерк.

Сăвă кĕвви те çав çемĕрех çуралнă пуль çав. Ирех шăрçалама пуçланă пултаруллă ача. Редакцире манăн пĕрремĕш сăвва та вăлах редакциленĕччĕ. Петĕр Ялгир ертсе пыракан литпĕрлешӳре Кĕркури Михайлов-Илепер çурхи вĕçенкайăк концертĕнчи шăпчăк сасси евĕрех палăрса тăратчĕ. Пĕррехинче Вăрнара Петĕр Хусанкай пынăччĕ. Ун чухне эпĕ салтак тумне те хывайманччĕ-ха. Костюм туянса тăхăнмалăх укçа ĕçлесе илейменччĕ. Район çыравçисен ушкăнĕнче чăваш халăх поэчĕн (хальхи пек черетпе паракан чăваш халăх поэчĕ пулман вăл!) мухтавне те тивĕçлипех илтсе юлчĕ талантлă сăвăç. «Çеçпĕл çеçкисен» пĕрремĕшпе иккĕмĕш кăларăмĕсенче унăн чи лайăх сăввисем пичетленчĕç. Георгий Ефимов, Алексей Воробьев, Георгий Орлов Гришăн илемлĕх тĕнчинчи сăнарлăх хăватне, чĕлхе сăткенне палăртса хăваратчĕç пирĕн енче пулнă май. Пултарулăх калаçăвĕсем редакцирен Ялгирсен килне куçатчĕç. Тараватлă та чăтăмлă Клавдия Васильевна хăналăх ăсталăхĕпе илемлĕх анăçне тата анлăрах уçса яратчĕ. Палăрнă сăвăçсен çивĕч сăмахĕсем пирĕн хăлхана тăрăнса юлатчĕç çав, вĕсенчен уйрăлнă хыççăн хамăр та самаях тавлашаттăмăр, юлаш-

ки укҫапа лавккара кирлӗ кӗнеке туянса пӗрер-икшер апат та сиктеркелеттӗмӗр. Ҫавӑн чухне илнӗ кӗнекесене алла тытса пӑхатӑн та халӗ шутлатӑн, чи малтан ӑс-тӑн апачех кирлӗ пулнӑ ҫав пире. Уншӑн пӗртте кулянмастпӑр.

Ашшӗне хывнӑскер вӑл вилетчӗ купӑс е баян каласшӑн. Журналистсемпе полиграфистсен Вӑрнар ансамблӗн концертмейстерӗ те пулчӗ ҫамрӑк поэт. Ялгир тӑрӑшнипе ял-ял тӑрӑх клнцерт парса ҫӳреттӗмӗр, кӳршӗ район центрӗсенче те пулнӑччӗ, республика вӑтӑр ҫул тултарнӑ уявра Шупашкарта, Лакрей вӑрманӗн хӑрринчи сцени ҫинче те юрлама тивӗҫнӗччӗ. «Атте масарӗ» поэма Илеперӗн вӗҫленмен юрри пулса юлчӗ.

Арӑмӗ Катя, Элӗк хӗрӗ, ҫивӗч чӗлхеллӗ лутакарах студента пӗрле вӗреннӗ чухнех лирикӑллӑ туйӑмшӑн юратнӑ пулас. Упӑшки сӑвӑ калама тытӑнсан ялан хӑлхине тӑратсах итлетчӗ. Ял халӑхӗ те, район ҫыннисем те пурӑнан пурнӑҫне редакцире те колхоз-совхоз фермисенче кунласа ҫӗрленӗ тава тивӗҫлӗ зоотехника тӑнласа, щухӑша кайса итлетчӗҫ. Мӗншӗн тесен, тӑван Илепер ҫӑлкуҫӗнчен тапса тухакан ҫӗр сӗткенӗллӗ, пуҫ тӳпинче ӗҫле-ӗҫле-ӗҫле ҫитерсе тӑрӑлтатакан ҫутҫанталӑк кӗввиллӗ, тӑванлӑх туйӑмлӗ чӗрӗ сӑмах итлекенӗн ӑшне пуян тӑпрана варӑнакан ылтӑн тулӑ пӗрчи пекех пиҫнӗ ҫӑкӑр шӑршиллӗн варӑнать. Ҫавӑнпа Кӗркури Илеперӗн поэзи улӑхӗ тыткӑнуллӑ, ҫавӑнпа поэзи Урхамахӗ те ыткӑнуллӑ. Мӗн ачаран Пегас ҫилхинчен ҫатӑрласа тытнӑ ял сӑвӑҫи чуллӑ-ҫӳллӗ Асамлӑха шӑхӑрса ҫеҫ улӑхать. Ҫӑвар типсен — Илепер ҫӑлкуҫӗнчен тӑван ҫӗр симпылне ӗҫет, чун йӑшсан — ашшӗ купӑсӗн ҫеммипе юрласа хавхаланать, выҫсан — амӑш кӑкӑрӗн сӗчӗпе вӑй илет. Сӑнарлӑх арчийӗ ҫӗнӗ сӑвӑсемпе тулса пырать. Ҫав пуянлӑха Урхамах хуҫийӗ халӑха парнелет.

Халӑх хӑйӗн юрӑҫине йышӑнать. Лирӑллӑ Юланутҫӑ картлашка хыҫҫӑн картлашка сиктерсе Поэзин ҫӳл тӳпине виличченех ывӑнма пӗлмесӗр пултаруллӑн улӑхӗ.

Тусӑм, Кӗркури,
Эс чӑнах пур-и?
Пур пулсан, апла —
Савӑнар ҫаплах.
Тултӑр кӗр курки,
Пӗттӗр хӗр хуйхи.
Илепер ҫырми
Туллиех ҫырни
Юхтӑр, Кӗркури.

*Вӑрнар. «Ҫӗнтерӳ ҫулӗ» хаҫат,*
*1997 ҫулхи 70-мӗш №.*

# ТĂВАН ÇĔР ТУРТĂМĔПЕ

Лаврентий Таллеров — çитмĕлмĕш çулсенче чăваш çынни каçса кайса вулама пуçланă писатель. Астăватăп-ха, Шупашкартан яла таврăнсан, вулама юрататакансем калаçăва чи малтан «Çăлтăр витĕр çул курнать» романран пуçлатчĕç. «Ялавра» пичетленсе пыраканскерне ăна журналăн çĕнĕ номерĕ тухиччен темскере кĕтнĕ пекех кĕтнĕ ĕнтĕ вĕсем. Хайлавăн тĕп геройĕсен малашнехи пурнăçĕ, кун-çулĕ пирки ыйтса пĕлме тăрăшатчĕç. Таса чăваш чĕлхипе сăнарлăн, ĕненмелле, чуна тыткăнламалла, хумхантармалла çырнăшăн хăйсем ăна тав туни çинчен пĕлтерме хушса яратчĕç, çав пултарулă халапçă ăçта çуралса ӳснипе кăсăкланатчĕç, романĕ кĕнекен тухсан, куна та унăн «Хурăн шывĕ» кĕнекипе юнашар килти библиотека çӳлĕкĕ çине савăнсах вырнаçтарăпăр, тетчĕç. «Çăлтăрĕ» вара Лаврентий Васильевичăн 1983 çулта тин уйрăм кĕнекен çитрĕ вулакансем патне.

Нумай утмалла пулнă пурнăç çулĕпе, çĕршер кун-çĕр тертленме тивнĕ хăйĕн анлă та пысăк ĕçне халăха парнеличчен. Унччен ӳнтĕ вăл «Юхать юханшыв», «Сăпка юрри» кĕнекесемпе палăрнăччĕ. «Хĕвелçаврăнăш — ылтăн çӳç» повеçĕ те яка, аван вуланатчĕ.

Пурнăç çулĕ вара Лаврентий Васильевич Таллеровăн Аслă Каçал (1939 çултанпа Комсомольски) тăрăхĕнчи Нĕркеçре пуçланнă. Вăл 1929 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Çĕнĕ Кипеçри вăтам шкулта, Тутар Республикинчи Елабугăри библиотека техникумĕнче вĕреннĕ. Хастарлăхне кура хĕрӳ чун-чĕреллĕ çамрăка комсомол райкомне ĕçлеме илеççĕ. Çырас туйăмĕ аталанса пынă май ăна районти «Октябрь ялавĕ» хаçата куçараççĕ. Пуçласа эпĕ унпа çав вăхăтра паллашнăччĕ. Йĕпреçри «Çĕнтерӳшĕн» хаçатра ĕçленĕ май, кам мĕнле хаçат кăларнине питĕ тишкерес килетчĕ. Районсемпе хуласенче кăларакан хаçатсем хушшинче вара Таллеровăн «Октябрь ялавĕ» ялан чи вăйлă виçĕ хаçат шутĕнчеччĕ. Редакцисем туслă çыхăну тытатчĕç. Çапла эпĕ те Аслă Каçала вăрман урлă каçса ăста редактора куртăм. Уçă кăмăлĕ, çамрăк çыравçăсемшĕн тăрăшни, хăйĕн ăсталăхĕ тыткăнларĕ. Çак лайăх енсене эпĕ чылай кайран, хам «Тăван Атăлра» унăн заместителĕнче ĕçленĕ çулсенче, тата аванрах туйрăм. Ĕçлеме аванччĕ унпа. Шанатчĕ вăл пире. Чĕлхе ăсталăхĕпе, çыравçă маçтăрлăхĕпе, ĕçйĕркелӳ мелĕсене лайăх пĕлнипе хăй çумне туртатчĕ.

Паллах, этемĕн ĕçри ырă енĕсем тӳрех тупăнмаççĕ, пурнăç сунталĕ çинче туптанса çирĕпленеççĕ. Райхаçат редакторĕнче, вăл вăхăтра парти райкомĕн бюро членĕнче, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕн пай пуçлăхĕнче, журнал редакторĕнче, нумай-нумай общеcтвăлла ĕçре шăварăнса çитнĕ унăн ĕç таланчĕ. Çав хушăрах илемлĕх пултарулăхĕ те пурнăçрах туптаннă. Очеркистран паллă романиста, çитме, Чăваш халăх писателĕ хисеплĕ ята чăннипех илме тивĕç çитерчĕ

Лаврентий Таллеров. 1976 çулта ăна СССР писателĕсен Союзĕн членне илнĕ. Вăл — ЧР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Писателĕн ĕç сĕтелĕ сăнарлăхпа, çĕнĕ геройсемпе пуян. Ĕçлет ывăнма пĕлмен çыравçă, чăваш халăхĕ валли çĕнĕрен те çĕнĕ калав, повесть, роман шăрçалать. Унăн пултарулăхĕ пурнăç, тĕнчекурăм чăнлăхĕпе, сăнарлăхĕпе, тăван çĕрĕн пуянлăхĕ пек пуян чĕлхипе хăйеверлĕ анлă çăлтăр тĕнчи. Тата нумай пурăнма, сывлăхлă пулма, çырура ăнăçлăх курма ырă сунар халăх юратакан хисеплĕ çынна — сăмах ăстине.

***«Илем» 1994, 4 №.***



*Ӳкерчĕкре: Лаврентий Таллеров (сылтăмри), Владимир Кузьмин, Андрей Алексеев, «Нарспи» поэмăна якут чĕлхине куçарнă якут халăх писателĕ Семен Руфов, Герман Желтухин «Тăван Атăл» редакцийĕнче.*

## ĂСЛĂЛĂХ ЫТАМĔНЧЕ

Вăрнар енчи Хирти Çĕрпел кăмăллăн пухрĕ хăй çумне уйрăлми ытама çак çĕр çинче çуралса ӳснĕ, çак Çĕршыва юратнă, çакăнта ĕмĕрлĕх тымарланнă хăйĕн ачисене — хăйне тăванлăхпа, юратупа çыхăнтарнă çыннисене. Ял шкулĕн менелник кĕрекинче чăваш ачисемпе пĕрле тăванла ытти халăхсен элчисем те пулчĕç.

Сăмах-юмах, пĕтĕмĕшле илсен, вĕренӳ, ăслăлăх кустăрмипе чупрĕ. Ватă шкул ĕмĕр тăршши-хушшинче ял ачине тĕнче уçлăхне кăларни, çав анлă çул-йĕре кам-кам çунатлантарса вĕçтерни пирки вĕрентекенни те, вĕреннипе халĕ вĕренекенни те асаилӳллĕн хăпартланса калаçрĕç — аса илчĕç.

Хальхи Çĕрпел шкулĕн, кӳршĕри шкулсем пекех, асаилĕвĕ пуян.

Патшалăх йĕрки Раççейри вак халăхсен пĕлĕвне тĕнче шайĕнче аталантарас майпа пуçланă пысăк ĕçе вырăнта пурнăçлама çине тăнă Яковлевсем тăрăшнипе уçăлнă земство шкулĕ пирĕн пурнăç шкулĕ пулса тăнине эпир, хресчен ачисем, каярахпа хамăрăн ăс-пуçпа çавăрттарса тавçăракансем, ыттисем те çавах пуль, чун-чĕрепе туйса, савăнса ăнланма пултартăмăр.

Шкул менелникне килнĕ кашни çын шухăшлавлă: пĕри вăтанать, тепри ютшăнать, виççĕмĕшĕ... Уяври халăх — хăй тĕрлĕ, хăй майлă халăх.

Çапла... Кашни ял шкулĕн — хăйĕн çыннисем, хăйĕн историйĕ. Унта вĕреннĕ-вĕрентнĕ кашни çын хăйне евĕр кăмăллă. Çапах та...

Вăтăрмĕш çулта ĕçе пырса кĕнĕ Хрисан Васильевич Васильев Пăрачкав вырăсĕпе, Сăр тăрăхĕнчи паллă ӳнерçĕпе тăванлах калаçать. Николай Прокофьевич Карачарсков чăвашпа вырăс халăхĕн уйрăлми туслăхĕ ăçтан тата мĕнле майпа çывăхланнин тĕплĕхне хăйне евĕр кăсăклăн тăнлантарать. Çĕрпелтен вун икĕ çул тухмасăр тенĕ пек ĕçлесе хăй «Янгорчино» колхозăн хисеплĕ çыннин ятне илнине те манса кайнă пулас çав хушăра, Çĕрпел хĕрупраçĕсем чăваш сăрипе сăйланă хыççăн, яланхи ăшă куллипе пурне те илемлетсе ячĕ.

Хрисан Васильч пек ватăсем-ăсчахсем шкулăн нумай. Çав пуянлăх ушкăнĕнче манăн пĕрремĕш учительница Нина Николаевна Баюкова, директорта ĕçленĕ, физикăпа математика вĕрентнĕ Михаил Васильевич Скворцов, хими хĕртӳçĕ Валентина Матвеевна Матвеева, чăваш çыравçисен илем тĕнчине кĕмелли çула кăтартса пама ăнтăлнă Никифор Кириллович Кириллов тата... хăй вăхăтĕнче шкула ертсе пынă Яков Кузьмич Краснов. Ытти вĕрентекенсем те хаклă асăмрах. Краснов епле вăйлă педагог, вырăс чĕлхипе литературине мĕн тери ăста, витĕмлĕ, пĕлсе вĕрентнине эпĕ Вăрнарти вăтам шкул партти хушшинче пĕлӳ илнĕ чухне çав тери лайăх ăнлантăм. нумай курнă эпĕ хамăн йывăр пурнăçра учительсене-педагогсене, анчах унашкал

манăçманнисем манăн — темиçен çеç. Вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ Санарпуçĕнчи кукки, чăваш ученăйĕ Илья Тимофеевич Сергеев тата Чулхула профессорĕ Головин. Вĕсем мана чăваш чĕлхине вырăс чĕлхипе пуянлатса ытти халăхсен чĕлхе тĕнчине тухмалли анлă алăка уçса панă. Тавах вĕсене — чăтăмлă вĕрентекенсене.

Çĕрле хаярланма пуçланă çанталăк, аякра пурăнакан ентешсен ăшă кăмăлне парăнса, хĕвеле те çуркуннелле култарчĕ, хĕрӳ туйăм вара хăнасене ăшăтрĕ. Çавăнпах-ши, пурин те чĕлхи-çăварĕ уçăлчĕ, кашниех хăйĕн ырă та парнеллĕ сăвапне шкула чаплăн пама тăрăшрĕ, хăналакансемпе хăналанакансем те хĕрчĕç, ăшă калаçăва кайрĕç...

Мĕн чухлĕ калаçу... Хăй кашни истори. Хамăр тăван ял хĕрĕ, чăваш халăх артистки Мария Еланова ман çумра ларакан Хрисан Никифорович Кузнецова ыталани хамăрăн искусство аталанăвĕ пекех туйăнчĕ. «Хисеплĕ маэстро, эпĕ вĕт чи малтан сирĕнтен вĕреннĕçке балалайка каласа вырăс, чăваш кĕввисене...» — терĕ тĕнче шайĕнчи артистка.

Пирĕн хамăрăн йăх тымарĕнчен аталаннă Маруç Çĕрпел енне чапа кăларчĕ. Эпир те пĕрлех хĕпĕртетпĕр унăн янравлă, тыткăнуллă сасси тĕнче уçлăхĕнче янăранипе. Ют çĕршывсенчи чи вăйлă театрсен илемлĕх ертӳçисем кĕтеççĕ халĕ Хурăнсур-Çĕрпел хĕрне. Маруç Еланова-Ухтерикова сасси, чăвашăн тепĕр хăватлă юрăçипе Валерий Ивановпа пĕр шайлăн, тĕнче искусствине çĕнĕ хум-йĕр хăварать.

Эпир çапла шухăшлатпăр та, тен, урăххисем урăхларах ăнкартаççĕ пуль. Хăть те мĕнле пулсан та, çапах та, пуян пирĕн тăрăх ăстаçăсемпе, ăслă çынсемпе! Мухтанмалăх пур. Мĕн чухлĕ вăйлă, çирĕп йăх! Кашни йăхĕ хăватлă. Вĕсем çак уява хăйсен чăтăмлăхĕпе, тăван çĕршыв уттипе хастаррăн, çĕнтерӳллĕн утса килнĕ. Виçĕ ялти кашни йăхăн тымарĕ чĕрĕлсе шкул пурнăçне чечеклентерчĕ. Çав йăхсен тăхăмне — ачи-пăчине курса, пĕлсе, ăнланса туятăп. Эпĕ вĕсене çак хутшăнура тата тĕплĕнрех ăнлантăм. Пултаруллă, хастар, ăслă ачасементешсем чăннипех ĕçлеççĕ. Çав тери аван. Шкул уявне irttерме кил уявĕнчен те ытларах пулăшрĕç пуль çав ачасем. Кăмăл турамĕ лекмен çын юлмарĕ пек туйăнать. Пĕрне-пĕри пирĕн тав тумаллах, мĕншĕн тесессĕн эпир — шкул ачисем.

Шкул вăл — пирĕн ĕмĕрлĕх, нихçан пĕтмен, сарăлса пыракан уçлăх. Шкул вăл — эпĕр. Шкул вăл — Учитель.

*«Çĕнтерӳ çулĕ»,*
*1998 çулхи чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕ.*

## *Вата хуран çулçине сарсан...*

«Хĕвел йăл-йăл кулчĕ, пăхрĕ кантăкран...» — Иван Константинович сăвва малалла вуларĕ те, пӳлĕме ăслă куçĕпе çаврăнса илсе, уççăн каларĕ:

— Ку сăвва пирĕн ентеш Анатолий Степанович Отачкин çырнине эсир манран та лайăхрах пĕлетĕр ĕнтĕ, ăна пин-пин чăваш ачи пăхмасăр калама вĕреннĕ, пурнăç асăмĕнче хăварнă.

Çĕрпел, Хурăнсур Çармăс, Кайри Тукай ялĕсенчи халăха тĕнче ăсчахĕсен чи сăнарлă сăмах шухăшне тутлăхлăн варăнтарассишĕн вуншар çул хушши тăрăшакан çын — культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Иванов пĕр ĕмĕр хушши чăваш ачисене çутта кăларнă шкула хаклă парне пачĕ — республикăри çав енĕпех виличчен çине тăрса вăй хунă педагог-писатель пурнăçĕн капăр альбомне. Ăста коллекционер ăна пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пухса, майлаштарса йĕркене кĕртнĕ. Килĕнче мана та унпа паллаштарсах тăратчĕ. Отачкин хĕрĕ Ида Анатольевна та Ивановпа пĕр алăран тыттарчĕ ашшĕн пурнăç кун-çулне Çĕрпелти вăтам шкул директорне Яков Семенович Корнилова.

Шкул ĕмĕрĕ Отачкинсемпе çирĕп тымарлă. Вăрнар тăрăхĕнчи Хирти Çĕрпелте çĕр çул каялла уçăлнă земство шкулĕ чăваш халăхне ăслă-тăнлă пин-пин ача парнеленĕ пулсан, çав пĕлĕве паракансенчен куçса аталанса пыракансем Отачкинсем пулнă. Хамăрăн мухтавлă ăсчах — Иван Яковлевич Яковлев шкулĕнчен вĕренсе тухнă Пелагея Герасимовна, Анатолий Степановичăн амăшĕ, хĕрĕх пĕрремĕш çулччен ял шкулĕнче ачасене пĕлӳлĕх лаççинче туптанă. Отачкинсен ывăлĕ Анатолий те, мăнукĕ Ида та хăйĕн çулĕпех кайнăшăн вăл, халăх учителĕ, çак пысăк та чаплă уявра пирĕнпе пĕрлех хĕпĕртерĕ пуль.

Халăха çутта кăларассишĕн панă ĕмĕрлĕх. Мĕнле чыс, хисеп.

— Иртнĕ çулта эпир çак вăхăталлах Çĕпритун Толмасов-Шăпчăк менелникне паллă турăмăр. Чăваш ăсчахĕ çĕр çул тултарнă мехелпе хавхаланса хамăр шкула ун ятне парас терĕмĕр. — Иван Константинович васкамасăр тепĕр парнепе чысларĕ шкула — вăтăр çул хушши ун çинчен хатĕрленĕ документсен пуххине тата çыравçăн хăй тар тăкнипе кăларнă кĕнекисене.

Паллă шкула чĕрĕк ĕмĕр ертсе пыракан Тукай ачи Корнилов, хăй те кунтах вĕреннĕ, йĕрки-йĕркипе аса илтерчĕ савăнăçлă пухăва хутшăннă çынсене тăван шкулăн кăткăс та хаваслă пурнăç утăмĕсене.

Çĕршыв кун-çулĕ мĕнле аталанса пынă, шкул пурнăçĕ те çав шайрах малалла шунă. Пĕр пĕчĕк пӳртрен, вун виçĕ ачаран пуçланнă вĕренӳ килĕ мăн кермен, йышлă çемье таран çĕкленнĕ. Вăрçă çулĕсенче эпир вĕреннĕ йывăç çуртсенчен халĕ пĕри те юлман ĕнтĕ. 1895 çулта Петĕрпе Павăл апостолсен ырă ячĕпе уçнă йывăç чиркӳ çурчĕ те, шĕвĕр тăррине пăсса икĕ хутлă вĕренӳ çурчĕ валли майлаштарнă

хыççăн, чылай çултан, ачасене пĕлӳ пама пăрахнă, ял музейĕ пулма хатĕрленет. Ун çумĕнчех — газпа ăшăтакан капмар кирпĕч çурт. Ăна мĕнле йывăрлăхпа, çине тăрса лартни çинчен Раççей тава тивĕçлĕ агрономĕ Василий Романов ĕçтеш-йĕркелӳçĕ пăлханса, мухтанмасăр каласа пачĕ. Ывăлĕ те, Геннадий Васильевич, ашшĕ çулĕпех пырать. Çĕрпел хуçалăхне ăнăçлах малалла, тăвалла хăпартать. Чăваш ялĕн иртнĕ уявĕнче «Янгорчино» хуçалăха ахальтен мар çитмĕл пин тенкĕ парнелемерĕç пуль. Çамрăк Романовĕ те, Çĕрпел ял администрацийĕн ытамĕнчи «Хорнзор» ял хуçалăх юлташлăх пуçлăхĕ Федор Кузьмин та шкула нумай пулăшаççĕ.

Шкул директорĕ пĕлтернĕ тăрăх, менелник тата урăх паллăсемпе те пуян. Романовсем, ялти строительсем тунă шкул çурчĕ çирĕм çул çирĕп ларать. Ялта вăтам шкул уçнăранпа — хĕрĕх çул. Мĕн чухлĕ аса илӳ! Унччен кӳршĕ ялсенчи шкулсене тăвата-ултă çухрăм чупнă. Пирĕн вăхăтрисем Уравăшпа Кĕçĕн Кипеке лайăх астăваççĕ. Манăн хамăн çитĕнсе çитнине пĕлтерекен-ĕнентерекен пĕлӳ хаклă хутне — аттестата Вăрнар поселокĕнче илме тӳр килнĕччĕ.

Вăрнарта вырăс чĕлхипе литературине Яков Кузьмич Краснов тĕлĕнмелле ăста, асра юлмалла витĕмлĕ вĕрентетчĕ. Çав пултаруллă учитель-педагог тахçан Çĕрпел шкулне ертсе пынине эпĕ уяв каласăвĕнчен тин пĕлтĕм. Шел, ăна пĕрле ĕçлекенсемех кĕвĕçсе, элеклесе Сталин тĕрмине хуптараççĕ. Юлашки вăхăтра вăл мана Хэмингуэйа аса илтеретчĕ. Сухалĕ чаплăччĕ, ăс-тăнĕ çивĕтчĕ, кăмăлĕ яланхилле çав-çавах чуна хаваслантаратчĕ. Урăх ăна кураймарăм, вăтам шкул кăларăмĕнче вырăсла çырнă сочиненишĕн «пиллĕк» лартса панă вĕрентекенĕм çукчĕ. Ĕмĕр-ĕмĕр канлĕхне куçнăччĕ. «Сан сочиненипе эпĕ Вăрнар ачисене миçе çул паллаштарса пурăнатăп ĕнтĕ», — тени асăмран тухмасть. Чулхулара вĕреннĕ чухне эпĕ Яков Кузьмича университет профессорĕпе Головинпа юнашар курса туяттăм. Мана вĕсен пĕлĕвĕ, чĕлхе ăсталăхĕ, сăмах çаврăнăш вăйĕ пĕрешкел çыхăнуллă пулни тĕлĕнтеретчĕ. Çулăмлă вăрентекенсен кашни урокĕ, лекцийĕ хыççăн вырăс чĕлхипе литературине тата ытларах юратса тарăнраххăн ăс-пуçа хывас туйăм вăйланатчĕ.

Аслă çынсем вĕрентнĕ, халĕ те вĕрентеççĕ Çĕрпел, Хурăнсур, Тукай ачисене. Шкул пĕтернĕ çын вăл, ман шутпа, яланах ача. Çав шаймăклăх вăхăчĕ никамăн та ăшĕнчен тухса пĕтмест пулĕ. Хамăра сăмсаран шаккаса, пӳрнепе юнаса, куçпа йăпатса та çисе те, аслă сăмахпа юсаса пынă ăсчахсене ăçтан манăн-ха. Пурте вĕсене ырăпа асăнчĕç: пĕрле ларакансене те, хамăртан вăхăтсăр уйрăлса кайнисене те, уйрăмах — пире ун чухне вулама, çырма, шут хума пуçласа вĕрентекене. Хамăн пĕрремĕш учительница, Çĕрпел хĕрĕ Нина Николаевна Баюкова юнашар ларни маншăн Турă амăшĕпе ларнă пекех туйăнчĕ.

— Менелник умӗн вӑрентекенсен ӗҫ кӗнекисене пӑхса тухнӑ май ҫӗнӗрен тӗлӗнтӗм, — тет Корнилов директор. — Чылайӑшӗ ҫав-ҫав ҫулта шкула ӗҫе кӗнӗ те ҫав-ҫав ҫултан кунтанах канӑва тухнӑ. Хӑйсен вӑй-хал ӗмӗрне пӗр коллективра ирттернӗ.

— Вӑтӑрмӗш ҫулта ҫакӑнта ӗҫлеме пуҫларӑм та, — аса илет Хрисан Васильевич историк, — паян кунччен шкултан уйрӑлмастӑп. Чун шыравӗ — ачасенчех.

Валентина Матвеевна Матвеева пире хими вӗрентетчӗ, ҫирӗп тытатчӗ пурне те. Сасси ҫаплах улшӑнман — ыйтуллӑ, кӑмӑллӑ. «Сана курсан, куҫунтан аса илтӗм, — тесе ыталарӗ вӗрентекенӗм мана. — Куҫунта яланах чӗрӗлӗх туяттӑмччӗ».

Математика учителӗ, директор Михаил Васильевич Скворцов, чӑваш чӗлхипе литературине юратма хӑнӑхтарнӑ Никифор Кириллович Кириллов, вырӑс чӗлхипе чи малтан паллаштарнӑ Перасковья Федоровна Дубанова, вӑрҫӑ нушипе асапланнӑ вӑхӑтра чуна хывас килмен нимӗҫ чӗлхине юратса ӑса илтерессишӗн нушаланакан Василий Сергеевич Смирнов, ҫар ӗҫӗпе паллаштаракан, салтак йӗлтӗрӗсемпе уйра чуптаракан, хупнӑ чиркӳре пӑшал пертерекен Вениамин Гаврилович Дубанов, шкулӑн тепӗр директорӗ Аверкий Осипович Осипов историк-краевед, Алевтина Петровна Афанасьева, Мария Павловна Васильева, Лидия Федоровна Федорова, Марсельеза Спиридоновна Толмасова, Анатолий Миронович Миронов, Иосиф Михайлович Михайлов, Аркадий Васильевич Медведев, Хрисан Никифорович Кузнецов, тепӗр директорӗ, вырӑс чӗлхин ӑстаҫи Станислав Николаевич Николаев, Клара Егоровна Николаева, Нина Георгиевна Иванова, Цета Васильевна Яковлева, Мария Порфирьевна Медведева тата ытти пултаруллӑ вӗрентекенсем те...

Вӗсенчен чӗрӗлӗх сӗткенӗ илнӗ ачасем йышлӑн пухӑннӑ ӑслӑлӑх уявне. Культура ҫурчӗ лӑках. Фойере манӑн литературӑпа журналистикӑри ӗҫ-хӗл выставкипе паллашаҫҫӗ. Пысӑк зал — мӑн класс. Ӑна ертсе пыраканӗ — Чӑваш сӑмахӗ. Вӑл пурне те тыткӑнланӑ, ытамланӑ. Пурте чӑвашла пуплеҫҫӗ, малашлӑха ӗмӗтленеҫҫӗ, ачалӑха аса илеҫҫӗ: республикӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗсем Яков Федоров, Алексей Плешков, Федор Кузьмин, Георгий Андреев, Василий Марков, Анатолий Васильев архитектор, Мефодий Ягушов тухтӑр, республикӑри «Лифтмонтаж» пуҫлӑхӗ Валерий Михайлов, «Чӑвашҫыхӑну» банкӑн управляющийӗ Юрий Степанов, чӑваш халӑх артистки Мария Еланова, юстици аслӑ советникӗ Амвросий Овчинников, Канаш районӗн тӗп больницин тӗп врачӗ Анатолий Шашков, Шупашкарти Чапаев ячӗллӗ завод директорӗн ҫумӗ Петр Кириллов, акӑлчан чӗлхине ялта чи малтан вӗрентме пуҫланӑ Римма Кузьмина, «Янгорчино» пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхӑн хисеплӗ членӗ Николай Карачарсков художник... Пурне те асӑнса пӗтерме йывӑр.

Кĕрекене ларайманнисем, аякра пурăнаканнисем, ăшă салам янă: Николай Медведев, Анатолий Петров, Геннадий Хрисанов, Анатолий Филиппов ученăйсем, Василий Галкин, Радик Ковский аслă офицерсем, Николай Иванов, Юрий Марков, Григорий Елизаров тухтăрсем, Давыд Иванов зоотехник тата ытти те.

Мĕн чухлĕ тараватлă ăшă сăмах! Йăлтах шкул, вĕрентекенсен ячĕпе. Манăн та яла каяс умĕн пуçра сăвă çуралчĕ. Шкулăн йывăç çурчĕсенчен пĕри Горбуновсен тетчĕç. Кĕпитун Михалчсем çурт умне хурăн лартнă пулнă. Çав асамлă йывăç мана чӳрече çумĕнчи илемлĕх, ачашлăх туйăмне парса тăратчĕ. Пĕрмай эпĕ ăна тăван хурăнăм тесе асра тыпатăп. Унпа пĕрле миçе хутчен экзамен тытман-ши шкулта та, халăх умĕнче те!

Вата хурăн, сарă хурăн çулçине тăксан,
Пухăнаттăмăр пĕр харăс васкаса шкула.
Ватă хурăн, симĕс хурăн çулçине сарсан,
Саланаттăмăр пĕр харăс шавласа унтан.

Ватă хурăн, тутлă хурăн тав курки сĕнсен,
Савăнаттăмăр ăш-канлĕн ун шывне ĕçсе.
Ватă хурăн, çирĕп хурăн хăй çумне чĕнсен,
Улăхаттăмăр пакша пек ун тăрне вĕçсе.

Ватă хурăн, тунсăх хурăн куççульпе йĕрсен,
Ыталаттăмăр сăпайлăн савнипе ăна.
Ватă хурăн, сиплĕ хурăн тунсăха сирсен,
Пухăнаттăмăр хавассăн хамăр ушкăна.

Ватă хурăн, пулăх хурăн вăррине сапсан,
Мухтанаттăмăр ун ешĕл вăрманне пăхса.
Ватă хурăн, туслă хурăн вăй карти карсан,
Çаврăнаттăмăр мăн йышлăн кăмăлпа, савса.

Ватă хурăн, чĕрĕ хурăн кăтрипе сулсан,
Пит çăватпăр, çапăнатпăр сиплĕ çулçипе.
Ватă хурăн, ăсчах хурăн асăмра юлсан,
Пурăнатпăр унран илнĕ тарăн пĕлӳпе.

Ватă хурăн, савăк хурăн çулçине тăксан,
Пухăнатпăр пурте харăс васкаса шкула.
Ватă хурăн, симĕс хурăн çулçине сарсан,
Саланатпăр, такăрлатпăр хамăр мăн çула.

Тăван пуçламăш шкулăм яланах асра. Унтан çур ĕмĕр каяллах вĕренсе тухнă пулин те, анне çĕлесе панă тумпа, хам тунă çăпатапа, хырнă çĕрулмирен пĕçернĕ пашалу, кĕнеке-тетрадь чикнĕ пир сумкăпа Хурăнсурган Çĕрпелне çухрăм ытла чупатăп. Ачасемпе пĕрле класа кĕрсе ларатăп. Учитель сăмахне çăвар карса итлетĕп: тĕлĕкре те, асăмра та. Уяв залĕнче-класĕнче ларнă хушăра та çав ӳкерчĕк куç умне тухса тăчĕ. Шухăшларăм вара — вĕренме пăрахман-ха.

*«Хыпар», 1999 çулхи кăрлачăн 20-мĕшĕ.*

## УТМĂЛТИ УТМĂЛ КАÇАЛĂК

Мăнланса, тăн кĕрсе пынă вăхăталла, анне куççуль кăларсах каласа култаратчĕ: «Ах, — тетчĕ, — çак Вулутине ăна, сĕлĕ анине халăхпа тан вырса тухма паманшăн, халĕ те кутран çапас килет. Таçтаваскать, хырăмрах ташлать, тепĕр талăк кĕтесчĕ хăть, аран киле çитсе ÿкрĕм... Çухăрса та ячĕ. Каçалăка хÿрене хăварнăшăн кайран колхоз хуçи ман пите самаях хĕретрĕ. Ялта, таврара нихçан усал ят илтмен çинче çак ывăл кăштах хур турĕ. Халĕ тата уншăн хĕпĕртетĕп те. Икĕ ывăлăма çĕре чикнĕ хыççăн, виççĕмĕшне сăпас кунĕнче Турă пачĕ пуль. Чунсăр пуçлăхсем вĕсем пире, çĕршыв тарçисене, çапла асаплантарнă. Халĕ хăйсене кам ырăпа асăнать-ши? Нуша кулачне çисе хĕвелпе кулсах, уйăхпа хуйхăрсах, çăлтăрпа ĕмĕтленсех, сывлăмпа пит çусах чăтса пурăннă. Кашни сăпасра ывăлпа пĕрле тырă анине тухаттăмăр — çавра çăкăр пĕçереттĕмĕр, ачам-пăчам çумра чухне чун савăнать, юрлас килет...»

Вăрнарьенчи Хурăнсур Çармăс ялĕнче çапла 1937 çулхи çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче анне хăйĕн çурлине ман алла панă. Вырма çăмăлах пулмарĕ. Сĕлĕ анине эп çуралсанах аннепе «юрла-юрла» вырса пĕтернĕ хыççăн, атте мана çăпата тума, лаша кÿлме вĕрентрĕ те алла пуртăпа сава тыттарчĕ, çак киле ÿлĕм санăн тытса тăмалла, хамăрăн йăха санăн малалла тăсмалла пулать, тесе пехиллерĕ.

Хуçалăх ĕçне, ăсталăха атте-анне ури айĕнче явăнса çÿренĕ хушăрах вĕренсе хăнăхнă, ял тÿсĕм-пиçĕлĕхĕпе чир-чĕре çĕнтернĕ, Çĕрпел шкулĕнче вулама-çырма-шутлама вĕреннĕ, ял-йышпа пĕрле пулнă, чăваш халăхĕн йышне сумпах хутшăннă, çамрăклах тĕнчене тухнă... Ай, мĕн чухлĕ терт тÿснĕ, мыскара курнă пуль çав çулсенче!

Шаймăкрах пулнă çав, хушăран атте-анне куçĕнчен вĕçерĕнсе те кайкаланă, кÿршĕ ачисене салтакла камантласа вăрçăлла вылаттараттăм, улаха каякан Карачăм мучине çырмари юр шăтăкне те сиктернĕ, тырă вырнă чухне Шапа Ульянне, кĕлтине вăрттăн тултарса парса, пуринчен ытларах çĕмел те купалаттарнă, хула курасшăн Шупашкара вăрттăн тухса тарни те пулнă... Ĕç-пуçа, хуçалăхра усă курмалли хатĕр-хĕтĕре килте пурне те йăлтах хамăрăн алăпа тумалла пулнă пирки, кану вăхăчĕ çинчен тĕлленмен те. Хуттăр çавăрса хула ывăнтарнă хыççăн, тула тухсан, «çухалаттăмччĕ» çав, сарайĕнче пусма çинче ларса Каверинăн «икĕ капитанĕсемпе» вăййа хутшăнаттăм. «Пĕччен парус лăпкăн хумханатчĕ» те умра, анчах ман пĕччен лĕх нумаях тăсăлмастчĕ. Анне аллинчи хулă каллех алла кăшкар тыттаратчĕ, аттепе каска пăчки турттаратчĕ, тилхепе явтаратчĕ...

Атте-аннен çирĕплĕх шкулĕ пурнăçра пулăшрĕ. Çырма та атте верстакĕ çинчех вĕрентĕм: катка-пичке хăми якатнă, сĕтел-пуканури, пир станокĕ тума патак саваланă хушăрах çÿхе турпас çаврăмĕнче

малтанхи илем сăмахĕсем сăнарланса тухатчĕç. Сывлăшра саланса ан çухалччăр тесе эпĕ вĕсене шкул тетрачĕ ăшне хупаттăм. Пӳрт умĕнчи çырмара çăлкуç нумайччĕ те, хамăн шухăш пуххине те «Çăлкуç» ятлă хунăччĕ. Атте манăн журнала аннене вуласа паратчĕ, унтан вăл кӳршĕ тăрăх каятчĕ.

Çапла манăн ялти тырă анийĕ илем анине куçса пычĕ. Вунпиллĕке çитнĕ тĕлелле эпĕ ял пурнăçне хаçат урлă район, республика таран сарма пуçларăм.

Пĕрмай халăх хушшинче, тĕрлĕ вырăнсенче пулни-пурăнни пуç кунтăкне пуянлăхпа — сăнарпа чыхсах тултарать. Суйла кăна. Элмен Сунар — Мăн Турхан — Чăрăшкас Мăрат — Кĕçĕн Кипек — Уйкас Кипек тăрăхĕнче кино кăтартса çӳренĕ чухнехи пурнăç сĕткенĕ-хуйăрĕ хĕрĕх çултан та пуçран тухса пĕтмест. Салтакран таврăннă хыççăн Вăрнарта хаçат ĕçне кӳлĕнсен... куç умĕнчине илемлĕн те ытарлăн халăх умне усăллă кăларма çăмăлах марччĕ. Чĕлхене йĕкĕлтекен, пуçа канăçсăрлантаракан кулăшла пулăмсемпе сăнарсене «Капкăн страницине» кăларса яраттăм. Районти «Комсомол прожекторне» алăра тытнă май, çамрăксен çутă пайăркине лекнĕ йăхтăр-яхтăра кулăшла ӳкерчĕклĕ хаçатра çунтарнă. Хамăр колхозра виçĕ экземплярпа кашни эрнерех «Çăмăл кавалери» кăларса тăнă.

Кулăш хумĕ-сĕмĕ вăйлă çил-тăвăл кăларнине хам та сисмен, «Капкăнпа» «Тăван Атăлта» кун курнă хайлавсем пурнăç çӳп-çапне халăх хушшинчен шăлса тасатма пуçларĕç. Акă хайхи хам та Иван Мучин вутлă-хĕмлĕ лаçне лекрĕм. Ултă çул хушши «Капкăнра» вĕркĕч вĕртерсе, йывăр мăлатук çапса самаях тарлама тиврĕ. Сатирăпа кулăш сунталĕ çинчен вара «Шухăшлама вăхăт пур-ха», «Картлашка», «Сава Савви савалать» кĕнекесем туптанса тухрĕç. Вĕсем çумне «Тип мунча» та хутшăнчĕ. Каярахпа «Лапшу Çтаппанĕпе Иван Мучи курнă мыскарасем» сиксе тухрĕç. Ку мыскарасем ĕнтĕ манăн хамран хăпма пĕлмеççĕ, пурнан пурнăç тĕкĕрĕнчен çухалмаççĕ, хăйĕн вырăнне тупрĕç, малашне те халăх умне тухсах тăрĕç.

Пурнăç тĕкĕрĕ çине пăхсан, куç алчăраса каять. Хумлă-хумлă çутлăхра, авăк кĕленче çинчи пек, мĕнле кăна кулăшла сăн, мĕн тĕрлĕ мыскара курăнмасть. Эпĕ вĕсене фельетон-калав, кулăш-шӳт картине çеç кĕртсе ямастăп, роман-повесть читлĕхне те чăмтаратăп. «Виçĕ юманри» Хĕрӳ Хĕветĕрпе Хĕрхӳ Хĕлимунĕ, «Тымарти» Карачăм мучи, «Юрату кăварĕнчи» Умма Хумми, «Савнисĕр савăк çук» хайлаври Вульвер Левенĕ кулăш хумĕнче кашни хăйне майлă ярăнаççĕ. «Тăван Атăлăн» «Кулăш хумне» эпĕ хам та 1976 çулта «Пакшапа» лекнĕччĕ. Çав калав маншăн журнал парнеленĕ кĕсмен пулчĕ. Ăна ĕнтĕ çирĕм çул ытла алăран ямастăп, чăваш литературин карапне малалла хăваласа тус-юлташсемпе пĕрле илем тинĕсĕнче ăмăртсах авăсатăп.

Хӑшӗсем пек ӗҫ пуканӗ ҫинче кут ыратакан пуличчен ларса пӗрик йӗм кӑна ҫӗтмен эпӗ, ку енӗпе перекетлӗ пулаймарӑм. Авӑрти ҫӑрттан пек ҫумри хӳтлӗхсӗр пулла ҫӑтса та тӑранса пурӑнмарӑм, атте-анне пилӗпе, ял ҫӑлкуҫӗн хӑвачӗпе хамӑн ҫула уҫса пурнӑҫ юханшывне хамӑн йӗрпех юхтартӑм. Кашни каҫалӑк — ҫӗршыв чуппинчи манӑн каҫалӑкӑм. Вӑрнар, Элӗк, Йӗпреҫ, Шупашкар, Саратов, Ванино, Чулхула — ҫӗршыв картти ҫинче эп хӑварнӑ пысӑк паллӑсем. Вӗреннӗ, ҫарта пулнӑ, ӗҫленӗ, пурӑннӑ вырӑнсем. Хресчен, киномеханик, салтак, журналист, ялти ҫамрӑксен ертӳҫи, парти ӗҫлевҫи, редактор... Ҫапла, пӗр вырӑнта мӑкланса ларма ҫуралман пулас эпӗ анне сӗлӗ вырнӑ кун. Ҫавӑнпа нумай йӗм ҫӗтнӗ-якатнӑ юратнӑ пурнӑҫӑм пуканӗ ҫинче.

Кулӑш-сатира учӗ ҫинче ҫеҫ сикместӗп, хаҫат-журнал ӗҫне те пӑрахмастӑп, ҫав хушӑрах ирӗклӗ вӑхӑта илемлӗ литературӑпа «канса» ирттеретӗп. «Шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрӗ», «Хулӑн тетрадь», «Виҫӗ юман», «Шӑратнӑ сыпӑ», «Ҫӗр пики», «Юрату кӑварӗ», «Аттесен ҫулӗпех», «Вӑрланӑ юрату», «Савнисӗр савӑк ҫук», «Чӗркуҫ шывӗ — чӗрӗ шыв» повеҫсем, «Тымар», «Ҫӑлкуҫ» романсем, пьесӑсем, нумай-нумай калав, темиҫе кӗнеке илем тӗнчине кӑлартӑм. Утмӑлмӗш каҫалӑка пултарулӑх анинче хӗрсех тухатӑп. Анне аллинчен илнӗ ҫивӗч ҫурла касать-ха, вырать пурнӑҫ анине. Хӳрене те юласшӑн мар, хыҫала касӑлнӑ пучах та хӑварасшӑн мар. Кӗлтине тулли ҫыхса, пултарулӑх анине тӗм хыҫҫӑн тӗм туса йышлӑ ҫӗмелпе тултарасчӗ, ҫӳллӗ капанне купаласах ҫитересчӗ.

Анне ура сырма, атте ҫӑпата тума, лаша кӳлме вӗрентни харама каймарӗ, хама ҫуратнӑ чӑваш халӑхӗшӗн мӗн чухлӗ те пулин ырӑ ӗҫ тума пулӑшрӗ тесе шутлатӑп, мӗншӗн тесен эпир халӑх ӗҫне — пӗрлехи ӗҫе — яланах чи мала хунӑ. Уншӑн пӗртте кӳренместӗп, кулянмастӑп.

Атте пилне манмарӑм. Пракках Куҫмичӑн авалхи йӑхӗ малаллах тӑсӑлать. Ӑна тӑсма Элӗкьенчи Торпкасси пики чунтан юратсах пулӑшрӗ. Чӑваш педагогика институтӗнчен вӗренсе тухнӑ Римма Ильина 1962 ҫулта Ҫӗрпелти вӑтам шкула ӗҫлеме килчӗ те юнашар ялти Карачӑмкассине кӑмӑлларӗ. Хурӑнсурти пирӗн ҫак урам уншӑн та пурнӑҫ урамӗ пулса тӑчӗ. Май уявӗнче туй турӑмӑр. Совет Ҫарӗн кунӗнче салтак ҫуралчӗ. Борис халӗ хӑй ҫемьеллӗ, вӗсен Володя ятлӑ ывӑлӗ пур. Йӗпреҫре ҫуралнӑ хӗрӗм Надя качча тухрӗ, упӑшкипе иккӗшӗ пирӗн Алена мӑнукӑма ӳстереҫҫӗ.

Ҫӑлкуҫлӑ ҫырмара йӑмрасем кашлаҫҫӗ. Ҫав шавра эпӗ атте-анне сассине илтетӗп, хулпуҫҫи ҫине ҫурла хурса, алла сава тытса хамӑн утмӑл пӗрремӗш каҫалӑка пуҫлатӑп.

*«Тӑван Атӑл», 8 №, 1997 ҫул.*

# МАНĂН ÇĔР ПИКИСЕМ

Çуралсанах ырă кăмăллă çирĕп чунлă хĕрарăм куçĕнчен пăхса çут тĕнчене ыталанă эпĕ. Çав мухтавлă та чăтăмлă чăваш пикийĕ вăл – манăн анне. Вăрнар тăрăхĕнчи Санарпуç ялĕнчи Тимĕрç Матвин кĕçĕн ачи, кукамай аллăра чухне кун çути кăтартнă Натеш, Хурăнсур Çармăсри Праках Куçмич мăшăрĕ. Вăрçă вăхăтĕнче аннесен арçын ĕçне те хĕрарăм ĕçĕпе пĕр танах тума тивнĕ пирки ача пăхма та вăхăт пулман пуль çав. Çĕршыв тĕрекĕшĕн кунĕн-çĕрĕн кӳтĕрленнĕ анне, ытти нумай амăшĕсем пекех, хăй сисмесĕрех икĕ ывăлне масар çине ăсатнă, мана, виççĕмĕшне тата Рая йăмăкăма, Уçтен, Маня, Евкен аккасем ытларах пăхнă. Хăйсен та патшалăх, колхоз ĕçĕнчен юлма юраман. Аккасем, инкесем – ял пикисем – çырма тăрăх шап-шурă кĕпепе, тĕрленĕ саппунпа, çӳхе тутăрпа, вăрăм çивĕчĕсене купарча çинче сиктерсе акăш карти пек ярăнса анаталла анатчĕç, сывлăмпа çаран çулнă хыççăн, юрла-юрла яла таврăнатчĕç. Ачалăхра куçа çапăнса юлнă çав ӳкерчĕк ватлăхра та илем кӳрет.

Килти, кӳршĕри, бригадăри, ялти аккасем – пикесем – пирĕншĕн, анне хыççăнхи ырă кăмăллă чиперккесем шутланнă. Вĕсемпе юрлама-ташлама, пурнăç чăнлăхне курма-тӳсме вĕреннĕ; вĕсемпе ака тунă, сӳре сӳренĕ, тырă вырнă, авăн çапнă; вĕсемпе вăрçă вăхăтĕнчи тата вăрçă хыççăнхи нуша кулачне куççуль тумламĕпе пуçса çинĕ.

Ахальтен мар вĕсем манăн пултарулăх хирĕнче ретĕн-ретĕн тăрса çаран, тырпул каçалăкне çамрăк вăйпа чашлаттараççĕ. Нихçан ларса канма, ывăнма пĕлмен, шăпчăк пек ыйхăсăр анне вĕсен карти пуçĕнче тăрать, унăн сăнарĕ чи çывăххăн та чи туйăмлăн çĕнелсе пырать.

«Алăри пӳрнесем те тан мар...» кĕнекери (1992 ç.) «Пирĕн Петюка курман-и?» – тесе вăрçăра пĕтнĕ-çухалнă упăшкине ял тăрăх шыраса çӳрекен Урине инке, фашистсем тылă витĕр кăларнă пек лăсканă стариккипе терт курса пурăннă çинче ывăлĕ аякран нимĕç кинпе килсен, «Çук, ура ярса пустармастăп фриц тавращне!» – тесе ӳлесе макăракан Укахви инке, вăкăр пек тĕреклĕ «вăрçă участникĕ» Хивре Кирилĕ сахăр черетĕнчен сирсе хăваракан, вăрçă вăхăтĕнче молотилка айне пулса сусăрланнă Уксах Тарья акка, Упа Упрамĕ хăй вырăнне Шипка Кирукне фронта яртарса упăшкасăр тăратса хăварнă Ирук инке, хĕрĕх пĕрремĕш çулта пуçне хунă «Курск шăпчăкĕпе», çырăнайман мăшăрĕпе сăнӳкерчĕк умĕнче калаçса ĕмĕтленекен Ульяна акка, вăрçăччен упăшки ларттарнă клуба пăсса вутта яракансене ылханакан Кулине кинсмей, вăрçă тухнă çул юратнă каччи парнеленĕ хĕрлĕ танкеткăпа çĕнтерӳ кунĕнче хĕвеллĕн çиçсе ташлакан трактористка Евруç акка... кашниех хăйне евĕр кăмăллă, ĕçчен хĕрарăм. Вăрçă инкисем-пикисем çĕр кăшласа, çĕре пуççапса, çĕре ыталаса

тăлăх турачěсене ӳстерсе хăварчěç. Халě те асрах вěсем, кулăллă-хуйхăллă çамрăк сăн-питпе çырăнса юлчěç илем кěнекине.

Турпан Пантелейěн ěçпе хěне кайнă арăмěн («Аттесен çулěпех», 1991 ç.) чăтулăхě хама та тěлěнтерет.

«Юрату кăварěнчи» («Тăван Атăл», 1987 ç., 8-9 №№) Елюк Елькина упăшки еркěнпе хулана тухса тарсан та пуçа усмасть, аслă шкултан вěренсе тухать, колхоз председателěнче ěçлет, Чăвашьенче паллă хěрарăм-пуçлăх пулса тăрать, хěрěпе ывăлне вěрентсе кăларать, юратăвне çурхи шывпа юхтарса ямасть, каялла сěтěрěнсе таврăннă çапкаланчăка, Умма Хуммине, хăйсем çамрăк чух лартнă хурăн хунавě çумěнче «тупать».

Юрату тасалăхне çумра, вараламасăр упракан çирěп кăмăллă тепěр сăнарăм вăл манăн «Тымарти» Мария Николаевна учительница. Таса çăлри таса шыв пек сиплě унăн юратăвě. Çак пурнăç кěнекине («Тăван Атăл», 1995 çул, 9-11 №№) манăн урăх никама та мар, юратнă мăшăрăма çеç халаллас килчě.

Хěр-хěрарăм сăнарě малти вырăнта тăнине эпě хам ачаран çав иксěлми сăнар тěнчинче пурăннăран килет пуль тетěп. Хěрарăм сăнарě маншăн чи юратнă, илемлě, кăмăллă, тěлěнмелле сăнар. Миçе çул хушши ěнтě çав сăнар ман чун-чěрене лăскать, пуçа канăç памасть, ыйха таçта вěçтерсе илсе каять.

Акă, хуларан ěçлеме яла таврăннă Микулай Караваев художник пултарулăх шыравěнче хăйěн пурнăç йěрне, сăнарлă чěлхине, мелне, тěп темине-шухăшне тăван çěр çинче, тăван халăх хушшинче тупать. Колхоз агрономě Венера Пашкова уншăн тěнчере çук илемлě сăнар, вилěмсěр юрату, Çěр пики пулса тăрать. Ялта ӳнерçě тухăçлă çимěç ӳстерет – «Çěр пики» картина ӳкерет.

Сывлăшалла çӳлелле çӳкленнě пек курăнакан Венера вăйлă тырпул ӳстерекен çěрпе, тулă пуссипе, хěвелпе, тавралăхпа пěрле чěрěлекен çутçанталăкăн уйрăлми пайě пулса тăнă. Ăна Караваевăн вěрентекенě Мускав профессорě Стариков Леонардо да Винчи «Джокондипе» танлаштарать. Повеçне эпě «Çěр пики» ят патăм, ăна чăваш халăхěшěн паттăрла мăн ěç тунă, халě те уншăн çине тăракан пултаруллă художника Николай Карачарскова халалларăм, вăл «Тăван Атăлăн» 1988 çулхи 6-мěш номерěнче пичетленнě.

Чăваш хěрарăмне çӳле çěклес, унăн ěçченлěхне, илемне, сăпайллăхпа чăтăмлăхне мухтас килет. Çавăнпа юлашки вăхăтра çырнă калавсемпе повеçсенче, романсенче, пьесăсенче вěсем манăн çěр пикисем – чăваш халăхěн вилěмсěр паттăрěсем.

Аннерен, аккасенчен ăша хывнă, ăса илнě ырă енсем пурнăçра яланах пулăшса пынă мана. Аттепе шăкăл-шăкăл калаçса, пěр-пěрне юратса, хисеплесе, çураçса, ывăнма пěлмесěр ěçлесех çěре кěнě анне сăнарě хавхалантарма пăрахмасть. Килне пăхса кинě тенě пекех кан-

ăссăр ĕҫчен, ырă кăмăл-туйăмлă кин тупăнчĕ. Надежда Матвеевнапа Прокопий Кузьмича ватлăхра савăнмашкăн Элĕкьен пики Римма Ильинична мана ҫирĕп ҫемье чăмăртама вăй хушрĕ.

Утмăл ҫул хушшинче таҫта та ҫитмелле, таҫта та ĕҫлемелле пулчĕ. Журналист пулнă май, публицистикăна пăрахмастăп, илемлĕ очерксем те хайлатăп. Асаилӳ тунсăхĕ вăхăтĕнче чĕлхе ҫине рифмăсем тухса ташлаҫҫĕ. Пьесăсемпе хăтланса чуна кантаратăп. Калав, повесть, роман ҫырнă хушăра кулăшла сатира вучахне те сӳнме памастăп. Кĕнекесем, сайра-хутра пулин те, тухкалаҫҫĕ. 1992 ҫултанпа Раҫҫей Федераци писателĕсен Союзĕнче тăратăп.

Ҫуралнă кун, кăҫалхи Сăпасра, юратнă арăмпа лартса ӳстернĕ сад пахчинчи тутлă ҫимĕҫпе кăна мар, пуҫран ҫĕнĕрен шăратса кăларнă илем ҫимĕҫĕпе те сăйлас килет хаклă вулаканăма — чăваш ҫыннине.

*«Ҫĕнтерӳ ҫулĕ», 65 №, 1997 ҫул, ака уйăхĕ, 3.*



*Надежда Матвеевна Кузьмина кинĕпе, ывăлĕпе тата мăнукĕсемпе.*

# ТЕЛЕЕ АН ТАРТ

## *«Çĕр пики» повеçрен*

Тантăшĕсем качча тухнă хыççăн Венерăн та çемьеллĕ, ача-пăчаллă пулас туйăмĕ вăйланчĕ. Сисет-ха, Малаш Илюшĕ те, Каравай Микулайĕ те уншăн вилсе каяççĕ. Унăн вара иккĕшĕнчен пĕрне тапăклă сăмах каламалла.

Микулая ăнсăртран ял саденче тĕл пулнă хыççăн Венера хăйĕн малтанхи юратăвне манма та шутланăччĕ. Караваева, паллă художника, картина валли сюжет те сĕннĕччĕ. Анчах пурăна-киле хĕр хăй шухăшĕнчен хăй тĕлĕнме те хăрама пуçларĕ. Илюш кăнттамлăхĕшĕн тарăхатчĕ-ха вăл. Микулай сăпайлăхĕшĕн савăнатчĕ. Халĕ акă ăна Малашовах ытларах килĕшнĕ пек. Караваев ăна темшĕн юмахри сăнар майлăрах туйăнакан пулчĕ. Ахаль те вĕсем сайра-хутра кăна тĕл пулаççĕ те... Ытла ерçмен, пушă вăхăтсăр çын-çке вăл. Яланах пĕрле кино кайса курма та, ташлама-юрлама та, каçсерен уçăлса çӳреме те май килмест унпа. Мускаври мыскара та асран тухмасть. Надежда Павлова ташланине курма ушкăнпа пĕрлех савăнса кайрĕха вăл, анчах Пысăк театрта пулнă хыççăн та чунĕ вĕçне çитиех лăпланаймарĕ. Чĕрере темле чул катăкĕ пек хытă япала юлчĕ. Çапах та Стариков профессор хĕрĕ Эмма Венерăна Микулай савнийĕ пекех туйăнать. Чăн та тăрăшсах тĕпчемерĕ вăл кун пирки. Микулай: «Эпĕ юратмастăп ăна!» — тенипех çырлахрĕ. Илюша акă кашни кун ăçта та пулин куратăнах. Çитменнине тата вăл Венера хăйне сивленĕ пулин те урăх хĕр тупмарĕ. Микулай мĕншĕн ку таранччен те пĕччен-ха? Кун пирки те ыйтман. Хăйĕнчен чылай аслăрах хусахпа пуплеме те, йăпанма та темле аванах мар пек. Илюшпа вĕсем хушăран тĕрткелешсе те илме пултараççĕ пулсан, хĕр Караваевпа пĕрле чухне хăйне хăюсăр тытать. Улмуççи лартнă вăхăтра çуралнă юрату station уншăн темле сывлăшра çакăнса тăракан ĕмĕтри юрату евĕр туйăнать. Халĕ те çывăхланса, чĕрĕлсе чечекленесшĕн мар-çке вăл. Тĕрĕссипе илсен, çывхарас вырăнне, чунран аяккарах та аяккарах тарса пынă пек туйăнать.

Караваев чăнах та хăйне питĕ виçеллĕ тыткалама пĕлет. Кăмăлĕ лайăх, ытлашши сăмах вакламасть, каланине итлет. Пур енчен те йĕркеллĕ çын. Юнашар утма та теме тăрать. Çапах та мĕншĕн васкамасть-ха авланма? Тен, чирлĕ? Тен, юрамасть унăн çемьеллĕ пулма? Тен, çавăнпа сехĕрленет пуль? Çапла шĕкĕлчесе ларчĕ Венера хăйсем хушинчи хутшăнусене.

Амăшĕ, паллах, хĕрĕн хуйхи-суйхине ашшĕнчен ытларах ăнланать. Укçине инкен хĕрне пур енчен те телейлĕ тăвас килет, çавăнпа час-часах аса илтерет те ăна:

— Ыранхи çинчен те шухăшла, ачам. Хăвăн пек çамрăкки те аса килĕ. Анчах пурнăç урапине ун чух каялла çavăрасси пулмĕ.

Амăшĕн сăмахĕсем Венерăна тарăн шухăша ячĕç. Илюш та куç умĕнчех улшăнса пырать, Микулай та пуçран тухма пĕлмест. Мускавран вăл çыру янăччĕ, кĕçех килмелле ĕнтĕ. Ун валли ялти хуçалăх пуçлăхĕ Георгий Ильич Андреев кĕркуннех коттедж туса пĕтерне. Качча тухсан Венера унта хуçа пулса саркаланса çеç çӳремелле. Анчах хăçан авланать-ха Микулай? Ун пирки вăл шăл шурри те кăтартмасть.

Ăша пусарма тесех хĕр килтен тухса утрĕ. Уйсем тăрăх пăхса çӳрес килчĕ. Çуртрисем йăвă шăтнă, кĕрхи тулăпа ыраш пуç кăларма пуçланă. Кăçал та тырă вăйлă пулма кирлĕ-ха. Çĕр пуянлăхĕ çине пăхнипе агрономăн чунĕ уçăлчĕ, юрă та ĕнĕрлесе илчĕ. Хавасла туйăм ытамĕнчи çĕр пики паллана сасса илтнипе шартах сикрĕ, çаврăнса пăхрĕ те — чăнах та Илюшах иккен.

— Салам пултăр, Венера! Лармастăн-и?

— Çавăрса çапасран хăратăп, — куç айĕн ăшшăн пăхса илчĕ Пашкова.

— Ан хăра, тек ӳкермĕп, нихăçан та.

Хĕр мотоцикл ларкăчĕ çине вырнаçасшăнччĕ, анчах каччă ăна хăй умне туртса лартрĕ.

— Хăравçă çын пулас эс, Илюш. Мĕн, ӳксе юласран шикленетĕн-им?

— Уншăн мар, сан çине питĕ пăхас килет паян, — хăюлăх çитерсе каларĕ Малашов. — Çурăм хыçĕнче мар, куç умĕнче пултарас килет ман сана.

Венера чĕнмерĕ, мотоцикл тапранчĕ.

Юлашки вăхăтра Илюш самаях улшăннă пек курăнать. Ним çукранах чăркăшланма пăрахрĕ. Сивĕ сăмах, кăнттамла хăтлану юратăва аяккалла тартса пынине те ăнлана пуçларĕ. Венера унăн сăпайлăхне, хăюлăхне кăмăлланине те туйрĕ. Каравай Микулайĕ çумне кĕвĕçсе вăл кăлăхах ăна çавнашкал кӳрентерчĕ. Мĕнле хĕр чăттăр-ха сĕмсĕрлĕхе? Венера кăра кăмăллă пулин те сулнăка тĕртсе ямарĕ ăна, çĕре ӳкме пуçланăскернех кĕлеткипе тӳрленсе тăма пулăшрĕ. Иккĕшĕ пĕрле калаçса ларнă вăхăтра вĕсем хăйсен унччехи юратăвне те аса илеççĕ. Çавăн ячĕпе лартнă хурăнсем Тăмпуç пĕвинчи утравра мăшăррăн патвар çитĕнеççĕ. Калаçу асрах:

— Йывăçа, Илюш, лартма çеç мар, пăхса ӳстерме те пĕлес пулать.

— Мансăрах шăвараканcем пур...

— Чăнах та, кирлех пулсан шăвараканcем сансăрах та тупăнĕç. Анчах та ман хамăр йывăççене темшĕн-çке пĕрлех пăхас килет. Ан ман хăвăн тивĕçне. Ан тарт телее. Тытма пĕл. Тытсан — упрама пĕл.

Юрату утравĕнче хăй ытлашши маррине Парнас Илюшĕ çакăн хыççăн тинех ăнланчĕ. Садсем шап-шурă тум тăхăнчĕç. Илюшăн Венерăна та çурхи çĕнĕ тум — туй тумĕ парнелес килет. Анчах хĕр нимĕн те систерсе каламасть-ха. «Çитет пулĕ ача вăййи выляса. Хăюллăрах пулас. Килĕштерсен — пĕрле пулăпăр, сивлесен — хам çума кăкарса лартаяс çук», — çапла шухăш турĕ вăл юлашкинчен.

Такăр çулпа малалла ӳхĕрсе пыракан ик урапаллă çил çунатăн тилхепине вăхăтлăха ячĕ те Илюш хĕрĕн çунтаракан тăпăл-тăпăл кăкăрĕсене ачашшăн çупăрларĕ. Венера каччăн аллисене тĕртсе ямарĕ, çил çунат тилхепине васкасах ярса тытрĕ...

Микулай Караваев Мускавран таврăнать. Вакун пĕрешкел силленипе ăна ыйхă пусса çитерчĕ те сисмесĕрех куçĕсем хупăнчĕç. Тĕлĕкре вăл Шишкина курчĕ. Иван Ивановичпа вĕсем Тăмпуç çырми çывăхĕнчи ыраш пуссинче, чи çӳллĕ хыр тăрринче пек. Çиччĕмĕш пĕлĕт çинче Микеланджело, Рафаэль, Леонардо да Винчи вĕсене ытарлăн пăхса выртаççĕ.

Караваева чаплă вырăс художникĕ хăйĕн «Ыраш» çулĕ тăрăх хăюллăн утнăшăн, маçтăрлăх тӳпине хастаррăн улăхнăшăн мухтать. Улăхра авă Пластовăн утă çулаканĕсем. Ĕмĕрне ялта пурăнса ирттернĕ Аркадий Александрович çулакансене аллинчи çава сассипе хавхалантарса юрлаттарать. Кĕç ыраш хушшинчен Воронеж тăрăхĕнчи Крамской сиксе тухрĕ. Йăм хура сухаллă, мăйăхлă, вăрăм яка çӳçлĕ, кăвак куçлă типшĕм питлĕ, хытканрах Иван Николаевич чăлт шурă кĕпе, бархат пиншак тăхăннă, хул пуççийĕ çине çава хунă. Ун хыççĕнчен чăваш тумĕпе капăрланнă Моисей Спиридоновпа Николай Овчинников тата «Пучах» ушкăнĕн художникĕсем Алексей Няманов, Григорий Ушкин, Лев Климов васкаса утаççĕ. Микулай аслашшĕ Çавра çăкăр Хĕветучĕ те вĕсемпе пĕрлех. Пĕр йĕркене тăрса тухрĕç те вĕсем çависене сулса ячĕç...

Самантрах ӳкерчĕк улшăнчĕ. Ыраш ани вырăнне Шишкинăн хырлăхĕ ирхи хĕвел çутипе йăлкăшса çуталчĕ. Уписем мĕкĕрсе выляма пуçларĕç. Иван Иванович пĕрре тӳпенелле, тепре çĕр çинелле пăхса илет те хавасланса калаçать:

— Искусство вăл — вилĕмсĕр. Яланах чĕрĕ. Пĕрмай улшăнать, аталанать, çĕнелет. Авă çав Чĕрĕлӳ генийĕсемпе хамăрăн авалхи Русь ăстисенчен пуçласа сирĕн ĕçӳсем таранах хăватлă, хаклă. Çынна шухăшлама, юрлама, пурăнма вĕрентекен, хавхалантарса çунат хушма пулăшакан ӳкерчĕксене халăха кăтартни — хăюлăх утăмĕ. Çавăнпа эсир Костинпа иксĕр те паттăрсемех. Санăн «Çĕр пики» Леонардо да Винчин пикипе çывăх. Аллă çула çитнĕ тĕлелле тин тĕл пулнă вăл хăйĕн Мона Лизипе. Эсĕ те çамрăклах тупаймарăн хăвăн Венеруна. Леонардо «Джокондăшăн» чунне панă, уйрăлман унран, хăйпе пĕрле Флоренцирен Франције çити илсе кайнă. «Джоконда» пĕтĕм тĕнчене

тĕлĕнтернĕ. Ăна вăрласа кайса та пăхнă, анчах Парижри Луврa каяллах тавăрса панă. Миçе ĕмĕр упранать ĕнтĕ вăл этемлĕх культурине пуянлатса. Сан «Çĕр пики» те чапа тухрĕ, тĕнчене çутатрĕ. Уйăрасшăн мар пулас ăна хăвăнтан. Мускав выставкинче туянас текенсене те сутмарăн картинуна. Анчах, çухатрăн вĕт Илемпӳне. Вăрларĕç...

Таврара хăрушă сасă янраса кайрĕ: «Кам вăрларĕ Микулай де Каравайăн «Çĕр пикине?!» Тăрук çут çанталăк тĕксĕмленчĕ. Аслати хăлтăртатрĕ. Вăрман шавларĕ. Кĕреш пек юмансем хушшинчен акă кăвак кашкăр сиксе тухрĕ. Ун çинче патша ывăлĕ Йăван пикепе ларса пырать.

— Ан хăра, Виктор Васнецовăн вилĕмсĕр сăнарĕсем вĕсем, — лăплантарчĕ Микулая Шишкин.

Караваевăн куçĕ тĕтреленчĕ. Кĕçех кашкăр вырăнне мотоцикл пулса тăчĕ. Руль тытнă Малаш Аркащĕн ывăлĕ Илюш хаяррăн пăхса ларать пек. Венера йĕкĕт кăкăрĕ çине пуçне пĕкнĕ.

«Васнецов юмахĕ мар вĕт ку, чăн-чăн пурнăç ӳкерчĕкĕ. Ăçта «Çĕр пики?» Ăçта манăн Венера — «Джоконда?!» — темле туртăшса илсе кăшкăрсах вăранса кайрĕ те вăл чĕркенĕ япалине йăпăр-япăр хыпашласа пăхрĕ. Картина çумрах-ха, никам та тĕкĕнмен. Микулай ăна ялти халăх галерейине — Çĕрпӳлĕхри «Третьяковкăна» парнелет.

Станцăра Караваев пуйăсран анчĕ. Ăна илме Андреев çăмăл машина янă. Равăш витĕр тухсан вĕсем кĕçех Тăмпуç çырмине çитрĕç. Кунтан вăл яла çуран кайма шутларĕ, çавăнпа шофера картинăна Культура керменне Ванька Костина кĕртсе пама хушса ячĕ. Венерăн «Юрату вилĕмĕ» аса килчĕ. Чăннипех каларĕ-ши хĕр ун пирки е каччине вăхăтлăха тарăхнипе кăна?

Венерăпа лартнă садри улмуççи кăçал тата темшĕн çурăлман? Çыран хĕрринчен вĭçĕ хĕр — «Шанман чечексем» юрласа хăпарнăн туйăнчĕ. Çав ятлă картинăри пĕр хĕре, янкăр тӳпе пек кăвак куçлине, пиçĕ хăва хулли пек кĕлеткеллине, çурхи хĕвел пек чун уççиллине пуринчен илемлĕрех те çĕкленӳллĕ туйăмлăрах ӳкернĕччĕ. Унтанпа ĕнтĕ вăл уншăн — ĕмĕрĕпех «Шанман чечек», вилĕмсĕр «Çĕр пики», юрату, пурнăç.

Сад çумĕнченех тырă уйĕ пуçланать. Ун хушшинчи мăнаçлă ватă хырсем юмахри пăхаттирсене аса илтереççĕ. Вĕсем çине ăмсануллăн пăхса илнĕ май ăна паçăрхи тĕлĕк аса килчĕ: патша ывăлĕ Йăван кашкăр çинче... Илюш Малашов — мотоцикл çинче... Йăван аллинчи пике... Илюш аллинчи Венера... «Тĕлĕнмелле, мĕн кăна курса аташмастăн пуль тĕлĕкре. Хăвăртрах, хăвăртрах тĕл пулса калаçасчĕ Венерăпа...»

Çак шухăш хĕлхемĕпе хĕрнĕ Микулай Караваев ыраш пуссипе тăван ялнелле — Çĕрпӳлĕхе васкаса утрĕ.

# ЧУН ĂШШИ — ЭТЕМ ИЛЕМĔ

Утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнче Çĕрпелти Ленин ячĕллĕ колхоз йывăр чиртен сывалакан çын ура çине тăма тытăннă чухнехи пек малалла шанчăклă утăмсем тума пуçланăччĕ. Виçĕ ял халăхĕ тыттарнă хуçалăх тилхепине çамрăк агроном Василий Игнатьевич Романов пушатмарĕ. Хăйĕн ăсĕпе, пĕлĕвĕпе ял çыннине хавхалантарма пултарчĕ, хăй пекех хастаррăн ĕçлеттерсе, малĕмĕтлентерсе ячĕ. Хăй тавра пултаруллă çамрăксене явăçтарса, çынсен чĕринче пултарулăх çулăмне ялкăштарчĕ. Çĕнĕ шкул çурчĕ, культура керменĕ туса лартрĕç. Фашистла Германие çапса аркатнăранпа çирĕм тăхăр çул тултарнă кун иртнĕ вăрçăра пуç хунă ентешсене асăнса чаплă та пысăк палăк уçрĕç. Унта Аслă вăрçăра çапăçса вилнĕ хурăнсурсемпе çĕрпелсен тата тукайсен 220 ят-хушаматне мрамор хăмасем çине касса çырса хунă. Асфальт сарнă çулпа Вăрнара çыхăнтарни ялсене тĕнчепе çыхăнтарнă пекех пулчĕ. Культура керменĕ этем илемĕн вучахĕ пулса тăчĕ. Чăваш художникĕсем, писателĕсем, артисчĕсем ялти çывăх хăнасемччĕ. Паттăрсен обелискне паллă художник-монументалист Анатолий Иванов илемлетсе йĕркеленипе тунă. Унашкал палăк пысăк ялсенче халĕ те сахалтарах-ха, кунашкалли вара — пĕрре çеç. Писательсен Союзĕ правлени ларăвне Çĕрпелте вулакансемпе пĕрле ирттерчĕ. Илем университечĕ уçăлчĕ. Унсăр пуçне тата мĕн тĕрлĕ усăллă мероприяти ирттермен пуль Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Иван Константинович Иванов йĕркеленипе. Ахальтен мар ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса чысларĕç.

Картина галерейи уçни çĕрпелсемшĕн, вăрнарсемшĕн кăна мар, Чăваш Республикишĕн те паллă ĕç пулчĕ. Ялти пĕрремĕш «Третьяковка» Çĕрпел керменĕнче ĕçлеме пуçларĕ. Ăна уçма сакăрвуннăмĕш çулта парти обкомĕн секретарĕ А. П. Петров ертсе пыракан пысăк ушкăн килнĕччĕ. Художниксен чунне хĕмлентерекенĕ Василий Романов ун чухне района ертсе пыратчĕ ĕнтĕ. Ун вырăнĕнче хăйĕн вĕренекенĕ, хăй пекех литературăпа искусствăна чĕререн юратакан Георгий Ильич Андреев ĕçлетчĕ. Ялти илем кĕтесне чĕртме вăл та нумай вăй хучĕ.

Çичĕ çул ăмăртса ĕçлерĕç ял çыннисемпе Чăваш халăх художникĕ Николай Карачарсков, тава тивĕçлĕ художниксем Валерий Семенов, Элли Юрьев, Павел Григорьев-Савушкин, Виктор Немцев. Вăрçă ветеранĕсен 92 портретне, ĕç ветеранĕсен вуншар портретне, ял пурнăçне сăнлакан нумай-нумай картина çырчĕç. Ку пархатарлă ĕçшĕн художниксене патшалăх премине пачĕç, «Янгорчино» колхозăн хисеплĕ членне йышăнчĕç. «Янгорчино» колхоз çыннисем ӳнер ĕçĕсен ярăмĕшĕн Николай Карачарсков СССР Ӳнер академийĕн кĕмĕл медальне илме пултарчĕ. Тĕнчери, Союзри, Раççейри, зонăсенчи вы-

ставкӑсенче ҫӗрпелсемпе хурӑнсурсен тата тукайсен паттӑр сӑнарӗсем нумай халӑхсене тӗлӗнтерчӗҫ художниксен ӑсталӑхне пула.

Чун илемӗ пур ҫӗрте ӗҫ илемӗпе ӳсӗмӗ те куҫ умӗнчех .Колхоз малтисен ретӗнчен чакмарӗ, ҫулсерен кусса ҫӳрекен ялав ҫӗнсе илетчӗ. Тава тивӗҫлӗ ӗҫсемшӗн ӑна Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑларӗҫ. Вуншар колхозник, интеллигент орденсемпе медальсем тата ытти наградӑсем илме тивӗҫ пулчӗҫ.

Аякран килнӗ хӑна тухма пӗлместчӗ Ҫӗрпелтен. Пирӗн чӑваш паттӑрӗ Андриян Григорьевич Николаев летчик-космонавт колхоза килсе кайнине хавхаланullӑн асра тытаҫҫӗ кунта. КПСС Вӑрнар райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ Альберт Тимофеевич Купчиков, икӗ хут Совет Союзӗн Геройӗ Андриян Григорьевич Николаев генерал-майор, Вӑрнар район Совечӗн ӗҫтӑвком председателӗ Сергей Степанович Волков тата КПСС Чӑваш обкомӗн пӗрремӗш секретарӗ Семен Матвеевич Ислюков сӗт-ҫу ферминчи ӗҫсемпе паллашрӗҫ. Чӑваш кӑйкӑрне А. Г. Николаева Ҫӗрпелти вӑтам шкулта хисеплӗ пионера йышӑнчӗҫ.

Пурнӑҫ улшӑнусӑр пулмасть. Темиҫе ҫул каялла пысӑк хуҫалӑхран хурӑнсур-ҫармӑссем уйрӑлса тухса хӑйсем «Хорнзор» юлташлӑх туса хучӗҫ. Тукайсемпе ҫӗрпелсен «Янгорчино» колхозне ҫавӑнтанпа Василий Игнатьевичӑн ывӑлӗ Геннадий тытса пырать. Г. В. Романов ашшӗ пекех пултарullӑ ертӳҫӗ, ӑста специалист, халӑхпа ӗҫлеме пӗлет. Тӳрех тавҫӑрса илейменнине аслисем, юлташӗсем асӑрхаттарнишӗн кӳренмест, ӑслӑ канаша пуҫа хывать, ашшӗ пуҫланӑ ырӑ йӑласене малалла аталантарма тӑрӑшать. Республикӑри хуҫалӑхсем хушшинче ҫуллен мала тухни (пӗлтӗр те трактор ҫӗнсе илчӗҫ) уншӑн та, хуҫалӑх пуҫлӑхӗшӗн, хисеп, савӑнӑҫ. Ачисем тӗрӗс ҫулпа пыни ашшӗ-амӑшӗшӗн мухтав.

***«Тӑван Атӑл», 1997 ҫ., 9 №.***



*Хурӑнсурти «Ҫӑпата» ансамбль артисткисем.*

## «ÇĂПАТА» – ХИТРЕ ЭСĔ ТУПАТА

Республикăри халăх театрĕсен иккĕмĕш «Ахрăм» фестивальне Вăрнарти культура çурчĕн сцени çинче савăнăçлă лару-тăрура уçнă самант куç умĕнчех. Уйрăмах Хурăнсур Çармăсри «Çăпата» фольклор ушкăнĕ хăйĕн саламĕпе сцена çинче пулни асăмран тухма пĕлмест. Сакăрвунă çынна яхăн тухрĕ ун чухне халăх умне. Чăваш тумĕ тăхăннă яшсене, пуçне сурпанпа илемлетнĕ, кăкăрĕ умне шӳлкеме çакнă хĕрсене, аслăрах çынсене курсанах ачалăх аса килчĕ. Çавăн пек илемлĕ тумланса кĕтсе илетчĕç пирĕн чăвашсем уявсене. Авалхи юрăсем шăрантарчĕç хурăнсурсем, чăваш ташшисемпе тĕлĕнтерчĕç.

Çур сехет ытла пычĕ салам концерчĕ. Кашни юрри-ташшине сцена çине кăларма тăрăшса хатĕрленнĕ. Сцена çине тăваттăмĕш класра вĕренекен Андрей Якимов тухсан, ура хуçса, алă çине тĕрĕнсе ташлама тытăнсан, никам та лăпкăн чăтса ларма пултараймарĕ. Е тата тăваттăмĕш класс ачи Коля Воронов илемлĕ, уçă сассипе «Килтĕм хăнана» юрра тăсса ярсан та итлекенсем вăйлă туйăм тыткăнне лекрĕç.

Фольклор ушкăнĕ хăйĕн ятне «Çăпата» ташăран илнĕ. Вуннăмĕш класра вĕренекен ултă чиперкке Таня Федорова, Лена Семенова, Люда Гаврилова, Люда Федорова, Люда Петрова тата Аля Павлова тухрĕç ку ташăпа сцена çине. Урисене çăпата сырнă, авалхи чăваш хĕрĕсен кĕпине тăхăннă, саппун çакнă. Ташă кĕввине ялти вată çынсенчен ыйтса вĕренсе тепĕр хут пурнăç панă. Асăннă ташша тепĕр хут чĕртсе сцена çине кăларнăранпа вунă çул ытла иртнĕ. Культура ĕçченĕ Ираида Шашкова уншăн хытă тăрăшнă. Сакăрвуннăмĕш çулсен пуçламăшĕнче Хурăнсур Çармăс хĕрĕсем ку ташша СССР халăх хуçалăхĕн выставкинче кăтартнă, кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ.

Фольклор ушкăнĕн хальхи йышĕ пĕлтĕрхи çуркунне чăмăртаннă. Ушкăна чăмăртас ĕçе ялти клуб ертӳçи Михаил Григорьевич Кузьмин, Юрий Иванович Максимов баянист çанă тавăрса пуçăннă. Концерта ертсе пырассине Иван Петрович Николаев учитель хăй çине илнĕ. Виççĕшĕ те халăх пултарулăхне малалла аталантарассишĕн чунне парса тăрăшнипе палăраççĕ.

Калас пулать, Хурăнсурта ташлама-юрлама юратакан халăх пурăнать. Тĕрĕссипе, фольклор ушкăнĕ çынсем ыйтнипе, пуçарнипе, тăрăшнипе чăмăртаннă. Кĕпи-тумне хĕрарăмсем хăйсемех çĕлеççĕ, шӳлкеми-тухйине çӳпçи-арчи тĕпĕнчен шыраса тупаççĕ е пасарта туянаççĕ. «Хорнзор» юлташлăха ертсе пыракан Федор Григорьевич Кузьмин хăй те пĕрле юрлать, – фольклор ушкăнне йĕркелесе тытса тăма пулăшать.

Нумайăшĕ кунта çемйипех çӳреççĕ. Акă, Максимовсен çемйинех илер. Çемье пуçлăхĕ, хуçалăхăн тĕп агрономĕ Михаил Яковлевич тата мăшăрĕ Людмила Николаевна пĕр концерта та хутшăнмасăр

юлмаççĕ. Вĕсен улттăмĕш класри Зоя хĕрĕ, тăваттăмĕшпе виççĕмĕш классенче вĕренекен Андрейпа Володя ывăлĕсем питĕ ăста ташлаççĕ. Алевтина Григорьевна Федорова воспитательницăпа Митя ывăлĕ, Тамара Леонидовнăпа Елена Николаевна Гавриловасем тата вĕсен Людмилăпа Ирина хĕрĕсем – ташă ăстисем. Кун пек çемьесем татах нумай. Ташă-юрă ăстисем пушă вăхăтра хаваспах клуба репетицине васкаççĕ.

«Çăпата» чăваш çĕрĕ тăрăх илемлĕн те çирĕппĕн утать. Вăрнар поселокĕ пуçланнăранпа 100 çул çитнине халалланă ĕçпе юрă уявĕн сцени çине, вăрнарсен «Туслăх» ентешлĕхĕн кăçалхи тĕлпулăвĕ иртнĕ оперăпа балет театрĕн сцени çине, Чăваш патшалăхĕн кунне уявланă çĕре тухса-хутшăнса ăсталăхне кăтартрĕ.

Хурăнсур-çармăссене Шупашкар çыннисем кăмăллăн саламларĕç, «Ахрăм» фестивале уçнă çĕре ятарласа килнĕ Чăваш Республикин культура тата наци ĕçĕсен министрĕ Ольга Григорьевна Денисова, СССР халăх артистки Вера Кузьминична Кузьмина, республикăри ытти яваплă культура ĕçченĕсем вĕсен пултарулăхне тивĕçлипе пысăка хурса хакларĕç.

Пултаруллăх коллективне, çĕршывĕпе чапа тухнă фольклор ушкăнне, халăх ансамблĕ ятне панă.

*«Тăван Атăл», 1997 çул, 9 №.*

## ХАЛĂХРА ÇУРАЛНĂ СĂНАРСЕМ

Федор Кузьмин музыкăна, литературăна юратни Çĕрпелти вăтам шкулта вĕреннĕ чухнех палăрнă. Хрисан Никифорович Кузнецов учитель-композитор хавхалантарнипе, вăл та ялти илемлĕх пултарулăх ушкăнĕнче ăсталăхне халăха кăтартма пуçланă. Çамрăк мусăкçăсем тавралăха тĕлĕнтернĕ.

Кузнецовăн «ялти консерваторийĕнчен» Федор Кузьминсемпе пĕрле чăваш халăх артистки Мария Еланова-Ухтерикова та малтанхи «диплом» илсе тухнă. Шкулăн çĕр çулхи менелникĕнче Маруç Хрисан Никифоровича, балалайка калама тата ăста юрлама вĕрентнĕшĕн, чунтан гав турĕ. Федя та ватă маэстрона ăшă кăмăл-туйăмпа çупăрларĕ.

Маруç амăшĕ Нина, Хурăнсур Çармăсран, Ахванеç мучи хĕрĕ, пирĕн авалхи несĕлсен тепĕр чечекĕ, Çĕрпелти Ухтериков Йăвана качча тухрĕ. Çавăнпа эпир те Чăваш оперин çăлтăрне Мария Еланована хамăрăн çутă çăлтăрăмăр тесе йышăнатпăр, унăн ўсĕмĕсене хамăр майлă хакласа, тăванăмăрпа мухтанатпăр.

Тăван çĕр, хамăр ял халăхĕ çуратнă пултаруллă кашни çын пирĕншĕн хавхалану. Вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Хурă-

нсур сăвăçĕ-шăпчăкĕ Калистрат Воробьев, уйрăмах палăрса пыракан çивĕч ăслă ачасем хушшинче хăйсен кӳрши Федор Кузьмин пурри çинчен мана темиçе хутчен те каласа панăччĕ. Йăнăшман иккен вăл. Ял таланчĕ каярахпа ял халăхĕ хушшинех таврăнчĕ. Унччен...

Шупашкарта, ял хуçалăх институтĕнче сакăрвуннăмĕш çулсенче студентсен ансамблĕ кĕрлетчĕ. Нурăс ачипе, Виктор Волков вĕрентекенпе, хальхи композиторпа пĕрле, юнашар Федор Кузьмин та кĕвĕ шăратнă.

Аслă шкултан вĕренсе тухнă агроном илемлĕх çунатне колхоз уйĕсенче, ял урамĕсенче сарнă, ял «артисчĕсемпе» юнашар тăрса юрланă, вĕсене пулăшнă. Литературăна юратакансен Хурăнсурти «Ентеш» клуб пĕрлешĕвĕн ĕçне те хутшăнма ĕлкĕрнĕ. Пĕрлешĕве ертсе пыракан, культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Иван Константинович Иванов ăна хавхалантарсах янă.

Эпĕ вăл вăхăтрах «Çĕр пики» повесть çырса пăрахнăччĕ. Хайлавăмра сăнарлă искусство ăстаçисем чăваш ялĕн культурине çĕклессишĕн ӳнерçĕсемпе çĕр ĕçченĕсен пурнăçĕ пĕр вучахра шăраннине, вĕсен ӳсĕм тымарĕ пĕр çĕр çинче аталаннине сăнарласа панăччĕ. Çавра Çăкăр йăхĕнчен тухнă Караваевсем тавра пулса иртет повĕçри ĕç-пуç.

Хуларан яла таврăннă Микулай Караваев ӳнерçĕ пултарулăх шыравĕнче хăйĕн пурнăç йĕрне, сăнарлă чĕлхине, мелне, тĕп шăнăрне тăван çĕр çинче, юратнă халăхĕ хушшинче тупать. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх агрономĕ Венера Пашкова уншăн тĕнчере çук илемлĕ сăнар, вилĕмсĕр юрату, çĕр пики пулса тăрать. Унăн «Çĕр пики» картинине хăйне искусство вăрттăнлăхĕсене алла илме вĕрентнĕ хисеплĕ профессорĕ Стариков Леонардо да Винчин «Джокондипе» танлаштарать.

Чăвашра халиччен пулман пысăк та курăмлă ĕç тăваççĕ ӳнерçĕсемпе ял паттăрĕсем – картинăсен галерейи – ялти «Третьяковка» уçрĕç. Ӳнерçĕсене хуçалăхăн хисеплĕ членне илеççĕ. Илемлĕх хăвачĕ çапла, çĕр сĕткенĕпе ӳссе, таврана, халăх хушшине сарăлать.

Сăнарĕсем маншăн юнашарахчĕ, куç умĕнчехчĕ. Ял халăхне ура сыртарнă Василий Игнатьевич Романов – Янгорчин Çĕрпел, Хурăнсур Çармăс, Кайри Тукай ялĕсен хуçалăхне çамрăклах питĕ ăнăçлă ертсе пычĕ, районти аслă вырăнсенче лайăх ĕçлерĕ. Вăл та, Иван Константинович Иванов – Костин библиотекарь, Эльвира Иосифовна Шашкова-Венера Пашкова агроном, ӳнерçĕсен ушкăнне ертсе пыракан Николай Прокофьевич Карачарсков – Микулай Караваев, «Янгорчино» колхоза ертсе пынă Георгий Ильич Андреев – Юрий Унриев тата ыттисем те халĕ те хăйсен юратнă ĕçне ывăнма пĕлмесĕр малалла тăсаççĕ.

Романовсемпе Ивановсен, Андреевсен пархатарлă ĕçне Хурăнсурти Федор Кузьмин çирĕп тытса пырать, экономика ыйтăвĕсемпе культура ыйтăвĕсене те пĕрлех явать, пĕтĕçтерсе чăмăртать.

Ун чухне, вунӑ ҫул каялла, «Ентеш» клуб мана яла чӗннӗччӗ. Вӑтам шкулта чӑваш чӗлхи вӗрентекен Маргарита Алексеевна Плотникова тата Ирина Леонидовна Захарова тӑрӑшнипе, ачасем «Ҫӗр пики» тӑрӑх сочинени ҫырнӑ-мӗн. Иван Константинович ман хайлавпа вулакансен калаҫӑвне йӗркеленӗ. Хӗрӳ иртрӗ вӑл. Федор Григорьевич сӑмахне-сӗнӗвне те хӑлхана чикрӗм. Повеҫӗн шухӑшне, шӑнӑрне тӗпе хурса эпӗ пьеса ҫырнӑччӗ, ӑна Кузьмина парса хӑвартӑм.

Тепре яла таврӑнсан... Спектакль премьеринче, Ҫӗрпелти культура ҫуртӗнче, халӑх лӑкахчӗ. Колхоз театрӗн сцени ҫине манӑн «Ҫӗр пикине» «Янгорчино» хуҫалӑха ертсе пыма пуҫланӑ Федор Кузьмин кӑларчӗ. Ятарлӑ вӗреннӗ режиссер пекех лартрӗ вара спектакле ку тӗлӗнтермӗш ача, тесе мухтарӗ ӑна манпа Шупашкартан килнӗ театровед. Микулай Караваев ӳнерҫӗн рольне те хӑй артистла хӗрӳлӗхне, пысӑк ӑсталӑхпа вылярӗ Федор Григорьевич.

Хурӑнсурпа Ҫӗрпел иртнӗ ӗмӗр вӗҫӗнчех, пӗрле чиркӳ лартса. Турра пӗр таса ҫуртра юнашар кӗл тума пуҫласанах ҫывӑхланнӑ. Ҫыннисем те пӗр ялти пекех тӑванлӑ. «Ҫӗр пики» геройӗсем те ҫавнашкалах туслӑ.

Малтан пӗр пысӑк хуҫалӑхра чухне цехсем туса хунӑччӗ. Уй-хир цехне Хурӑнсур Ҫармӑсри культурӑллӑ Иосиф Иванович Шашковӑн хӗрӗ Эльвира, ялхуҫалӑх институтӗнчен вӗренсе тухнӑ агроном, ҫамрӑкла хӗрӳлӗхпе, тулӑхлӑ тытса пыратчӗ. Ҫавсенчен ҫаплалла ҫуралчӗҫ хайлавӑмра Микулай Караваевпа Венера Пашкова. Ҫак тӗлӗнмелле ырӑ кӑмӑллӑ, илемлӗ ҫынсене, хамӑн шухӑш вылявӗнче, юрату вутне кӗртсе ярас килчӗ. Вӗсен юратӑвӗн хушшине савӑлланса кӗрекен Илюш Малашов сӑвӑҫ-тракторист – ялти мухтавлӑ йӗкӗтсенчен пӗри. Хамӑр ялти Кӑвас Павӑлӑн хӗрӗ Светлана Васильева спектакльте Венера Пашкова рольне ӑнтарчӗ.

Мӗн тери чиперкке хӗре-пикене хамӑр ял каччисем ҫавӑрса илейменӗҫ, Муркаш енне тартрӗҫ. Эльвира Шашкована «Нива» хуҫалӑх пуҫлӑхӗ Георгий Симаков аякка лартса кайрӗ. «Ҫӗр пики» ҫавӑнтанпа ӗнтӗ Атӑл пикийӗ те пулса тӑчӗ.

Вӑл вӑхӑтра ӳнерҫӗсен «Ял ҫутисем» ушкӑнне хӑйӗн ӗмӗчӗпе пӗтӗҫтернӗ Пӑрачкав енчи Шадриха вырӑсӗ Николай Карачарсков, Раҫҫей тава тивӗҫлӗ, Чӑваш халӑх художникӗ, «Янгорчино» колхозӑн хисеплӗ колхозникӗ, пирӗн тӑрӑха манмасть, килсех ҫӳрет. Иртнӗ ҫул вӗҫӗнче вӑл ҫывӑх тусӗсемпе, ман повеҫпе пьесӑри сӑнар геройӗсемпе, тӗл пулчӗ. Вӑл хӑй те пирӗн ялсен сӑнарлӑхне, ял канашне-администрацине кӗрекен ҫӗрпелсемпе хурӑнсурсен тата тукайсен сӑнарӗсене тӗнче искусствин шайне ҫити хӑпартрӗ, Мускавра Ӳнер академийӗн кӗмӗл медальне ҫӗнсе илчӗ.

Федор Кузьмин «Ҫӗр пикипе» ҫырлахмарӗ, манӑн «Пахус паккусӗ», «Хӗрсӗр ял та хӗсӗр мар» пьесӑсене тата Николай Максимовӑн

романĕпе Борис Чиндыковăн хайлавĕ тăрăх спектакльсем лартрĕ. Вĕсене таврари районсен çыннисем те курса савăнчĕç.

Ĕмĕчĕсем анлă та çулăмлă Федор Григорьевичăн. Хăй калана май, яла газ кĕртсе пĕтерсенех, Хурăнсур витĕр тухакан çула асфальт сарсанах, культура вăхăчĕ унăн татах тв хутшăнать. Çĕнĕ спектакльсем хатĕрлеме, халăх ансамблĕн ĕçне çĕнетме, музыкăпа аппаланма пуçлать. Культура керменĕ тумалла тата... Хамăр сцена çинчех аталантарма ĕмĕтленет ял çыннисен пултарулăхне – илемленсе вăйланса пыракан сăнарсене Хурăнсур Çармăс ертӳçи-йĕркелӳçи.

Сăнар халăхра çуралать – халăхрах юлать, ĕмĕр-ĕмĕр пурăнать.

*«Хыпар», 128 №, утă, 9, 1999 çул.*



*Раиса Сарпи сăвăç Çĕрпелти культура çуртĕнче «Янгорчино» колхоз председателĕпе Федор Григорьевич Кузьминпа. 1992 çул.*

# ПИРЕ ХУМСЕМ ЙĂШТАЙМАН

Ăçта çăлкуç нумай, çавăнта çĕр шывĕ пуян, пур енĕпе те: ĕçчен çынпа, сăмах хăвачĕпе, илем хумĕпе... Ĕмĕр-ĕмĕр пĕрне-пĕри юратса, савса пурăннипе.

Эпĕ нихçан та хамăр çуралнă çĕре ытти ентешсенчен, чăваш ачисенчен, çӳлерех çĕклеме юратмастăп, мĕншĕн тесен çĕр хăйĕн курăкчечекне, хăйĕн мухтав этемне пĕлсе парнелет çав вырăна, çавăнти хĕрарăма.

Çапах та... çуралнă çĕр вăл — чĕрĕ. Çын çав тăпрапа пурăнать, çав тăпра ăшне кĕрсе выртса пĕлекен-пĕлмен, тăван-пĕтен çаврăмне куçать, çав çаврăм шухăшлавĕнче, çав çаврăм ĕмĕтĕнче... яланах пурăнать.

Хĕр пĕççи тăрăх пăхма пуçланă вăхăтра эпир те çăлтăр хăшĕ-ши тесе пуçа каçăртаттăмăр. Çăлтăрĕ иккен юнашарах пулнă, ăна тытса хамăр чĕре çумĕнче хĕмлентермелли çеç юлнă.

Çавăнпа вăл чĕрĕ — чĕрĕ çăлкуç, ĕмĕр.

Çавна май эпĕ хамăр çуралнă Вăрнар çĕрĕн туртăмĕнчи ачасемпе-ентешсемпе кăштах паллаштарасшăн. Пĕр тăрăхрах, çывăхрах çуралнă эпир, Илепер, Çавал, Санар шывĕсем хĕрринче, вĕсен çăлкуçĕнчи шыва ĕçсе, шыв сиккисенче явка-кутан, çăрттан-шампа тытса, улăхĕсенчи çарана çулса, таврари пуян çĕрĕсем ӳстернĕ тырпула вырса.

Çавăнпа:
Камсем эпĕр?
Вăрнарсем —
Мухтав илнĕ ĕçченсем.
Камсем эпĕр?
Вăрнарсем —
Ялан пулнă малтисем, — теме те хăяттăмăр.

Мухтанмасăрах калатăп: пур пирĕн чăннипех малтисем, вĕсем хушшинче — Илеперсемпе Васильевсем. Акă, Вăрнар вăрманĕнче, Çарăклă поселокĕнче çуралнă, Чăрăшкас Мăратра ӳссе çитĕннĕ Кĕркури Михайлов кун-çул кĕрекинче аллă та, çĕр аллă та шутсăрах пушатнă пуль, анчах юнашарти Илепер çăлкуçĕн шывĕнчен техĕмлине ку таранччен курман пуль. Тăван амăшĕн кăкăр сĕчĕ тата юратнă мăшăрĕн, Элĕк хĕрупрачĕн Катя Куликован тутлă сĕткенĕ çĕр çăлкуçĕн хăвачĕпе пĕрлешсе, сăвăçа чĕрĕлĕх парса тăраççĕ.

Кĕркури Илеперĕн ашшĕ купăс калама юратнă. Çăлкуç шывĕн шăнкăрти сассипе, ачалăхра асра юлнă купăс çеммипе вăл чунне уçнă, пуçа килнĕ шухăш вылявне тĕнчене кăларнă. Вăрçă хирĕнче пуçне хунă ашшĕне аса илсе «Атте масарĕ» вăйлă поэма шăрçаларĕ. Литинститутра вĕренесшĕнччĕ Кĕркури, анчах пурнăç çулĕ ăна ялхуçалăх

институтне илсе ҫитерчӗ. Виҫӗ хуҫалӑхра выльӑх-чӗрлӗх аталантарассипе тата унран нумайрах тупӑш илессипе тӑрӑшрӗ, республикӑн тава тивӗҫлӗ зоотехникӗ ята тивӗҫрӗ. Хаҫат ӗҫӗнчен те уйрӑлмарӗ.

Вӑрнарта редакцире пӗрле ӗҫленӗ чухне, астӑватӑп, «Сельская жизнь» корреспонденчӗ килнӗччӗ. Комсомол райкомӗнче халапласа ларатпӑр. Хӑй ҫырма палӑртнине вӑйлатас, кӑсӑкланулӑрах тӑвас шутпа вӑл пӗр-пӗр тӗлӗнтерӳллӗ факт шырать, юлташла-журналистла, мӗнле те пулин зацепка тупса парӑр-ха мана, тет. Персе ятӑм вара эпӗ Григорий Михайлов поэт-хаҫатҫӑ халӗ те ашшӗ купӑсӗпе ял-йыша юрлаттарать-ташлаттарать, тесе. Кӗҫех Мускавран «Отцовская гармонь» очеркла хаҫат номерӗ персе ҫитрӗ. Вӑл ҫулсенче Кӗркури ялта та, районта та питӗ нумай ырӑ ӗҫ тунӑччӗ. Чупатчӗ вӑл: Прахеевсемпе, Мироновсемпе, Старшовсемпе, Ильинсемпе. Вӑйлӑ спортсменсемпе яланах ӑмӑртнӑ. Эпӗ хам та вӗсен хӗрӳлӗхӗнчен ӳксех юлмастӑмччӗ.

Хӑйсен Чӑрӑшкас Мӑратӗнче ял халӑхне ура ҫине тӑратса эртелпе чуптарни, спорт вӑййисемпе ҫӗклентерни ҫинчен «Советский спорт» хаҫата та ҫыртӑм, пичетлерӗҫ ман хайлава ун чухне.

Вӑл хӑйӗн пурнӑҫ пусӑмне туйса илнӑ вӑхӑтра ман та ӑна хӑйӗн ҫамрӑклӑхне аса илтерес килчӗ.

Вӑрнарта, район хаҫатӗнче хӗрсе ҫитнӗ вӑхӑтра, Ҫурҫӗр флочӗн морякӗ Миша Васильев пирӗн туслӑ йыша чӑвашлӑх йӑвашлӑхӗн хумне, тинӗс уҫлӑхӗн шавне илсе килчӗ. Ҫурҫӗр тинӗс хумӗпе Инҫет Хӗвелтухӑҫ хумӗ пире татах та ҫӳлерех ҫӗклерӗ. Лӑпкӑ океан ҫыранӗнчен, ҫар хӗсметӗнчен, эпӗ тинтерех ҫеҫ таврӑннӑччӗ. Укиянсен хаяр хумӗсем пире йӑштаймарӗҫ, хавшатаймарӗҫ — тӗреклетрӗҫ ҫеҫ. Пирӗн, темле укиян умӗнче те, хамӑрӑн ҫӑлкуҫ пур — анне ҫӑлкуҫӗ, ҫуралнӑ ял (вырӑн) ҫӑлкуҫӗ. Мӗншӗн тесен эпир пурте турӑ панӑ вырӑнта ҫуралнӑ, ҫуралсанах кашниех амӑшӗн чӗччине — пурнӑҫ ҫӑлкуҫне — пуҫа чикнӗ. Каҫарччӑр те пире юратнӑ арӑмсем, ҫапах та пирӗн куҫ умӗнче хамӑра тӗнче уҫлӑхне кӑларнӑ ҫын кӑкӑрӗ — хӗрарӑм чӗччи ҫывӑхрах, тутлӑрах, пулӑхлӑрах. Ҫавӑнпа эпир вӑйлӑ — турӑ панӑ вӑйпа.

Таса чунлӑ ҫывӑх юлташӑм Миша Васильев маншӑн тинӗс хумӗсен ҫирӗплӗх вӑйӗ. Тинӗсре вӑйлӑ, шанчӑклӑ ҫын кирлӗ — чунпа туйса, шанса тӑракан ҫын. Пурнӑҫра та ҫаплах.

Михаил Алексеевич хӑйне мухтанине юратмасть. Ҫапах та манӑн ун кӑмӑлне кӑштах улӑштарас килет, унӑн пуян кун-ҫулӗпе кӗскен халӑха паллаштарас пуль, тетӗп.

Кӗркури Илеперпе пӗр эрнерех ҫуралнӑ вӑл — Михаил Алексеевич Васильев. Айкӑш ялӗ ун чухне Вӑрнар районне кӗнӗ. Вӑрҫӑччен шкулта ӗҫленӗ ашшӗ фронтран таврӑнайман. Кӗҫех Калинино (Нурӑс) районне туса хураҫҫӗ. Улшӑну тапхӑрӗнче Айкӑш каллех Вӑрнар районне куҫать. Миша Васильевӑн ачалӑх сӑввисем пӗр вӑхӑтрах Кали-

нино тата Вăрнар районěсен хаçачěсенче пичетленнě. «Нурăса Мăн Явăшран Алексей Воробьев пěрмай çӳретчě, унти литература пěрлешěвне чунтан хавхалантарма пěлетчě, – тет вăл. – Ун кăмăлне курах, Василий Викторов, Клим Сергеев, Николай Курцов, Василий Минин, Виктор Туринге, Валериан Марков тата ыттисем, кěçěнни-аслине пăхмасăр, хамăра пěр килти пек тăванла туяттăмăр». Салтак ячě тухиччен вăл Мăн Явăшра пурăнать.

Кěçěн Кипекри вăтам шкулта вěреннě çулсенче, Çурçěр флотěнче, райхаçатра ěçленě чухне нумай сăвă-калав çырнă вăл. Новеллисем «Ялавпа» «Тăван Атăлта» пичетленетчěç.

Вăй питти ěмěрне, 23 çул, хаçатра – хаçатшăн ирттерчě Михаил Васильев. 15 çул – редакторта. Вăрнар хаçачěн ятне нихăçан та яман хастар журналист, çулленех тěрлě конкурссенче çěнтерӳçě пулнă. Хаçатри çивěч критикăшăн мěн чухлě кӳпкемерěç пуль ăна, каварлашса-майлаштарса юратнă ěçрен пăрчěç. Хěрхенсе хăй пулăшнă, ура сыртарнă путсěрсене аса илсенех вăл калаçма пăрахать. Вěсене асăнса çăвар тутине те пěтерес килмест пулас.

Хаçат витěмлěхěшěн, фельетонсемпе илемлě очерксем çырнăшăн ăна республикăра хакларěç, журналистикăри Эльгер ячěллě премине пачěç. Публицистикăра кăна мар, поэзипе прозăра та утăмсем сулмаклă унăн. Пěлтěр ăна Раççей Федерацийěн писательсен Союзěн членне илтěмěр. Кěнеке хыççăн кěнеке кăларать. Çиччěмěш çул екки ярсах Иртеменкассинчи шкулта ачасене тăван чěлхепе литературăна вěрентет. Ачисен сăввисем хаçатсенче пичетленеççě. Вăл çав пултаруллă ачасем хăйěнчен те маларах иртессе шанать.

Хăшěсем çынна, ăна хăйнех, хурапа вараласа, таптаса тěп тăвасшăн çунаççě пулсан, вăл çамрăксен çутă малашлăхне курса вěсемшěн хěпěртет. Кăмăлě çапла унăн – сăпай та çирěп. Нимле усал хумсем те йăштаймаççě унăн çирěп никěсне.

Эпě маларах, Григорий Михайлович Михайловпа Михаил Алексеевич Васильев анчахрах хамăрăн пурнăçри утмăлмěш картлашка çине сисмесěрех ярса пусрăмăр. Умра – пурнăç вăрăм-ха, ěç нумай. Çакăн пек шанчăклă юлташсем пулнишěн-пурришěн савăнатăп та, мухтанатăп та. Хурăнсур Çармăс, Чăрăшкас Мăрат, Мăн Явăш çěлкуçěсен таппи çывăхлатса тăрать пире.

*«Хыпар», 1999 ç. нарăсăн 14-мěшě.*

# ÇУНАТ

*Хăйне Турă панă хăватпа этемлĕх аталанăвĕшĕн усă курма пултаракан çын — вилĕмсĕр.*

Автор.

Эпĕ вăл çын — çивĕч шухăшлă та мал ĕмĕтлĕ, витĕр куçлă та ăслă-пуçлă çын çинчен — хăçантанпа ĕнтĕ мĕн те пулин асра юлмалли сăнарлăх çырăвĕ шăрçаласшăнччĕ. Йĕпреçре пурăннă вăхăтра мар, Шупашкара ĕçлеме куçсан тин пурнăçланма пуçларĕ ман ĕмĕтĕм.

Çук, унăн лайăх енĕсене те, япăх йăлисене те, çитĕнӳ-çĕнтерĕвĕпе ӳпкев-çухатăвне те нумай çул хушшинче йĕркипе хут çине палăртса çырса пыман. Маншăн вăл темшĕн хамăн шыравлă пуçватмăш саманчĕсенче,йывăрлăх сулнăкĕсенче, хĕрӳ хавхалану вĕçевĕсенче куç умне тухса тăракан сăнар пулса тăчĕ. Ана эпĕ хамăн кăмăл-туйăм сисĕмĕнче, кулленхи пурнăç шухăшлавĕнче, хампа пĕр евĕрлĕх ĕлккенлĕхĕнче юнашар туятăп. Çавăнпах-и, тен, ахальтен мар кăтартса парас терĕм пуль халăх умĕнче унăн сăнар сапакине. Вăл сапакара, паллах, пиçсе çитнĕ çимĕçĕ те, хытса хуралса пыраканни те, тин кăна сăмсаланаканни те, пуç кăларса симĕсленекенни те пур. Пурнăç ал тупанĕ çинче вĕсем пурте — куç умĕнче, пурте — хăй вырăнĕнче, пурте — пĕр пĕтĕм çыхăнура.

1

Аса илӳсĕр, аваллăха паянлăхпа явмасăр пурăнма май çук. Вăл пирĕнтен килмен пулăм — тĕнче курăм пулăмĕ.

Çапла, хамăрăн пурнăç пăтравĕнче, пĕррехинче... Мускавра компартин вун тăххăрмĕш конференцийĕ пыратчĕ. Унăн ĕçне Пантелеймон Ермошкин питĕ тимлĕн, пăлханса та хăпартланса сăнарĕ, делегатсем каланисене хăйĕн шухăшĕпе çирĕплетсе-танлаштарса ларчĕ. Трибуна умне паллана чăваш тухсан, унăн кашни сăмахне хăлхана чикме тăрăшрĕ. Ял хуçалăхĕ, ял, çĕр çынни çĕршывшăн мĕн хака ларни, пурнăçри танмарлăх танатинче ял халăхĕ мĕншĕн хĕсĕнсе пурăнни, ăна мĕншĕн тивĕçлĕ шая çĕклеменни çинчен Айдак хресчен туйăмĕпе, çĕр хуçи хăватлăхĕпе, этем хастарлăхĕпе чĕрене тивмелле хăюллăн та тарăхуллăн калаçрĕ.

«Эх, пуласчĕ кашни хуçалăх пуçĕнче Аркадий Павлович пек ăслă, чунлă хуçа! Эпир те тахçанах çăкăрлă, ашлă-пăшлă, тулăх кĕрекеллĕ пулмалла та çав, — шухăшларĕ вăл йăм хура çӳçне икĕ аллипе шăлса. — Никам та пырса туса паман вĕт ăна, Айдака, хăйĕн ырлăхне: Етĕрнерсн те, Шупашкартан та, Мускавран та. Çĕннине вăл хăй шыранă, тупнă, пурнăçа кĕртнĕ. Ăсчах-хуçа çĕнĕлĕхĕ халĕ пĕтĕм

çĕршывĕпе, тĕнчипе сарăлать. Начар, питĕ начар ĕçлетпĕр эпир хамăра халăх шаннă çĕрте, телей тӳперен çăлтăр пек ӳкессе кĕтетпĕр. Çĕр туйăмĕ, çăкăр тути, хресчен ăсĕ-чеелĕхĕ çитсех каймасть».

Çавна май район пуçлăхĕн куçĕ умне маларахри ӳкерчĕксемпе пĕрлех икĕ çул каяллахи тухса тăчĕ. Хисте-хистех вĕсем пуçлăхсене, агрономсене пилĕк автобуспа Йĕпреçрен Ачака илсе çитерчĕç. Ял çыннисем çĕре епле юратса пăхнине, кашни гектартан çуллен мĕнле майпа вăтăр-вăтăр пилĕк центнер тĕш тырă, çирĕм центнер хăмла пухса кĕртме пултарнине, вĕсем чăн-чăн çут çанталăк хуçисем пулса тăнине кашнине куçпа кăтартса ĕнентерме шутларĕç. Хими пулăшăвĕсĕр çĕр ĕç вăйне çав шая çĕклени такама та кăсăклантармалла пек. Йĕпреçсен вара ĕмĕрти чи пысăк çĕнтерĕвĕ те гектар пуçне вун сакăр центнер тырă туса илниччĕ.

Çак «катаччи» вăхăтĕнче Айдак шӳтлесе те йĕплесе илни нихçан та хăлхаран каймасть. «Чĕрĕ театр курма килтĕр-ха апла. Курăр, курăр, пурнăç вăййине эпир тӳлевсĕрех кăтартатпăр. Çĕнĕлле, хамăрла выляса ĕнтĕ çуллен хуçалăх енчĕкне виç-тăватă миллион шăнкăртаттаратпăр. Çĕр çине тарпа çырса юнпа лартма тăрăшăр-ха хăвăр та паянхи пурнăç спектаклĕне. Тĕп режиссерсем çеç ан ӳркенччĕр», — çивĕч куçне чеелентерсе илнĕччĕ çĕр хуçи.

Хавасла туйăмпа таврăнчĕç вĕсем Етĕрне енчен. Хуçалăх пуçлăхĕсем — тĕп режиссерсем — çул тăршшĕпех ĕмĕтленсе пычĕç. Çĕрпе туллин те пулăхлă усă курмалли, çут çанталăка тимлĕн сыхламалли анлă малашлăх палăртрĕç районта.

Çук иккен, ăшра çĕнĕлĕх кăварĕ йăлкăшмасан, çынна темле чаплă япала кăтарт, вăл пурпĕрех пулăшаймасть. Кам хăй ниçта кайса кĕрейместĕр ăшталанса çӳрет — çавă çеç таврана вут-хĕм сирпĕтет. Хăш-пĕр пуçлăхсем сӳннĕ вучах сĕрĕмĕнче куçĕсене сăтăркаласа лăпкăн выртнă вăхăтра Гурий Андреев кăна район çийĕн хĕвел пек çиçрĕ. Етĕрнесен хĕлхемĕ çак ăслă хресчен чĕринчи вутта çĕнĕлле чĕртсе ячĕ. Ватлăхра та пулин вăл тăван тавралăх илемĕ хăйĕн илемĕ, тăван халăх илемĕ пулнине ăнланса нумай тăрмашрĕ, ял çыннисене те хăй хыççăн ертсе кайрĕ. Çавăн чухне Гурий Андреевич «Йĕпреç Айдакĕ» пулса тăчĕ тесен те йăнăш мар. Пучинке тавращĕ чĕрĕлчĕ. Пĕринче Андреев шӳтлесе илчĕ: «Пантелеймон Михайлович, ухутана чĕнетĕп, ял пĕвисенче кайăк хур кăвакалĕ нумай».

Ермошкин, вăрманти чăн-чăн сунарçă пулин те, пăшал çакса «Красный партизана» сунара каймарĕ, анчах ĕç енĕпе хуçалăха кĕрсе тухма яланах кăмăллăччĕ: пĕвесенче тăп-тăрă шыва яр уçса ярăнакан вĕçен кайăксене сăнама мĕнле пахаччĕ. Темиçе çул каялла вĕсене кунта курма никам та тĕлленмен. Вăрманти Хĕр юхан шывĕнчи мăн пĕвере кăначчĕ кайăк кăвакалĕсем. Ирĕк панă вăхăтра Пантелеймон Ми-

хайлович хӑй те, юлташӗсемпе пӗрле, ухутара вӗсене пере-пере антарнӑ. Сунар унщӑн — ирӗклӗх чун кантармӑшӗ.

Кайӑк кӑвакалӗ Хум юхан шывӗ тӑрӑхне явӑҫни хӑех ӗнтӗ хуҫалӑх пуҫлӑхӗ Андреев ҫут ҫанталӑк чӗрӗлӗхӗшӗн, илемӗшӗн мӗнле ҫине тӑни ҫинчен калать. Вун пилӗк пӗвс ҫирӗм виҫӗ гектар йышӑнать. Вӗсем тавра йывӑҫ ӳсет, шывӗнче пулӑ, ӑтӑр ӗрчет. Пӗр енчен — ҫӗр суранӗ сипленет, тепӗр енчен — ҫӗр пулӑхӗ ӳсет, ҫут ҫанталӑк имлӗн ешерет. Етӗрне ҫӗнӗлӗхӗ тымар яни йӗпреҫсемшӗн кӗлет пуянлӑхӗ пулса тӑчӗ. Ӗмӗрте паман ку тӑрӑхри ҫӗр ҫавӑн чухлӗ тупӑш: гектар пуҫне вӑтӑр центнера яхӑн! Ҫак ҫӗнтерӳре Ермошкинӑн тӳпи хӑй вырӑнӗнчех. Мӑкланнӑ чӗресене чӗртсе ҫӗнӗлле таптарма пуҫлани, ял пуҫлӑхӗсене хӑватлӑ ҫӗнӗ ҫунат хушма пултарни авӑ епле пуянлӑх парать нумай ҫул иртнӗ хыҫҫӑн та района. Ун пирки эпӗ, Йӗпреҫ тӑрӑхӗнчи явашлӑ ҫынсемпе калаҫнӑ хушӑра, кашнинчех хӗпӗртесе итлетӗп. Пуҫарулӑх, ҫӗнӗлӗх мӗнне чунпа ӑнланакан Йӗпреҫ пуҫлӑхӗсем Пантелеймон Михайловича япӑххипе асӑннине ку таранччен илтмен-ха.

Тӑнлӑ-пуҫлӑ, тарӑн шухӑшлӑ, ҫирӗп ҫунатлӑ ҫав вӑл — Ермошкин. Тахҫанах тӗлӗннӗ эпӗ ҫак чӑвашран. Ӑна яланах курас, унпа калаҫса чуна уҫас килет. Йӗпреҫре унашкал типтерлӗ, культурӑллӑ ҫын, арҫын, пуҫлӑх сахал. Редакци умне ирех персе ҫитетчӗ те, машинӑран ман ума тап-таса, якатнӑ костюмпа, шап-шурӑ кӗпепе, хитре галстукпа, сӑн курӑнакан пушмакпа тухса тӑратчӗ. Ял-ял тӑрӑх ҫӳреттӗмӗрччӗ те ҫур кун, поселока хӑйӑрпа тусан ӑшӗнче таврӑнаттӑмӑрччӗ. Хамӑрӑн пуҫра мӗн тӗрлӗ ҫунатлӑ шухӑш!

Вӑрман пӗвинче ҫур ҫухрӑмран кая мар ишсе, ҫӑвӑнса тасалнӑ хыҫҫӑн тап-таса, якатнӑ кӗпе тӑхӑнса, каллех ӗҫе ҫӗнӗ вӑй-халпа малалла тӑсатӑн. Хӗрӳлӗхе ҫӑварлӑхласа та чарма ҫук.

Пантелеймон Михайловичӑн чун ҫуначӗ мӗнле хӑватпа ыттисене хӑй хыҫҫӑн вӗҫтерсе пыма пултарнине хамӑн пурнӑҫра курса пыни мана яланах шухӑшлаттарнӑ. Мӗнле майпа, мӗнле чӗлхепе, мӗнле кӑмӑл-туйӑмпа хӗмлентерме пултарать-ха вӑл ҫынсен чӗрине? Тем тесен те Турӑ паниех пур унӑн. Ҫав вӑй-хӑват ӗнтӗ ыттисене ҫунатлантарать, ҫӗклет, вӗҫтерет. Хресченпе ҫӗр, этемпе ҫут ҫанталӑк уйрӑлми ҫыхӑннӑ. Ҫав ҫыхӑнура вӗсен пӗр-пӗрне вӑйлатса, ҫӗнетсе, илемлетсе пымалла. Ҫак ҫӗнетӳре ҫыннӑн ҫӗнтерсе хӑйне пурӑнма, тӗнчене тытса тӑма пӗлмелле, ҫав тӗнчере унӑн туллин савӑнмалла: хырӑм туттипе те, ҫи-пуҫ тирпейлӗхӗпе те, чун хавалӗпе те. Пӗр-пӗтӗмӗшле илемлӗх ӑшӗнче пулмалла ҫыннӑн. Ҫавӑншӑн хӑйӗн вӑй-халне, ӑстӑнне хӗрхенмен нихҫан та Пантелеймон Михайлович.

Анчах мӗншӗн яланах, пур ҫӗрте те, кашни ҫемьерех, уйрӑм ҫынрах йӑлкӑшмасть-ха ҫав илем? Пӗррехинче Шупашкартан Йӗпреҫе ӗҫпе пырсан, вӑл мана йывӑҫ япала кӑларакан пысӑк хуҫалӑха илсе кай-

саччĕ. Кантурĕнчи тасамарлăх, илемсĕрлĕх унăн пит-куçĕнче йĕрĕнчĕк палли кăларчĕ. Ермошкин çапла каларĕ: япăххине курмасăр тăсса пыракан хуçаран ăнăçлăх кĕтмелли çук. Чăн та çаплах пулса тухрĕ. Комбинат аялалла анса-анса пычĕ. Юрать-ха, пултаруллă, çивĕч куçлă чăваш аллине панă халĕ ăна. Михаил Федоров комбината аталану çулĕ çине уçăмлăн кăларса пырать, терĕç. Çамрăксен ертӳçинче, апатçимĕç комбинатĕнче, вăрманпромхозра уçăмлăн палăрнă пуçлăх ман куç умĕнче ӳссе çитĕнчĕ.

Миçе хутчен каламан пуль Ермошкин пире ячĕшĕн тунă ĕç пĕтерет тесе. Тĕрĕсех иккен. Пуçланă ĕçе вĕçне çитерейменни сӳрĕклĕхе аталантарать. Çав хăнăхăва çумран яланлăхах илсе пемесен, малашне нимĕн ырри те пулмасть. Чĕре мăкланать, çав мăк айĕнчен тарăн йĕрсем сарăлса ăша-чике хавшатĕç. Ермошкин çын, хайхи Гурий Андреевич пек, хăех куç уçнине, вăраннине юратать. Çынна икĕ енчен тытса уттарнипе малалла нумай каяймастăн. Апла-тăк вĕсен, пуçлăхсен-хуçасен, хăйсен те хуçалăх пуçĕнче тăма юрăхлă çынсене пур енчен те тĕплĕн тишкермелле, ăнсăртран лекнисенчен хăвăртрах хăтăлмалла. Ертсе пыракан çыннăн ăс-тăн шайĕ, шухăшлав пултарулăхĕ çӳлти шайра пулмалла. Çакна яланах асра тытса пырать Пантелеймон Михайлович.

Çут çанталăка сыхласси, çĕре упрасси, таврари сывлăш тасалăхĕшĕн кĕрешесси унăн пурнăç тĕллевĕ пулнă. Хăй кăна мар, кашни çын пуçĕнче экологи шухăшлавĕ çĕнĕлле аталантăр тесе çине тăнă.

Вăрмана юратать вăл. Унăн вăрман ухута та, уçă сывлăш та, сиплев те. Пĕр уçланкăра утар тытать. Çулла вăрмантан тухма пĕлмест. Хĕлле те йывăçсем хушшинчех: вĕсемпе калаçать, вĕсен çĕр-имлĕх хăватне хăй çумне илет. Акă йĕлтĕрпе анаталла ярăнчĕ. Темшĕн унăн хĕллехи вăрманта уçăлас, пуçри çĕр-пин ыйтуран вăхăтлăха та пулин хăтăлас килчĕ. Хутăш вăрман ăна ăшшăн çупăрларĕ, шурă юрпа витрĕ. Сиплĕ сывлăш кăкăра уçăлтарса ячĕ, кĕлетке çăмăлланса çĕкленчĕ, пуç уçăлса кайрĕ. Пуç тăрринчи кашлав вĕт кайăксен юррипе хутăшса çут çанталăк кĕвви кăларчĕ. Чăрăш вулли тăрăх йăпăртатса улăхакан пакша тăп чарăнчĕ те этем çине ыйтуллăн пăхса илчĕ. Çăмламас илемлĕ чĕр чуна пăлхантарса хăратас мар тесе çын пĕр хушă сывлама та пăрахрĕ. Пакша ылтăн хӳрине пăлтăртаттарса каллех çӳлелле вирхĕнчĕ. Хурашыв улăхне анса Пантелеймон Михайлович самай вăхăт шухăша кайса тăчĕ.

Мĕн тери ырă, мĕн тери тулăхлă вăрман сывлăшĕ. Унсăрăн этемлĕх пурăнаймасть. Çут çанталăк ырлăхĕ — çĕршыв пуянлăхĕ. Сакăр вунă пин гектартан та иртет район çĕрĕнчи вăрман. Акă мĕнле пуянлăх! Хăй район Канашĕн пуçĕнче пулнă вăхăтра та, ытти чухне те çак пуянлăха сыхласа хăварассишĕн мĕн чухлĕ тăрăшман пуль. Анчах ăна район калăпăшĕпе ниепле те тĕплĕн татса пама май çукчĕ.

Вăрмана тĕлли-паллисĕр касса пĕтернине пула Йĕпреç тăрăхĕ кăна мар, Улатăрпа Пăрачкав тата Çĕмĕрле çĕрĕ те кукша пуç пек курăнакан пулса юлчĕ. Ӳссе çитнĕ йывăç юлмарĕ те, вара, тĕнче кулли, çырмасене тапăнчĕç. Тункаталлă çара çырмасенче çăл куççем куç умĕнчех типеççĕ, шывĕ хухать, вĕçен кайăкĕ тасалать. Çитĕннĕ юман, чăрăш, хыр, çăка сайра тĕл пулатăн. Ăвăс та хурăн кăна. Халĕ тата чăваш вăрманне тепĕр шĕкĕсем ернĕ: выçлăх усламçăсем уçланкă хыççăн уçланкă хăвараççĕ...

Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ хăй виличчен Йĕпреç вăрманĕнче курса çӳрени аса килчĕ ăна. Чун хавалĕпе, кӳренсе те тарăхса, куççуль кăларсах çырнă пулас чăваш ăсчахĕ ун хыççăн. Питĕ хумханса, тĕлĕнсе вуларĕç очерка республикăра, шавларĕç ун хыççăн, вăрман пекех. Анчах та çумри çак хурăнсем усăсăр шавланă пек кăна пулчĕ вăл. Нимех те улшăну кӳмерĕ. Çавăнпах-и, тен, шутсăр тарăхнăччĕ Яков Гаврилович. Пĕррехинче вăл Шупашкарта, писательсем хушшинче, Ермошкина палласа илчĕ те калаçса кайрĕ, юлашкинчен çапла патлаттарса хучĕ: «Начар çынсем эсир, вăрмана куç умĕнчех пĕтерттерсе пынăшăн халăх ячĕпе айăпламалла сире. Вăрман пĕтсен, мĕнпе сывлас теççĕ-ши чăваш патшисем те...» Çавăнтанпах ĕнтĕ халăх поэчĕн приговорĕ хăлхаран тухма пĕлмест.

Çут çанталăк, этем, тĕнче курăм... Çак çыхăнура кашни çыннăн, кашни пуçлăхăн тĕллевлĕ ĕçĕ мĕн чухлĕ ытларах вăйлă, çавăн чухлĕ пурнăçра ытларах усă пулĕ, тесе çунатчĕ вăл хăй район Канашне ертсе пынă çулсенче, çӳлтисемпе тытăça-тытăça хăш-пĕр çĕнтерӳ те куратчĕ. Пурнăç илемĕ — çут çанталăк. Вăл çынна ĕçлеме, канма, хавхаланма, ĕмĕтленме, юратма пулăштăрччĕ, тесе йывăççем хушшинче савăнать Ермошкин.

## 2

Кăрлач Пантелеймон Михайловича хурлантарчĕ, çулталăк хуйхăпа пуçланчĕ. Иртнĕ хаяр вăрçăра пуç хуман çемье пуçлăхĕ ĕмĕрлĕхех куçне хупрĕ. Ашшĕсĕр тăрса юлнă хыççăн шухăш-туйăм ытларах ĕç çинчен мар, çыннăн Çĕр çинчи вырăнĕ, тӳпи, хакĕ çинчен явăнать. Хăй ертсе пыракан юсавпа техника предприятийĕн кулленхи-малашри ӳсĕмĕ-тӳсĕмĕ, нуши-терчĕ пирки шухăшлава темле тĕвĕлес тесен те куç умĕнчен ашшĕ кайма пĕлмест, кил, тăван çĕр чăнлăхĕ пуçа çĕмĕрет. Асаилӳ çине асаилӳ юхса тухать. Пĕррехинче çапла, яла çитсен...

— Эсир тĕрĕс мар ĕçлетĕр-ши, ывăлăм, е эпир ĕлĕкхи пек хресченле чаваланма манса кайрăмăр çак çĕр çинче, шалт аптрамалла, — куçран витĕр пăхса ытарлăн каларĕ ашшĕ, Михаил Егорович. — Курманни юлмарĕ пуль ку ахăр пурнăçра, халь те ытлашши хĕпĕртесех сикмелли çук. Хаçатпа радио-телевизор çĕр çĕмĕрмелле шав çĕклесен

те... халăх кăмăлĕ хуçăкрах. Хам астăвасса нихçан та уçă пулман вăл. Тем çитмест. Кĕрхи нӳрĕ çанталăк пек.

Машинине кил умне тăратса пӳрте васкаса кĕнĕ Илле ашшĕн сăмахĕсене тăп чарăнсах итлесе тăчĕ те пиччĕшĕ хуравлама ĕлкĕриччен шăкăртаттарса хучĕ:

— Мĕн вăлтмалли унта! Эпĕр айăплă-и? Эпĕр, хушсан, çӳлтен чип-чипер йĕркелесе пырсан, тивĕçлипе тӳлесен, тем тума хатĕр. Алăра пĕр ĕç пирĕн. Панькăсем вара... Ан çиллен те, пичи, ытла улпутланса кайрăр эсир, пуçлăхсем, халăхран уйрăлтăр. Ха, хуçа пулнă та вĕсем — пуçа кăркка пек каçăртнă. Тепринне пуçне арпа çеç тултарнă-ха, пурпĕрех хывăх вĕçтерет. Хывăхпа хырăм тăранать-и? Пăла тăрăхĕ Патĕрьелĕнче кăна мар, пĕтĕм чăвашра кĕрленĕ, кӳршĕсене, тутарсене тĕлĕнтернĕ. Паттăр пулнă эпир. Пирĕн çакăнта, хура тăпраллă çĕр çинче, ай-турах, мĕн чухлĕ тырă-пулă туса илмелле. Йăлтах пуçпа ĕçлеме пĕлмен пуçлăхсем пĕтерессĕ. Паянхи çак пăтăрмахшăн, Панька, эсĕ те айăплă.

Пантелеймон Михайлович шăллĕпе ашшĕне тавăрса каламалли витĕмлĕ сăмах шырарĕ, пуç хултăрчине çавăрттарчĕ-çавăрттарчĕ те кулса ячĕ:

— Хэ-хэх. Ку сăмахпа хырăм тăранмĕ. Сĕтел хушшине ларар-ха часрах. Атту иртенпе çăвара çăкăр тĕпренчĕкĕ яман. Тӳрех канашлуран. Йĕм çĕтсе ларатпăр. Эс, Илле, мана мар, Шупашкарсене ятла.

— Эп сире пĕрлех пĕр пушăпа çатлаттаратăп, — Илле аллисене хăвăрт-хăвăрт çуса сĕтел хушшине пиччĕшĕпе юнашар вырнаçрĕ, арăмĕ лартса панă турилккене ун умнерех шутарчĕ.

— Этем çăкăрпа çеç тутă мар тенине те тахçантанпах пĕлетпĕр ĕнтĕ, — кăххăмлатса илчĕ çав хушăра ашшĕ. — Тĕрĕс. Канăçлăх та, чун кантармăш илем-силемĕ те кирлĕ çынна хăй вăхăтĕнче. Çапах та чи малтан... Панька та, ав, тӳрех алла кашăк тытасшăн. Чи малтан эппин çынна çăкăр-тăварах, аш-пăшах кирлĕ. Çителĕклĕ, тăранса какăрмалăх кирлĕ. Çăкăр пур — пурнăç пур. Çук та вăл — эс ху та çук çут тĕнчере. Хамăр хырăма тăрантармалăх та туса илеймесен ăна, пурнăç пуçламăшне, намăс мар-и пире?

Çак сăмахсем Пантелеймон Михайловичăн чĕрине йĕппе тирнĕ пекех ыраттарчĕç. Тăван килти тутлă апат та ăша кантармарĕ. Йĕпреçе çитсен вăл тӳрех хăйĕн çывăх çыннисене пухрĕ. Çав çынсен тăрăшулăхне пула ĕнтĕ халĕ район малтисен ретне тухрĕ.

Кунашкал калаçу тăван Каншелте кăна мар, Йĕпреç тăрăхĕнчи е ытти çĕрти нумай-нумай ялта пулса иртме пултарнă. Тĕрĕс калаçу — пурнăç калаçăвĕ. Çĕршыв пăтранăвĕнче, аталанăвĕнче вăл, Пантелеймон Ермошкин, хăй шухăшĕпе, ку таранччен те ял çынни умĕнчи парăма татсах çитерейменха. Çавна май Каншелтен тухса кайнă вăхăт, Саратоври ял хуçалăх механизацийĕн институтĕнче вĕреннĕ çулсем, инженер дипломĕ илнĕ савăнăçлă самант аса килчĕç.

Пурнăçри чăн-чăн экзамен уншăн 1955 çулта Йĕпреç МТСĕнче пуçланнăччĕ. Николай Гришин агроном, Сормоврăн чăвашсене пулăшма килнĕ Юрий Давыдов инженер чăваш çамрăкĕшĕн малтанхи вĕрентекенсемччĕ. Ют район, Патăрьелĕнчен нумай енпе уйрăлса тăракан Йĕпреç поселокĕ хăй ытамне илнĕ те ку таранччен те вĕçертмест ăна. Чупкăн пулмарĕ вăл, çавăнта йăва çавăрчĕ. Вăй илчĕ. Ермошкин Йĕпреç районĕнче хăйĕн «университетне» уçнă. Кафедрисем унăн — кашни хуçалăхри машина-трактор паркĕнче, вĕренекенĕсем — кашни ăслă пуçра.

Пултарулăха курса, ăсталăха асăрхаса сĕннĕ-ши Давыдов вырăс хăй Йĕпреçрен кайнă чухне ăна тĕп инженера лартма — халĕ калама хĕн, анчах çамрăк инженершăн вăл пĕрремĕш вĕрентекенĕ пулнă. Çынна çул уçса паракан пĕрремĕш çын вăл теприншĕн Турă пекех. Çавăнпа ахальтен мар асăнать Пантелеймон Михайлович ăна ырăпа. 1957-1961 çулсенче вăл çав çăмăл мар вырăнсенче ĕçлерĕ. Механизаторсене ĕç, юсав технологийĕн йĕркине çирĕп пурнăçлаттарма вĕрентни запас пайсем перекетлеме май панăччĕ. РТС директорĕ те, «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕн управляющийĕ те пулчĕ. Çав вăхăтра предприяти, заводран кая марскерех, ӳссе ларчĕ. Пантелеймон Михайловичăн хĕрӳлĕхĕсĕр, çине тăраслăхĕсĕр пулман вĕсем. Электростанци çурчĕ, хальхи столярка çеç аса илтерет кунта тахçан МТС пулнине тата... çамрăк инженерăн юратăвĕпе малтанхи утăмĕсене.

Вун-вун çул техникăпа, техника çыннисемпе ĕçлесе, вунă çул район Канашне ертсе пырса, Йĕпреç халăхĕшĕн усăллине тунă-ши вăл? Каншелти ашшĕпе шăллĕн кӳренĕвĕ тӳррипех пырса тивместши ăна та? Мĕншĕн, мĕне пула аталанаймастпăр-ха эпир? Пĕри, пĕчĕк предприяти тесе, миллиардсемпе çавăрттарнă вăхăтрах патшалăх предприятийĕсем чухăна тăрса юлни чуна чăннипех ыраттарать.

3

Ермошкинăн яланах мĕн те пулин кăсăклăрах, çĕнĕрех, ыттисемшĕн йывăртарах ĕçпе аппаланас килет. Ачаран хăнăхнăран-ши ку? Чун-чĕринче çав сӳнми кăвара ашшĕ-амăшĕ чĕртсе хăварнăран-ши?

Патăрьел тăрăхĕнчи Каншелти ачалăх шаймăклăхĕ халĕ те асрах. Анкарти хыçĕнчи Пăлара Пĕрремĕш Петĕр флотилийĕ пек сулă флотилийĕ тума хăтланнăччĕ. Ӳсерехпе, ăс-тăн çирĕпленсе пынă май, усăллăрах шухăшсем çуралнă пуçра. Саратовран çуллахи каникула килсен, яланах тракторпа е комбайнпа ĕçленĕ. Ял механизаторĕсене ăнланмалларах пултăр тесе-ши, вĕренӳ кĕнекисене чăвашла куçарнăччĕ. Хăй мĕн шут тытнине, мĕн ĕмĕтленнине унăн хăть те мĕнле пулсассăн та ыттисене те тутарас килет, çав шухăшпа нумайрах çынна хахалантарса чĕртес килет.

Çăра çӳçне аллипе хыçалалла шăлса илнĕ май Ермошкин тутине чăмăртаса тытать. Даниил Гранинăн сĕтел пуçĕнче выртакан «Зубр» кĕнекине айккинерех шутарса хурать те, куçлăхне тӳрлетсе, хăвăрт-хăвăрт калаçса каять.

— Çынна, уйрăмах хăвна пăхăнакана, хăй сисмелле мар пĕр-пĕр ăслă шухăш сĕнме, çав шухăшпа унăн чĕрине вутлантарма пĕлмелле, вара вăл хавасланса каять, ĕмĕтленсе ĕçлет, çав шухăша тата ытларах аталантарса ярать, — сарлака çамкине алă лаппипе сăтăркаласа, сисмесĕрех куçлăхне хывать, çӳлĕкрен «Чăваш халăх искусстви» ятлă капăр альбом илет, хут хурса паллă тунă вырăна уçать те пӳрнипе тĕллесе кăтартать. — Куратăр-и?

138-мĕш страницăра мĕн çырнине вулатăп: «Сĕт савăчĕ. 1935 çул. Йĕпреçри тăмран савăт-сапа тăвакан эртел». Кунта тата малалли страницăсенче нумай тĕслĕ, илемлĕ кăкшăм, миска, шаркку савăчĕ тата ытти тĕрлĕ савăт-сапа ӳкерсе хунă.

— Халăх искусстви Йĕпреç тăрăхĕнче те вăрçăченхи çулсенче епле аталаннă, э? — пуçне кăшт пăрарах калать Пантелеймон Михайлович. — Паллах, ăста маçтăрсем пулнă çав эртелте ĕçлекенсем хушшинче, шел, ячĕсене хăварайман. Вĕсен ятне халăха тавăрмаллах. Çĕршывра пĕрремĕш кооперативсем йĕркеленме тытăнсанах çакăнти ӳкерчĕксем куç умне тухса тăчĕç. Мĕншĕн майлаштарса ямалла мар-ха ырă йăлана районта? Çак шухăш пăралама пуçларĕ пуçа. Шупашкарти кирпĕч заводĕнче пултăм — темшĕн кăмăл уçăлмарĕ унта. Чулхула енчи Семенов хулинче тин хама мĕн кирлине шыраса тупрăм. Тахçантанпах пĕр чарăнмасăр ĕçлекен эртел маçтăрлăхĕ питĕ кăсăклантарчĕ, çав хушăрах — тĕлĕнтерчĕ те. Куçпа мĕн-мĕн курнине, пуçра мĕн-мĕн капланнине васкамасăр, асăрхануллăн кăларса хутăм пĕррехинче хамăр кирпĕч заводне кайсан. Ун хыççăн нумаях та вăхăт иртмерĕ...

Манăн вăл каласа панине итлес те итлес килет. Хăйĕн шухăшĕмĕчĕ пурнăçланнишĕн хĕпĕртенине сисмесĕрех ют çынна пĕлтернине туять-ши е туймасть вăл, анчах, пĕр хĕрсе кайнăскер, аллисене шăлавар кĕсйине чиксе пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ хутлать те шкапран сĕт кăкшăмĕпе шаркку пĕçермелли илемлетнĕ куршука хăпартланса кăларса лартать, сывлăш çавăрса янă хыççăн, шăнкăртатакан телефон аппарачĕсене асăрхаман пекех, тимлĕн ăнлантарать:

— Ун чухне темиçе кунранах ман пата, райканаш çуртне, çамрăксем персе çитрĕç. «Çунатлантарса ятăр эсир пире, тӳсеймерĕмĕр, эртеллешсе савăт-сапа ĕçĕпе аппаланса пăхас терĕмĕр. Кооператив йĕркелес шухăш пур. Сирĕн ирĕк кирлĕ», — пĕлтерчĕ вĕсенчен пĕри. Манăн, вĕсемпе уççăн калаçса ларнă хыççăн, килĕшесси çеç юлчĕ. Ĕçтăвкомăн черетлĕ ларăвĕнче «Керамика» кооператива çирĕплетрĕмĕр. Çапла пуçланса кайрĕ çĕнĕ пурнăç.

Политикăри, экономикăри, социаллă пурнăçри, этем ăс-хакăлĕнчи хĕрӳ улшăнусене барометр пекех сисĕмлĕ туять Пантелеймон Михайлович. Унăн ăс-тăн тавра курăмĕнчен нимĕн те аякра тăрса юлмасть. Тĕнчере пулса иртекен çĕнĕлĕхсене маларах та палăртма пултарать, сăнасах тăрать, нумай вулать. Килĕнче пуян библиотека пухнă.

— Аслăрах пуçлăхсенчен чылайăшĕ вăхăт çитменнипе аптăрать. Çав вырăна вăхăтсăр ларнăран-ши е пуç мимийĕ шĕвеккишĕн ялан нушаланаççĕ вĕсем. Çавăнпа ĕç пӳлĕмĕсенче ларса, çĕрлене юлса йĕм çĕтеççĕ. Хăйсемпе пĕрлех, пăхăнакансене те усала вĕрентеççĕ. Çак бюрократла сӳрĕклĕх йăлана çирĕп кĕнĕ. Тепĕр ниме тăман пуçлăхшăн вун-вун та çĕр-çĕр ăслă çыннăн нушаланма тивет. Хăйсем çеç мар, çемйисем те терт кураççĕ. «Пирĕн ĕçре вак-тĕвек çук» теме хăнăхнипе хăçантанпа хамăра хамăр нушалантаратпăр. Пур çав вак-тĕвек ĕç пирĕн. Мăй таранах. Çак вак-тĕвекпе аппаланса çăрăлнипе ĕнтĕ, вăхăт юлманни çине персе, хамăрăн тĕп ыйтусене уççăн кураймастпăр, вĕсем патне çитейместпĕр. Пурнăçра чи кирлине, чи усăллине, чи çĕннине ярса илме пĕлсенччĕ яланах... Вăхăт уттипе тан утма, çĕнĕ утăм, çĕнĕ йĕр тума пултарсанччĕ... Вăхăт яланах çитет. Ăна эпир хамăр алăра тытатпăр, хамăр йĕркелеме пултаратпăр пулсанччĕ. Унсăрăн ĕç чури кăна пулса юлатпăр. Енчен те эпĕ ĕç вăхăчĕ иртнĕ хыççăн та пӳлĕмре служба нушипе вăрах чакаланса ларатăп пулсан — паянхи пуçлăх та, паянхи çын та мар, — тет Ермошкин. — Ĕç хыççăн манăн та, ыттисен те вăхăта хамăршăн, çемьешĕн ирттермелле, канмалла, ăс-тăна кино, спектакль курса, опера е концерт итлесе пуянлатмалла, пулла, ухутана çӳремелле, кӳршĕпе те, тăванпа та юнашар ларса чĕререн пуплемелле. Çавăн чухне вара эпĕ ирпе ĕçе уçă кăмăллăн, хавхалануллăн пырăп, вара манран усси те ытларах пулĕ.

Çынсене пурнăç уттипе уттарма тăрăшни те, хистени те, пултарни те кирлĕ. Выльăха пушăпа, этеме ăслă сăмахпа çĕнтернинчен тĕлĕнмелли çук. Шел те, пушă çĕклесе хăратасси чакмасть, çĕнелсех пырать. Пантелеймон Михайлович вара хăйне пăхăнакансене пушăпа та, пуш сăмахпа та мар, ăслă шухăшпа аталанса ĕçлеме пулăшать. Астăватăп вăл мана машинкăпа пичетленĕ хут тăсса панине. «Ял Совет председателĕсемпе колхоз председателĕсене вулама сĕнмелле: М. Антонов — «Мĕн пулса иртет пирĕнпе?» («Октябрь», 1987, 8 №), А. Салуцкий — «Çыхăну» («Наш современник», 1987, 12 №), А. Ананьев — «Çĕр» («Октябрь», 1987, 9 №), А. Иващенко — «Пирĕн чи кирлĕ çăкăр» («Дружба народов», 1987, 7 №), В. Овчинников — «Сакура тата юман» («Роман-газета», 1987, 3-4 №№) тата ытти чылай автор произведенийĕсем.

— Вĕсене эпĕ хам вуласа тухса пуçра авăртнă хыççăн тин сĕнме пуçларăм çынсене. Шухăшламалли, вăренмелли, ăса хывмалли ну-

май-çке вĕсенче. Хамăрăн чăваш публицисчĕсемпе писателĕсем тĕлĕрсе ларнишĕн халăх айăплă мар. Мĕн çĕнни пур тĕнчере — çавна кăтартмалла, çавăнпа паллаштармалла çынна, — тесе хавасланса пырать Ермошкин.

Çурхи шыв капланăвĕнчен маларах шыв юхăмне уçса пама пултарнинчен тĕлĕнмелли çук. Ăс-тăн тинĕсĕнчи пĕр уçă юхăм ĕнтĕ вăл. Дейл Карнегин çынсен хутшăнăвне мĕнле лайăхлатмалли çинчен панă сĕнӳ-канашпа Йĕпреç пуçлăхĕсене чи малтан паллаштараканни, вĕсемпе пурнăçра усă курма хистесе вĕрентекенни вăл пулчĕ-çке. Хăйĕн шухăшкăмăлĕ те çавнашкалрах çав. Çын чĕри патне ыр кăмăллăх çулĕ уçма пултарать.

Хăйне пăхăнакан çынсене, юлташĕсене тĕлĕрме памасть.

— Вулатпăр, ыррине шыратпăр, канашлатпăр, тавлашатпăр. Усă тавлашура яланах чăнлăхпа тĕрĕслĕх тупăнать. Эпĕ кашнин пултарулăхне килĕштеретĕп. Хама пăхăнакан юлташ хамран ăслăрах та тавçăруллăрах пулнишĕн савăнатăп çеç. Хушăран йăнăшма та, хĕререх кайса çивĕчрех калаçма та пултарĕ сан умра тăракан çын. Пулать унашкалли ĕçре. Анчах çынна нихçан та çамкаран тӳрех лаптак тукмакпа çапнă пек тӳплеттермелле мар. Чи малтан ăнланмалла ăна, унăн пуçри тĕп тĕллевне пĕлмелле, туймалла! Куркаланă-çке хăйсене турăлла тыткалама хăтланакан, çынсене пуш сăмахĕпе те, тĕлсĕр ĕçĕпе те шантарса, улталаса, пусарма хăтланакан пуçлăхсене. Кулас килет ман вĕсенчен. Чухăн чунлă тăрнаккайсем вĕсем, — тесе пĕчĕк тăхтав туса илет те хушса хурать: — Астăватăр-и иртнĕ Сăпасра юнашар камсемпе ларнине?

Епле астумăн-ха Йĕпреçре пĕрле ĕçлесе пурăннă юлташсен ăшă кăмăлне! Кĕреке хушшинче чуна уçса калаçрăмăр района ертсе пыракан Геннадий Яковлевпа, Ермошкинпа, унăн вĕренекенĕпе Вадим Брагинпа, вăрман комбиначĕн директорĕпе Александр Вединпа, йывăç япала кăларакан комбинат пуçлăхĕпе Михаил Федоровпа, социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçипе Петр Яичниковпа, вăрман паттăрĕпе Геннадий Петровпа, нефтебаза директорĕпе Василий Гордеевпа, Вăрнар ен ентешĕмпе, районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕпе Владимир Николаевпа, Георгий Тимофеевич Тимофеевпа, хамăн çывăх тус-çыравçăсемпе Серафим Ефимовпа, Константин Алимасовпа тата ытти туссемпе. Мĕнле тĕлĕнмелле тĕл пулу-савăнăç пулчĕ! Çак хастар та хăюллă, пултаруллă та сăпай çынсен чун туртăмĕ пире, мăшăрăмпа, вунă çул Йĕпреç ачисене шкулта вĕрентсе пурăннă Римма Ильиничнăпа пĕрле, вăрман çыннисен çумне çĕнĕлле çыпăçтарчĕ. Çак çынсем вĕсем — çĕнетӳ утне çилхерен ярса илнĕскерсем. Вĕсемпе пурнăç утăмĕ тума та, ытакланса юрлама та, ура хуçса ташлама та намăс мар.

Çĕнĕлĕх тĕшшине район çĕрĕ çине пайтах варăнтарнă Ермошкин. Эпĕ хам ăна Йĕпреçре вăтăр çул ытла пĕлнĕ вăхăтра вăл уçнă

çеремсене асăнас пулсан... Пурнăç, чăваш халăхĕн, Чăваш çĕршывĕн историйĕнчи тапхăрĕ. Пĕлтĕр те, хальхи тĕл пулура та вăл литературăпа искусство çинчен ытларах калаçрĕ. Ăна Гомер та, Хэмингуэй та, Митта Ваçлейĕ те, Патăрьелĕнчи хăйĕн кӳрши Геннадий Айхи те тарăн шухăшлăн кăсăклантарать. Шыравçă пур çĕрте те хăйне валли тутлă тĕшĕ тупать, ăна ыттисене те тутантарать. Ермошкинăн тавра курăмĕ Сăр вăрманĕ пекех анлă. Вăрман шавĕ тĕнче шавĕ тенĕ пекех, шухăшне хăй пуçĕнче çеç тытмасть, этемлĕх шухăшĕпе кĕрлет. Кашни тĕл пулмассерен унăн çĕнни пур. Хальхинче те, акă, Пантелеймон Михайлович масонсен юхăмĕ пирки тавлашуллă калаçу пуçарасшăн. Тахçан авал, вун саккăрмĕш ĕмĕртех ăслă маçтăрсем типтерлĕн кирпĕч хурса, пуç тăррине шанчăклă тăрă витсе, пурнăçа малалла аталантарма, хăйсен ăс вăрттăнлăхне хăйсенчех тытса тăма пултарнă иккен, чăн та, пирĕн патра мар, акăлчансем хушшинче. Çав ирĕклĕ шухăш, маçтăрлăх тĕшши канăç памасть Ермошкина, масонсен çирĕплĕхĕ, йĕркелĕвĕ этемлĕх аталанăвĕнче мĕнле паллă вырăн йышăнни, унăн ырлăхĕпе сиенлĕхне уçса парасси — чун кĕçтевĕ. Масонсен юхăмĕ çинчен çырнă ултă кĕнекене харăс вуласа ăнланасшăн вăл, ăс-тăн тавлашăвĕнче чĕрине лăплантарасшăн. Калаçуран эпĕ çакна ăнлантăм: Пантелеймон Михайловича тĕнчери хăть те мĕнле çĕнĕ юхăм та хăйĕн пурнăçĕнче çĕнĕлĕх парнелет.

## 4

Ермошкин Шупашкара ятарласа «Шыварманĕ» опера итлеме кайрĕ. Унччен маларах кăна арăмĕпе пĕрле «Игорь кнеç» оперăпа киленнĕччĕ-ха. Саратовра вĕреннĕ чухнех çуралнăччĕ унăн музыкăна, искусствăна юратас кăмăл-туйăм.

Тĕп хулара унăн ачаран туслă ентешĕсем пур: Алексей Васильев режиссер-артист, Василий Игнатьев писатель. Вĕсемпе пĕрлех кайрĕ вăл театра.

— Пăлара миçе шыв арманĕ пулнă? — ыйтрĕ Пантелеймон Михайлович спектакль хыççăн.

— Вуннă, — чуххăмăнах хуравларĕ Василий Герасимович.

— Çĕр те вуннă, чееренххĕн куçне хĕссе лартрĕ Алексей Григорьевич.

— Пĕри те путлĕн пĕлместĕр, — Пăлара пĕрле шыва кĕрсе ӳснĕ тус-тантăшĕсене ыталарĕ Панька Ермошкин. — Сăнарлă искусствăра та çакăнта, сцена çинче, çеç куратпăр ăна. Шутлăр-ха эсир, шыв арманĕсĕр — Чăваш çĕршывĕ! Ăçталла пăрăнса сулăнатпăр, халăха усă панă япаласене манса? Пăла кăна мар, Йĕпреç тăрăхĕ те юхан шывран чухăн мар. Хĕр, Кĕтне тăрăх лартса тухсан шыв арманĕсене? «Шыварманĕ» хыççăн çĕнĕ шухăш çуралчĕ. Çав шухăша эпир пурнăçа кĕртмесен кам пурнăçа кĕртĕ?



Калаҫнă май тусĕсем Пăла суллин капитанĕнчен хăйĕн сăвви-поэми ҫинчен ыйтса пĕлме хăтланчĕҫ. Пантелеймон Михайлович вĕсене ҫапла ҫеҫ хуравларĕ:

— Литературăна эпĕ сирĕнтен ытларах юрататăп тата хисеплетĕп пулин те, пурпĕрех илем сăнарлăхĕн ҫулĕпе каяймарăм. Кашнин хăйĕн ҫулĕ, тĕллевĕ, тӳпи. Турă пани пулмалла иккен. Ҫыннăн ăс пурлăхне хапсăнма, кĕвĕҫме те кирлĕ мар. Эпĕ, туссем, хамăн пурнăҫ лиризмне пурпĕрех тупрăм, сирĕнпе, ҫыравҫăсемпе, юнашарах пыратăп пуль тетĕп. Пырса курасчĕ Йĕпреҫе! Музей турăм, паллах, пĕччен мар, анчах хамăнах ҫĕр ҫывăрмасăр шухăшламалла пулчĕ. Шыв арманĕ ҫук унта, ҫил арманĕ вара — пур. Ҫунаттисемпе хăлаҫланса аваллăха аса илтерет. Ăна эпир Ҫĕнĕ Кĕлĕмкасси ялĕнчен куҫартăмăр. Иртнĕ ĕмĕр вĕҫĕнче тунăскер. Сакăр вунă ҫул каялла тунă икĕ хутлă кĕлет тупрăмăр Хурамалта. Хура пӳрт, тарасаллă ҫăл тата тем те пĕр пур унта. Чăваш хресченĕ ĕлĕк мĕнле йĕркепе пурăннă — ҫавна курать музее пыракан ҫын. Чăн-чăн чăваш ялĕ килĕ. Этнографи пайĕсĕр пуҫне сăнарлă ӳкерчĕксен, скульптурăсен уйрăмĕсем пур. Саратпăр, пуянлататпăр литературăпа искусствăна халăх хушшине, халăхран тухнă ăстаҫăсемпе пĕрле, — кăшт мухтанса та илес терĕ пулас Каншел ачи.

Илемлĕх тĕнчи кашни ҫыннăн пурнăҫ тĕнчи пултăр тесе май килнине тунă ĕнтĕ Пантелеймон Михайлович Йĕпреҫе килнĕренпе. Хамăн куҫ витĕмлĕхĕпе эпĕ, Йĕпреҫе килмессерен, пуҫлăхра ларнă этем районшăн, поселокшăн, ялшăн мĕн-мĕн тунипе туманнине, пăсăкпа илемлĕхе танлаштарса ҫӳретĕп. Куҫ умне вара кашни пуҫлăхăн сăнарĕ тĕкĕр ҫинчи пек тухса тăрать, кашнин сăмахĕ хăлхара янăраса каять.

Пантелеймон Михайлович Ермошкин хăйĕн пурнăҫ керменĕн утмăл пиллĕкмĕш хучĕ ҫине ҫирĕп кирпĕч хучĕ. Васкамасăр, ăспа, тăнпа.

*«Хыпар», 1998 ҫул, 215-217 №№.*

# ТУПМАЛЛИ


Пурнăç сĕткенĕ ..... 3
Тăван ура тупанĕ тăван çĕр çине пуссан... ..... 21
Савăнăç, телей ..... 26
Тăванлăх вĕçевĕ ..... 29
Вăрнар çăлтăрĕсем ..... 44
Шăранса тухнă сăнарсем ..... 58
Чăваш хĕвелĕ чăнах хĕлхемлĕ ..... 67
Халăхри чыслă ят ..... 85
Элкер чăваш халăхĕшĕн, шăпийĕшĕн çуннă ..... 97
Илем çăлтăрĕ ..... 113
Илепер çăлкуçĕ чĕрĕ ..... 137
Тăван çĕр туртăмĕпе ..... 139
Ăслăлăх ытамĕнче ..... 141
Утмăлти утмăл кaçалăк ..... 147
Манăн çĕр пикисем ..... 150
Телее ан тарт ..... 153
Чун ăшши — этем илемĕ ..... 157
«Çăпата» — хитре эсĕ тупата ..... 159
Халăхра çуралнă сăнарсем ..... 160
Пире хумсем йăштайман ..... 164
Çунат ..... 167

**Владимир Прокопьевич Кузьмин**

# Илем ҫӑлтӑрӗсем

Редактор *М.А.Васильев*

Подписано к печати 10.07.2006. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Гарнитура Таймс. Печать оперативная.
Физ. печ. л. 11,25. Тираж 500 экз. Заказ № 92. Цена свободная.

Отпечатано в типографии издательства «Новое время».
428005, г. Чебоксары, ул. Ломоносова, 2. Тел.: 46-43-46.



З.В.Воробьева, Генеральный директор

Открытое акционерное общество
СТРАХОВАЯ КОМПАНИЯ
**«ЧУВАШИЯ-ПОДДЕРЖКА**

428024, Чувашская Республика,
г. Чебоксары, пр. Мира, д. 90/1.
e-mail: pod@cbx.ru. www.podderjka.ru
тел.: (8352) 56-95-17, 56-94-84,
факс (8352) 56-98-73



«Золотая корона качества»

Сегодня ОАО Страховая Компания «Чувашия-Поддержка» - это перспективная, быстро развивающаяся компания на рынке страховых услуг, имеющая устойчивое финансовое положение и деловую репутацию.

«В ЧЕМ СЕКРЕТ НАШЕГО УСПЕХА?»

**Богатый опыт** - ОАО СК «Чувашия-Поддержка» работает с 1992 года.

**Профессионализм** - ОАО СК «Чувашия-Поддержка» - одна из ведущих компаний в республике, ведущая льготное страхование сельских товаропроизводителей.

**Широкий спектр страховых услуг** - на основании лицензии № 3495Д Министерства финансов РФ ОАО Страховая Компания «Чувашия-Поддержка» предлагает восемнадцать видов страхования, среди которых:

1. страхование урожая с/х культур и многолетних насаждений;
2. страхование с/х животных;
3. страхование средств наземного транспорта;
4. страхование имущества юридических лиц;
5. страхование от несчастных случаев;
6. страхование гражданской ответственности владельцев автотранспортных средств;
7. страхование строительно-монтажных работ;
8. страхование домашнего имущества;
9. страхование объектов лизинга.

**Партнеры компании** - крупные промышленные и пищевые предприятия городов Чебоксары и Новочебоксарск, большинство сельскохозяйственных предприятий различных организационно-правовых форм.

**Единство** - ОАО Страховая Компания «Чувашия-Поддержка» входит в Ассоциацию страховщиков России, Ассоциацию «Агропромстрах», Ассоциацию страховщиков «Большая Волга».

**Принципы работы** - территориальная близость к страхователю, работа со всеми категориями страхователей, постоянное расширение круга услуг.

НО САМАЯ БОЛЬШАЯ ЦЕННОСТЬ - ЭТО НАШИ КЛИЕНТЫ
МЫ РАБОТАЕМ ДЛЯ НИХ И РАДИ НИХ.

***ОАО СК «Чувашия-Поддержка» поможет Вам почувствовать себя уверенным в завтрашнем дне!***